**Микулай Мăскал**

# ЧУН-ЧĔРЕ СУНТАЛĔ

***Сăвăсем***

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2022

УДК
ББК
М 89

Микулай Мăскал
Чун-чĕре сунталĕ. Сăвăсем. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2022. – 500 с.

*Çĕрпӳ тăрăхĕнчен ĕлĕк те çыравçăсем нумай тухнă, халĕ те тухсах тăраççĕ, мĕншĕн тесен Çавалпа Энĕш юхан шывĕсен хутлăхĕнчи халăхăн чĕлхи те сăнарлă, шухăшлав мелĕсем те пуян. Çуйăн Хветĕрĕ, Гурий Вантер, Хветĕр Павлов, Аркадий Ĕçхĕл, Николай Ишентей тата ытти сăвăçсен пултарулăхĕ çакна туллин çирĕплетет.*

*Çĕрпӳ ен поэчĕсен сăвă пуххи иккĕмĕш кăларăмпа тухать. Хальхи кăларăма улшăнусем те кĕнĕ, тĕрлĕ вăхăтри çыравçăсемпе пĕрле çĕнĕ авторсем те хушăннă.*

ISBN 978-5-907454-57-6
© Мăскал М., 2022

*2022 çул – Чăваш Республикинче*
*Мухтавлă ентешсен çулталăкĕ.*
*Кĕнекене çак паллă çулталăка халаллаHă*

*Çак кĕнекене*
*пухса хатĕрлес ĕçре*
*Геронтий Лукиянович Никифоров*
*(Геронтий Хурамал)*
*пысăк пулăшу пачĕ.*
*Çывăх юлташăма пуç тайса*
*чун-чĕререн тав тăватăп,*
*телей те ăнăçу сунатăп.*

***Микулай МĂСКАЛ***

# УМĔНХИ САМАХ

Çĕрпӳ тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ сăвăçсен пĕрремĕш кĕнеки хăвăрт саланса пĕтрĕ. Халĕ çĕнĕрен тухакан иккĕмĕш кăларăма улшăнусем те кĕнĕ, тĕрлĕ вăхăтри çыравçăсемпе пĕрле çĕнĕ авторсем те хушăннă.

Талантлă ентешсен ĕçне-хĕлне пĕр çĕре пухса халăх умне çĕнĕрен кăлараканĕ – хамăр Чăваш патшалăх аграри университечĕн доценчĕ, ветеринари ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чечейкасси Туçа çынни Николай Григорьевич Иванов çыравçă. Унăн литературăри хушма ячĕ – Микулай Мăскал. Ку ята эпир ачасем тата, çитĕннисем валли çырса кăларнă сăвă-юрă кĕнекисем тăрăх аван пĕлетпĕр.

Микулай Мăскал шкулта вĕреннĕ çулсенчех сăвă çырас ĕçпе интересленме тытăннă. Вăрнар совхоз-техникумĕнче чухне юрăпа ташă ансамблĕпе тĕрлĕ конкурса хутшăннă, Шупашкара çеç мар, Чулхулана та çитсе малти вырăнсене йышăннă. Хусан ветеринари институтĕнче вĕренсе Лапсарти кайăк-кĕшĕк фабрикин тухтăрĕнче ĕçленĕ вăхăтра вырăнти драма кружокĕнче Айтар рольне выляна чух унăн пултарулăхне халăхăмăр артисчĕ Геннадий Терентьев пысăк хак панă. Çавăн пекех Микулай Мăскал – Альпăрт Канаш, Алексей Талвир ячĕллĕ литература премийĕсен лауреачĕ те. Нумаях пулмасть тăван республика Николай Григорьевича вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне парса чысларĕ.

Хаклă вулаканăм! Санăн аллунта – çĕнĕ кĕнеке. Паллă çыравçăсемпе çамрăк авторсен чунĕ-чĕри витĕр тухнă ырă сăнарсен пархатарлă хайлавĕсем сана пурнăç çулĕ çинче ĕмĕт-тĕллеве ăнăçлă çитерме пулăшса пыччăр.

*Юрий Сементер,*
*чăваш халăх поэчĕ*



## Аркадий ĔÇХĔЛ

Аркадий Александрович Александров 1914 çулхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Янсакасси ялĕнче çуралнă. Малтан Хĕрлĕ Ту пуçламăш шкулĕнче, унтан Çĕрпӳ сакăр çул вĕренмелли шкулĕнче вĕреннĕ. 1927 çулта ун кил-йышĕ Тутар Республикин Элкел районне куçса кайнă. 1928 çулта сăвăç Сиктĕрме сакăр çул вĕренмелли шкулĕнчен вĕренсе тухнă, Чистай ял хуçалăх техникумне кайса кĕнĕ, Хусан педагогика институтĕнче чĕлхепе литература факультетĕнче кĕретсĕр майпа вĕреннĕ.

1932 çулхи кĕркунне поэт Шупашкара куçса килнĕ, Чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕнче ĕçленĕ. 1933 çулхи çуркунне вăл хăйĕн тăван колхозне кайнă, унта колхоз председателĕн çумĕ пулнă.

1934–1960 çулсенче А. Ĕçхĕл тĕрлĕ хаçат редакцийĕнче вăй хунă. «Илемлĕ литература» альманах редакциленĕ.

1960–1962 çулсенче вăл Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен управлени пуçлăхĕ, каярах «Ялав» журнал редакторĕ пул-

нă. Аркадий Ĕçхĕл пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл сăвăç та, прозаик та, хĕрӳллĕ публицист та. Сăвăсем, калавсем, повеçсем, пьесăсем нумай çырнă. Кĕнекисем 50-ран та иртеççĕ. Паллăрах ĕçĕсем: «Ырă кун» (1936), «Калавсем» (1938), «Телей» (1940), «Пĕчĕкçĕ строительсем» (1941), «Ăмăрт кайăк» (1944), «Чăваш совет литератури» (1948), «Виçĕ туй» (1955), «Хĕвеллĕ çумăр» (1965), «Юрлакан шăнкăрав» (1976), «Çул хыççăн çул» (1984) тата ыттисем те.

«Ăмăрт кайăк» поэмăра чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов летчик ирсĕр тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешни çинчен çырса кăтартнă. Поэма паллă çыравçа чапа кăларнă. Аркадий Ĕçхĕл сăввисемпе композиторсем чылай юрă кĕвĕленĕ. 1937 çултанпа СССР писателĕсен Союзĕн членĕ.

Литература ĕçĕнче пысăк ӳсĕмсем тунăшăн А. Ĕçхĕле «Хисеп Палли» тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе тата нумай медальпе чысланă.

Аркадий Ĕçхĕл 1992 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче вилнĕ.

## ЫРАШ ПУССИНЧЕ

Ыраш пусси – çырансăр тинĕс,
Ун урлă тӳп-тӳрĕ йĕрпе
Ишет сенкер автомашина
Ĕçчен разведчик-катер пек.

Ем-ешĕл тинĕс анлă, тарăн,
Кунта вăл ирĕк самана!
Парти райкомĕн секретарĕ
Пăхать те питĕ савăнать.

Уй-хир курма юри вăл тухнă
Çак сутă çуллахи ирпе.
Çул хĕрринчи парка çеç ухлĕм
Машинăна пит ерипен

Утьăкалла ярăнтарасшăн
Ухлать хăй хумĕсем çинче.
Йĕри-тавра хавассăн, ăшшăн
Кулать, çиçет ирхи тĕнче.

Тăван хирте – тăван индустри,
Ун вăйĕ пирĕн алăра!
Герой педаль çине кăшт пусрĕ,
Машина чарăнчĕ вара.

Геройăм тухрĕ. Çĕн тыр-пулă
Пуç тайрĕ çĕнĕ этеме.
Этем хăвачĕ сывă пултăр
Ĕмĕтленме те çĕнтерме!

* * *

Карлăк урлă кармашса,
Илтĕм Алтăр çăлтăрне.
Савăк юрă янратса,
Утрăм Атăл хĕррине.

Çĕмĕрт урлă чĕвенсе,
Илтĕм уйăх витрине.
Ылтăн витре тĕпĕнче
Куртăм тусăм хитрине.

Алтăр çăлтăр – пĕр алра,
Ылтăн витре – тепринче.
Шурăм пусне хураллап
Аслă Атăл хĕрринче.

Аслă Атăл – умăмра,
Кĕмĕл алтăр – аллăмра.
Çурхи шурă çĕмĕрт пек
Чунăм тулать ĕмĕтпе.

Ĕмĕт, ĕмĕт ирĕлсе
Вĕриленчĕ чунăмра.
Тухать, хитре хĕрелсе,
Шурăм пуçĕ ман умра.

Шурăм пуçне, хĕрелсен,
Эп тултарăп алтăра.
Мана колхоз хĕрĕсем
Кĕтсе илĕç хапхара.

Хĕрсем курĕç витрере
Шурăм пусĕн шевлине.
Çакăнтан та хитререх
Мĕнех пур-ши ирхине?

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

Çитмĕл çичĕ ярапаллă çумăр
Çитрĕ те ташларĕ сиккипех.
Уй-хир урлă чĕнтĕрлерĕ çăмăл
Ылтăн-кĕмĕл карлăклă кĕпер.

Чĕнтĕрлерĕ, çӳлерех çĕклерĕ
Аслă çĕрĕн анлă тӳпине.
Мĕн пек чаплă асамат кĕперĕ
Тухса тăчĕ бригадир умне!

Çамрăк йĕкĕт пăхрĕ уй-хир тăрăх,
Савăнса чунтан хăй ĕçĕпе.
Çумăр шывĕ мĕн пек çутă, тăрă,
Çур тырри калчи епле чипер!

Бригадир тăрать. Чĕри лăпланнă.
Çийĕ-пуçĕ тăп-тăр сывлăм çеç.
Вăл тăрать телей хапхи пек анлă
Асамат кĕперĕ умĕнче.

## ТИНĔСПЕ СЫВПУЛЛАШНИ

Сыв пул, тинĕс, килсе куртăм!
Сывă юл та ан кӳрен!..
Тинĕс чакрĕ пĕр-ик утăм,
Унтан сикрĕ ман çине.

Мана хыттăн ыталарĕ
Чи юратнă тусăм пек,
Хăйĕн ăшă та тăварлă,
Çуйкăн, вăйлă хумĕпе.

Ыталарĕ хыттăн-хыттăн,
Йăтса ывăтрĕ инçе.
Юлашки хут эпĕ выртрăм
Ун сенкер ытамĕнче.

Нумайччен вара сиктерчĕ
Вăл мана сăпкари пек,
Савăнтарчĕ, килентерчĕ
Ялтăн янкăс ирĕпе.

Çитĕ, çитĕ, сыв пул, тинĕс!
Пушкин пек эп хурланса
Уйрăлмастăп. Кунсем иртĕç,
Каллех çитĕп çаврăнса.

# ТĂВАР

Тăвар тени вăл йӳçĕ, йывăр,
Анчах пире ачалăхра
Куççуль тăварĕ сапнă çăкăр
Темрен те пулнă хаклăрах.

Çав тăвара эпир пăтшарăн
Е ытлараххăн та çисе,
Кĕреш пек ӳсрĕмĕр патваррăн –
Çĕр-шывшăн шанчăклă çынсем.

Ан тив, пиртен кашни çӳретĕр
Çак çĕр çинче çĕр алă çул.
Эпир пĕлетпĕр: ĕмĕрне те
Чĕремĕрсем пăсăлас çук.

Пурнăç тени вăл – аслă тинĕс,
Тăварлă унăн хумĕсем.
Пурнăç калать: мĕскерле çын эс
Тăвар курмасăр çитĕнсен!

## ЫРАШ ПĔРЧИ

Эп ывçăма ыраш пĕрчи илетĕп,
Савса пăхатăп пĕчĕкçеç тĕшше.
Шухăшăмпа, ĕмĕтĕмпе кĕретĕп
Эп ун асамлă, куç витми ăшне.

Çак пĕрчĕре – хăватлă çĕр сĕткенĕ,
Хĕвел ăшши те ырă çумăрсем
Колхозник вăйĕпе пĕр тĕвĕленнĕ
Вĕри ĕçре сипетлĕн хĕртĕнсе.

Унта пайтах этем ăсне те хунă,
Пайтах имленĕ юнпа тар ăна.
Ахальтен мар ырашăн ылтăн хумĕ
Мăнаçлăн та сулмаклăн ярăнать.

Ан тив, тата хăватлăрах хумхантăр
Колхоз уй-хирĕнчи çăра тыр-пул.
Кашни пĕрчех пире хастар вăй патăр,
Тăшман çамкишĕн пуля пултăр вăл!

## АКĂШСЕМ

Акăшсем, акăшсем,
Кӗрхи сулхăн ирпе
Вӗçрӗç ман шухăшсем,
Хускалса сирӗнпе.
Ман вӗри салама
Тусăма калама
Илсе каййăр инçе
Шур çунатăр çинче.

Тусăма ăсатни
Кӗç çулталăк çитет:
Чикӗре чун савни
Çӗр-шыва хӳтӗлет.
Ах, чӗремçӗм çунать, –
Мӗншӗн çук-ши çунат?!.
Сирӗнпе эп çула
Паянах тухмалла.

Акăшсем, акăшсем,
Каялла вӗçнӗ чух
Ман вӗри шанчăксем
Сирӗнтен юлас çук.
Пӗр хӗвеллӗ çут ир
Илсе килӗр эсир
Савнă тус саламне
Манăн кантăк умне.

# ПАН УЛМИ

Аттен ем-ешĕл аслă сачĕ
Таса хĕвелпе тулнăçем
Йăл-йăл кулаççĕ, çуталаççĕ
Кĕрен те хĕрлĕ улмасем.

Кив сăвăпа мана пĕрре те
Сĕнксе ларма халь ырă мар.
Эп савăнсах сада кĕретĕп
Вĕр çĕнĕ сăвă шырама.

Сипетлĕ сулхăнра утатăп,
Сиретĕп вăйлă курăка.
Сад ыр сунать мана унтан та,
Кунтан та янкăс юрăпа.

Юрлаççĕ кайăксем хĕрӳллĕн,
Тавралăх меллĕн чӳхенет.
Пĕр улмине татса эп илтĕм,
Сулăмлине те хитрине.

Ман ывăçа чĕр çимĕç кĕчĕ,
Чух уçă çимĕç, ĕмĕрхи,
Хăватлă çут çанталăк сачĕн
Чечен те çирĕп чăмăркки.

Çак улмара – хĕвел хĕлхемĕ,
Ирхи янравлă сывлăмсем,
Тыр çумрисем те чĕрĕ тимĕр –
Йăлтах пĕрлешнĕ киленсе.

Ăна эп халь çӳле çĕклетĕп:
– Мухтав сана, кĕрен улма!
Тантăшсене паян чĕнетĕп
Çак тимĕр çимĕç пек пулма.

Çамрăклăха ан тутăхтарăр,
Вăл пултăр çирĕп те таса.
Чĕресенчи хĕвел кăварĕ
Хаваслăн тăтăр çуталса!..

## ЧЕЧЕК КУÇĔСЕМ

Çутă кӳлĕ хĕррипе
Савнипе утатпăр,
Тĕкĕр витĕр пăхнă пек
Хамăра куратпăр.

Кайма вăхăт килелле,
Чечексем ямаççĕ;
Сывлăм куçĕсемпеле
Илĕртсе лараççĕ.

Кун пек ырă çуркунне,
Тен, килет пĕрре çеç...
Тӳлек каçăн вăрттăнне
Чечексем пĕлеççĕ.

Йăлтăрса хуллен вĕсем
Кулчĕç – пирĕн мар ĕç...
Анчах çутă куçĕсем
Кăшт та хупăнмарĕç.

## ВУТ ЧУЛĔ

Хĕвелпеле шăраннă Атăл урлă
Эпир ишеттĕмĕр ăмăртмалла.
Чăматтăмăр тĕпне çитсе, вут чулĕ
Эпир ярса тытаттăмăр алла.

Чулпа чула çапсассăн хире-хирĕç
Сапатчĕ чул хаяр вĕри хĕмне.
Анчах та пирĕн çав чултан та çирĕп
Пулмаллине эпир ун чух пĕлмен.

Ак çитрĕ вăхăт вутлă çил-тăманăн,
Пире пурне те тĕрĕслет çĕр-шыв.
Халь пирĕнтен çирĕпрехxи, тăванăм,
Çак тĕнчере кам та пулин пур-ши?!..



## Роза БЕЛЯЕВА

Роза Владимировна Беляева 1967 çулхи пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Тутарла Кăнаш ялĕнче çуралнă. Тутарла Кăнаш пуçламăш, Çавалхĕрри Кăнаш 8 çул вĕренмелли шкулĕсенче тата Канаш педагогика училищинче вĕреннĕ. 1986–1988 çулсенче Çĕрпӳ 2-мĕш номерлĕ, 1988–2008 çулсенче Опытнăй шкулĕсенче ĕçленĕ. Ĕçленĕ вăхăтрах И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕренсе аслă пĕлӳ илнĕ.

Шкулта та, училищĕре те вĕреннĕ, кайран ĕçленĕ чух та Роза Владимировна чун киленĕçне пĕр самантлăха та манман. Сăвă-юрă тĕнчинче пурăнать. Чун туртнипе 2003 çулта Опытнăй шкулĕнче «Çăлтăрсен фабрики» кружок йĕркелет: раштавăн 18-мĕшĕнче Роза Беляева йĕркеленĕ «Юрату.ru» ушкăн шкул сцени çине пĕрремĕш хут тухать. Роза Владимировна «Юрату.ru» ушкăн валли сăвă-юрă çырать, вĕсене юрлама майлаштарать. Пĕтĕмĕшпеле илсессĕн 100 яхăн юрă хайланă. Пĕтĕм чăваш

хĕрарăмĕсен Эмине ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ. Чăваш Республикин писательсен Союзĕн членĕ.

Чăваш Республикинче «Юрату.ru» ушкăна куравçăсем лайăх кĕтсе илеççĕ. Çепĕç чунлă вĕрентекен чĕринче хĕмленсе çуралнă сăвă йĕркисемпе кĕвĕленĕ юрăсем шкул ачисене, çамрăксене, çулланнисене тыткăна илеççĕ, ырă шухăш-туртăм патне илсе тухаççĕ. Роза Беляева хайланă юрăсене чăваш эстрада юрăçисем те шăрантараççĕ.

Халĕ Р.В. Беляева Шупашкар 1-мĕш номерлĕ шкулта учительте ĕçлет, тĕп хулара пурăнать.

## ÇĔН ÇУЛ ЯЧĔПЕ

Шурă юр ачашшăн, лăпкăн ӳкрĕ çĕр çине,
Самантрах çынсем пуçларĕç савăк юррине.
Чун-чĕререн ырлăх сунчĕç пур тăвансене,
Çĕнĕ çулпа саламларĕç тус-юлташсене.

Чăн та, пурнăç ырă, чаплă – питĕ илĕртет,
Юлташсем çине пăхсассăн чунăм хĕпĕртет.
Çĕнĕ çулта ырлăх-сывлăх пултăр пурсăра,
Çирĕп юрату хăвачĕ ăшăттăр чуна.

Çемьесенче килĕштерсе пурнар яланах,
Ачасемпе, мăнуксемпе савнар аванах.
Çĕр çинче хаваслă кулă илтĕнтĕр текех,
Çут телей сунса çĕклер-и алтăр куркинех.

Çĕн çул ячĕпе!
Саламлатăп пурсăра та Çĕн çул ячĕпе!
Вĕлтĕр-вĕлтĕр шурă юрлă Çĕн çул ячĕпе!
Юр пикеллĕ, Хĕл мучиллĕ Çĕн çул ячĕпе!
Саламлатăп пурсăра та çĕнĕ телейпе!

## ЮНАШАР ЭС ПУЛСАН…

Варкăш çилĕ вĕрсе курăка ачашлать,
Тĕнчене çупăрлать сар хĕвелĕ.
Кăвакарчăн çӳлте мăшăрпа явăнать,
Чунăма тыткăнлать ун вĕçевĕ.

Аякри сĕм вăрман шăппăн-шăппăн кашлать –
Илĕртет чăтлăха симĕс тусăм.
Йăпшăнса вăрмана çут тӳпе ачашлать –
Чĕремре вăрататъ çепĕç туйăм.

Çут тĕнче савăнать, çилĕ вăйă вылять
Яланах пĕр-пĕрне тĕл пулсассăн.
Çепĕç шăпчăк юрлать, сар хĕвел йăл кулать
Манпа эс алла-аллăн утсассăн.

Юнашар эс пулсан – эп телейлĕ ялан,
Юнашар эс пулсан – эп илемлĕ.
Юнашар эс пулсан – кăмăл лайăх ялан,
Юнашар эс пулсан – чун хĕлхемлĕ.

# ТЕЛЕЙ МĔНЛЕ ВĂЛ?

Йывăр, йывăр пурăнмашкăн
Çакă пурнăçра –
Кашни кун çăтмах пĕриншĕн,
Теприн – чĕр нуша!

Калăр, калăр, ăнлантарăр –
Мĕншĕн çаплалла?
Вăй хурсан та куç хупмасăр
Çук телей çумра!

Тен, кăштах эп йăнăшатăп?
Тен, телей çумрах?
Айван пулнăран туймастăп
Телей пурнăçра?

Тусăм, тусăм, эп шанатăп –
Пулĕ çăмăлрах!
Телей кайăкне тытатăп
Çывăх вăхăтрах!

Телей, телей – мĕнле вăл?
Телей, телей – ăçта вăл?
Телей, телей тупасчĕ.
Телейлĕ пуласчĕ.

## АННЕ

Канмалли кун васкатăп эп яла –
Аякранах чĕнет çуралнă кил.
Хĕвел пек ăшăтать ман чунăма
Анне кулли, каланăн, «Хĕрĕм, кил!»

Мĕнпур ĕçе ырана хăварса
Анне, вĕçетĕп санăн ытамна!
Çулсем нумайййине санпа манса,
Пĕчĕк ача пекех туяп хама.

Анне, сан куçусем ахах-мерчен.
Ачаш сан ĕçпе хытнă аллусем…
Телейлĕ пурăн эсĕ нумайччен,
Юнашарах ачусем, мăнуксем.

Санпа чухне, анне, чунра аван,
Санпа чухне чĕре юрлать ялан.
Эс тĕнчере пурри – телейĕм ман!
Утас хыççăн утас тума вăй-хал паран.

## АН ВАСКА КУЛЯНМА

Ан васка кулянма,
Ан васка макăрма,
Шикленмесĕр эс кил ман çума.
Çĕкле янкăр куçна,
Шăрантар юрруна –
Çав тери килĕшет вăл мана.

Вăрансан ирсерен,
Ывăнсан каçсерен,
Сан чунна кичем кăмăл витсен…
Эп ачашлăп сана,
Лăплантарăп сана…
Канăç пурнăç парнелĕп – ĕнен.

Санăн çепĕç куллу,
Ытарми кăмăлу…
Чунăма шав çĕклет тĕл пулу.
Çăлтăр куç ялтăрни,
Кăмăлтан калаçни
Илĕртеççĕ мана, чун савни.

Чунтан ырă сунса,
Юрату пиллесе
Савăк юрă парнелĕп савса.
Эс мана юратсан,
Эп сана юратсан
Çăтмахри пекех пулĕ ялан.

# САВНĂ ТУСĂМА

Ир-ирех куçа уçатăп, сар хĕвел йăл-йăл кулать.
Пĕтĕм чунăмпа туятăп – паян кун аван пулать!
Ма тесессĕн эп телейлĕ, савнă тусăм юнашар,
Санпа чух чĕрем хĕрӳллĕ! Пĕр-пĕрне савса пурнар.

Сан çинчен эп шухăшлатăп, сисĕнмесĕр кун иртет.
Киле кăмăллăн утатăп, кулă пит-куçра çиçет.
Ма тесессĕн эп телейлĕ, савнă тусăм юнашар,
Санпа чух чĕрем хĕрӳллĕ! Пĕр-пĕрне савса пурнар.

Каçхи тӳпене сăнатăп, куç хĕсеççĕ çăлтăрсем.
Санпала эп калаçатăп, савнăçпа тулаç куççем.
Ма тесессĕн эп телейлĕ, савнă тусăм юнашар,
Санпа чух чĕрем хĕрӳллĕ! Пĕр-пĕрне савса пурнар.

Эсĕ пурăн, савăн, кул
Çакă аслă çĕр çинче.
Çут телейлĕ эсĕ пул,
Эс пуртан хитре тĕнче!

# САЛАМЛАТПĂР

Иртенпех сар хĕвел йăл кулса
Таврана çутатать, ачашлать.
Сан çуралнă кунра савăнса
Пур тăван хăнана пухăнать.
Чунсенчи ăшă туйăмсене
Пĕр сана парнелетпĕр паян.
Ыррине, кирлине, хитрине
Сан валли илсе килнĕ, куран.

Эс çуралнă йăмраллă ялта
Яланах кăмăллană сана.
Ачаран эсĕ пулнă малта,
Çынсене тĕлĕнтернĕ тата.
Эс паян та ытла та хитре!
Сан куллу илĕртет чунăма.
Пултăр кулă ялан сăн-питре,
Çирĕп сывлăх нумай пурăнма.

Чĕререн саламлатпăр,
Тулли пурнăç сунатпăр,
Эсĕ пирĕн çут çăлтăр,
Ялтăртат йăлтăр-йăлтăр!

## ЭС МАН МАР

Эп пĕлетĕп: савма юрамасть,
Юрамасть ман сана юратма.
Чун çакна пурпĕрех йышăнмасть,
Пурпĕрех юрату чунăмра.
Эс пĕлетĕн: савма юрамасть,
Юрамасть сан мана юратма.
Пурпĕрех-çке эс килĕн, эс килĕн ялан
Ман пата, ман пата.

Ма шăпамăр вылять çавнашкал,
Шеллемесĕр вылять пирĕнпе?
Ах, ăçта-ши сӳнми ăраскал?
Хăçанччен пытанать пирĕнтен?
Чĕререн савнине палăртса
Çупăрлан, ачашлан майĕпен.
Тем пулсан та юратăп, юратăп сана,
Эс вара – пĕр мана.

Эс ман мар!
Урăххи ыталать халь сана.
Эп сан мар!
Урăххи чуп тăвать халь мана.
Пурпĕрех, пурпĕрех эп кĕтетĕп сана,
Пурпĕрех, пурпĕрех эсĕ пулăн манпа.
Эс – манпа!
Яланах эсĕ пулăн манпа.
Эп – санпа!

## ПУРНĂÇ ÇУЛĔ

Шав чупать-çке вăхăт малалла,
Унпала тан утса пымалла.
Пулни-иртнине асра тытса,
Пурнăç таппине чунпа туйса.

Атте-анне панă кун-çулне,
Парнеленĕ ăшă туйăмне.
Вĕсем панă пиле манар мар,
Туслă пурнар, малалла утар.

Сар хĕвелĕ панă илемне,
Савăнмашкăн çутă куллине.
Çавăнпа та пĕр-пĕрне савар.
Пурнăç çулне пĕрле такăрлар.

Пурнăç çулĕ çăмăл мар, çăмăл мар,
Пурпĕр пуç усмалла мар.
Пĕрне-пĕри ал парса, ал парса
Пурăнар-и савăнса!

## АТТЕ-АННЕ

Атте-анне, сире упратпăр
Яланах хамăр чĕрере,
Каçсерен тĕлĕкре куратпăр,
Юрататпăр чунтан сире.
Эсир пире пăхса ӳстернĕ,
Юратнă пĕтĕм кăмăлтан,
Чĕвĕл чĕкеç чĕлхи пилленĕ,
Ырра вĕрентнĕ ачаран.

Кашни ĕçех тĕплĕн тумашкăн
Сиртен вĕрентĕмĕр эпир.
Çынсемпе кăмăллă пулмашкăн,
Кулмашкăн ăшшăн кашни ир.
Эсир пире телей пиллерĕр
Çут тĕнчене килсессĕнех,
Ирсерен тухакан хĕвелĕ
Тĕнчене ăшшăн савнă пек.

Сире чунтан телей сунатпăр.
Пурнасчĕ сирĕн нумайрах,
Сирĕн ăшă куçусем çуталччăр
Кашни çул тата хытăрах.
Пулсамăр эсир ĕмĕр сывă,
Пулсамăр ĕмĕр пирĕнпе.
Сиртен хаклăрах çын та çуккă
Çак аслă çутă тĕнчере.

Анне пулсан – эпир телейлĕ,
Атте пулсан – эпир сатур.
Эсир пулсан – тĕнче те капăр,
Эсир пулсан – пирĕн пурте пур.

# ТУЙĂНЧĔ КĂНА

Урам тăрăх утрăм каç пулсан
Санпала тĕл пулу шыраса.
Юрату çунатчĕ чĕрере,
Чи телейли пулнă тĕнчере.
Анчах мĕскер пулчĕ-ши сана?
Пĕчченех утатăп урампа.
Урăххипе эсĕ юнашар,
Çавăншăнах чунра халь пушар.

Эс ăна ачашшăн ыталан,
Куçран пăхса çепĕç калаçан.
Мана мĕншĕн мантăн, каласам.
Ман çине те юратса пăхсам.
Акă асăрхарăн эс мана.
Вăрттăн парнелерĕн куллуна.
Эс ăна та, чунăм, улталан,
Ман çине те ăшшăн çеç пăхан.

Урам тăрăх утрăм каç пулсан
Санпала тĕл пулу шыраса.
Урăххипе эсĕ юнашар,
Çавăншăнах чунра халь пушар.
Тек санпа эп пулмăп юнашар,
Чĕрере те сӳнĕ шĕл кăвар.
Сан пек улталакан кирлĕ мар,
Юратупа, тусăм, выляр мар.

Туйăнчĕ, туйăнчĕ, туйăнчĕ кăна
Эс мана юратнăн туйăнчĕ.
Курăнчĕ, курăнчĕ, курăнчĕ кăна
Эс ман çине пăхнăн туйăнчĕ.

# ШУРĂ ЮР

Шурă-шурă юр ӳкрĕ çĕр çине.
Çак илемлĕ кун эс манпа пĕрле.
Санпа юнашар çав тери аван,
Юрату вутне эс чĕртсех тăран.

Ылтăн çӳçусем манăн аллăмра,
Санăн куçусем ялан ман умра.
Санпала кăна эп чи телейли,
Манпала кăна эс чи юратни.

Шурă-шурă юр çуттăн ялтăрать,
Юрату вутне вăй парсах тăрать.
Пирĕн юрату пырĕ ĕмĕре,
Ирĕлсен те юр пулăпăр пĕрле.

Шап-шурă кăпăш юр ман çине ӳкет,
Шап-шурă кăпăш юр сан çине ӳкет.
Эпир утас çĕре кавирпе витет,
Пирĕн чĕресене кăлт-кăлт сиктерет.



## Анатолий ВАСАН

Анатолий Васильевич Васильев 1934 çулхи çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Чурачăк салинче çуралнă. Канаш педагогика училищине, В. Ульянов-Ленин ячĕллĕ Хусан университетне, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче аспирантура вĕренсе пĕтернĕ. Район Культура çуртĕнче, Канаш районĕн «Коммунизмшăн» хаçатĕнче, Çĕрпӳ районĕн шкулĕсенче, Чăваш ăслăлăх тĕпчев институтĕнче, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçленĕ. Университетра чăваш литератури вĕрентнĕ. 20 ытла тĕпчев ĕçĕ çырнă, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăнă. 1992 çултанпа Раççей писателĕсен союзĕнче тăнă. Сăввисем «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче, «Çамрăк коммунист» хаçатра пичетленнĕ. Васильев А.В. – «Чи кирли – шухăшпа сăнар», «Современная чувашская эпическая поэзия», «Мир молодого героя в драматургии Н. Терентьева», «Хавхалану хавалĕ», «Революцичченхи чăваш литератури» тата ытти кĕнекесен авторĕ. Анатолий Васан 1996 çулта çĕре кĕнĕ.

## АХ, АВАН-ÇКЕ

Ир-ирех садра ĕçлерĕм,
Лартрăм икĕ улмуççи.
Пĕри тусăм валли терĕм,
Тепри – хамăн. Ӳсĕç-ши?
Ман чĕремçĕм çулăмланчĕ
Тусăм кăмăллăн пăхсан.
Ах, аван-çке, ах, аван-çке
Улмуççи çеçке çурсан.

Шур тумпа ман сад пĕркенчĕ,
Çурĕ сывлăмпа питне.
Тусăмçăм, сада килсемччĕ
Çамрăк улмуççи патне.
Тутансамччĕ эсĕ унăн
Хĕрлĕ-хĕрлĕ улмине.
Ах, аван-çке, тусăм сăнĕ
Анис евĕр хĕмленет.

Киленсе садра çӳрерĕ
Вăштăр-вăштăр çурхи çил.
Тусăм валли пултăр терĕм
Лартрăм икĕ улмуççи.
Ман чĕремçĕм çулăмланчĕ,
Тусăм кăмăллăн пăхсан.
Эх, аван-çке, эх, аван-çке
Тусăм кăмăллăн пăхсан.

Сар хĕвел пăхса йăпанчĕ
Манăн тулăх сад çине.
Савнă тусăм, тутансамччĕ
Çамрăк садăн улмине.
Тусăм сăнĕ йăл! çуталчĕ,
Анис евĕр туйăнать.
Эх, аван-çке, эх, аван-çке,
Анис евĕр туйăнать.

## ХИРТЕ

Ыраш пуссийĕ – куçăм виçейми,
Çурла тытасшăн кĕçĕтет ман алă.
Машинăсем кĕрлеççĕ хир тулли,
Хир туллиех хастар та ĕçчен халăх.

Çăтăртатса ав жнейка тыр вырать,
Пĕр тикĕс кĕрлесе шăвать комбайн.
Ун бункерне ылтăн ыраш юхать,
Пĕрчийĕсем – хĕвел хĕлхемĕ майлă.

Çĕн сăвă ман та юхтăрччĕ çапла,
Сахал пулин те патăрччĕ вăл усă.
Ĕçле, поэт, çурла ак тыт, тарла,
Ĕç тарлă та, вăл пархатарлă, тусăм.

* * *

Юхса килет те пахчана ăш çил,
Çулçăсене калаçтарса илет.
Атте лартса хăварнă улмуççи
Пире шултра улмисене сĕнет.

Хуçийĕ çук та – ĕçĕ пурăнать,
Ыр ячĕ унăн тухмĕ хисепрен.
Сĕтеклĕ улмана кăшт астивсен
Чуна вăй-хал та кĕнĕн туйăнать.

## САВНИ ХĔВЕЛ ПЕК ТУЙĂНЧĔ

Эп тухрăм пахчана ирпе, –
Анис хĕп-хĕрлĕ курăнчĕ.
Те хĕрлипе,
Те тутлипе,
Те пит сĕтеклĕ пулнипе
Савни тути пек туйăнчĕ.

Эп тухрăм пахчана ирпе, –
Шăпчăк юррийĕ илтĕнчĕ.
Те хитрипе,
Янравлипе,
Те уçă саслă пулнипе
Савни сасси пек туйăнчĕ.

Эп çумăн лартăм савнипе, –
Сисмерĕмĕр – тул çутăлчĕ.
Йăл кулнипе,
Вăтаннипе,
Те ăшшăн-ăшшăн пăхнипе
Савни хĕвел пек туйăнчĕ.

## КУÇÇУЛĔ

Аллăмра выртать сан пĕчĕк алă,
Хыт хумханнăран чĕтрет кăштах.
Эс каларăн: «Савнă тусăм, халĕ
Ман шăпам санра яланлăхах».

Икĕ куçунта мерчен тумламĕ
Шăрçаланчĕ, анчĕ те юхса, –
Пăхрăн эс тем ыйтнăн, тархасланăн
Пăхрăн чĕрене йăлт хускатса.

Асамран каймарĕ çав куççулĕ,
Умăмрах тăрать йăлтăртатса.
Вăл чун тĕпĕнчен, тен, тухнă пулĕ,
Çавăнпа чĕр кĕмĕл пек таса.

## ХАЛĂХĂМА

Тахçан сан йăх-ăрăвусем çӳренĕ
Хунсемпеле пĕрле походсене...
Мăн Атăл хĕрринче эс никĕсленĕ
Пăлхар патшалăхне, хулисене.

Чапу та, асапу та пулнă санăн,
Кампа кăна тĕрĕслемен хĕçне?
Чинкис-Патти эшкерĕ, Хусан ханĕ
Çыхса тăлланă сан ирĕклĕхне.

Анчах епле хĕн-пусмăра ӳпкевсĕр
Тӳсейĕç ирĕке савакансем?
Паттăрсенчен пулман-çке эсĕ хĕсĕр,
Ахаль-им хывăннă легендăсем?

Çĕкленнĕ Сăр таврашĕнче
Сăр паттăр,
Сарри ятпа вăл юлнă халапра.
Те сарă пулнă-ха вăл, те хура –
Этемшĕн паттăрлăх – сăн-питре мар-тăр.

Хан эшкерне Сарри çапса аркатнă
Тӳлеккĕн юхакан Сăр хĕрринче.
Анчах малаллине те вăл ăнкарнă:
Пĕртен-пĕр çăлăнăç – Мускав енче.

Çавăнтанпа эс вырăспа пайланă
Ялан савăнăçне те хуйхине.
Е Разинпа, Пăкачпа хускалнă,
Тустарнă эсĕ пусмăрçăсене.

Халь ирĕккĕн хулпуççине саратăн,
Çук, çӳреместĕн тек пуçа пĕксе.
Эс касрăн алăк вĕççĕр космосра та,
Çула тухатăн хумлă тинĕсе.

Заводусем капмаррăн çĕкленеççĕ,
Ват Шупашкар ӳсет кунсеренех.
Чăвашсене таçта та халь пĕлеççĕ,
Ырлаççĕ сăвăçне, инженерне.

Тăван çĕршывăн çĕр чĕлхеллĕ йышĕ –
Пурнатпăр пĕр тăллевлĕ шухăшпа.
Эп савăнатăп хам чăваш пулнишĕн,
Мăнаçланатăп, халăхăм, санпа!

## ПОЭТА

Çĕн ĕмĕр кĕввине кĕрет
Ман ĕçчен халăх ĕçĕ.
Таçта та хĕрӳ ĕç вĕрет,
Çак мар-им вăл поэзи!

Поэзи – иксĕлми хăват,
Нихçан пĕтми кун-çуллă.
Çын чĕрине вăл вăй хушать,
Чĕртет сӳнми вут-çулăм.

Эс пурнăç уттинчен нихçан
Ан юл, поэт, пĕр утăм.
Сăввусенче çĕклентĕр сан
Çĕн шухăш, çĕнĕ туртăм.



## Ираида ВДОВИНА

Ираида Григорьевна Вдовина (Петрова) – чăваш халăх юррисене пухакан, илемлетсе юрлакан тата юрăсем хывакан халăх юрăçи.

И.Г. Вдовина 1913 çулхи авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕн Кĕчкей ялĕнче çуралса ӳснĕ. Мĕн ачаранпах хăй пĕлекен юрăсене тетраде çырса пынă. Вĕсен шутне кукашшĕ ялĕн (Çĕрпӳ районĕн Чăрăш Туçари) юррисем те кĕнĕ. Каярах вара хăй те халăх юррисем евĕрлĕ хайлавсем çырма пуçланă. Вĕсем халăхра анлă сарăлнă, хăшĕ-пĕри халăх юрри пулса кайнă.

Тăван ялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул вĕренсе пĕтерсен Шупашкарти педагогика техникумне кайса кĕнĕ. Кунтан вĕренсе тухсан вăл малтан Çĕрпӳри ача çуртĕнче учительте ĕçленĕ. 1937 çулта Çĕрпӳ районĕн Чăрăш Туçа вăтам шкулне ĕçлеме куçнă. Юлашки кунччен И. Вдовина хăйĕн çемйипе Чăрăш Туçа ялĕнче пурăннă. 1952 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш уйрăмĕнчен куçăмсăр вĕренсе

тухнă. Ираида Григорьевна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче «Улăхрăм эпĕ çӳллĕ ту çине» пĕрремĕш хайлавне çырнă. Мĕнпурĕ тăхăр юрă хывнă. Паллă юрăçă пурнăç тăршшĕнче пине яхăн юрă пухнă, ытларахăшне тăванĕсемпе юлташĕсенчен е хăй пурăннă, е ĕçленĕ вырăнсенче тĕрлĕ çынтан илтнине астуса çырса хунă. Вăл юрланă халăх юррисем 3 грампластинка (Мускав, «Мелодия» фирма), 50 юрă «Юрă – чун уççи» юрă пуххинче (1970), 222 – «Чăваш халăх юррисем» пуххинче (1985) кун çути курнă. Халăхра упранакан юрăсене пухас ĕçре нумай çул тăрăшнăшăн 1985 çулта «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята панă.

1985 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче И.Г. Вдовина çĕре кĕнĕ.

## ÇАВĂНПА ПУЯН ПИРĔН СОВХОЗ

Уй-хир тулли тырри-пулли,
Пусси-пусси сарă тулли.
Эпир хамăр уй-хир хуçи –
Çавăнпа пуян пирĕн совхоз.

Улăх тулли ухлĕм ути,
Хур-кăвакал пĕве тулли.
Эпир хамăр çĕршыв хуçи –
Çавăнпа пуян пирĕн совхоз.

Вите тулли выльăх-чĕрлĕх,
Ĕне ферми – чăн сĕт кӳлли.
Эпир хамăр вĕсен хуçи –
Çавăнпа пуян пирĕн совхоз.

Пахчи-пахчи улми-çырли,
Аран тӳссе ларать йывçи.
Эпир хамăр пахча хуçи –
Çавăнпа пуян пирĕн совхоз.

Пахчи-пахчи хăмла пахчи,
Шăрçаланса ӳсет хăмли.
Эпир хамăр хăмла хуçи –
Çавăнпа пуян пирĕн совхоз.

Вăя хурса ĕçлерĕмĕр,
Ăмăртура çĕнтертĕмĕр.
Ĕçре кайри пулмарăмăр –
Çавăнпа пуян пирĕн совхоз.

## ТУСĂМ ТУХМĔ ЧĔРЕРЕН

Çурхи кайăк сад пахчинче
Юр(ă) юрлатчĕ çулсерен.
Ун юррине чун савнипе
Эп итлеттĕм каçсерен.

Çу иртсессĕн, кĕр çитсессĕн
Тусăм кайрĕ аякка.
Тем чул ыр çын тĕл пулсан та
Ан манса кай эс мана.

Илĕртӳллĕ сăмахусем
Çавăраймĕç пуçăма.
«Сыв пул», – тенĕ сăмахусем
Çунтараççĕ ăшăма.

Садра шăпчăк юрланине
Шутсăр итлес килет ман.
Ас(а) илет-ши мана тусăм,
Çавна пĕлес килет ман.

Çуркуннепе садра шăпчăк
Юрă юрлĕ каççерен.
Кирек ăçта пулсан та
Тусăм тухмĕ чĕререн.

## МĔН САС ЛАЙĂХ

Вăрмана кĕрсен мĕн сас лайăх,
Вăрмана кĕрсен мĕн сас лайăх?
Кайăк-кĕшĕк сасси лайăх,
Кайăк-кĕшĕк сасси лайăх.

Ĕçе тухсан мĕн сас лайăх,
Ĕçе тухсан мĕн сас лайăх?
Ĕçчен халăх сасси лайăх,
Ĕçчен халăх сасси лайăх.

Уя тухсан мĕн сас лайăх,
Уя тухсан мĕн сас лайăх?
Трактор-комбайн сасси лайăх,
Трактор-комбайн сасси лайăх.

Ферм(ăн)а пырсан мĕн сас лайăх,
Ферм(ăн)а пырсан мĕн сас лайăх?
(Ă)ратлă выльăх сасси лайăх,
(Ă)ратлă выльăх сасси лайăх.

Вăййа тухсан мĕн сас лайăх,
Вăййа тухсан мĕн сас лайăх?
Яш-кĕрĕмĕн сасси лайăх,
Яш-кĕрĕмĕн сасси лайăх.

Пӳрте кĕрсен мĕн сас лайăх,
Пӳрте кĕрсен мĕн сас лайăх?
Ача-пăча сасси лайăх,
Ача-пăча сасси лайăх.

## ФЕРМА ХĔРĔСЕН ЮРРИ

Пирĕн колхоз ферминче
Ăмăртуллă ĕç вĕрет.
Ой, вара, мĕн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ăмăртура мала тухсан
Савăнмалла мар-и-ха?

Кашни çĕр гектар пуçне
Виççĕр центнер сĕт сусан,
Ой, вара, мĕн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ăмăртура мала тухсан
Савăнмалла мар-и-ха?

Нумай сӗт суса илнипе
Савӑнмалла мар-и-ха?
Ой, вара, мӗн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ӑмӑртура мала тухсан
Савӑнмалла мар-и-ха?

Фермӑри ӗҫчен хӗрсем,
Тухӑр, савнӑр уявра.
Ой, вара, мӗн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ӗҫ геройӗн вӑйӑра
Савӑнмалла мар-и-ха?

Эпӗр пур ӗҫре сатур,
Вӑйӑ-ташӑра маттур.
Ой, вара, мӗн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ӗҫрен каннӑ вӑхӑтра
Ташламалла мар-и-ха?

Чӑваш халӑх ырлӑхне
Ӳстерер-ха кунран кун.
Ой, вара, мӗн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ӗҫрен каннӑ вӑхӑтра
Ташламалла мар-и-ха?
Их!

# ЭП КАХАЛА САВАС ÇУК

– Ах, Кĕтерук, чиперук,
Сан пек савнă хĕр ман çук,
Иккĕн туслă пулар-и?
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и?
Мĕнрен эпĕ хитре мар,
Мĕнрен ятăм ман начар,
Эсĕ мана юратсан,
Ĕмĕр пулăп эпĕ сан.
– Эс хитре, Кăтра Ваçук,
Хурлама сана май çук.
Чакăр куç та кăтра çӳç,
Паха пирвай курнă чух.
– Пирĕн Аслă Туçара
Мана савман хĕр те çук.
Анчах хамшăн таврара
Куçăм савнă пĕр хĕр çук.
– Колхозри маттур хĕрсем,
Нихçан санпа килĕшмен.
Эс ман умра ан вĕçсем,
Эс мар, хĕрсем çӳремен,
Шутламастăн вĕренме,
Ӳркенетĕн ĕçлеме
Хам комбайнер Павăла,
Улăштармас санпала.
– Комбайнер мĕнех вара,
Мĕнрен эп унтан начар?
Телей пирĕн алăра,
Кĕтерук, пĕрле утар.
– Комбайнер ĕçре хастар,
Ун тавра ялан мухтав,

Эс пире ан чăрмантар
Пăрăн çул çинчен, юлхав.
Ĕç геройне манас çук,
Кахала эп савас çук,
Ан шухăшла эс, Ваçук,
Эп сан савни пулас çук.

## ПИРЕ ВĂРÇĂ КИРЛĔ МАР

Çирĕп мир юрри шăранать паян,
Нихçан чарăнми янратăр ялан.
Миршĕн кар тăрса пур халăх юрлар,
Пире вăрçă кирлĕ мар.
Халăх уявлать Çĕнтерӳ кунне,
Халĕ çĕршывра пирĕн çуркунне.
Паттăр халăха чыслăн тав тăвар,
Пире вăрçă кирлĕ мар.
Çĕр çине пăхса хĕвел йăл кулать,
Хăйĕн шевлине пĕр тан сапалать.
Сарă хĕвел пек кăмăллă пулар,
Пире вăрçă кирлĕ мар.
Çĕрĕм-шывăм ман сад пек ешерет,
Кулленхи ĕçре халăх вăй илет.
Пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утар,
Пире вăрçă кирлĕ мар.
Çултан-çул, çĕршыв, ӳстĕр хăвату,
Нихăçан арканми пултăр юрату.
Тус-тăванлăха тивĕçлĕн упрар,
Пире вăрçă кирлĕ мар.



## Иван ВИКТОРОВ

Иван Викторович Викторов 1901 çулхи авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Хурамал Туçа ялĕнче çуралнă. Сĕнтĕрвăрри районĕн Шĕнерпуç шкулĕнчен, Çĕрпӳ икĕ сыпăклă шкулĕнчен, Хусан учительсем хатĕрлекен семинаринчен вĕренсе тухнă. 1918 çулта хăй ирĕкĕпе Граждан вăрçине кайнă, алла пăшал тытса Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ. Хĕрлĕ Çартан таврăнсан И. Викторов Çĕрпӳ хулин шкулĕнче учительте ĕçленĕ. Атăл тăрăхне выçлăх килсе çапнă 1921 çулта выçăпа аптракан ачасене пулăшнă, тăлăх ачасене Мускавпа ытти хуласенчи ача çурчĕсене ăсатнă.

1923–1926 çулсенче И. Викторов Мускавра Литература институтĕнче вĕреннĕ. 1926–1929 çулсенче СССР Союзĕнчи халăхсен Тĕп издательствин чăваш секцийĕнче кĕнекесем редакциленĕ. «Пирĕн çул» ятлă альманах ĕçне хастар хутшăннă, Мускавра пурăнакан чăваш çыравçисене ертсе пынă. 1926 çулта И. Викторов И. Семеновпа пĕрле чăваш çыравçисен чи лайăх хайлавĕсене пухса «Чă-

ваш илемлĕ литературиҫ» вĕренӳ кĕнеки кăларнă. 1929–1932 ҫулсенче И. Викторов Мускавра «Чăваш хресченĕ» хаҫатăн яваплă секретарĕнче вăй хунă. 1932 ҫул вĕҫĕнче ăна Куйбышев (хальхи Самар) хулинче «Колхозник» хаҫат редакторĕнче ĕҫлеме куҫарнă. Литература ĕҫне унта та хастар хутшăннă. Вăтам Атăл тăрăхĕнчи чăваш писателĕсене «Вăтам Атăл» альманах кăларма пулăшнă.

Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫи пуҫлансан вăл Беларуҫре партизан отрядĕнче хастаррăн ҫапăҫать. Пĕр хаяр ҫапăҫура аманнипе пула фашистсен тыткăнне лекет. Борисов хулинчи концлагере тытса хупаҫҫĕ. Икĕ хутчен тухса тарнă вăл унтан. Парăнман паттăра 1944 ҫулта шартлама сивĕре ҫарамаслантарса сивĕ шывпа сапнă. Юлашкинчен ăна персе вĕлернĕ. 2001 ҫулта паттăра хисеплесе Хурамал ялĕн ҫăвинче А.С. Розов художник ăсталанă чул палăка лартнă.

Литературăн тĕрлĕ жанрĕпе ҫыракан И.В. Викторов пултарулăхĕ нумай енлĕ. Тĕрлĕ вырăнта ĕҫленĕ вăхăтра сăвăсемпе тĕрленчĕксем, очерксем, пьесăсем, критика статйисем ҫырнă, вырăсла хайлавсене чăвашла куҫарнă. Вăрҫăччен «Ялти кĕвĕсем» сăвă пуххи (1925), «Ирĕклĕхшĕн ҫапăҫакансем» драма (1926), «Ҫырмара» пьеса (1929) пичетлесе кăларнă.

## ВАТĂ ҪЫН

Ĕлĕкхи пек пурăнма
Вăйăм-халăм ҫитес ҫук.
Маттур ҫамрăк халăха
Тĕлĕнтерсе пурнас ҫук.

Мана çулла илемпе
Илĕртеймĕ малашне.
Çуркунне те ватăшăн
Çухатрĕ-çке хăй йĕрне.

Эх, иртрĕ-çке çамрăклăх!
Ун чух эп те ешĕлччĕ.
Эх, иртĕ-çке савăнăç!
Вăйăм-халăм иксĕлчĕ.

## УЙРА

Кăнтăрла. Уйра шăпах,
Çил вĕрмест,
Кăтăш пулнă çынсене
Илеймест.

Тырă ăшĕнче шăрчăк
Çухăрать,
Çавана хăйранă пек
Туйăнать.

Ыйха çĕнеймесĕр эп
Выртатăп.
Тĕрлĕ лайăх тĕлĕксем
Куратăп.

Кăнтăр канăвĕ турĕ
Ĕçчене.
Кайран хĕрсе ĕçлеме
Каçченех.

# ÇУЛЛАХИ КАÇ

Çӳлтен аяла пăхса
Хĕвел пĕрре çаврăнчĕ,
Каç пулнипе васкаса
Сăрт айĕнче пытанчĕ.

Ял хушшинче савăнса
Ача-пăча тапранчĕ.
Хир-вăрманта ывăнса
Кайăк-кĕшĕк лăпланчĕ.

Сăрт айĕнчен савăнса
Вара уйăх курăнчĕ,
Пĕлĕт айне пытанса
Хăй çулĕпе шăвăнчĕ.

Хура вăрман хурланса
Ун çутипе çуталчĕ,
Тӳлек шывалла пăхса
Хăй мĕлкине ăмсанчĕ.

Хăйне апат шыраса
Çара çерçи ярăнчĕ.
Улăх тăрăх янраса
Карăш юрри шăранчĕ.

Ĕçрен килнĕ ял-йышсем
Ыйха путса шăпланчĕç,
Ыран ĕç кĕтет тесе
Тĕлĕк курма васкарĕç.

# СУХАÇĂ ЮРРИ

Ну-ну-у!.. утах малалла
Сухаласа пĕтерес,
Вăхăтпала вăрлăха
Ана çине сирпĕтес.
Куллен хура пĕлĕтрен
Çумăр тăтăр сирпĕнсе.
Хыт анасем çемçелччĕр,
Тăпра вырттăр нӳрелсе.

Акнă тырă çӳлелле
Кăчăл тухтăр шăтарса,
Хĕвел хĕртсе пăхнă чух
Лартăр çилпе хумханса.
Тырри пулсан кил-йышпа
Вырма тухса кайăпăр,
Кăвак пĕлĕт айĕнче
Хавасланса вырăпăр.

Таса уйра сар ыраш
Ларĕ çилпе хумханса,
Эпир ăна хавассăн
Вырăпăр хавхаланса.
Вăхăтпала вăрмантан
Кайăк сасси илтĕнĕ.
Çурăм тарне типĕтме
Кассăн-кассăн çил вĕрĕ.

Çурла каснă майĕпе
Ана çинче тыр пĕтĕ.
Вырса çапса пуçтарсан
Пӳлме тулса тăкăнĕ.

– Халтăр-халтăр, – арманта
Йывăр чулĕ çаврăнĕ.
– Ластăр-ластăр, – ларара
Шурă çăнăх тăкăнĕ.

– Шăрт-шарт! – туса вут çунĕ,
Арăм кулач пĕçерĕ.
Шурă сĕтел хушшинче
Мĕн пур кил-йыш сăйланĕ.
Çĕр кăкăрне тав туса
Вĕсем пурте савăнĕç.
Ĕç çыннине мухтама
Пур кайăксем тапранĕç.

## ТЕЛЕЙ ĔÇРЕ

Пĕтĕм телей ĕçре.
Кил хушшинче, уйра.
Тар тухиччен ĕçле –
Тин савăн уявра.

Ĕçле тĕлĕнмелле –
Ĕç, акнă тыр пек, ӳсет,
Мĕн пуласси паллă вăл –
Халăх кĕтни çитет.

Пысăк савăнăç – ĕçре.
Ĕçре кăна – телей.
Тар тухиччен ĕçле
Ял-йышпа пĕрле.

## СУХАÇĂ ШУХĂШĔ

Хĕвел ăшшăн пăхнипе
Сивĕ кунсем иртеççĕ.
Пирĕн туссем – шăнкăрчсем
Ăшă çĕртен килеççĕ.

Шăнкăртатса урамра
Юр шыв пăтранса юхать.
Уйра шур юр хуралать,
Ана-çаран тасалать.

Хĕвел хытă пĕçертет,
Юр та ирĕлсе пĕтет.
Çĕршыв типсе çитсессĕн
Тахçан кĕтнĕ кун çитет.

Çак кунсенче пăхмасăр
Ĕçлес хытă тăрăшса.
Суха-сÿре таврашне
Юсас часрахваскаса.

Ешĕл курăк хăпарсан,
Ирпе илтсен шапана
Кил хушшинчен уялалла
Тухса каяс акана.

Сухапуçне юсама
Ун чух вара вăхăт мар.
Хытă ĕçлес тăрăшса,
Инкек кулли пулас мар!

## ВЫРТМАРА

*(Сыпăк)*

Ула-чăла пĕлĕтсем
Хăямата каяççĕ.
Чăлтăр-чалтăр çăлтăрсем
Пытанмалла выляççĕ.

Уйăх çӳле хăпарса
Йĕри-тавра çаврăнать.
Хура вăрман хушшинче
Шăпчăк ыйхăран тăрать.

– Ипчак-ипчак! Тре-ле-ле! –
Юрă пĕрмаях юхать.
Тул çутăлни палăрать,
Уйăх çути çухалать...

Ешĕл улăх варринче
Йăлт-ялт туса вут çунмасть.
Тул çутăлса кун килет.
Сисĕнмесĕр иртет каç.

Учĕсене утланса
Яшсем яла васкаççĕ,
Çĕнĕ ĕçе кӳлĕнме
Ĕмĕтленсе шутлаççĕ.

Ешĕл вăрман хушшинче
«Ипчак-чак-чак!» илтĕнет –
Шăпчăк юрлать юррине, –
Пĕтĕм кăмăл çĕкленет.



## Клавдия ВИШНЕВСКАЯ

Клавдия Ивановна Вишневская – Клавдия Иванова, Яковлева, Элиза, Елизавета, Эля Эльф – 1955 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Шăнар ялĕнче çуралнă.

Журналист, поэт, литература критикĕ. Раççей Федерацийĕн журналисчĕсен (1993) тата писателĕсен Союзĕсен ретĕнче (1995) тăрать.

1973 çулта Чатукасси вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Шкулта комсомол ертӳçи, «Прожектор» стена хаçачĕн редакторĕ тата «КВН» ертӳçи пулнă.

Шкул хыççăн Шупашкарти энергетика техникумĕнче пĕлӳ илнĕ. Вĕреннĕ вăхăтра «Электропромприбор» заводра рабочире, контролерта, мастерта ĕçленĕ. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Аспирантура пĕтернĕ. «Ача-пăча сăмахлăхĕн поэтика жанрĕнчи чĕлхепе стиль уйрăмлăхĕсем» монографи авторĕ. Филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ (2004).

Чăваш патшалăх телестуди редакторĕнче тата Шупашкар районĕн «Тăван ен» хаçат корреспондентĕнче ĕçленĕ.

Литература ĕçне 1985 çулта пуçланă. Унăн ачасем валли вунă ытла кĕнеке: «Асанне юрри» (1994), «Тăм шăхлич» (2001), «Çырла тусĕсем» (2006), «Хĕл мучипе Юр пике» тата вырăсла – «Тише, мыши»; çитĕннисем валли: «Тасалăх пур çĕн ĕмĕрсен», «Вăйли пулмĕ тарçă», «Каçхи урам», «Чунлă купăс» поэма, критика статйисен брошюрисем (вырăсла тата чăвашла): «Сăнарсем» (Образы), «Çивĕч сăнарсем» (Острые образы), «Кирлĕ çивĕч сăнарсем» (Необходимые острые образы), «Вĕре çĕлен» (Соня) трагеди тата ыттисем те.

К.И. Вишневская Хисеп тата тав хучĕсене тивĕçнĕ.

## МАНĂН КИЛĔМ – ЧĂВАШ ЕН

*Тăвансене, тус-тантăшсене тата*
*пĕрле вĕреннисене халалласа*

Хитре кавирлĕ çĕршывра
Çуралнă манăн атте-анне.
Çуралнă эп те çав йышра.
Тавах, сире панисене,
Кун çути – таса телей!

Эп çуралнă çĕршывра
Ешереççĕ эпĕ лартнă симĕс йăмрасем.
Эп çуралнă çĕршывра
Пурăнаççĕ манăн хаклă тăвансем.

Тата эпĕ савнă тантăшсем –
Пĕр шкулта пĕрле вĕреннисем.
Эп калатăп савăнсах:
– Манăн килĕм – Чăваш Ен!

Мĕнех пулать-ши чи чапли?
Çуралнă манăн кил пулмасан.
Çĕршывăм манăн чи хăватли,
Тавах, сире панисене,
Кун çути – таса телей!

Эп çуралнă çĕршывра
Ешереççĕ эпĕ лартнă симĕс йăмрасем.
Эп çуралнă çĕршывра
Пурăнаççĕ манăн хаклă тăвансем.
Тата эпĕ савнă тантăшсем –
Пĕр шкулта пĕрле вĕреннисем.
Эп калатăп савăнсах:
– Манăн килĕм – Чăваш Ен!

Кирек ăçта эпĕ кайсан
Аса килет манăн Тăван ен.
Манмăп эп сана нихçан,
Манăн чун юратакан Тăван ен!
Тавах, сире панисене,
Кун çути – таса телей!

Эп çуралнă çĕршывра
Ешереççĕ эпĕ лартнă симĕс йăмрасем.
Эп çуралнă çĕршывра
Пурăнаççĕ манăн хаклă тăвансем.
Тата эпĕ савнă тантăшсем –
Пĕр шкулта пĕрле вĕреннисем.
Эп калатăп савăнсах:
– Манăн килĕм – Чăваш Ен!

## ПУР, ПУЛАÇÇĔ ПАТТĂРСЕМ

Ахальтен мар вăрçăра
Пулнă пирĕн тăвансем.
Çĕнтерсе çапăçура
Таврăннă йыш паттăрсем.

Йывăрлăхне çĕнтерсе
Аркатнă пур тăшмана.
Тăванлăхра çитĕнсе
Ӳсрĕмĕр – телей, чăнах!

Сыхлаççĕ тек салтаксем
Чаплă çĕршыва чунтан.
Тӳпере çут çăлтăрсем –
Иксĕлместпĕр паттăртан.

Раççейре чăн салтаксем –
Чикĕ сыхăран аван!
Пур, пулаççĕ паттăрсем:
Вĕсем упрĕç çĕршыва!

## АННЕНЕ

Çул çинче ура текех –
Çуна тупанĕ пекех –
Шухăш шăвать килелле.
Аннешĕн иртенпех çунан
Çут шухăшăм манăннах
Таса та кăмăллă тăван.
Вичкĕн ăшă куçусем,

Ĕçчен шурă аллусем
Вырнаçнă мана, пĕлсем.
Никамран ытла сана
Савать чунăм манăннах,
Парас çук нихçан манма.
Мухтанатăп эп санпа
Çĕклеме ятна эс пар:
Пултăр саншăн ыр хыпар.
Сан ятна çĕкле-çĕкле
Хăпарам çӳлтен çӳле:
Таса сывлăхлă çӳре.
Сан юну чупать манра,
Тăвать чуна ăшăрах –
Ĕмĕр тухмăн ăшăмран.

## ТУПРĂМ ТЕЛЕЕ

Пĕр канмасăр, çывăрмасăр
Алă шăли эп тĕрлерĕм.
Савни çара кайнă чух
Тĕрленине парнелерĕм.

Куç хупмасăр хатĕрлерĕм –
Сăмса тутри эп тĕрлерĕм.
Савни çартан килсенех
Сăмса тутри парнелерĕм.

Савнă тусăмпа пур шанчăк –
Телей парасса кĕтетĕп.
Пĕри, тепри – ачасем
Парне пуласса пĕлетĕп.

Эпĕ савăк ачасемшĕн
Хĕвел çути пек телейлĕ.
Савнă мăшăр пирĕнпе –
Тупрăм телее çителĕк.

## КĂВАКАРЧĂН

Эсĕ, савнă кăвакарчăн,
Пӳрт тăрринче пурăнатăн.
Санăн савнă мăшăру ăçта?
Е ман пекех кĕтетĕн кăçал?

Эп пĕлетĕп пĕччен акă –
Ман пек кăмăл пытаратăн.
Мĕншĕн-ши юрламастăн пачах?
Çук пулас санăн ача-пăча?

Эсĕ, савнă кăвакарчăн,
Халĕ манран вĕçсе тартăн.
Манăн та вĕçесчĕ сан пекех,
Санăн юлташу пулма текех.

Çуккă савнă кăвакарчăн.
Эсĕ ахалех пытантăн.
Эпĕ санпала пĕрле ларса
Систересшĕн кăмăла хуçсан.

Тусăм кайăкла пытанчĕ:
Çуккă-çке – хĕвел те анчĕ.
Турă илтмелле – шăпа парсан –
Кĕтĕп ĕмĕрех сана савса.

# ĔМĔРЛЕМЕ ЮРАТУПА

Çурхи хĕвеллĕ кунхине
Утса пыраттăм урампа.
Татса эс пӳлтĕн ман çула –
Куçу çунатлă çулăмпа.

Çăлтăр çуталчĕ ман чунра –
Ытла телейлĕ эп санпа.
Савас килсессĕн кăмăлран
Чĕре çине çунат эс пар
Ĕмĕрлĕхри юратупа.
Парсамччĕ эс мана тупа
Ĕмĕр-ĕмĕр юратма –
Ĕмĕрлеме юратупа.

Сан куç çути мана тивсен
Хыпса эп илтĕм çулăмпа.
Кăвак куçпа хăмăр куçсем
Калаçрĕç тĕттĕм пуличчен.

Çăлтăр çуталчĕ ман чунра –
Ытла телейлĕ эп санпа.
Савас килсессĕн кăмăлран
Чĕре çине çунат эс пар
Ĕмĕрлĕхри юратупа.
Парсамччĕ эс мана тупа
Ĕмĕр-ĕмĕр юратма –
Ĕмĕрлеме юратупа.

Кăвак куç, ман тĕле епле
Пырса тухмашкăн пĕлтĕн-ши?
Пĕрре курсах эпĕ савсан
Епле ман пурнăç пулĕ-ши?

Ҫӑлтӑр ҫуталчӗ ман чунра –
Ытла телейлӗ эп санпа.
Савас килсессӗн кӑмӑлран
Чӗре ҫине ҫунат эс пар
Ӗмӗрлӗхри юратупа.
Парсамччӗ эс мана тупа
Ӗмӗр-ӗмӗр юратма –
Ӗмӗрлеме юратупа.

## ЮРАТУ КӐВАЙЧӖ

Турат ҫине турат
Ҫунса тӑма кӑвайт
Пӑрахрӑмӑр пӗрмай:
Кӑвайт ҫунать, куран.

Хӑватпала
Юрату кӑварӗ.
Ҫунатпала
Юрату каймарӗ.
Хӗмленсе ҫунать
Юрату кӑвайчӗ
Тӗттӗм пулсан каҫхине,
Тӗттӗм пулсан сӗм-ҫӗрле
Тӑрӗ ҫуталса
Юрату кӑвайчӗ.

Сана кӑна чӗрем
Савать, ҫавна пӗлен.
Санпа ялан пӗрле
Юратупа ҫӳрем.

Хăватпала
Юрату кăварĕ.
Çунатпала
Юрату каймарĕ.
Хĕмленсе çунать
Юрату кăвайчĕ
Тĕттĕм пулсан каçхине,
Тĕттĕм пулсан сĕм-çĕрле
Тăрĕ çуталса
Юрату кăвайчĕ.

Паян каять. Ыран
Кăвайт пулать ырхан.
Сӳнме ан пар кайран
Пит юратан пулсан.

Хăватпала
Юрату кăварĕ.
Çунатпала
Юрату каймарĕ.
Хĕмленсе çунать
Юрату кăвайчĕ
Тĕттĕм пулсан каçхине,
Тĕттĕм пулсан сĕм-çĕрле
Тăрĕ çуталса
Юрату кăвайчĕ.

## КĂМĂЛ

Кăмăл хăш хуçăлать.
Хăрама кирлĕ мар –
Турат мар –
Сыпăнать...

## ШУХĂШ

– Шурă хут пек чуна
Вараларĕç, – тет.
Чуну пулсан хут пек кăна
Вараланать те...

* * *

Юрасшăн путсĕррисене
Сутаççĕ ырă чунсене!..

* * *

Сăвăсем – манăн пурнăç.
Ыр çынсем – чун ăшши.
Вилĕм килмĕ, пурăнăп
Çут ĕмĕрсем хушши.

## Игнатий ГОЛУБКИН

Игнатий Константинович Голубкин 1919 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Чурачăк ялĕнче çуралнă. 1939 çулта Чурачăк вăтам шкулне вĕренсе пĕтерсен Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланиччен Минскра Белоруçĕн Уйрăм çар округĕнче морзист-телеграфист пулнă. Вăрçа пĕрремĕш кунтанпах кĕнĕ. 1941 çулта Хĕрлĕ Çар чаçĕсем «Вязьма ункине» лекнĕ, нумайăшĕ унтан тухайман, вара çав вырăнсенче партизан отрячĕсем йĕркеленĕ. И. Голубкин «Северный медведь» ятлă партизан отрядĕнче 9 уйăх хаяр тăшманпа çапăçнă. Икĕ хут тыткăна лекнĕ, иккĕшĕнчен те тарнă. 1942 çулта Голубкинсен партизан отрячĕ çапăçнă тăрăха ятарласа янă Белов генералăн гварди корпусĕпе пĕрлешнĕ. Пĕрлешнĕ çар Спасск-Деменск районĕнчи Шуи шоссе хĕрринче тăшманпа тан мар çапăçава кĕнĕ. Çапăçура нумай совет салтакĕ пуç хунă, чылайăшĕ тыткăна лекнĕ. Голубкин, пĕçĕрен аманнăскер, виççĕмĕш хут тыткăна лекнĕ. Нимĕçсем тыткăна лекнисене малтан

Польшăна, каярахпа Францие илсе кайнă. Кунти лагерьтен вĕсем вун виççĕн Франци партизанĕсем патне тарма кавар тунă, анчах пĕри сутăнчăк пулнипе ĕç тухман. Иккĕмĕш фронт уçăлсан «вырăссене» вăрçă пĕтес умĕн американецсем ирĕке кăларнă. Вăрçă вĕçленсен тыткăна лекнĕ совет салтакĕсене Эльба урлă хамăрăннисем патне ăсатнă. Голубкин тĕрĕслев витĕр тухнă хыççăн каллех 10 уйăх Совет Çарĕнче Калининград облаçĕнчи артполкра службăра тăнă. 1946 çулта демобилизаци йĕркипе киле таврăннă. Чурачăкри райсобесра инспекторта ĕçлеме пуçланнă, авланнă. Чăваш патшалăх педагогика институчĕн вырăс чĕлхипе литература факультечĕн куçăмсăр уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Анчах вĕренӳ кĕçех татăлнă, тыткăнра пулнăран 10 çуллăха тĕрмене хупнă. 1947–1955 çулсенче çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи лагерьсенче ларнă: 1955 çулта Голубкина реабилитациленĕ. Амнистипе киле таврăнсан Çĕрпӳ районĕн «Броневик» совхозĕнче Такана ялĕнче бригадирта ĕçленĕ. И. Голубкин вăрçăра хастар çапăçнăшăн орденсемпе медальсем илме тивĕç пулнă.

Литература ĕçне шкул çулĕнчех тытăннă. Сăвăсемпе корреспонденцисем çырнă, хаçатсенче пичетленĕ. 1939 çулта Çĕрпӳ райхаçатĕнче «Юрлас килет» пĕрремĕш сăвви кун çути курнă, унтанпа çав хаçатран уйрăлман вăл: райхаçат çумĕнчи литпĕрлешӳ членĕ, обществăлла корреспондент пулнă. И. Голубкинăн кил архивĕнче ку яхăнччен пичетленмен 200 сăвă тата «Кӳршĕ хĕрĕ» поэмăпа «Телейпе инкек» сăвăллă драма упранать. «Парне, (Подарок)» (2004) сăвă пуххийĕн авторĕ.

# ЭП КАЯТĂП ÇĔРШЫВ ЧИККИНЕ

Вăрманта сывлама сывлăш уçă.
Килсе çитрĕ кунта кĕркунне.
Йывăççем вĕçтерсе сарă çулçă
Вăратаççĕ вăрман шăплăхне.

Вăрманти яштака чăрăш евĕр
Туйăнатăн, савни, эс мана.
Вăл пĕр пек тумĕпе хĕлĕн-çăвĕн,
Çавăн пек кăмăлу яланах.

Тӳпене хăпарса шупка уйăх
Кĕмĕлне çĕр çине сапайсан,
Ман çавах шухăшпа килмест ыйăх,
Эс юлан салтака эп кайсан.

Çуллахи кунсенче çак вăрманлăх
Парнелетчĕ пире сулхăнне.
Ак паян эп пăхап, ăш вăрканăн,
Куç илмесĕр каллех ун енне.

Шăпчăкпа калаçать ирхи шуçăм,
Ачаш çилĕ – шап-шур çĕмĕртпе.
Эп санпа калаçаттăмччĕ, тусăм,
Вĕсем пек иксĕлми ĕмĕтпе.

Йывăççем вĕçертеççĕ сар çулçă,
Эп каятăп çĕршыв чиккине.
Хăв пĕлетĕн, чухлан ăсатуçăн,
Çĕршыва халь хурал кирлине.

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

Ытарайми тăван тавралăх,
Пĕрре эс маншăн çутă тĕнчере.
Çуралнă ялăмăр йăмраллă,
Яланлăхах вăл манăн чĕрере.

Хирте кашлать çын çӳллĕш тырă,
Тулса çитсессĕн ылтăн пучаххи.
Чăнах калатăп, лайăх вырăн,
Ăнса пырать кунта аки-сухи.

Ĕçе тухсассăн ял ĕçченĕ
Ĕçлет чунне парса, çан тавăрса.
Пĕлет вăл – пур ĕç илемленĕ
Ĕçре мĕн пурĕ вăй-халне хурсан.

Тăват кĕтес – тăван тавралăх,
Вутра кам пулнă саншăн вăрçăра,
Ăна паян та эсĕ тараватлăн
Кĕтсе илетĕн çăкăр-тăварпа.

# ХĂНА ЮРРИ

Ăсатса яр, тăванăм, ăсатса яр,
Чипер килнех пулсан, чипер каяр.
Ай, пăхрăн-çке аван, инçе тăван,
Эпир тухса кайсан, эс ан кулян.

Çулсен-йĕрсен пурах пуль çул кукри.
Ĕçсем, тесе ан сĕнĕр çул курки.
Ачам-пăчам кĕтет, хĕвел анать,
Ӳксен, çири тумтир вараланать.

Çиес-ĕçес тесен сĕтел тулли,
Тăванусем те хăвăр – куç тулли.
Ташларăмăр, юрларăмăр савса,
Нумайлăха ку юлтăрччĕ асра.

Пырса курсам, тăван, хыпар ярсан,
Пурăнма та аван, колхоз пуян.
Чунтан сума суса, çĕршывăма
Çитейĕ-ши сăмах, ай, тав тума.

Ăсатса яр, тăванăм, ăсатса яр,
Чипер килнех пулсан, чипер каяр.
Эй, пăхрăн-çке аван, каяс, тăван,
Эпир тухса кайсан, эс ан кулян.

## ÇУМĂР

Ала пекех тӳпе кĕрпе,
Çӳлтен вĕт çумăр тăкăнать,
Утап уй-хир сукмакĕпе
Эп – ял поэчĕ, Йăкăнат.

Ыраш пĕрчи йывăрланать,
Питрен лекеççĕ пучахсем.
Сар тинĕс лăпкăн хумханать
Килес уй карапне кĕтсе.

Колхоз çĕрне пехет сунса
Анаççĕ кĕмĕл тумламсем.
Утатăп сăвă каласа, –
Чунра янраççĕ хĕлĕхсем.

Хавасланса эп утнипе
Яла сисмерĕм кĕнине.
Ялта çанталăк тип-типех,
Çуман та çумăр ял çине.

Манран кулаççĕ кӳршĕсем.
Епле эс, теççĕ, йĕп-йĕпе.
Хĕвел пăхсан, уç çил, вĕрсем,
Тултах ман типтĕрччĕ кĕпе.

# ÇĔНĔ ÇУЛА КĔТСЕ ИЛНИ

Сиссех пуль çурçĕр çитнине
Чĕре шаккать чун алăкне:
«Уçсам, манпа пĕрле Çĕн çул,
Тен, ывăннă вăл çул çинче.
Хавас куççулĕ куçĕнче,
Килен çулпа сăпайлă пул».

Чĕре шаккать. Эп вăранап.
Тек ыйăх тусас çук мана.
Килте эп пултăм тĕлĕкре.
Ларап пек çумăн арăмпа.
Сăйлать мана вăл сăрапа.
Тус-тăвансем – кĕрекере.

Кунта сухаллă Хĕл мучи,
Юнашарах пек юр пики.
Мучи парне-çке валеçет,
Çаптарнă май хăй сăмахне,
Шăлса илет шур сухалне...
Çак тĕлĕк пулĕ чăн кĕçех.

## ВИÇĔ ХĔВЕЛ

Çанталăк сивĕ. Ура айĕн,
Утуçăн, юр кăчăртатать.
Сывлăшалла юри сурайрăм,
Ман сурчăк кĕç шăнса ларать.

Çунать пушарăн хĕвеланăç,
Хĕм-çулăм ӳкнĕ тӳпене,
Виç хĕвелтен виç юпа аннă,
Кашни, чарак пек, çĕр çине.

Ку виç хĕвел пĕр тантăш тейĕн,
Ытла та пĕрешкел пĕрле.
Вĕсен те пулĕ, тен, телейĕ,
Вĕсем ăсатасшăн сив хĕле.

Хуратăп кирпĕч çине кирпĕч,
Ӳссех пырать кермен пек çурт.
Тата та паттăр çын халь кирлĕ,
Çĕршыв хушать: ĕçре вăй хур!

Çанталăк сивĕ. Ура айĕн,
Утуçăн, юр кăчăртатать.
Шăнмасть пулсассăн салакайăк,
Çын мĕншĕн шăнмалла тата?

# МĂШĂРА

Шăпам мана ăçта пырса ярсан та –
Сив çурçĕре е шăрăх кăнтăра,
Ман асăмра эс пурпĕр пурăнатăн,
Умра çут çăлтăрăн йăл йăлтăран.

Ак, сăмахран, эп чирлесе выртатăп,
Кĕтмен çĕртен куратăп-и инкек, –
Пĕр санран çеç пулăшу ыйтатăп,
Санран çеç ăшă сăмахсем кĕтеп.

Эп каламастăп: «Санăн пурнăç çăмăл,
Çумран çухатрăн хăв упăшкуна.
Хытах ан çун та, хуçăлмĕ сан кăмăл,
Кĕтсе çеç пурăн тĕл пулса куна».

Кĕтех, кĕтех, чĕкеçĕм, таврăнатăп,
Кив çул çине туха-туха пăхсам.
Пĕлетĕн – эпĕ саншăн пурăнатăп,
Апла пулсан мана эс юратсам.

Шăпам мана ăçта пырса ярсан та –
Сив çурçĕре е шăрăх кăнтăра,
Эс – пурпĕрех ман ĕмĕтĕм, ман шанчăк,
Умра çут çăлтăрăн йăл йăлтăран.

# ШĂН ÇĔРЕ ЧАКАЛАТПĂР

Ĕмĕрхи шăн çĕре чакалатпăр,
Тимĕр савăл, кирка алăра.
Тепĕр хут тарăхатпăр. Калатпăр,
– Чавмалли машинсем çук вара.

Вăйран ярать йывăр кувалтă,
Ахальтен мар тăпра хĕм сапать.
Кунта пĕр тан, ку – çамрăк, ку – ватă,
Ирĕн-каçăн ĕçлен сменăпа.

Çĕнĕ çурт никĕсне-çке хыватпăр,
Вăхăта ярас марччĕ сая.
Çавăнпах пулмалла пурте паттăр,
Малтисем пулмалла пĕрмаях.

Кашниех кунта чăн-чăн строитель,
Пур ĕçе хамăрах тумалла.
Ал çитмест. Ĕçчен çын кирлĕ питĕ,
Çук пулсан, ăçтан-ха тупмалла.

Чул çуртне те хăвах купалатăн,
Эс хăвах штукатурщик, маляр.
Тытăн пуртă, сава – каскалатăн,
Ăстаçран та хăш чух кая мар.

Хитререх пултăр тетпĕр хуламăр,
Ытларах кăмрăк патăр шахти.
Килсе курăр пире. Çук, хурлаймăр,
Маттурах çамрăкки те ватти.

## ЧӲРЕЧЕ УМĔНЧЕ ӲСТЕРЕТĔП ЧЕЧЕК

Чӳрече умĕнче ӳстеретĕп чечек,
Кăнтăрти чечеке Çурçĕрте ӳстереп.
Вăл пăхма пит хитре, илĕртӳллĕ, чечен,
Çавăнпа шухăша таçта та çитерет.

Эп ăна хăвăртрах чечеклентĕр тесех
Вăхăтра шăварап, тăприне çемçетеп.
Пӳпĕмри шăрш-маршпа пăчăхса типесрен
Кантăка уçап та, тултан сывлăш кĕртеп.

Анчах хам ӳстерекен ку чечекĕн ятне
Паянхи куна та пĕлме çук никамран.
Урамран тупса кĕтĕм ăна çуркунне,
Сан ятна хурас пуль, эс ялан асăмра.

Чӳрече умĕнче ӳстеретĕп чечек,
Кăнтăрти чечеке Çурçĕрте ӳстереп.
Хам ӳстернĕ, хам пăхнă чечен чечекпе,
Чун савни, сан патна çаврăнса çитес теп.

## ÇАМРĂК ПАРТИЗАН

Вăрман хĕрринче пĕччен хурăн ӳсет,
Çав хурăн айне аманса çын ӳкет.
Темскер вăл каласшăнчĕ – уçă тути,
Анчах тĕттĕмленчĕ ун пурнăç çути.

Умне ак, пĕр нимĕç салтакĕ тухать,
Хăрушшăн та шиклĕн таврана пăхать.
Вăл выç кашкăрла вилене сĕтĕрсех
Вăрман шăплăхне çухалать-мĕн кĕçех.

Çавах çакна курчĕ, сăнарĕ хĕвел.
Вилнийĕн тумтирĕ тăшманшăн телей:
Çурать вăл, ватать вăл, пĕр сассăр утать,
Ун хыççăн çакмашкăн суйлать чĕр турат.

...Çухалчĕ вăл, пирĕн разведчик тăван,
Чăвашчĕ, пит çамрăк, ун ячĕ Иван.
Ăна ир тупатпăр эпир, тусĕсем:
Хырăмне шăтарнă, çук ун куçĕсем.

Каларĕ сăмах тарăхсах командир,
Пăшал сассипе янăрарĕ уй-хир.
Иваншăн, пуриншĕн тавратпăр кĕçех,
Отряд малалла çул-йĕр тытрĕ ирех.

...Асрах эс, тăванăм, асрах çав çулсем.
Ак, çитрĕç эпир хытă кĕтнĕ кунсем.
Сан пек паттăра манас çук ман çĕршыв.
Тăпру ĕмĕр чыслă, эпир чĕрĕ, сыв.

Çитрĕ тавăру, çитрĕ эсĕ кĕтни,
Суд умне халь тухрĕ сана вĕлерни.
Çывăрсам, тăванăм, кансам, партизан,
Чăваш яш ачийĕ, разведчик Иван.



## Любовь ГОРДЕЕВА

Любовь Петровна Гордеева 1962 çулхи çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Калиновка ялĕнче çуралнă.

1969–1979 çулсенче Метикасси вăтам шкулĕнче вĕреннĕ. 1979–1983 çулсенче Шупашкар строительство техникумĕнче ăс пухнă. Тĕрлĕ вырăнта вăй хунă, çав вăхăтрах юрă юрлас ĕçе кăмăллană.

Любовь Петровна хăйĕн мăшăрĕпе, Çĕрпӳ районĕн Вутлан ялĕнче çуралса ӳснĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕпе Николай Васильевич Гордеевпа, вăл çĕре кĕриччен 29 çул пĕрле пурăннă, икĕ ывăл çитĕнтерсе аслă пĕлӳ панă.

Николай Гордеев пил панипе юрăç ĕçне алла илнĕ. Пĕрле чылай юрă юрланă, куравçăсене савăнтарнă.

Л. Гордеева – сăвăç, юрăç. Хальхи вăхăтра вăл сăвă-юрă хайлать, концертсенче шăрантарать, Чăваш Республикипе тата унăн тулашĕнче иртекен тĕрлĕ мероприятине хастар хутшăнать. Чылай наградa илме тивĕç пулнă.

## ЭС КАЛА

Ăнсăртран-çке тĕл пултăм сана,
Вăтанса эп калаçрăм санпа.
Юрататăп сана çеç тесе
Çупăрларăн мана хăв çумна.

Юрататăп теме ан васка,
Юрататăн пулсан, ан васка,
Чĕрӳнте упрасам ман ята,
Чунупа юратсам эс мана.

Тĕлĕкре те куратăп тесе
Пăшăлтатрăн манпа вăрахчен.
Пурнаймастăп эп сансăр тесе
Чуп тăваттăн мана мĕн ирччен.

Çулсем иртрĕç, сӳнмерĕ хĕлхем,
Пĕр сана çеç савать ман чĕрем.
Пĕр санпа çеç телейлĕ ман чун,
Сан ятпа пуçланать çĕнĕ кун.

Юрататăн пулсан, эс кала,
Юрататăп тесе эс кала,
Чĕрӳнте упрасам ман ята,
Чунупа юратсам эс мана.

## ЭС ЮРАТНИНЕ ТУЯТĂП

Пĕр сана куççем шыраççĕ,
Пĕр сана вĕсем саваççĕ.
Саншăн çеç чĕрем юрлать,
Саншăн çеç вăл тунсăхлать.

Ах, эсĕ мана пачах та шеллеместĕн,
Эс, савни, ăçта çӳретĕн?
Тен, эсĕ мана кĕтен?
Эс кĕтен ирччен...

Тунсăх тĕнчине путатăп,
Куççульпе эп çăвăнатăп.
Эс ăçта, кампа çӳрен?
Эп паян каллех пĕччен.

Эс юратнине туятăп,
Тĕлĕкре эп калаçатăп
Санпа шуçăм киличчен
Манăн кăмăл туличчен.

## ЭС ПĔЧЧЕН

Çакă çутă каç, эс пĕччен, эс пĕччен,
Ыйăху килмест санăн мĕн ирччен.
Сарă хĕр куççулĕ тăкăнать, тăкăнать,
Сивĕ уйрăлу чĕрене çурать.

Ас илетĕн-и, манаймастăн-и
Савăк каççене,
Ас илетĕн-и, манаймастăн-и
Ман ытамсене?
Ас илетĕп эп, манаймастăп эп
Савăк каççене.
Ас илетĕп эп, манаймастăп эп
Сан ытамсене.

Тусăмçăм савни таврăнсан, таврăнсан
Ăшă куçсемпе ман çине пăхсам,
Сар хĕвел шевлийĕ эп пулам, эп пулам,
Пĕр сана савса эпĕ ăшăтам.

## ИРТЕÇ ÇУЛСЕМ

Юлашки хут сана куçран
Эп пăхăп юратса паян.
Сар çулçă пек вĕçсе çуралчĕ юрату,
Пире кĕтет халь уйрăлу.

Иртеç çулсем,
Вĕçеççĕ тунсăхлă кунсем.
Эс манпа мар,
Ăçта сана шырас,
Мĕнле сăмах тупас?
Мĕнле-ши йăпатас сана савса,
Санпа кăна телей тупас?

Шур акăш пек çунат сарса
Вĕçсе, эс, кайрăн пăрахса,
Ĕмĕрлĕхе, эс, юлтăн манăн асăмра,
Сан сăнару çеç халь умра.

Парнелĕп эп, çурхи тĕнче,
Сана анчах аса илсе,
Сана анчах шыратăп пуш урамсенче,
Юрлатăп, илтĕн-ши, тесе.



## Иван ГРИГОРЬЕВ

Иван Григорьевич Григорьев 1889 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 1(13)-мӗшӗнче Хусан кӗпернин Шупашкар уесӗн (халӗ Чӑваш Республикин Ҫӗрпӳ районӗ) Вӑрман Кӑршкара ҫуралнӑ. Икӗ ҫул Шӗнерпуҫӗн икӗ класлӑ шкулӗнче, унтан Хусан учительсем хатӗрлекен семинаринче вӗреннӗ. 1908 ҫултан пуҫласа Шӗнерпуҫ шкулӗнче, Мари Эл Республикинче учительте ӗҫленӗ. Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫине хутшӑннӑ.

1907–1913 ҫулсенче вӑл икӗ кӗнеке пичетлесе кӑларнӑ: «Чӑваш ачин вунна ҫитичченхи пурнӑҫӗ» поэма тата «Ӑслӑ-тӑнлӑ пулӑр» («Будьте благоразумны») сӑвӑ пуххи.

1937 ҫулта ӑна халӑх тӑшманӗ тесе айӑпланӑ, 10 ҫула ӗҫпе юсанмалли лагере янӑ. 1943 ҫулта унта вилнӗ. 1957 ҫулта Иван Григорьева айӑплӑ тесе каланине сирсе таса ята тавӑрса панӑ.

## КĔНЕКЕ УССИ

Эпир халĕ пурăнатпăр,
Ыран-паян вилетпĕр.
Пирĕн пурăнăç пит начар,
Шухăш-тĕлĕш çук масар.

Анчах çапла пурăнса
Чăваш ырă курас çук;
Вуламасăр пурăнса
Эпир çутта тухас çук.

Кĕнекесем халăха
Пысăк усă кӳреççĕ:
Вĕсен тăрăх тĕнчере
Пурте çутта тухаççĕ. [...]

## ЯЛ КУШТАНĔСЕМ

Çакă аслă тĕнчере
Нумай халăх çуралать,
Хăшĕ-пĕри ялсенче
Çĕр ĕçлесе пурăнать.

Пирĕн ялсем пысăк мар,
Ял халăхĕ пуян мар.
Хăшĕ-пĕри пит йăваш,
Вĕсем пурте шав чăваш.

Тата пирĕн ялсенче
Хура халăх хушшинче
Йытсем хытă вĕреççĕ,
Кăна пурте пĕлеççĕ.

Усал йытсем вĕрмесен
Е куштансем пулмасан
Пире лайăх пулĕччĕ,
Турă пиллĕх парĕччĕ.

Халĕ кăна пăхар-ха:
Ялти куштан мĕн тăвать?
Хыттăн тискер кăшкăрса
Йăваш чуна макăртать.

Куштан ял пуç пуласшăн,
Хăй ырă курасшăн,
Йăваш çынна тивесшĕн,
Хăех çиеле тухасшăн.

Ялта пуху тухсассăн,
Пĕр-ик куштан пырсассăн
Пĕтĕм халăх лăпланать,
Икĕ куштан ĕç тăвать.

Ĕçне туса пĕтермен,
Эрех ĕçме пуçланă,
Кăна йăваш илтермен,
Куштан илме хуштарнă.

Хура халăх хушшинче
Куштансем ырă курмĕçĕ.
Мĕн чухлĕ усалсем
Халăх эреххи ĕçеççĕ.

Хăйсен çиме çăкри çук,
Çапах çĕрне сутаççĕ,
Выльăх çимеути çук,
Кăна ĕçсе пĕтереççĕ.

Астăвăр-ха, тăвансем,
Мĕн каланă ваттисем:
«Эпир эрех ĕçме тăрăшман,
Усал тума хăрană;
Çавăнпала пурăннă,
Ампар тулли мул пухнă».



## Иван МАЛКАЙ

Иван Григорьевич Григорьев 1911 çулхи утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Первомайски ялĕнче çуралнă. Малтан ял пуçламăш, унтан Çĕрпӳ сакăр çул вĕренмелли шкулĕсенчен вĕренсе тухнă. 1930 çулта Шупашкар стройтехникумĕнче вĕреннĕ. 1932 çулта Горький (халĕ Чулхула) хулин комуниверситетĕнчен вĕренсе тухнă, комсомол обкомĕнче тата «Çамрăк большевик» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Вăрçă хыççăн чылай вăхăт Чăвашрадио комитетĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче тăрăшнă. 1952–1956 çулсенче «Çамрăк коммунист» хаçат редакцийĕнче вăй хунă. Ăна 1939 çулта СССР писателĕсен союзĕн членне илнĕ. Сăвă-поэма чылай çырнă. 20 ытла кĕнеке кăларнă. Паллăрах кĕнекисем: «Сывлăм», «Сăвăсем», «Çурхи сăвăсем», «Пирĕн çуркунне», «Уçă кăмăл», «Çĕнĕ сăвăсем», «Атăл çилĕ», «Чĕре сасси», «Çĕршывăм, саншăн», «Шуçăм çути». Ун сăввисемпе композиторсем юрăсем те кĕвĕленĕ. Иван Малкай 1986 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче вилнĕ.

# КУККУК КАНМАСĂР АВĂТАТЧĔ

Кукук канмасăр авăтатчĕ
Сип-симĕс тулăх йăлăмра,
Сан куçусем теме сăнатчĕç,
Тăраттăн эсĕ ман умра.

Сана савса сăмах эп хушрăм,
Паллашрăм çывăххăн ун чух.
Тен, астăватăн та пуль, тусăм,
Анчах халь эсĕ кунта çук.

Шап-шурă, шурă пăрахучĕ,
Ока шывне ик еннелле
Сирсе, илемлĕн ишсе пычĕ,
Тухайрĕ Атăл çинелле.

Пăрахут пек кунсем иртеççĕ,
Вăхăт шăвать, вăхăт иртет.
Çак кунсене эпир манмастпăр,
Тĕл пулусем юлаç пирте.

## МĔНШĔН, МĔНШĔН?

Мĕншĕн, мĕншĕн уçă çил вĕрет,
Мĕншĕн шăппăн ташласа çӳрет?
Ма тесессĕн эпĕ пĕр хĕре
Юратса пăрахрăм-çке сĕре.

Мĕншĕн, мĕншĕн çĕмĕрт чечекре?
Мĕншĕн хурăн лăпкăн тĕлĕрет?
Ма тесессĕн эпĕ каçсерен
Тĕл пулатăп чунăмçăм хĕре.

Мĕншĕн, мĕншĕн шуçăм килнĕ чух
Вăрансассăн урăх ыйхăм çук?
Ма тесессĕн эпĕ чăннипех
Канлĕхе çухатрăм тĕппипех.

Мĕншĕн, мĕншĕн куçăмсем çунаç?
Мĕншĕн лайăх чĕрене-чуна?
Ма тесессĕн эпĕ савнипе
Ăмăртса ĕçлетĕп кунĕпех.

Пĕлейменччĕ малтан тӳррĕнех,
Халь ăнлантăм юрату мĕнне.

## ШУРĂ КĂВАКАРЧĂН

Шурăм пуç пек шурă кăвакарчăн
Танк çине хăюллăн пырса ларчĕ,
Каллĕ-маллĕ утса пăхкалать,
Кăлтăр-кăлтăр туса тем калать.

Чĕлхи çук çав, калĕччĕ пурне те,
Эп ăна пĕлетĕп, хĕрхенетĕп.
Вăл юратнă капăр карниса
Фашистсем çунтарнă мĕн пырса.
Сар туталлă сарă чĕпписем те
Пулнă пулĕ. Çунчĕç пуль вĕсем те,
Пĕтнĕ ял, кĕл пулнă пĕтĕмпех.
Вĕçсе кайнă пурлăх тĕтĕмпе.

Çук никам, – ытла та хурлантарчĕ.
Хирĕç тухрĕ кăна кăвакарчăн.
Вăл та хурлăх курнăн туйăнать,
Каллĕ-маллĕ утса тем калать.
Кайăка та эпĕр хĕрхенетпĕр,
Ачана шелленĕ пек шеллетпĕр.
Анчах хĕрхенместпĕр тăшмана –
Шеллместпĕр çĕлен-калтана.

Шурăм пуç пек шурă кăвакарчăн
Танк çине хăюллăн пырса ларчĕ,
Хурланать пуль йăви пĕтнĕрен,
Савăнать пуль эпĕр килнĕрен!

## КĔТ МАНА

Кĕт мана, кĕт, çĕмĕрт куçлă хĕрĕм,
Сан патна эп пурпĕр таврăнап.
Ахаль мар каласçĕ: «Пурнăç йĕрĕ
Вăл çăка çулçи пек çаврака».

Кĕт мана, кĕт, çĕмĕрт куçлă хĕрĕм,
Çĕнтерӳллĕ пулĕ пирĕн çул.
Тăвăллă кĕрлет халь кунĕн-çĕрĕн
Юлашки хĕрӳллĕ çапăçу.

Эпĕр савнă аслă Совет çĕрĕ
Нихăçан та пулмĕ чурара.
Кĕт мана, кĕт, мăкăнь питлĕ хĕрĕм,
Çĕмĕртсем шап-шурă вăхăтра!..

## ÇЫВРАССИ ПУЛМАРĔ ЁНТĔ МАН

Шăпчăк вăрансассăн ыйхăран
Çыврасси пулмасть вара манран.
Çавăн пек эп ёнтĕ пĕчĕкрен,
Пĕчĕкрен те питĕ ĕлĕкрен.

Хам чĕнместĕп, итлесе кăна
Савăнăç кӳретĕп эп чуна.
Кăмăл та, чĕрем те çĕкленет,
Кăмăл та, чĕрем те çĕнелет.

Шăпчăк чарăнсассăн юрлама
Темшĕн тытăнатăп хурланма.
Кăмăлăм çапла ман пĕчĕкрен,
Пĕчĕкрен те питĕ ĕлĕкрен.

Ас илсен аттесĕр ӳснине,
Мăшкăл та, асап та тӳснине.
Куççульпех йĕрсе ярас килет,
Ӳтĕм-пĕвĕм чĕтренсе илет.

Шăпчăк тытăнсассăн пахчара
Юрлама татах та хытăрах
Çĕнĕрен çуралнăн туйăнать,
Самантрах ман ватлăх пытанать.

Пурăнам-ха, тетĕп, пурăнам,
Шăпчăк евĕр эпĕ те юрлам.
Шусăм çути кĕчĕ кантăкран,
Çыврасси пулмарĕ ĕнтĕ ман!

## МАНАС ÇУК ЭС ĂНА

Пушă мар, çăмăл мар çав салтакăн хутаçĕ,
Пĕтĕм пурлăх пырать хăвпала яланах,
Сан çирен уртăнса вăл çӳренĕ пулсассăн –
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

Похода кайнă чух, вăрăм çул утнă хыççăн
Паллă мар çырмаран шыв ĕçсе савăнан.
Шăрăхра, сивĕре йывăр туйрăн пулсассăн
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

Шăхăрса, ӳлесе çил вĕрет кассăн-кассăн,
Вăл сана та лăскать, вĕçтерет ыйхуна.
Кĕрхи каç окопра выртса куртăн пулсассăн
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

Питĕ паллă, кĕске – командирăн приказĕ,
Тухмалла çĕкленсе çĕмĕрме тăшмана.
Малтанхи çапăçу хăруш пулчĕ пулсассăн
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

Ахăрса алхасать урнă йытă хаяррăн,
Пĕтересшĕн тĕппех сан тăван халăхна.
Ун тискер ĕçĕпе чуну кӳтрĕ пулсассăн –
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

Çавăнпа çапăçу хирĕнчен халь тухмастăн,
Паян кун та хĕрсе паттăрла çапăçан.
Сахал мар фашистсен пуçне татрăн пулсассăн –
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

Çитес кун çитетех: пирĕн халăх хавассăн
Çĕнтерӳ уявне уявлать, савăнать.
Эс ăна манас çук, пуçу сывă пулсассăн –
Ĕмĕрне те, нихăçан манас çук эс ăна.

## ПОЭТА

Ларса сăвă çырнă чух эс
Пĕр-пĕр лăпкă каçхине
Туйнă пулĕ, пĕтĕм шухăш
Сан ӳкесшĕн хут çине.
Эс астуни, ун чух ыйăх
Тарать ĕçлĕ пӳлĕмрен.
Тин çĕкленнĕ çавра уйăх
Шăппăн çеç кĕрет пӳрте.

Капланса тухан хăватăн
Сĕткенне хуран сăвва.
Пурнăçа юрра хыватăн,
Çĕр-шыва чунтан саван.
Иртни саншăн – чĕмсĕр тĕлĕк,
Хальхи саншăн хурлă мар,
Асап-хĕнлĕх пире ĕлĕк
Чăрмантарнă юрлама.

Сывлăш уçă, пĕлĕт тарăн
Ирхи тинĕс пек хитре:
Илем карнă ярăм-ярăм
Çĕр çинчен те пĕлĕтрен.
Сан сăвву – ытамсăр ирĕк
Сăввуна кĕрет илем.
Йăлкăшать хĕвеллĕ ирĕ,
Йăлкăшать тулли телей.

Пӳртрен тухрĕ те чипер хĕр
Икĕ симĕс витрепе,
Атăлти шур акăш евĕр
Ярăнайрĕ ерипен.
Хĕре хирĕç пулчĕ каччă,
Пиçмоноçĕц вăл, хусах.
Сар конвертлă çыру пачĕ,
Ун çине пăхса, кулса.

Ăна çырнă çарти Сантăр
Чи юратнă савнă чун.
Çыру çулĕ çывăх мар-тăр,
Çыру килнĕ пилĕк кун.
Хĕр илейрĕ çырăвне те
Чикрĕ кĕрĕк кĕсйине:
– Куншăн тав тăвап сана, – тет,
Пачĕ ăшă аллине.

Сывлăш уçă, пĕлĕт тăрă,
Çĕклет кăнтăр кăмăла.
Пиçмоноçĕц урам тăрăх
Татах утрĕ малалла...
Çапла сăвă çырнă чух эс
Пĕр-пĕр лăпкă каçхине
Эс туян пуль, пĕтĕм шухăш
Вырнаçасшăн хут çине.



# Рита ГУРЬЕВА

Маргарита Валентиновна Гурьева 1962 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Кĕçĕн Тивĕш ялĕнче çуралнă. Анатри Кипекçе вăтам шкулĕнчен (1979), Чăваш Республикин культурăпа çут ĕç училищинчен (1985), И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен (1994) вĕренсе тухнă.

1979–2002 çулсенче Шупашкар Пукане театрĕнче артисткăра ĕçленĕ май Чăваш телевиденийĕнче Станислав Руссковпа «Пĕрле ларса ĕçлер-ха» ача-пăча кăларăмне ертсе пынă. Вăл чăвашла тата вырăсла сăвăсем, калавсем, пьесăсем, кино сценарийĕсем çырать. Кĕнекисем çармăс, туркка, тутар, нимĕç чĕлхисемпе пичетленнĕ. Паллăрах ĕçĕсем: «Вăрттăн юрату», «Эп çунсан та, çунса пĕтес çук» (2001), «Кĕмĕл сывлăм» (2003), тата ыттисем те. Чылай сăввине чăваш композиторĕсем юрра хывнă.

Эмине ячĕллĕ премийĕн (1995), тата Алексей Талвир ячĕллĕ литература премийĕн лауреачĕ.

Раççей Федерацийĕн театр ĕçченĕсен Союзĕн, Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн членĕ.

# ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ, ЧĂВАШ ЕН

Инçе кайсан, киле килсен
Темле пит ырă-çке чунра.
Тăван çĕршывăм, Чăваш Ен!
Ик куç тулли эс ман умра.

Çуралнă кил умне çитсен
Эп ырлăха путап чунпа.
Тăван çĕршывăм, Чăваш Ен!
Вăй-хал паран çĕн хăватпа.

Эс манăн чун-чĕре юрри,
Çут ăраскал мана пиллен.
Ман ырлăх вăл – эсĕ пурри
Тăван çĕршывăм, Чăваш Ен!

Ах, Чăваш Енĕм, Чăваш Ен!
Чечекленсемччĕ кунсерен!
Ах, Чăваш Енĕм, Чăваш Ен!
Чунра ялан эс, Чăваш Ен!

# ХĔРАРĂМ

Хĕрарăм тĕнче умĕнче
Мăнаçлăн, сăваплăн янрать.
Чечекĕн курнать çĕр çинче
Малашлăх çулне вăл тăсать.

Хастар, вăй питти арçынсем
Пуç тайччăр ялан сан умра.
Сатур та маттур йĕкĕтсем
Йăтса çеç çӳреччĕр алра.

Çӳретĕр ялан ăраскал
Çумра ĕмĕрех санпала.
Ĕçӳ те сан пултăр кал-кал,
Вăй-хал килтĕрех ик алла.

Çунать-и, çĕр çийĕ хĕмпе,
Вут-çиçĕм хуплать-и, çулна,
Утсам çав çулпа çирĕпрех,
Хĕрарăм! Эс пул ĕмĕрех!!!

Килти вучаха упракан
Хĕрарăм! Çуталтăр куллу!
Этемлĕх йăхне тăсакан,
Пулинччĕ тумхахсăр çулу.

# СОНЕТСЕМ

* * *

Темччен, темччен çаплах асăрхануллăн
Шăваççĕ тĕксĕм, хăмăр пĕлĕтсем.
Ăçта, мĕн-ма васкаççĕ-ши вĕсем...
Сăнатăп та курнаççĕ пит салхуллăн.

Çумра вăл çук, тен урăха сават...
Çыран хĕрне пĕччен çеç утнăçемĕн
Çуралчĕ те йăвашшăн çепĕç çемĕ,
Аçа çапсах-çке çумăрĕ çăвать...

Йĕри-тавра хуллен çуталчĕ,
Кичем мĕлки чунран тухса çуталчĕ.
Темле пит ыррăн курăнчĕ тĕнче.

Пĕчченлĕх те хăйне маях ытарлăх,
Çап-çут тĕнче те вăрттăнлăх, асамлăх,
Йăпатмăш маншăн пурте çĕр çинче.

* * *

Йăпатмăш маншăн пурте çĕр çинче,
Кăра çилсем вĕрни те пит асамлă.
Çап-çутă çиçĕм те ман пек хаваслă,
Паян эп çак тĕнче ырлăхĕнче...

Чунри илем пурне туять ансатăн,
Сисеймĕн те епле иртет самант...
Эп, нимĕн те пачах асăрхаман-тăр,
Аслатире – мăнаçлăх та хăват!

Çак кĕрлевре туяп хама мăнаçлăн,
Çут çиçĕм те çиçет манпа калаçнăн,
Çаплах хавас сиксе тапать чĕре.

Пурнасчĕ, çул çипне вуçех татмасăр,
Хальхи пекех пурнасчĕ хурланмасăр.
Илем кӳресчĕ таврари çĕре...

* * *

Илем кӳресчĕ таврари çĕре.
Малашлăхра ялан пурнасчĕ ырă.
Чунтан ыйтатăп, пулăш Аслă Турă!
Нихçан ан картăр пурнăçа тĕтре.

Ырри ӳссе çĕклентĕр хăватпа.
Пĕлетĕп, çăмăл мар килет çав ӳсĕм.
Пайтах-çке, кирлĕ тен çав çирĕп тӳсĕм,
Йĕрсен те эп пурнатăп шанăçпах.

Хавассăн çитĕнӳ çăл кусĕ таптăр,
Телей саманчĕ пултăр манпала.
Шăпа тени – вăл маншăн ырă пултăр.

Ун папкисем те сарăлччăр патвар,
Турачĕсем те ӳсчĕр те, ан хăрччăр,
Мĕн-пур çынсем санпа мухтанччăр.

* * *

Мĕнпур çынсем санпа мухтанччăр,
Санпа юлташ тата ыр ĕçсемпе.
Юласчĕ пурнăçра, – чипер йĕрпе,
Çуратнă ачасем те пире ан манччăр...

Нумай чунра калас сăмахăмсем,
Вут çуннă пек ялан тĕл-тĕл çунаççĕ.
Çук, çук, вĕсем нихçан ăшран каймаççĕ,
Манăçайми чĕреçĕм сăввисем.

Çулсем хăйсен илемĕпе иртеççĕ,
Савăнтараç те, хурлантараç те,
Чуна хĕссе лăскаç хăш-пĕр чухне.

Кун-çулăм та илемлĕ те пит тертлĕ,
Çур ĕмĕр иртрĕ, калăн вăл пĕр тĕлĕк,
Манасчĕ ман асаплă кунсене.

* * *

Манасчĕ ман асаплă кунсене,
Çулсем утсем пекех мала чупаççĕ.
Тытса чарма та çук, ăçта васкаççĕ?
Çапла, çула çавраймăн кай енне.

Пĕр хут кăна ача пек савăнса
Туллии телейлĕн пĕр кун çеç пурнасчĕ,
Çăтмах мĕнне самантлăха курасчĕ,
Куçа хупса каясчĕ çывăрса.

Кайран вара курасчĕ ырă тĕлĕк,
Тĕлĕкĕмре курас ыр çынсене.
Паянхи кун вăл, пултăрччĕ-çке ĕлĕк...

Ыратăва нихçан, никам пĕлминччĕ,
Ялан ырра кăна шанса тăрса
Сăваплăн çĕнĕ ĕмĕре кĕресчĕ.

* * *

Сăваплăн çĕнĕ ĕмĕре кĕресчĕ,
Çут ĕмĕтпе ах, пуçăм çаврăнать.
Ăна курса ман чун вĕл-вĕл çунать,
Çак самантпа яланлăхах çӳресчĕ!

Ах, кăмăлăм, хĕвел пекех-çке ăшă.
Сарлака ĕмĕтсен çуначĕсем.
Епле халь çăмăл, çутă каçĕсем...
Ах, чун хĕлĕхĕсем ташлаççĕ ташă.

Вун иккĕ çапрĕ те шап-шур сехет,
Çĕн ĕмĕр алăкне яри çеç уçрĕ.
Çемье те, пурте питĕ хĕпĕртерĕç.

Мĕнех, кив çулпала сывпуллашар,
Эй, тăвансем! Пурне сире саватăп!
Çĕн ĕмĕрте телей кăна сунатăп!!!

* * *

Çĕн ĕмĕрте телей кăна сунатăп!!!
Пĕлĕшсене, тăвансене, пурне...
Хастар пурнăç пултăр кашнинех,
Çак самантра ырра кăна шанатăп.

Чӳречерен салют йăлтăртатать,
Тӳпе çăлтăрсемпе çунать пин тĕслĕн.
Хавас ача сасси – телейĕ килĕн.
Чĕрем хаваслă юрă шăрататать.

Сана, ман мăшăрăм, савас килет,
Нихçанхинчен, чун-чĕререн хĕрӳллĕн.
Чуп ту эс халь, ман савăк куççӳле.

Ах, Турăçăм! мана эс сывлăх сун,
Сыв пул çĕн ĕмĕрĕн çап-çутă ирĕ.
Салам Çĕн(ĕ) çул! Эп хам çуралнă кун!

* * *

Салам Çĕн(ĕ) çул! Эп хам çуралнă кун!
Паян темле асамлă та пит хăтлă.
Мĕне, пĕлместĕп, пĕлтерет-ши ку...
Сăнра та ыр шевлеллĕ ăшă кулă...

Хĕвел çап-çутă-çке, куçа шартать,
Йăлтăртатаç юр пĕрчисем вут сапнăн.
Сăну та сан курнать умра йăл кулнăн,
Чуна темле ыр туйăм хускатать...

Вĕçевçĕ кайăк – чун, çунатлансассăн,
Манса мĕн пур çак çутă тĕнчене
Ахăлтатса кулас килет хавассăн!

Тӳпе, хĕвел те пурте пит илемлĕ,
Çук! Ĕненместĕп вилĕм пуррине!
Эп çак куна курнишĕн, пит телейлĕ...

* * *

Эп çак куна курнишĕн пит телейлĕ!
Ăнкарайми саватăп пурнăçа.
Вут-çиçĕм лекнĕ тейĕн канăçа,
Ах, туйăм та çаплах-çке, пит хĕрӳллĕ...

Нихçанхинчен хастар паян, хăюллă,
Сана, пĕл, вĕç-хĕррисĕр юратса,
Пăхатăп куç илмесĕр ăнтăлса,
Мĕскер пирки-ши, кун паян асамлă...

Кашни тĕлте мĕнпур ансат хăй евĕр,
Çут сăн çĕп-çĕнĕ туйăмпа çиçет.
Эс, пуррипе, чĕрем юрлать пĕр кĕвĕ.

Чунсем савсассăн, пурнăç та илемлĕ,
Тĕнче юрлать пин тĕслĕ сасăпа...
Кун-çулта çутăлать сап-сар хĕвеллĕн.

* * *

Кун-çул та çуталать сап-сар хĕвеллĕн,
Шансассăн пысăк, чаплă ĕмĕте.
Хĕвел кулли пек чунăм хĕпĕртет,
Çак йывăр пурнăç та курнать илемлĕн.

Асар-писер çулпа утатăп тертлĕн,
Хура куна сăрласшăн шурăпа.
Чĕремçĕм тапнă чух вĕри юнпа
Йăх-ях сăнни лекме ан пултăр мелĕ!!!

Инкеклĕ самана кĕрлетĕр урнăн,
Çавра çилсем çавăрттарсан алхаснăн,
Тăрса утатăп çулăм çулпала!!!...

Ултавлăхра, тупаймăн çирĕп чăнлăх,
Хăш çын инкекпеле тупасшăн ырлăх,
Çук! Парăнмастăп нĕрсĕр çынсене!!!

* * *

Çук! Парăнмастăп нĕрсĕр çынсене!!!
Тискер ĕçĕсене те манаймастăп!
Ултавçă çынсемпе те мухтанмастăп!
Нихçан! Çак тĕнчере хам пур чухне!!!

Вилсессĕн те эп тăрăп тупăкран!!!
Лачлаттарса вĕсен питне эп сурăп!!!
Эп ВИЛМĔП!!! Мăнаçлăн çеç каçарăп,
Мĕлкесене курсассăн ăнсăртран.

Чуна таптасшăн пултăр сĕмсĕр чапшăн!!!
Шел, мĕскĕн те пуш-пуш хура чунсем!
Веçех халь çуккă, эсĕр пĕтнĕ маншăн...

Çак тĕнчене халь çĕнĕлле сăнатăп,
Ман пурнăçăм та тепĕр тапхăрта.
Асар-писер саманинче пурнатăп.

* * *

Асар-писер саманинче пурнатăп.
Мĕн пур тусан çĕкленнĕ тӳпене-е-е!
Шухăшпала вĕçетĕп инçене,
Ик аллăмпа ик пĕççĕме шартах çапатăп.

Пăтранчăк пурнăça çаплах сăнатăп,
Мĕскер пулса иртет-ши пурнăçра?!!...
Ăçта эсир çак йывăр вăхăтра!!
Эй! Ыр çынсем, сире шыратăп!!!

Мĕскер пирки эсир, ним те чĕнместĕр!!
Е шанăç пĕтнĕ сирĕн чунсенче...
Мĕскер пирки, чĕнсессĕн те килместĕр!!

Шăпах тăратăр шурă тĕтрере...
Эй! Тусăмсем! Çынсем! Вăранăр!
Мĕскер куратăр эсĕр тĕлĕкре!!...

* * *

Мĕскер куратăр эсĕр тĕлĕкре?
Йĕретĕр, харкашатăр, эп куратăп,
Эп шеллесе темччен сире сăнатăп,
Манран юлатăр эсĕр инçетре...

Çак Çĕн çулта телей кăна сунатăп,
Сире пурне!... Тăван, юлташ, тăшман!...
Халь ак чунра пĕр çилĕ çуккă ман.
Йĕри-тавра илем кăна куратăп.

Тĕнче те хĕсĕр мар! Вăл питĕ аслă!
Çак çĕр çинче эсир утсан мăнаçлăн,
Хама телейлĕ тетĕп пурнăçра!!!

Ыр ĕç туса, ялан хаваслă кулăр!
Чун-чĕрепе таса, сăваплă пулăр!!
Ыр кун сунап пурне те Çĕн çулта!!!



## Аристарх ДМИТРИЕВ

А.И. Дмитриев 1940 çулхи кăрлачăн 3-мĕшĕнче Етĕрне районĕн Улăх Шăмат ялĕнче çуралнă. Ачалăхĕпе çамрăклăхĕ Янтуш ялĕнче иртнĕ. Çĕрпӳ вăтам шкулĕнче, Шупашкар 11-мĕш номерлĕ техника училищине, Мускав А.М. Горький ячĕллĕ литература институтне вĕренсе пĕтернĕ.

Çурçĕр флотĕнче хĕсметре тăнă çулсенче «На страже Заполярья» тата «Красная Звезда» хаçатсенче флот пурнăçĕ çинчен тата сăвăсем тăтăшах пичетленĕ.

Аристарх Ивановичăн пĕтĕм пурнăçĕ пичет ĕçĕпе çыхăннă. Шупашкара таврăнсан ытларах чăвашла çырнă, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче тăтăшах пичетленнĕ. Литература ĕçĕнче пултаруллă редактор тата ăста куçаруçă пулнипе палăрнă. Çеçпĕл Мишши, К. Турхан, Хв. Уяр, П. Осипов, Я. Ухсай, П. Афанасьев, Н. Терентьев, Ю. Сементер, Г. Краснов, В. Туркай тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене вырăсла куçарса кăларнă. А. Дмитриев чăваш халăх эпосне «Улăпа» вырăс вулакане патне

çитернĕ. Çакăншăн А.И. Дмитриева Чăваш Республикин Патшалăх премине панă. Вăлах – Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕн текстне вырăсла куçараканĕ.

Дмитриев А.И. хăй те паха хайлавсем çырнă. Вĕсен йышĕнче – «Вега» çăлтăр çунать» проза хайлавĕсен кĕнеки. 2009 çулта «Улăп» эпоса ăста куçарнăшăн халăхсем хушшинчи Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премие илме тивĕçлĕ пулнă. Пултаруллă çыравçа Хисеп хучĕсем тата «Ĕç ветеранĕ» медаль парса чысланă.

Аристарх Иванович Дмитриев – поэт, куçаруçă, çыравçă, Раççей Федерацийĕн (1995) тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1987), Профессиллĕ писательсен Союзĕн Куçма Турхан ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ.

Аристарх Дмитриев 2019 çулхи утă уйăхĕн 22-мĕшĕнче пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

## ТĂВАТĂ ЧĔРЕ

Савни чĕри – куян çури,
Часах хăваласа çитеймĕн,
Хăй пытăр сан патна телейлĕн
Куян çури – савни чĕри.

Анне чĕри – хĕвел ури,
Хура пĕлĕтсене те сирĕ,
Çула çутатĕ каçăн-ирĕн
Хĕвел ури – анне чĕри.

Атте чĕри – тĕнче хĕрри,
Вăрçа ăсанчĕ çăлтăр витĕр,
Анчах юлмарĕ вил тăпри те...
Тĕнче хĕрри – атте чĕри.

Ман чĕремре – кашнин тĕрри,
Савни савса йĕкĕлтени те,
Анне нихçан çиленменни те.
Аттем вилсен те вилменни те.
Ман чĕремре – кашнин чĕри.

## ХĔРАРĂМСЕМПЕ САЛТАКСЕМ

Хĕрарăмсем
пире çуратнă самантра
мĕн-мĕн çинчен
шутлаççĕ-ши сисмен хутран?
Пĕр шухăшне
пĕлме пулать пĕр йăнăшми:
ан пултăр, теççĕ, вăрçăра
çĕр йынăшни.

Хĕрарăмсем
пире ăсатнă кунсенче
мĕн-мĕн çинчен
шутлаççĕ-ши перрон çинче?
Пĕр шухăшне курма пулать
куçĕсенче:
лăпках пулинччĕ ĕмĕрех ку çĕр çинче.

Эпир ӳсетпĕр те
каятпăр салтака.
Пĕр мăшăр атă.
Телее – мăшăр такан.
Чĕн пиçиххи – кĕлте çыххи –
шинельсене
шăп пилĕкрен туртса çыхать
пĕр кĕлтене.

Е çурăмпа,
е хырăмпа,
е урапа...
Е улăхпа,
е пуш хирпе,
е урампа...
Салтак выртать.
Салтак шăвать.
Салтак утать...
Пит йывăр чух
пĕрремĕш хут тапак туртать.

Хĕрарăмсем!
Эсир пилленĕ-çке пире
шинельсемпе
хӳтĕлеме Ĕçе, Мире.
Хĕрарăмсем салтаксемпе пĕрле
кашни:
– Ан пултăр, – теççĕ, –
Вăрçăра çын йынăшни.

## ÇĔРШЫВĂМ

Чĕкеç курăк шăрши – пыл шăрши.
Тулăх улăх – Çавалăн харши.
Ку вăл – эпĕ çуралнă çĕршыв,
Ман илемлĕ çĕршывăм.

Çил вĕрни те кунта уçăрах,
Çуркунне те кунта çутăрах.
Сан тĕлти кашни çăлтăрах
Эп паллатăп, çĕршывăм.

Çарансем çырлапа çăп-çăра,
Çырла питлĕ хĕрсем çырлара
Сан çинчен çил çуратнă юрра
Янратаççĕ, çĕршывăм.

Пулăпинччĕ хĕвел пайăрки,
Çĕр те пĕр шевлерен йăлтăркки,
Сан питне чун юратнă пирки
Сĕртĕнмешкĕн, çĕршывăм.

## КУРАК ЙĂВИ

Лаштра йăмра çине такам юри
Персе çаклатнă çăмлă çĕлĕке
Аса илтерен курак йăви
Паян та кĕчĕ манăн тĕлĕке.

...Хам шĕпĕн çеç.
Пуçа касăртнăран,
Тин çеç кĕрешнĕ пек, сурать ĕнсе.
Йăва çине пăхатăп мĕн таран
Пĕр шикленсе, тепре иккĕленсе.

Пĕлетĕп-ха унта мĕн пуррине:
Тăватă-пилĕк пĕчĕк çăмарта.
Çапах хăв куçупа ху курнине
Мĕнех çитме пултарĕ-ха тата?

Пит кăсăк çав.
Тата, çитменнине,
Ăшра кăштах каппаясси те пур, –
Савăнтаратăп ĕнтĕ аннене:
«Ах, – тейĕ, – ман ача епле маттур!»

Çитет пăхса –
Шăп чĕркуççи таран
Йĕм пĕççине ал-хапăл тавăрса,
Тапаçланма пуçлатăп пур вăйран
Ӳте юн тухиччен шăйăрттарса.

Кĕçех турат çине пусать ура,
Халь ĕнтĕ картлашка пекех ансат.
Турат айне пулса юлать турат –
Çӳлтен çӳле васкатăп пăлханса.

Курак йăви...
Тăватă çăмарта.
Тивмерĕм, хăтланмарăм сăтăрла.
Чарусăр çил те, шалкăм çумăр та
Аркатаймăн пулсассăн – лартăрах!

Эс ан хăра, хура курак аппа,
Пусса ларса чĕппӳсене кăлар.
Эп саншăн мар кĕрешрĕм йăмрапа,
Сăлтавĕ те кунта йăвара мар.

Сăлтавĕ – урăх:
Этемпе пĕрле
Çуралатех хăравçăлăх тени,
Ăна пăчлантарма вара кирлех
Курак йăви çапла çӳле чĕнни.

Таварăнсан хăрас-тăвас йăла,
Аса илем ача чухнехине:
Умри тĕллев – çӳл тӳпери йăва.
Эп таваратăп йĕм пĕççисене.

## ТĔРЛĔ ТĔСЛĔ АКĂШСЕМ

Ах, хитре суяççĕ-çке
Ашшĕсем те амăшсем:
Пурăнаççĕ-мĕн инçе
Тĕрлĕ тĕслĕ акăшсем.
Çавăн тĕрлĕ
Пухура
Пур, тет, хĕрлĕ,
Пур – хура,
Шурă, сарă,
Кĕп-кĕрен...
Тĕс пасарĕ –
Кӳлĕре.

Ах, хитре суяççĕ-çке
Хăш чухне ачисене.
Ачапча алли кĕске,
Теççĕ пуль ун пек чухне.
Ши! каяççĕ
Ачисем.
Пи! каяççĕ
Хĕрĕсем.
Çитĕнеççĕ
Пит патвар.
Çул инçечĕ,
Алă пар!

Ах, кĕтеççĕ амăшсем
Ашшĕсем те килĕнче.
Тĕрлĕ тĕслĕ акăшсем,
Тен, пурах пуль çĕр çинче?
Пур та пулĕ
Мал енче
Ешĕл кӳлĕ –
Кĕленче...
Ярăнаççĕ
Акăшсем.
Таврăнмаççĕ
Ачисем.
Аптăраççĕ ашшĕсем,
Кулянаççĕ амăшсем.

## ПОЭЗИ

Çĕлен пек йĕркесем шăваççĕ,
Пĕри – сим пыл, тепри – шехер*.
Çав çĕленсем мĕне сăнаççĕ?
Вĕсен тĕллевĕ мĕнлескер?

Çĕлен вăл çĕленех – пĕлетĕр,
Усси-сиенĕ куç кĕрет,
Пĕртен-пĕрре сăхса илет те
Е сыватать, е пĕтерет.

## ПЕНСИ ЮРРИ

Çитрĕç пенси çулĕсем,
Ан йĕрсем, ан ӳлесем –
Хӳтерсен те сĕкĕнеççĕ
Качака пекех вĕсем.

Çитрĕç пенси çулĕсем...
Хаш сывлатăн эсĕ тем?
Ватăлсан та парăнмаççĕ
Ĕçлесе пиçĕхнисем.

Çитрĕç пенси çулĕсем,
Çук-çке урăх мулĕсем.
Тавралла пăхса илсемччĕ –
Кĕпĕрех мăнукусем.

---

* *Шехер – наркăмăш*

Çитрĕç пенси çулĕсем...
Хисепрех-ши эс, этем?
Тен, кăштах хушса параççĕ
Нухратне шутлакансем?

Çитрĕç пенси çулĕсем –
Сайраланчĕç тусăмсем,
Сахалрах халь илтĕнеççĕ
Телефон янравĕсем.

Çитрĕç пенси çулĕсем.
Пурпĕрех ан тиркесем –
Нихăçан та çухалмаççĕ
Иртнĕ пурнăç йĕрĕсем.

Çитрĕç пенси çулĕсем.
Ма пăхатăн эс кичем?
Пенсие нихçан каймаççĕ
Çут хĕвел те çăлтăрсем!



## Иосиф ДМИТРИЕВ-ТĔРЕР

Иосиф Александрович Дмитриев-Тĕрер – режиссер, актер, поэт тата халăхсем хушшинчи Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ. Вăл 1947 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Йӳçкасси ялĕнче çуралнă. Метикасси шкулĕнче, Канаш педучилищинче вĕреннĕ. Шупашкар районĕн Иккасси ялĕнче учительте ĕçленĕ. И. Дмитриев-Тĕрер Ленинград театрпа кинематографи институтĕнчен вĕренсе тухнă, Мускав ГИТИСĕнчен режиссер ăсталăхне алла илнĕ.

Чăваш çамрăксен театрĕнче, музыка училищинче, Чăваш гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче, Казахстанра Акмола облаçĕн вырăс драма театрĕнче ĕçленĕ. «Сеспель» илемлĕ фильмра (Киеври А. Довженко ячĕллĕ киностуди, 1970) тĕп роле вылянă.

И.А. Дмитриев-Тĕрер сăввисем Чăваш Республикинче тухакан хаçат-журналта, уйрăммăн тухнă кĕнекесенче 1970 çулсен пуçламăшĕнче пичетленме тытăннă. Вăл çавăн пекех вырăс, удмурт,

швед, норвег, финн поэчĕсен сăввисене чăвашла куçарнă.

1997 çулта Казахстанри Алма-Ата хулинчи Вăтам Ази театрĕсен фестивалĕнче Иосиф Александрович лартнă «Хан Кене» спектакль 1-мĕш премие тивĕçнĕ. 2000 çулта Швецире, Мальме хулинчи Тĕнче поэзи фестивалĕнче Çеçпĕл Мишши тата хăйĕн сăввисене каланă тата чăваш халăх юррисене юрланă. 2005 çулта швед поэчĕн Кристиан Лундбергăн «Çак пĕр пĕтĕм телей пĕр нимĕнтен» поэмине тата Нобель преми лауреачĕ Харри Мартинсонăн «Аниара» поэмин сыпăкĕсене чăвашла куçарса пичетлесе кăларнă. 2006 çулта Тĕнче поэзи фестивальне хутшăннă чăваш, вырăс, удмурт, швед, норвег, финн поэчĕсен Антологине чăвашла кăларнă.

2010 çулта И. Дмитриев-Тĕрере Казахстан Республикин культура тата информаци министерствин «Культура деятелĕ» знакĕпе, «Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята 2012 çулта парса чысланă.

2018 çулта пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

## ЛАПАЙХАР – ИЛЕМЛĔХ ТУРРИ

Лапайхар, Лапайхар,
Санăн çутă сăнна манăн чунăм шырать:
Каçсерен сан кĕввӳ
Уçлăхра янăрать, кунсене тыткалать.

...Туссем хушшинче, амасен çĕрĕнче
Лапайхар тăрать тет çăлкуç умĕнче.
Таса чунсене, çунан чĕрене,
Парать тет вăй-хал тухма çул çине.

Аллине çиçĕм тытнă аслати ачи,
Тĕнчене илемлĕх килнине вăл курать.
Юрри ун хăватлă, вĕри ун ташши,
Тĕнчерен илемлĕх кайнине вăл курать.

Кайнине курать, тулхăрать, сикет,
Таса чунсене хăй патне чĕнет.
Янра, Лапайхар, кĕрле, Лапайхар,

Итлесшĕн эпир вĕри кĕввӳне.
Янра, Лапайхар, кĕрле, Лапайхар,
Ĕçесшĕн эпир Таса Çăл шывне.

## КИЛТЕН

Кил умĕнчи лаштра йăмра
Пуçне сулларĕ тухăça.
Ял хушшинчи ват куками
Пил пачĕ ĕмĕр манайми.
Çут сывлăмпа ура йĕпенчĕ,
Килтен тухсан хĕвел хĕрелчĕ.

Шур хурăнсемччĕ айлăмра,
Тухаяс çук çав манăça.
Шур пир пек выртрĕ çул йĕрри –
Асра юлан чăваш тĕрри.

Шур хурăнсен сăнне манмарăм,
Чăваш хĕрне асран ямарăм.
Ак çӳллĕ-çӳллĕ сăрт умра,
Ват хурама шăлать пуçа.
Ун кушăрканă ват алли
Ачашлăх пулчĕ ман валли.
Тен, çавăнпа кăштах хурлантăм,
Чĕр куççуле тытса тăмарăм.

Сăртран çеç антăм, çырмара
Çиçет, çиет тăр шыв куçа.
Тăван çăл куçăм чĕр шывне
Ĕçсе вăй илтĕм аттенне.
Çав вăй инçе çулта сыхларĕ,
Киле килме чуна упрарĕ.

* * *

Урамри хунар çутисем
Мана,
Пĕчченскере, сыхлаççĕ,
Пĕлĕчĕсем юпана çапăнса
Сивĕ ачашлăх сапаççĕ.

## ТИРЕК

Тымар хыççăн тымар ярать –
Çĕр аннепе пĕрлешет.
Турат çумне турать хушать –
Аслатирен вăй илет.
Çамрăк тирек,
Яштак тирек,
Çур килнĕшĕн хĕпĕртет.
Ăш çил хыççăн сив çил килет –
Пурпĕр пурнăç чĕрĕлет.
Çумăр хыççăн шăрăх çитет –
Тӳпе çаплах илĕртет.
Ташлать тирек,
Юрлать тирек,
Сар хĕвелшĕн хĕпĕртет:
– Пĕвĕм çӳле,
Тымар – шала,
Пурнăç тытма вăй пултăр,
Çынсем килсен
Ларса канма
Канлĕ сулхăн саралтăр.

# КАÇХИ ХĂНА

Çур çĕрпеле çумăр ташлать
Ман кантăкра.
Çур çĕрпеле çĕр çил чупать
Çак урамра.
Çамрăк тирек çамки шăнать
Каç варринче.
Такам пуçне чиксе чĕтрет
Ун айĕнче.
– Эй çын!
Итле!
Çутă çунать! Эс куççăр-им?!
Алăк уçах.
Кил калаçма!.. Чĕлхесĕр-им?!
Кун каçипе йĕпленĕ чĕрене
Куллу
Сиплет.



## Владимир ЕГОРОВ

Владимир Евгеньевич Егоров 1959 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Хурамал Туçа ялĕнче çуралнă. Çирĕккасси Туçа вăтам шкулĕнче вĕреннĕ. Шупашкарта Чăваш Республикин пукане театрĕнче ĕçленĕ. Икĕ çул хĕсметре тăнă. «Спутник» хуçалăхра художник-оформительте тата диспетчерта вăй хунă. Республикăри культурăпа çут ĕç училищинче театрпа режиссура уйрăмĕнче вĕреннĕ. 1986 çулта Хусан патшалăх культура институчĕн театр уйрăмне вĕренсе пĕтернĕ. Халăх театрĕн режиссерĕ специальноçа алла илнĕ. Хурамал Культура çуртĕнче илемлĕх ертӳçи, «Спутник» хуçалăхра комсомол организацийĕн ертӳçи, каярах Çĕрпӳ районĕн комсомол райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, комсомол обкомĕн «Çамрăксен çурчĕн» инструкторĕ пулнă. Шупашкарта «Салют» Культура Керменĕн Халăх театрĕн режиссерĕнче ĕçленĕ. 1990 çулта хăй тытăмĕпе ĕçлекен Чăваш наци театрĕ уçнă, унта тĕп режиссер пулнă. 1992 çулта Чăваш патшалăхĕн телевиденипе радио компа-

нийĕнче ĕçлеме тытăннă, радиовещанин тĕп режиссерĕ пулнă. Каярахпа редактор ĕçне тума тытăннă, чылай кăларăм хатĕрленĕ: «Мехел», «Хурал пӳрчĕ», «Ялтан яла», «Ман чунра эс, театр» «Поэзи çăлкуçĕ», «Асран тухмĕç çав кунсем» тата ытти те. В.Е. Егоров 2009 çултанпа Чăваш наци радиовĕнче аслă редакторта ĕçлет, «Ялтан яла» кăларăма йĕркелесе пырать.

Владимир Евгеньевич республикăн тата тулай чăвашĕсен халăх фольклор ушкăнĕсемпе «Иксĕлми çăлкуççем» радиоконкурс йĕркелекенĕ. 23 çул Çĕрпӳ районĕн ентешлĕхне ертсе пынă. Халĕ Шупашкар хулинче Петĕр Хусанкай ячĕллĕ Культура керменĕн Максимов-Кошкинский ячĕпе хисепленекен Чăваш халăх театрĕн ертӳçи тата режиссерĕ.

ВГТРК, Раççей ял хуçалăх министерствин, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн, Мари Республикин депутатсен пухăвĕн, Раççей журналисчĕсен пĕрлешĕвĕн Хисеп хучĕсене тата Чăваш Республикин Ертӳçин Тав хутне илмешкĕн тивĕç пулнă. Чăваш Республикин журналистсен пĕрлешĕвĕн Леонид Ильин, Çемен Элкер ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Çĕрпӳ районĕн Хисеплĕ Гражданинĕ. «Чăваш Автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул» асăну медальне тивĕçнĕ.

## СЫВ ПУЛЛАШУ СĂМАХ

Çук, эп мар, эс хăв каларăн,
Пытарса куçусене.
Тек юратупа вылярăн,
Сутрăн ырă каççене.

Сарпикеçĕм, тек ан макăр,
Мал енче çĕн пурнăç пур.
Пурнăç çулĕ пулĕ такăр,
Сăпайлăхра тăнăç кур.

Манра айăп ан шыраччĕ,
Пултарсан, каçар хăвна...
Суя хĕм тек ан сапсамччĕ,
Вăл ултав çилхи кăна.

Сана эпĕ те юратнă,
Никамран ытла.
Савнă кĕвĕсем шăратнă,
Çирĕмри Хусанкайла.

Халĕ ак, чунра пуш-пушă,
Çулăмланнă варкăш çук.
Тĕлсĕр килнĕ юратушăн,
Ан кулян, çурхи куккук.

Урăххи тек ачашлатăр,
Эп каятăп, ав ман çул.
Палăк пек яланлăх юлтăр,
Эп хăварнă шурă чул.

Туса лартăп тепĕр хӳшĕ,
Çавăртăр йăва чĕкеç.
Тĕрĕс пурăнма вăл хушĕ,
Утăп эпĕ тӳрĕ çеç.

* * *

Йăлтăрккан хĕмленчĕ юр пĕрчи,
Ăшшăн ӳкрĕ манăн ал çине.
Ак йăл илчĕ туйăмсен тĕнчи,
Карăнтарчĕ яшлăх хĕлĕхне.

Вĕри ытамра эс халь, пикем,
Ӳсĕртет сассу пĕр манăçми.
Чунăмра асать вĕри хĕлхем,
Юн вылять ниçта та шăнăçми.

Санăн куçунта хама куратăп,
Ешĕл улăхри вылявлă ут.
Эс манра халь, чĕрепе туятăп,
Пулмăп тек нихçан та саншăн ют.

Ырă кĕвĕ килчĕ аякран,
Шуса тухрĕ çамрăклăх ума.
Тĕрĕленчĕ тĕрĕ туйăмран,
Пар аллуна, çирĕплентĕр тупа.

Юр пĕрчийĕм, чĕрери кăвар,
Куçупа тархасшăн ан çунтар.
Çурăлнă кĕлчечек, шăвар,
Сив çилпе тăм тивесрен хăтар.

Йăлтăрккан хĕмленчĕ юр пĕрчи,
Ăшшăн ӳкрĕ манăн ал çине...

# КĔТЕП САНА, КĔТЕП...

Кĕтеп сана, кĕтеп,
Чунра кăвар, хĕлхем.
Килетĕнех, пĕлеп,
Туйсах тăрать чĕрем.
Çăвать, çăвать шур юр,
Чĕнтĕрленет чаршав.
Эс, ăраскал, халь юр,
Ан пултăрччĕ чăрмав.

Кĕтеп сана, кĕтеп,
Чунра кăвар, хĕлхем.
Килетĕнех, пĕлеп,
Туйсах тăрать чĕрем.
Эс çут ĕмĕт ман,
Мĕн пурнăç тăршшĕпе,
Мана илсе пыран
Телейлĕх çулĕпе.

Кĕтеп сана, кĕтеп,
Чунра кăвар, хĕлхем.
Килетĕнех, пĕлеп,
Туйсах тăрать чĕрем.

* * *

Мĕн-ма тăвăлать ман чун,
Мĕн-ма-ши канăçсăр чĕре.
Мĕн-ма хĕвелсĕр халь кун,
Ӳкес те ытамлас çĕре.

Кирлĕ мар пулсан сана,
Кам валли эп мĕскĕн чун.
Каçар, ирĕк тытрăм хама,
Пултăн маншăн савнă кун.

Халь вара кала, эп кам.
Чуна хăйрать пĕр муза.
Сана çеç, сана çеç лăпкам...
Тăкăнать куççуль, пĕр хушă.
Пĕл, яту хĕвел манра,
Çуратрăн ăшă çуркунне.
Хĕмленчĕ шевле чунра,
Çурăлчĕ чечек кĕркунне.

Чĕре хӳттине эп илтĕм,
Ачаш та çепĕç хунава.
Юратуран пил ыйтрăм,
Санран кĕтрĕм хурава.
Ĕмĕтре çунатлланса,
Шав тĕл пулу шырарăм.
Пăрнăçа йăлтах манса,
Хитре сăнна упрарăм.

Эсĕ йăрăс кĕлчечек,
Пĕр килместĕн юманпа.
Чĕкеç евĕр вĕл! Вĕçех.
Шел... пулайăп-ши санпа...
Пĕлессӳ килсессĕн пĕл!
Эп юратнă, юрататăп!
Кăвартан ан пултăр кĕл.
Туслăха та тытма пĕл!



## Григорий САВКАЙ

Григорий Васильевич Ефимов 1909 ҫулта Ҫӗрпӳ районӗн Чӑрӑш Туҫа ялӗнче ҫуралнӑ. Вӑтам пӗлӳ илнӗ. Шупашкар педагогика техникумӗнче, ҫар училищинче вӗреннӗ. Ҫарта пулнӑ, майора ҫитнӗ. «Канаш» хаҫат редакцийӗнче, Чӑвашрадио комитетӗнче ӗҫленӗ. Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче пулнӑ. Калавсем, очерксем ҫырнӑ.

Паллӑрах кӗнекисем: «Ҫӗнӗ ял» (1938), «Тивлет» (1939), «Пархатар» (1940). СССР писателӗсен Союзӗн членӗ (1940).

1987 ҫулта Ригӑра вилнӗ.

* * *

Килсем, тӑван, килсемччӗ ман пата,
Харӑс тӑрса юрлар ҫӗнӗ юрра:
Хамӑр пурнан хисеплӗ вӑхӑта
Ӗмӗр тӑрӑх яратпӑр пурнӑҫра!

Эпĕр яшăланнă вăхăт пит те паллă,
Эпĕр пурнан кун-çул нимрен паха.
Чăваш, тутарĕ, вырăс пĕртăванлă,
Пурте таптарĕç вĕт чуралăха.
Мучей калать: хальхи кун-çулăрсемшĕн
Ик ĕмĕрех паратчĕç пуль авал,
Ĕç çыннине этем шутне кĕмешкĕн
Тĕнпе саккун куçне уçма паман.
Çапла ĕнтĕ ку чух, хисеплĕ тусăм,
Пурте пĕрне-пĕри тăван шутлать.
Кунран-кунах пусатпăр çĕнĕ пусăм,
Çултан-çулах çĕнни аталанать.
Ĕнтĕ пире те вăхăт юрламашкăн,
Юрла, поэт, чĕрӳ шăраннă чух:
Çак çĕр çинче пурнăç умне тухмашкăн
Эп кĕрешӳсĕр пултараяс çук!..

## УШКĂН

Ушкăн-ушкăн, пĕр пек шухăш
Пĕрлешсе ĕçлеççĕ:
Ушкăнлăхăн пысăк тупăш,
Усси пысăк, теççĕ.

Салтака кайса килсессĕн,
Паттăр Микихверĕ
Ялта ушкăн эртеллесшĕн
Тăрăшса ĕçлерĕ.

Кулаксем ăна йĕркесĕр:
– Мĕн пĕлет вăл! – терĕç,
Чăнахах малтан, пĕлмесĕр,
Ăна итлемерĕç.

Стариксем кăна илтсессĕн:
– Тур çырлахтăр! – терĕç.
Карчăксем, коммун тесессĕн,
Çулçă пек чĕтрерĕç.

– Ах, ку çамрăк ачапча,
Пурăнса курмасăр,
Пĕтереççĕ пурнăçа, –
Терĕ ватă Сантăр.

Ĕлĕк пирĕн аттесем
Пурăнатчĕç лайăх.
Ку чухнехи çамрăксем...
Теççĕ шăп çур халăх.

Хулленех ав шыв тумламĕ
Чула та шăтарчĕ:
Пирĕн ял мĕн пур урамĕ
Паттăра ăнланчĕ.

Акă ушкăна тухмашкăн
Пурте кăмăлларĕç,
Пур ĕçе пĕрле тумашкăн
Тĕплĕн сăмахларĕç.

Уй-хире ав пăх та кур:
Вĕл халь шерепеллĕ.
Пулăшмарĕ пире «тур»,
Хамăрах телейлĕ!...

Пирĕн пусă çĕнелет,
Пирĕн пусă симĕс.
Унта клевĕр ешерет,
Унтах тымар çимĕç...

Коммун никĕсне хывмашкăн
Эпĕр пултаратпăр.
Çĕр çинче çăтмах тумашкăн
Хамăра шанатпăр!...

## Никита ЕФИМОВ

Никита Ефимович Ефимов 1856 çулхи ака уйӑхӗн 11(23)-мӗшӗнче Хусан кӗпӗрнин Етӗрне уесӗнчи (халӗ Çӗрпӳ районӗ) Патӑрьелте çуралнӑ. Ялти шкултан вӗренсе тухнӑ хыççӑн 1879–1889 çулсенче Хусанта миссионерсем хатӗрлекен приютра пурӑннӑ, пуçламӑш шкул учителӗн ятне илме экстерн йӗркипе экзамен тытнӑ. Икӗ çул Саратов кӗпӗрнинче учительте ӗçленӗ. 1891 çулта Хусана таврӑннӑ. Тӗн академийӗ çумӗнчи икӗ çуллӑх курсра вӗреннӗ. Ун хыççӑн 11 çул Хусан кӗпӗрнин Чистай уесӗнче ӗçленӗ.

Н. Ефимов «Чӑваш чӗлхи вӗренмелли материалсем» тата ытти тӗпчев ӗçӗсем çырнӑ, халӑх сӑмахлӑхӗпе этнографи материалӗсем пухнӑ. Тӗпчевçӗ 1888 çулта «Чӑваш халӑх юррисем» ятлӑ пысӑк ал çыру хатӗрленӗ, вӑл халӗ Хусан университечӗн Н. Лобачевский ячӗллӗ библиотекинче упранать.

1918 çулхи пуш уйӑхӗн 7-мӗшӗнче Шупашкар уесӗн (халӗ Куславкка районӗ) Елчӗкре вилнӗ.

# КАМИТ ÇИНЧЕН

Хитре Хосан холинче
Пĕр çол камитсĕр порăнмаççĕ.
Пĕр аслă айлăм вырăнта
Хора кӳлĕн посĕнче
Çоллен сарай тăваççĕ
Камитсене выляма.
Ăна пĕр вырăнах лартмаççĕ,
Тумассерен сиктереççĕ:
Пĕрре ку енне лартаççĕ:
Тепре леш енне лартаççĕ, –
Текех аппаланаççĕ.
Ку апла полтăр-ха.
Тата çора тохсассăн
Шу толăхĕ тĕлĕнче
Крепость айĕнчи ярмăк чох
Çанта илсе анаççĕ.
Вара выляма поçласан
Тĕлĕнмелле хăтланаççĕ:
Опалла та ӳлеççĕ,
Качакалла та çохăраççĕ,
Кошакла та макраççĕ,
Осалла та выляççĕ...
Номай тĕрлĕ хăтланаççĕ, –
Хоçкаланса пĕтеççĕ,
Ыратнине пĕлмеççĕ...
Коллен капла хăтланаççĕ, –
Коллен корма кӳртесшĕн,
Коллен окçа топасшăн.
Çоллен çапла хăтланаççĕ, –
Çомма окçа похасшăн,
Хора халăха йорасшăн.
Эй, эсĕр, камитсем!
Осал ĕçĕрсемпеле
Йорăр-и-ха халăха?



## Кĕçтук ТĂХТАМАН

Константин Вениаминович Ефремов 1961 çулхи раштав уйăхĕн 9-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Хурамал Туçа ялĕнче çуралнă.

1979 çулта Çирĕккасси Туçа вăтам шкулне вĕренсе пĕтернĕ. Çав çулах Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищине режиссурăпа театр уйрăмне вĕренме кĕнĕ. 1980–1982 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă. Çартан таврăнсан Çĕрпӳ районĕн «Спутник» совхозĕнче спорт, ӳкерес ĕç тата Хурамал клубĕнче илемлĕх ертӳçисенче тăрăшнă.

1983 çулта Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищин вокал уйрăмне вĕренме кĕнĕ. 1987 çулта музыка училищине вĕренсе пĕтерсен Саратов хулин Л.В. Собинов ячĕллĕ патшалăх консерваторине вокал уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Консерватори вĕренсе пĕтерсе 1992 çулта Шупашкара таврăннă. Телевиденипе радио хорĕнче юрланă, музыка училищинче вокал вĕрентнĕ.

Кĕçтук Тăхтаман сăввисене Егор Ефремов юрра хывнă.

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ. 1994 çултанпа оперăпа балет театрĕн паллă солисчĕ. Тĕп рольсене калăплать. Илемлĕ те хăватлă сассипе куракансене тыткăнлать, опера, оперетта, эстрада юррисен илемлĕхне туйса илме пулăшать. Опера труппин ертӳçи.

## ЮРАТНĂ ÇЫННĂМ

Эс юрататăн хаваслă пулма,
Йăл-ял çеç кулатăн ялан ман умра.
Ман чĕрем çунать-çке пĕр саншăн кăна,
Çавна эс пĕлетĕн, сисен эс кăна.

Эп сана курсан, ман çĕтеç сăмахсем,
Эп сана илтсен, ман вĕçеç шухăшсем.

Кирлĕ мар сăмах, юратап сана,
Тӳпери çăлтăра парнелеп эп сана.
Ман çĕтеç сăмахсем тĕл пулсассăн сана,
Ман пуçа çавăрать сан илемлĕ сăну.

Чунăмçăм, эпир санпа паллашнă чухне
Эпĕ шутламан çавăн пек юратма пĕлнине,
Халĕ вара сансăр мĕнле
                    пурăнмаллине пĕлместĕп,
Санпа уйрăлсассăн,
                    хама питĕ пĕччен туятăп.

Манăн кăшкăрас килет,
мĕншĕн тесен эсĕ çумра çук,
Эсĕ ман юрату, сана çĕтерес килмест.
Эсĕ ман пĕртен пĕр çакă çĕр çинче,
Санпа çеç эпĕ пĕлтĕм, мĕн вăл юрату.

## ÇУТĂ ÇĂЛТĂР

Тӳпере çутти мĕн пур
Сар хĕвелĕн шевлинчен,
Тĕнчере вăйли мĕн пур
Чĕререн юратнинчен?

Санăн чĕрӳ те ман чĕрем
Кур, сапаççĕ вут-хĕлхем,
Пĕрлештерсе ик çăлтăра
Ĕмĕр пурăнар савса.

Чăт, чăт, тусăм, тăнласам,
Тĕттĕм пулса çитиччен,
Ытарма та çук сана,
Чарăнми тапать чĕре.

Тăхта, уйăх, ан васка
Тĕттĕм çĕре çутатма,
Вăхăт пар эсĕ мана
Сар хĕре халь юратма.

Ах, мĕн тăвас, мĕн курас
Канăçа епле тупас,
Çутă çăлтăрăм эс ман,
Хакли мĕн пур-ши санран?

Пурнăç тикĕссĕн чупать
Иккĕн хывнă çулпала,
Сар хĕвел пире савать
Пурнар яланах савса.

## САВНĂ МĂШĂРĂМ

Чунра сӳнми телей,
Чĕрем юрлать савса,
Юратнă мăшăрăм,
Пĕрле пулар санпа.

Куçран куça пăхса,
Пĕр сукмакпа утса,
Юратнă мăшăрăм,
Эс манăн шанăçăм.

Мăшăрăм, мăшăрăм,
Эсĕ çут çăлтăрăм,
Алран ал тытăнса
Утар ялан пĕрле савса.

Эп сана курсассăн
Тĕнче çуталать,
Пĕр эсĕ-çке маншăн
Ир те каç ялан.

Эс йăл-йăл кулсассăн
Тĕнче савăнать,
Пĕр эсĕ-çке маншăн,
Юрату эс ман.

Пулсан ялан пĕрле
Санпа хавас чĕре
Тавралăх телейлĕн
Пĕрле юр юрлать,

Пĕлетĕп, мăшăрăм,
Çак туйăм хăвачĕ
Сана çеç упрасшăн
Чĕрере ялан.

## ÇАПЛА ÇАВ

Çапла çав,
Кайрăн эс урăххипе
Çапла çав,
Пул телейлĕ тепринпе,
Çапла çав,
Йĕр юлмарĕ чĕрере,
Çапла çав,
Эп те пулăп тепринпе.

Чипер кай,
Сывă пул ялан,
Чипер кай,
Сывă пул ялан.

Сывă пул,
Чипер кай вара
Сывă пул,
Чипер кай вара.

Çапла çав,
Таврăнтăн эс ман пата
Çапла çав,
Кирлĕ мар эс тек мана.
Çапла çав,
Çилленместĕп эп сана,
Юратап халь теприне.

## ЭС – ХĔВЕЛ, ЭС – УЙĂХ

Вăхăт чарăнса ларса
Каясшăн мар малалла,
Манăн чĕре ывăнса
Тапасшăн мар малалла.

Яланах санпа пĕрле
Вăл пуласшăн ĕмĕре
Анчах эс урăххипе
Халь çӳретĕн пуль пĕрле.

Эс хĕвел,
Ăшăтан чуна,
Эс уйăх,
Сивĕтетĕн мана.

Текех çывăраймастăп,
Тĕлĕксем кураймастăп,
Тамăкри пек туятăп,
Сана çеç эп саватăп.

Эпĕ сана шыраса,
Çӳреп халĕ аптраса,
Хăш урампала утса
Çӳретĕн-ши савăнса?

## ЭС МАНА ЮРАТĂН

Çак сăмах «юрату»
Пĕлеп, сан валли мар.
Юратан чечексем,
Анчах та мана мар.

Санăн халь манпала
Пĕчĕк çеç калаçу.
Урăххипеле сан
Пурте лайăх ялан.

Эс мана юратăн,
Паян пулмасан та
Эп çавна кĕтетĕп,
Ĕненсе пурнап.

Темле тăрăшсан та,
Темле пытансан та
Эс мана юратăн,
Эп кĕтеп çавна.

Эп çыратăп çыру,
Сан патна эп ярап.
Эп çырап юратса
Хам çинчен кăшт кăна.

Эп кĕтетĕп санран,
Эп кĕтетĕп çыру,
Санăн юлташу çеç
Çырса ятăр кăна.



## Василий ЗАХАРОВ

Василий Геннадьевич Захаров 1959 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕн Уйри Пушарпуç ялĕнче çуралнă. Первомайскин вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă (1976).

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн машиностроитель факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ (1977–1982). Çарта офицер пулнă. Вăрах вăхăт Шупашкарти агрегатсем тăвакан заводра инженерипе техника специалистĕнче ĕçленĕ.

В. Захаровăн сăввисем Шупашкарта тухса тăракан тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленеççĕ тата сăвăсен виçĕ пуххине кĕнĕ.

«Шурă пуçлă кăвакал» поэма авторăн литературăри иккĕмĕш хайлавĕ.

# ШУРӐ ПУҪЛӐ КӐВАКАЛ

*(Поэма)*

Кӗскелсех кунсем пыраҫҫӗ
Авӑн уйӑхӗ ҫитсен.
Ҫулҫӑсем те тӑкӑнаҫҫӗ
Вичкӗнрех ҫилсем вӗрсен.

Пухӑнать пӗрле хур кайӑк
Тухиччен инҫе ҫула.
Сивӗтет кӗрхи ҫанталӑк
Вӗҫиччен «кайри-мала».

Кайӑк сассипе вӑранчӗ
Ял хусахӗ Микулай.
Пит-куҫне ҫуса тумланчӗ
Пӗтнӗк чейӗ тунӑ май.

Апата ларсан капланчӗҫ
Тем салхуллӑ шухӑшсем:
«Эпӗ ҫеҫ ялта пӗччен ҫӗ,
Е шӑпи ҫапла? Кичем!

Ҫамрӑк чух килӗштереттӗм
Кӳршӗ ял хӗрачине.
Эх, ухмах, мӗн-ма вӗҫертрӗм
Алӑран ҫав мерчене?!

Систерме, тен, пӗлеймерӗм
Ҫавӑрмашкӑн пӗр ҫемье,
Хӗрӗ, тен, хӑех тимлерӗ
Ҫӗн кил-йыш йӗркелеме?

Юратмасăр качча тухрĕ
Наçтă хĕрĕ, Хĕветӳç.
Кӳренсех-ши çапла турĕ
Хумлă-хумлă сарă çӳç?

Пурнăçĕ вĕсен ăнмарĕ,
Чир пĕтерчĕ Петюка:
Ĕçкине пăрахаймарĕ,
Мĕскĕн лекрĕ тупăка».

Чун тăвăлнине сиресшĕн
Йĕкĕт тухрĕ чăлана,
Куç тĕлне пăшал лексессĕн –
Шухăш вĕçрĕ вăрмана.

Кайăк-кĕшĕк карталанчĕ
Кĕрхи çеммĕн çуйхашса,
Сунар туйăмĕ вăранчĕ
Çав саспа тăванлашса.

Тем, чĕри кăлт-кăлт ун сикрĕ
Пăшалне çĕкленĕ май.
Уртмахне хĕвне вăшт чикрĕ,
Тухрĕ утрĕ Микулай.

Сĕм вăрманĕ курăнсассăн
Анчĕ тарăн çырмана.
Тимлĕн пăхрĕ чарăнсассăн
Хăй юратнă вырăна.

Пурте ырă, пурте сывă,
Тав сана, кĕрхи тĕнче.
Авă Пушанарăн шывĕ
Ик çыран ытамĕнче.

Шывĕ хăвăрт юхнăран-ши
Çаврăнаççĕ авăрсем?
Ишнĕ чух вылянăран-ши,
Тек сикеççĕ пуллисем?

Йăлт илемлĕ, йăлт виçеллĕ,
Çавăн пек вăл пирĕн ен...
Кĕмĕл кĕвĕллĕ çӳçелĕх
Илĕрттет чуна касчен.

Çăлкуççем тапса тăраççĕ
Чăнкă сăртăн айĕнчен.
Çепĕç юрă шăратаççĕ
Шăнкăр-шăнкăр юхнăçем.

Çак çырма пит илĕртетчĕ
Чăвашсен ӳнерçине.
Виктор Немцев килкелетчĕ
Çĕклесе этюдникне.

Хĕл иртсен ăна кĕтетчĕ
Çырмари лаштра йăмра, –
Ӳнерçи ерçсен çитетчĕ
Çу пуçланнă ярăмра.

Тус-юлташ пек калаçатчĕ
Виктор çак тавралăхпа,
Чаплă пейзажсем тăватчĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ сăрăпа.

Çич ытам йăмра вуллийĕ,
Çулĕн шучĕ те нумай,
Хушăнсах пырать нушийĕ
Варĕ çĕрĕшĕннĕ май.

Йывăçа чапа кăларчĕ
Ытарми ӳкерчĕкре.
Ун илемлĕхне хăварчĕ...
Ӳнерçи – леш тĕнчере.

Умĕнчи пейзаж сăнарĕ
Каймасан та куçĕнчен,
Сунар туртăмĕ тухмарĕ
Микулайăн пуçĕнчен.

Тарăн çырмаран хăпарчĕ,
Тухрĕ тӳрĕ вырăна.
Капăр шурăм пуç хăвачĕ
Тыткăнларĕ арçынна.

Сарăлса выртать мăнаçлăн
Çулне пӳлнĕ юхан шыв.
Туйăнать тусла калаçнăн,
Сĕннĕн: «Тусăм, юрă хыв!»

Ачаран кунта иленнĕ
Пулă лайăх кĕнĕрен.
Сунара та килкеленĕ
Кайăк хурĕ вĕçнĕрен.

Пĕвене канма анаççĕ
Кайăксем сар кĕркунне.
Кăшт ишеççĕ те каяççĕ
Кăнтăр илĕртнĕ енне.

Ирхине çыран тĕтреллĕ.
Çывхарсассăн çывăха,
Кайăкне тытма та меллĕ
Шуйхатмасăр шăплăха.

Йăпшăнса утать сунарçă
Чăтлăх витĕр тăрмашса,
Кайăк-кăвакал – хăравçă,
Сискелет тем пуласса.

Ак сасартăк ишсе тухрĕ
Шурă пуçлă кăвакал.
Этемрен, тен, хăрамарĕ,
Тем-ха уншăн хĕç-пăшал.

Микулай тăхтас темерĕ,
Авăрларĕ кукленсе,
Чĕмĕ витĕрех тĕллерĕ,
Лекрĕ пĕр йĕтри, персен.

Аллине илсен пăхайрĕ
Кайăкне тĕл пенине.
Тытнăçемĕн асăрхарĕ
Тĕк çинчи сăр паллине.

Йăнăш тунăшăн кулянчĕ,
Пĕлеймен шар курасса.
Кайăкне алрах хăварчĕ
Пăшалне хулран уртса.

Уртмахне хĕврен кăларчĕ,
Ларчĕ тунката çине.
Сухалне мала кăнтарчĕ,
Шухăш хĕврĕ ун пуçне:

«Тĕл пулсассăн мĕн калам-ши
Кăвакалăн хуçине?
Халь ăна епле тупам-ши,
Чĕпĕрен ўстернине?»

Кăшт ларсассăнах тапранчĕ:
«Каймалла пуль васкаса!»
Килĕ еннелле уттарчĕ
Вăрă пек хăйне туйса.

* * *

Ир-ирех паян вăранчĕ
Тăлăх арăм Хĕветӳç.
Тĕкĕре пăхса майланчĕ,
Çивĕтленчĕ хумлă çӳç.

Питĕнче виç пĕркеленчĕк
Тĕрĕлесшĕн тĕррине.
Хашакри кив сăн ӳкерчĕк
Ăшшăн пăхрĕ ун çине.

Тунсăх туйăмĕ вăранчĕ:
«Ĕмĕр çамрăк пулма çук».
Пăхнăран-ши, аса илчĕ:
«Пурнаймарĕ-çке Петюк...»

Тĕлĕкре курни каймарĕ
Арсăр арăм пуçĕнчен.
Малтанхи савни сăнарĕ
Çук, тухмарĕ чĕринчен.

Çил-тăман пек вĕçсе килчĕ
Микулайĕ тĕлĕкре.
Ытамне пит ăшшăн илчĕ
Хветӳçе вăл çенĕкре.

Ыталарĕ те хĕрӳллĕ
Ачашларĕ чуптуса.
Ах, мĕскершĕн çут хĕвелĕ
Ир вăратрĕ йăл кулса?

Уçă кантăкран тинкерчĕ,
Илтрĕ кайăк сассине.
Йышлăн нартлатни пĕлтерчĕ
Çиме вăхăт çитнине.

Тырă пані чух шутларĕ –
Шут иртмерĕ çиччĕрен.
Шурă пуçĕ курăнмарĕ:
«Таврăнман пуль пĕверен!»

Шурă пуç тесе ят панă
Юлнăран ыттисенчен.
Суккăр алăк-çке амантнă
Хĕстерсе пĕр уринчен.

Шуххăн шыв патне уттарчĕ
Хăй еккиллĕ Хĕветӳç.
Укăлча куçран çухалчĕ –
Çул кăтартĕ шурăмпуç.

Тăвалла утса ахлатрĕ
Ешĕл курăка сирсе,
Пурнăç савăкне çывхартрĕ
Шур пуçа тупас тесе.

Тӳрĕ вырăна тухсассăн
Курчĕ çутă пĕвене.
Сукмакпа татах утсассăн –
Йăлтăр-йăлтăр шевлине.

Катаран вăл асăрхарĕ
Пĕр арçын çывхарнине.
Ку сунарçă пулĕ, терĕ
Курсанах ун пăшалне.

Паллаймарĕ тăлăх арăм
Инçетрен сунарçăна.
Тĕлĕкре вăраннă туйăм
Кĕтнĕ пек те çак çынна.

Танлашсассăн ĕненмерĕç
Çул çинче тĕл килессе.
Именсе, тен, хĕпĕртерĕç
Иртнине аса илсе.

Сывлăш çавăрса ярсассăн
Тăна кĕчĕ Микулай:
«Аякран тӳрех паллаймăн,
Курманни сана чылай!

Ăçталла ирех васкатăн
Тутăрна varкăштарса.
Мĕнлерех халь пурăнатăн
Кун-çулна сыпăнтарса.

Чунăм сисрĕ вăрансассăн
Ирхине тем пуласса...
Эх, яш чух вĕт шутламастăн
Пурнăç шар кăтартасса.

Чăн сăмахăма калатăп,
Пулнă эп ун чух тăмсай.
Ниепле те манаймастăп,
Ас илеп сана пĕрмай...

Ун чухне ман тăмаллаччĕ
Петĕр вырăнне туйра...
Хĕветӳçĕм, каçарсамччĕ, –
Пĕтĕм айăпĕ манра».

«Ара, эп те ухмах мар-и! –
Хирĕç пăхрĕ Хĕветӳç. –
Çавăн чух тем шутлаймарĕ
Тĕтреленнĕ, çĕтнĕ пуç.

Каярах юлса тапратрăн
Сăмахна эс, Микулай!
Иртнине тин таврăраймăн,
Ун çинчен халь манса кай.

Мĕн тăвайăн-ха телейĕ
Алăкне уçмасть пулсан.
Ыррине усал çĕнейĕ
Унăн ĕçĕ ăнăçсан.

Иртеймерĕ пирĕн ĕмĕт
Тус-юлташ тапхăрĕнчен.
Çумăрпа капланчĕ пĕлĕт,
Утмалла пуль киличчен.

Куç тĕлне, тем, пулаймарĕ
Шурă пуçлă кăвакал.
Пĕверех юлма пуçларĕ
Те уксахшăн, те кахал!

Кăнтăра пĕрле ан кайтăр
Хур-кăвакал вĕçнĕ май,
Е тилле-и ан çаклантăр, –
Эп каям-ха, Микулай».

Ку хыпар кăшт хумхантарчĕ
Хирĕç тăраканнине.
Чун таса пулсан мĕн терчĕ,
Йăлт каларĕ чăннине.

Çылăха кĕтĕн пулсассăн
Йышăн эсĕ айăпна,
Çын çинче чунна уçсассăн
Пулĕ çăмăлрах хăвна.

«Чим-ха, – терĕ Микулайĕ
Хветӳçе алран тытса, –
Тен ку пурăнăç талайĕ,
Каласа парам татса:

Периччен эп пĕлеймерĕм
Килти кайăк пулнине.
Лектерес тесех тĕллерĕм,
Тытрăм шурă пуçлине...»

Хĕветӳç кичемленмерĕ
Япăх хыпара илтсен.
Хăйĕн чĕрине хистерĕ
Хак памашкăн ыр енчен.

«Тен, пире халь тĕл пултарчĕ
Шурă пуçлă кăвакал?
Эп ӳстернĕ – эс сунарçă,
Çакă мар-и ăраскал!

Тупăшна эс кăларсамччĕ
Ман чуна пăлхатнă май.
Те вăлах? Ăна курасчĕ!
Çыххуна салт, Микулай!

Чим, маннах иккен ку кайăк!
Шурă пуçлă кăвакал.
Сан алла лекни ку лайăх,
Ку вăл – чăн та ăраскал!

Çавăнпа ăна илетĕп,
Пулĕ пĕр куршак какай.
Каç пулттипеле кĕтетĕп.
Çит вара! Манса ан кай».

Вут та çиçĕм евĕр пулчĕ
Микулайшăн ку сĕнӳ,
Те юмахçă шӳтлĕ кулчĕ
Ун патне ярса чĕнӳ?

* * *

Кайăкçа кĕçех кăтартрĕ
Тӳрĕ çулĕ хăй ялне.
Утнăçем чунне йăпатрĕ,
Шухăш куçрĕ каç енне.

Килĕнче лăпланаймарĕ,
Тухрĕ пăлтăр кукăрне.
Хăйĕн çи-пуçне суйларĕ,
Тупрĕ чи шукăльлине.

Вăл пачах та хĕрхенмесĕр
Хырчĕ шĕвĕр сухалне.
Çиеймерĕ пĕр черккесĕр
Тăпăрка çĕр улмине.

Вăхăт каç енне кайсассăн
Хыврӗ кивӗ тумтирне.
Тӗкӗр умӗнче хавассăн
Пахаларӗ костюмне.

«Ак епле иккен çул усрӗ
Шурă пуçлă кăвакал.
Тӗксӗм пурнăçа, тен, хуçрӗ?
Çӗкленет чунра вăй-хал».

Турăш умӗнче тăрсассăн
Сăх сăхайрӗ пуç тайса.
Утрӗ Микулай хавассăн
Килӗнчен кӗç васкаса.

Ял тавралăхӗ саралнă
Кӗр хыпарӗ çитнӗрен.
Хуйхă-суйхă та тасалнă,
Ёмӗт – шуçăм пек кӗрен.

Пӗчӗк алăк çул кăтартрӗ
Хура пусă хӗррине,
Сунарçа сукмак васкатрӗ
Уйри Пушарпуç ялне.

Пушă хирпеле каçсассăн
Çитрӗ Ачавар умне,
Ял çутийӗ курăнсассăн
Хăвăртлатрӗ утăмне.

Тарăн çырмара хавассăн
Пуç тайсан Пушанара,
Тăвалла çулпа утсассăн
Пушарпуç ларать умра.

Пысăк мар ялта çуралнă,
Çитĕннĕ унтах Хветӳç,
Пулнă ачаран сăпайлă,
Кăн-кăвак нарцисс пек куç.

Сарă пуçĕнчи ик çивĕт
Çитнĕ пилĕкĕ таран.
Çамрăк чунĕнче çут ĕмĕт
Çиçнĕ ун мĕн ачаран.

Хĕр илемĕ тыткăнланă
Тем чул каччă чĕрине.
Хĕветӳç пĕлсех юратнă
Вĕсенчен патваррине.

Юнашар ялтан çав йĕкĕт,
Ячĕ унăн – Микулай.
Çăмăлпа ӳсмен-тĕр пĕркĕт,
Тӳснĕ нушине самай.

Амăшĕ ăна çуратнă
Вăрçă тухнă çулхине,
Ашшĕ йывăр суранланнă,
Ванчăк лекнĕ кăкăрне.

Вăрçă хирĕнчен килсессĕн
Паттăр выртнă вырăнпах.
Вăхăтсăр çĕре кĕрсессĕн
Тĕпкĕч юлнă сăпкарах.

Йывăр килнĕ ун кун-çулĕ
Ывăлпа çăмăллансан,
Юхнă вĕçĕмсĕр куççулĕ
Ачине пăхайманран.

Пĕчĕк пулнă Микулайĕ
Юлнă чух хăр тăлăха.
Хăварман ăна талайĕ
Тем пулсан та, выçлăха.

Май килсен хирте ĕçленĕ,
Пулăшнă асламăшне.
Тăрăшса шкулта вĕреннĕ,
Пынă ăслатса тăнне.

Шĕвĕр пулнă шăпăрланĕ:
Усалпа вăл çыхланман,
Ватă çынсене сумланă,
Йывăрлăхран хăраман.

Ырă вăхăтсем те пулнă,
Тертпе çеç иртмен кунсем.
Тантăшĕсемпе вылянă
Тĕрлĕрен спорт вăййисем.

Эх, Çĕрпӳ пуххи кĕрленĕ
Утă уйăхĕ çитсен.
Сутуçсем унта иленнĕ
Пур çĕртен те пур енчен.

Çамрăксем хĕрсе вылянă
Футболла, волейболла.
Рынкă яшĕсем чапланнă
Час-часах тухса мала.

Чĕннĕ хăй патне театр
Капăр чаршавне уçса.
Çепĕç Ырсеме курса-тăр,
Чун каять хавасланса.

Родионовĕ пит хатăр
Леш Ефим Никитинпа,
Вар хытмалăх кулăш хатĕр,
Çĕн вăй-хал туян чунпа.

Поэтсем калаççĕ сăвă,
Авă Петĕр Хусанкай.
Ёçхĕл тухрĕ – ырă-сывă,
Çитнĕ Кăтакран Малкай.

Эй, тăван чĕлхе хăвачĕ,
Ыталан кашни çынна.
Сан асамлăх асамачĕ
Шав çутаттăр таврана.

Нумайччен ян янăратчĕ
Шăхăру яш хăлхара,
Кăруççей ярăнтаратчĕ
Янкăс captionслă уявра.

Кăларать килти хăярĕ
Тутлă техĕмлĕх шăрши.
Чим, сана астарчĕ мар-и
Авкаланчăк куç харши.

Çакă мар-и ĕнтĕ чăнлăх,
Çакă мар-и юрату?
Шел, килмест телей яланлăх
Ик чунра çук чух тату.

Çитĕнсессĕн Микулайĕ
Илнĕ ик парне-сарне.
Пĕр парнин хуçи – апайĕ,
Чи пахийĕ – сар хĕрне.

Вăхăтра вăл пурнăçланă
Хӗсметре çар тивӗçне,
Чыслăн виçӗ çул сыхлан̆ă
Çӗпӗрте çӗр-шыв çӗрне.

Чӗрине сив туйăм çурнă
Пытарсан асламăшне.
Çӗрпӳре кайран вăй хунă
Шеллемессӗр канăçне.

Те çав вăхăтра хавшатнă
Микулай хăй ытамне.
Те сар хӗр чунне пушатнă
Кӗтнӗçем чун савнине.

Хӗветӳç çӳре пусланă
Петӗр ятлă каччăпа.
Çав кунсем халь иртсе кайнă,
Çирӗм çул пуль унтанпа.

* * *

Уйри Пушарпуç вырнаçнă
Пушанар çыранӗнче.
Хӗветӳçӗн ашшӗ лартнă
Хăтлă çурт ял вӗçӗнче.

Пӳрт кăшкарӗ пӗренеллӗ,
Çутă шăвăç тăрринче.
Кăнтăртан ик чӳречеллӗ
Ватă ăвăс умӗнче.

Урам ен – ем-ешĕл курăк,
Кĕмелли – эреш пусма.
Илемлетнĕ йывăç карлăк,
Кăмăллă ăна пăхма.
Çак тĕлте тахçан сунарçă
Хăй те кĕтнĕ тул çути.
Камшăн тăнă шухăшлавçă?
Лешĕ халĕ – кил хуçи!

Шурăм пуç – асам илемĕ –
Хăвалană ыйăхне,
Юрату вучахăн хĕмĕ
Ачашлană туйăмне.

Çутă ĕмĕчĕ çуралнă
Икĕ чунăн малтанах.
Парттă хушшинче те ларнă
Виçĕ çул юнашарах.

Ӳснĕçем Куля юратнă
Кӳршĕ ял хĕрачине.
Май пулсан йăтса та пынă
Катан пир хутаççине.

Чĕрисем пĕр тан тапсассăн
Пытарма-и туйăмне?
Алла-аллăн тытăнсассăн
Чарнă кăкăрти хĕмне.

Çу çитсен хĕрсе ĕçленĕ,
Хунă уй-хирте вăйне.
Хĕветӳç чунтан хĕрхеннĕ
Арсăр юлнă амăшне.

Сар хĕр ашшĕ паттăр пулнă,
Салтакра яман ятне.
Вăрçă хирĕнчех вăл юлнă
Харсăр çапăçнă чухне.

Вилнĕ хут курсан йĕмерĕ,
Наçтă путрĕ хурлăха.
Ал çула та çитеймерĕ,
Хĕрĕ юлчĕ тăлăха.

Шухăшсем килсе капланчĕç
Микулайăн шур пуçне.
Ырă самантсем вăранчĕç,
Анлăн тухрĕç куç умне.

* * *

Шурăм пуç ярăмланатчĕ
Илĕртӳллĕ ытамра.
Çĕнĕ пурнăç çаврăнатчĕ
Ĕмĕтленнĕ тытăмра.

Ватă йывăç савăнатчĕ
Пăшăл-пăшăл сăмахпа.
Çĕнĕ çăлтăр çутăлатчĕ
Мерченпе те ахахпа.

Авăнсах итлетчĕ ăвăс
Çамрăксем юрланине.
Çу çитсен янратчĕ купăс
Йыхăрса вăй картине...

Çамрăк ĕмĕр, ылтăн ĕмĕр,
Эс çăтмах-ши е юмах?
Шел, сана, ыр вăхăт, эпĕр
Пĕлейместпĕр хаклама.

Микулай пуçне сулларĕ
Паянхи куна куçса,
Шухăшĕсене майларĕ
Картлашка çине пусса.

Кĕриччен шак-шак шаккарĕ,
Ячĕ алăкне уçса.
Алă тытрĕ, саламларĕ
Ăшă куçĕнчен пăхса.

Хĕветӳçĕ те юлмарĕ:
«Ырă каç, савни, сана!»
Кучченеç илсен каларĕ:
«Ют çын пек ан тыт хăвна.
Малалла иртсе ларсамччĕ
Çакă сарă сак çине.
Ак журнал. Пăхкаласамччĕ
«Тăван Атăл» номерне».

* * *

Хĕветӳçĕн кил таврашĕ
Савăнтарчĕ хăнине.
Ăста пулнă сар хĕр ашшĕ
Сĕтелпе пукан ĕçне.

Кавире илемлетеççĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ çеçкесем.
Турăш тĕрринче вĕçеççĕ
Явăнса пирĕштисем.

Чӳрече янахĕ шурă,
Ешереççĕ чечексем,
Маччари çут абажурĕ
Савăнса сапать хĕлхем.

Тĕпелте таса, тирпейлĕ,
Чашăк-тирĕк шăкăри.
Çавракка уяв сĕтелĕ, –
Ав ăçтан хуплу шăрши!

Çуллахи сар лĕпĕш евĕр
Вĕçрĕ пирĕн Хĕветӳç.
Пахчари кĕлчечекпе пĕр
Хумлă-хумлă кăпăш çӳç.

Вăхăчĕ нумай иртмерĕ,
Чĕнчĕ кĕреке умне.
Хăнине туртма тивмерĕ,
Турĕ çичĕ утăмне.

Уявне хăни пуçларĕ,
Сим пыл ячĕ Микулай.
Черккене тытсан каларĕ:
«Çĕн сăмах пур ман – үнкай.
Ун пĕлтерĕшĕ – йĕркелĕх,
Икĕ шухăшăн – пĕр май.
Ик чуна пĕрлештермелĕх
Пирĕн пултăр-и үнкай!»

Ик черкке ян-ян янрарĕ
Сасă пачĕ пĕр ункай,
Çав кĕвве ăсра юрларĕç
Хĕветӳç те Микулай.

«Микулай, епле-ха ярăм
Тупаймарăн халиччен?
Ялсенче пĕтмен хĕрарăм,
Ан суйла мĕн виличчен!

Вĕсене тиркен пулсассăн –
Хам сĕнетĕп хĕр упраç.
Паллашсассăн, куç хывсассăн
Хăтасем ярсах çураç».

Леш куçне мăч мăчлаттарчĕ
Тăрăхланине илтсен,
Хăйĕн ыйтăвне те пачĕ:
«Ху мĕскершĕн пĕр-пĕччен?»

Çиçĕм евĕр пырса тиврĕ
Вăл хускатнă чăн сăмах.
Тăвăлланнă чунне уçрĕ
Хальхинче Хветӳç йăлтах:

«Тем чул каччă, эс пĕлесчĕ,
Явăнатчĕ ман тавра.
Туйăмĕ шур чул пекехчĕ
Вут-хĕм сӳннĕ чунăмра.

Çураçма та килнĕ, пăхнă –
Эп калатăп чăннипе.
Кăмăла пăсни те пулнă
Урлă-пирлĕ чĕннипе.

Çывăх паллашсан тиркенĕ,
Чĕртеймерĕç ман чуна.
Çамрăкран эп парнеленĕ
Чĕрене пĕр каччăна».

Тимлĕн итлекен ăнланчĕ
Ку сăмах пĕлтерĕшне.
Куçĕ ерипен шывланчĕ,
Чăнлăх пачĕ çивчĕшне.

Çук, уçмасăр чăтаймарĕ
Хăй чунне те Микулай,
Чăн калаçăва пăсмарĕ:
«Иртнине халь манса кай.

Хусахрах çӳрес теменччĕ
Эпĕ те ку таранччен,
Пĕр çемье тăвас тесеччĕ
Ануçпа, çураçиччен.

Кĕр ларсассăн йăрă хĕрĕ
Тухрĕ кайрĕ хулана.
Агроном пулатăп терĕ,
Вăл кирлехчĕ-ши ăна?

Хулара, иккен, çӳренĕ
Çав студентка тепринпе.
Маншăн ку чĕре суранĕ,
Юлтăм венчет çĕррипех».

«Мĕн тăвас? Кун-çул ункайĕ
Пур чухне те пĕр пек мар.
Тем пулсан та, Микулайăм,
Хамăр туслăха упрар!»

Ак кăмакаран ăш пиллĕн
Тухрĕ пиçнĕ кăвакал.
Аван мар пек илĕртӳллĕн
Ун патне тăсмашкăн ал.

«Ирхине кăна-çке ишнĕ
Вăл хăрахăн пĕвере.
Пирĕн телее, тен, виçнĕ
Хак парса иксĕмĕре.

Тен, хăех вăл, Микулайăм,
Чĕннĕ сунара сана.
Сукмакпа эс утнă майăн
Йыхăрнă унта мана».

Савăн! Халь пĕрле лараççĕ
Микулай та Хĕветӳç.
Туслăх йĕтесне туртаççĕ,
Евчĕ кайăк – чăт та тӳс!

Акă туртрĕç. Питĕ меллĕ
Хуçăлчĕ йĕтес шăмми,
Иккĕш те пĕр пек виçеллĕ!
Ку мĕскер? Кун-çул шăпи!

Хĕррипе танах тулаççĕ
Хатĕрленĕ черккесем,
Телейне хĕрсех туптаççĕ,
Хĕмленеççĕ чĕресем.

Микулай сăмах хускатрĕ
Каясси çинчен килне,
Хĕветӳç тӳрех çаклатрĕ
Шашулккаллă алăкне:

«Çук, ямастăп, Микулайăм,
Çакă çур çĕр тĕлĕнче,
Тем пулсан – мĕскер калайăп
Хамăн айăп умĕнче?

Ан тапран, тăванăм, кăлăх,
Ан тапран та ан çухал.
Сансăр эп юлап хăр тăлăх,
Сансăр эп çурма вăй-хал!

Ан хăраттăр уйрăм пурнăç –
Йăлăхтарчĕ вăл мана,
Те пулайĕ ĕнтĕ шанăç
Пĕрлешмешкĕн ик чуна.

Çавăнпа та халь тăнлаччăр
Çакăнти виç укăшка,
Пурте татăклăн ăнланччăр:
Эс пулан ман упăшка.

Эп сан арăму пулатăп
Паянтан ĕмĕрлĕхе,
Чĕререн сăмах паратăп:
Вĕçмĕпех ирĕклĕхе.

Каçару ыйтап, Куляçăм,
Эс именчĕкне пĕлсе
Çак сăмахăма пуçларăм
Хам çине явап илсе.

Çав ятпа çурта çутатăп
Эпĕ турăш çумĕнче,
Туррăн пиллĕхне ыйтатăп
Тăнă чух ун умĕнче...»

Ак çурта çунма пуçларĕ
Çуттăн, ирĕклĕн, тасан.
Аслă Туррăмăр кăварĕ
Çитрĕ тейĕн аякран.

Икĕ чун пĕрле тăраççĕ
Ашшĕ-амăш килĕнче,
Куçран-куç тупа тăваççĕ
Чĕринче те чунĕнче.

Пурнăç – тинĕс евĕр анлă,
Пин-пин хум ун питĕнче.
Ырăпа эпир тăванлă,
Ырă пултăр çут тĕнче.

Йăнăшмашкăн питĕ çăмăл,
Малтинчен юлма кая,
Çирĕплентĕр пирĕн кăмăл
Çĕнтерме усал вăя.

Салтакра присяга панăн
Полк ялавĕ умĕнче,
Шухăшĕ хĕрет яваплăн
Микулайăн чунĕнче:

«Тавтапуç сана, Хветӳçĕм, –
Тет вăл уçă сасăпа, –
Парнелерĕн чăтăм-тӳсĕм
Ытарми кăмăлупа.

Халь тăратпăр алла-аллăн
Таса сывлăш çутинче.
Пурнăç çулĕ пĕр хаваллăн
Ирттĕр пиллĕх хӳттинче.

Хальлĕхе венчет çĕррисĕр,
Кĕмĕл кăшăлсăр пуçра,
Авалхи йăла юррисĕр
Пĕрлешетпĕр çак çуртра.

Çырăнатпăр кĕç минетлĕн
Саккунне те пăхăнса,
Несĕлсем пире ĕретлĕн
Тăччăр-и çӳлтен курса.

Пин те пин çулхи этемлĕх
Чыслăхне асра тытса
Пурăнар ыр ят илмелĕх
Çӳпçипе хуппи пулса».

Микулай Турра пуç тайрĕ
Виçĕ хут хĕрес хурса,
Хĕветӳçĕ те юлмарĕ,
Харăс тайрĕ кĕлтуса.

Çăлтăр евĕр çиçсе илчĕ
Турăш умĕнчи çурта,
Тӳперен çĕн пиллĕх килчĕ
Пушарпусĕнчи çурта.

Ыталанчĕ «çамрăк мăшăр»,
Ик чĕре – пĕр пĕрлĕхре,
Сивĕ-и тулта е ăшă –
Виличчен ыр пиллĕхре.

Ак эсир те халь пĕлетĕр
Çав телейлĕ мăшăра,
Авалхи йăла çӳретĕр
Яланах чăвашлăхра.

* * *

Çĕн куна кĕтет хаваллăн
Пушарпуç, Апакасси.
Илтĕнет ав кăвакалăн
Тӳпери нарт-нарт сасси.

## ХАВАЛЛĂХ МАРШĔ

*Георгий Андреевич Фадеева*
*юбилей ячĕпе саламласа*

Илĕртеççĕ хал-хаваллăн
Йăлăмкас, Тепикасси:
Хăнана чĕнет Хавалăн
Янкăс хĕлĕхлĕ сасси.
Мăнуксемшĕн – асаттемĕр
Эс, ик кăйкăршăн – атте.
Пурăнсассăн тепĕр ĕмĕр
Пит аван пулĕччĕ те...

Çавăнпа сана сунатпăр
Ырлăх-сывлăхлă чĕрес.
Çĕр çулта та пул эс паттăр!
Ак мĕн тет мăйри хĕрес.
Туслăхра сан чăн пуянлăх:
Хурамал, Юхма, Мăскал...
Сакăр вуннăри ынатлăх
Халь те уттарать кал-кал.

Çĕрпӳсем – Малкай та Ĕçхĕл
Йыхăраççĕ малалла.
Чĕрӳнте – кăварлă Çеçпĕл, –
Талпăнатпăр тăваллах.



## Владимир ЗАХАРОВ

Владимир Геннадьевич Захаров 1963 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Уйри Пушарпуç ялĕнче çуралнă. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн филологи тата культура факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ (1999–2004). Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ (2004). Чăваш халăхĕн Алексей Талвир ячĕллĕ республика премийĕн лауреачĕ (2005). 2007 çултанпа Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн ертӳçин çумĕ.

Литература ĕçĕнче палăрнă: 4 кĕнеке (вырăсла), чылай юрă (чăвашла 20 ытла) авторĕ. Уйрăмах паллă юрăсем: «Кӳлĕ хĕрринче», «Сарă кайăк юрри», «Тавах, тăванăм», «Шурă пĕлĕтсем», «Юх, куççуль» тата ыттисем те. Вĕсене В. Семенов, И. Христофоров, А. Пăрчăкан, Н. Яковлева юрăççем шăрантараççĕ.

# ЮХ, КУÇÇУЛЬ

Тăван ял хĕрринче пушă пӳрт ларать,
Хуçисем çуккипе чунăм хурланать.
Юх, куççуль, юх, куççуль, чарăнмасăр юх,
Аттепе аннене урăх курас çук.

Атте çыхнă милĕкпе çапăнас килет,
Атте çук, атте çук, алра милĕк çук.
Анне тунă сăрине, ай, ĕçес килет,
Анне çук, анне çук, тутлă сăра çук.

Çак пӳртре, кĕрекере çын нумай ларать.
Асăнса ваттисене ыр сăмах калать.
Юх, куççуль, юх, куççуль, чарăнмасăр юх,
Аттепе аннене пирĕн манас çук.

Атте купăс тăснине, ай, илтес килет,
Атте çук, атте çук, купăс сасси çук.
Анне юр юрланине, ай, итлес килет,
Анне çук, анне çук, çепĕç сасă çук.

Тăванпа хутăшма чун-чĕре хушать.
Яла килсе çӳресен пускил савăнать.
Чарăнсам юхма, куççуль, тек ан юх, ан юх,
Пурнăç иртет, ĕмĕрех кулянма май çук.

# ШУРĂ ХУРĂН

Ылтăнпа кĕрхи вăрман çиçет,
Кăнтăра кайăк карти вĕçет.
Уйра тырă-пул пиçсе çитет,
Салтакран хĕр каччине кĕтет.

Шурă хурăн кӳлĕ хĕрринче
Сап-сарă çулçисене тăкать.
Сивĕ кӳлĕ хумĕсем çине
Сарă хĕр куççулĕ тăкăнать.

Салтакра чăн арçын çитĕнет,
Çĕр-шыва тăшманран хӳтĕлет.
Хĕр çыру илсессĕн хĕпĕртет,
Савнине кунĕн-çĕрĕн кĕтет.

Кĕрхи вăрман ылтăнпа çиçет,
Кайăк карти кăнтăра вĕçет.
Халăх тыр-пула пухса кĕртет,
Савни салтакран килсе çитет.

Шурă хурăн кӳлĕ хĕрринче
Çилĕ вĕрнĕ майăн авăнать.
Сарă хĕр каччи ытамĕнче
Чунĕпе юратса савăнать.

## ШУРĂ ПĔЛĔТСЕМ

Çӳл тӳпере шăваççĕ пĕлĕтсем,
Шур çӳçлĕ, шур сухаллă пек вĕсем.
Малти ретре, шур урхамах çинче,
Мăн Асатте, çиçет хĕç аллинче.

Шăваççĕ пĕлĕтсем, иртеççĕ çав çулсем,
Асран кайми чăваш паттăрĕсем.
Пĕрле пулма пире пилленĕ ваттисем.
Чăвашлăха çĕклетпĕр, чăвашсем!

Çут хĕвеле хупласшăн тăшмансем.
Çил-тăвăл çавăрать, васкаççĕ пĕлĕтсем.
Хăватлă çар чăваш çĕр тӳпинче –
Аслă Аттил, çиçет хĕç аллинче.

Çапăçура пуç хунă чăвашсем.
Куççуль тăкаççĕ тăлăх пĕлĕтсем.
Çӳл тӳпене пăхсан куç умĕнче –
Мăн Асатте, çиçет хĕç аллинче.

## ЧУНРА ТУНСĂХ

Тӳпере кавăн пек мăнтăр уйăх,
Сивĕ каç, çил-тăман, чунра – тунсăх.
Эп пĕлместĕп манра пур-ши айăп,
Вĕçсе çитĕ-ши ман сарă кайăк.

Пĕр сана асăмра эп усратăп,
Хам ăшра юратса ыталатăп.
Манас çук нихăçан, шухăшлатăп,
Саншăнах пусăма çухататăп.

Сан туту тутине тутанасчĕ,
Шăрçа пек куçсенче ман курасчĕ,
Эсĕ те пĕр мана савнине,
Алла-аллăн пĕрле утнине.

Санăн кăкăр çумне çыпăçасчĕ,
Санпа çеç ман телейлĕ пуласчĕ.
Пуш урам... Çук никам, эп тăратăп.
Килес çук пуль ман хĕр, ăнланатăп.

## ТАВАХ, ТĂВАНĂМ

Тăван яла ман чун туртать, чăнах.
Курас килет тăвансене.
Кил умĕнче калатăп ăш сăмах,
Тавах сире, атте-анне.

Çых-ха, аппаçăм, анне тутрине,
Хăна пухса ларар кĕрекене,
Тăс-ха, пиччеçĕм, атте купăсне,
Савса юрлар-и кил-йыш юррине.

Эпир пĕр йăх, ай, пĕр тымар.
Уяв кĕрекине килсем.
Атте-аннен пехилĕ асăмрах,
Ялан пĕрле пуласчĕ тăвансем.

Тус-тăванпа, ай, чыслăн пурăнар,
Ниме тусассăн чĕн кăна.
Кашнийĕн пултăр çăкăр та тăвар,
Тавах, тăванăм, сав мана.

## СĂМАХ ХĂВАЧĔ

Сăмах хушни тĕлĕнтерет, чăнах.
Ăна кашни хăй май илтет.
Ĕмĕр шăвать, иртет вăштах.
Пурнăç çул виçине виçет.
Сăмах илтни те, калани пайтах.
Шăнтать, е чăтма çук хĕртет.
Çапса хуçать хăш чух сăмах.
Вăй та кĕртет, чуна çĕклет.
Сӳпĕлтетсе кăларнă пăтăрмах –
Мĕн чӳл сиен кӳрет!
Сăмах вăл – яшкари çăмах,
Выççа та тутă çӳретет.
Айван тепри, пачах ухмах,
Ăслисене епле ĕнентерет!
Ăнсăртран пенĕ сив сăмах
Пăшал пекех, вăл вĕлерет.
Усал сăмах та калакан пайтах,
Шуйттан-ши вĕсене хистет.
Ун пек сăмах илтес килмест пачах,
Вăл пирĕн чунсене сивтет.
Чăвашăн ыр сăмах та самаях
Чун-чĕререн вара илтес килет

Атте-анне каланă ăш сăмах
Пире çутă тивлет пиллет.
Чăваш та чăвашла калатăр ыр сăмах,
Çав халăх хисепне çĕклет!

## САРĂ КАЙĂК ЮРРИ

Лăпкă çил ачашлать чечекри улăха
Таврана тутлă шăршă сарать.
Кӳлĕ хумĕ савса сиктерет уйăха
Чĕрере юрату çуралать.

Сарă кайăк пулса яланах сан тавра
Кунĕн-çĕрĕн вĕçессĕм килет.
Юрату юррине шăратса сан чунра
Ман йăва çавăрассăм килет.

Каç пулсассăн тухаç çамрăксем урама,
Выляни те кулни илтĕнет.
Савни купăс сасси хускатать чунăма,
Юратмашкăн мана вăл хистет.

Сарă кайăк юрри ян каять таврана,
Чечексем çине сывлăм ӳкет.
Шурăм пуçĕ килсен ăсатать вăл мана,
Юратать пулĕ, чунăм сисет.

## КӲЛĔ ХĔРРИНЧЕ

Сарă хĕвел каçчен çеç хĕртет,
Кунран-кун вара ĕмĕр иртет,
Акнă пĕрчĕ вăй хурсан ӳсет,
Ĕçлекен çăкăр хакне пĕлет.

Каçа юлса сĕм сукмакпа
Кӳлĕ хĕрне анăттăм.
Уйăх хывнă кĕмĕл çулпа
Хум çийĕпе чупăттăм.

Çунат сарнă ирĕк чунпа
Уйăх çине улхăттăм.
Уйăх çинче хут купăспа
Чăвашла эп юрлăттăм.

Улми йывăççи айнех ӳкет.
Ашшĕ-амăшĕ ачине çĕклет.
Ваттисене чăваш хисеплет,
Пуласлăха ман шанас килет.



## Юрий ЗАХАРОВ

Юрий Геннадьевич Захаров 1958 çулта Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕн Уйри Пушарпуç ялĕнче çуралнă. Первомайски вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн машиностроитель факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Хĕсметре Польшăра офицер пулнă.

Нумай хушă Шупашкар, Канаш агрегатсем тăвакан завочĕсенче техникăпа хăрушсăрлăх тата цех пуçлăхĕнче ĕçленĕ.

Унăн пĕрремĕш «Мĕнне мĕн туни» сăвви 2019 çулта «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕ.

## МĔННЕ МĔН ТУНИ

Пĕрре арăм каларĕ:
«Леш мĕнне мĕн ту», – терĕ.
Эпĕ ыйтрăм: «Леш ăçта?»
Алне сулчĕ: «Çавăнта».

Вăхăт шăвать малаллах,
Леш мĕнне мĕн тумаллах.
Мĕнрен пуçлас-ха ĕçе?
Алла лекрĕ кĕреçе.

Чавса тухрăм пĕр йăран,
Пӳрте кĕтĕм пахчаран.
Эп каларăм мăшăра:
«Мĕнне тунă. Пар сăра».

Тухса пăхсан ман ĕçе
Арăм кĕчĕ мĕкĕрсе:
«Эсĕ мĕншĕн çав тĕлте
Çĕре чавнă, упăте?

Эпĕ пĕлтĕр кĕркунне
Эс мĕн тунă вырăнне
Лартнăчĕ кĕрхи ыхра...
Ан ыйт эс манран сăра!»

Çакăн хыççăн эп тӳрех,
Мăшăр «Мĕн ту», – тесенех.
«Ăнлантар, – теп, – тĕрĕсрех,
Ĕçе тăвăп тĕплĕрех».

# КИЛ, ЧУПТĂВАР

Пĕрре савни шӳтлерĕ:
«Иди, беги, соль», – терĕ.
Куçарсассăн чăвашла –
Ку, чăнах та, кулăшла.

Каланине итлерĕм,
Куçарнине пĕл, терĕм:
«Чуптăвар, кил чуптăвар –
Кил чупсах эппин, тăвар».

Пикене ку килĕшрĕ –
Шухăшĕ пĕлтерĕшлĕ.
Кăтартса хăй кăмăлне
Шуххăн тăсрĕ тутине.

Эп те маххă памарăм –
Ыр туйăма пăсмарăм.
Хĕр тăсать тĕк тутине
Ма тăсас мар хамăнне?

Тутасем пĕрлешрĕçĕ,
Уйрăлма пĕлмерĕçĕ.
Куçарсах «соль» сăмаха
Лекрĕм тейĕн çăтмаха.

## ПĔЛĔШĔМЕ

Мĕншĕн эсĕ вăрттăн вут хуратăн
Ырă çын ятне хурлас тесе,
Ун çинчен суя сăмах саратăн
Вĕчĕхӳ тикĕчĕпе сĕрсе.

Пĕр сăлтавсăрах урса каятăн!
Тен, усал пăлхатнă сан чунна?
Тăванна та уяма пăрахрăн,
Çĕклеме пуçларăн аллуна!

Пулса тăтăн та тискер çăхавçă
Пăтратма пуçларăн пĕвене,
Тек кампа кăларăн тепĕр вăрçă,
Чараймасăр шăртлăх çиллине.

Тен, хăвна пит паттăрăн куратăн
Тĕрĕсмарлăх тĕркĕшĕвĕнче?
Çук, эс юлăн тăлăхăн-туратăн
Ултавпа суя шăв-шавĕнче.

Хирĕçӳсĕр пулмасан та пурнăç,
Чарăн ăмсанма та пăнтăхма!
Аслă Туррăмăр парсамччĕ шанăç
Пархатарлă çул çине тухма.

# ТУСЛĂХ КĔВВИ

*Иванов Леонид Петровича*
*юбилей ячĕпе саламласа*

Çĕн çул хыççăн килтĕн эс яла
Хĕл мучи кĕрт хывнă çулпала.
Сурхури çитсессĕн, сăпкаран
Уççăн сасă патăн ян та ян.

Тав тăватпăр, шартлама кăрлач!
Хĕпĕртерĕç хăтапа тăхлач
Тĕнчене килсен патвар пепке,
Ăраскалĕ – ĕмĕрлĕх кипке.

Несĕлсем парсассăн вăй-халне,
Çăлкуççем – хăйсен тасалăхне,
Çиçрĕ те хĕмленчĕ пархатар –
Шăранать халь Улăпра кăвар.

Ачаран манмарăн кил-йышна,
Тăванна, çуралнă вырăнна.
Тем пек астарсан та Шупашкар
Ятăн Пушарпусĕнчех тымар.

Шăнкăр-шăнкăр шывлă Пушанар,
Хурăнлăх, йăмраллă Малтивар,
Тыткăнларĕç ырă кăмăлна,
Йышăнчĕç юратнă мăшăрна.

Те мерчен, те ылтăн эс, Çинук,
Пирĕншĕн санран хаклийĕ çук.
Хĕрĕр те çак чыслă уяврах,
Çитрĕ сирĕн Мускаври ахах.

Каçал ен... Хĕвеллĕ Йăлмахва...
Кӳлĕ хĕрринче – çӳçе, хăва.
Чĕрере пулсан та хăвăр ял,
Уйри Пушарпус парать вăй-хал.

Ентешсен кĕввийĕ ян та ян
Çĕрпӳре хавас янрать паян.
Пирĕн çăлтăр çутă тӳпере –
Иксĕлми юрри – кĕрекере.

Пурнăçăмăр çулĕ такăр мар –
Сахал мар ĕçре тăкатăн тар.
Кĕрешетĕн вăрă-хурахпа,
Мĕн тăвас, тăванăм, ку – шăпа.

Тек аçу-аннӳ те çăтмахра,
Пиллĕхне яраççĕ уçлăхран.
Тутанар-ха кăпăклă сăра,
Кăмăл çĕкленет халь «Çăлкуçра».

Пĕчĕкрен юлташлă пулнă май
Пĕр çулпах утатпăр-çке пĕрмай.
Ĕнтĕ Çĕрпӳре туртатпăр лав –
Çав ятпа çуралчĕ те хайлав.

Эпĕ халĕ çак кĕрекере
Саламлатăп савăнса сире:
Пытăр пурнăç Турă хӳттинче,
Ăш хĕвелĕн ырă çутинче.

Пултăр юрату, ялан тату,
Ӳстĕр, çунатлантăр сан ратту.
Хунăр çĕр хунавлă йывăçла,
Юрлăр чĕвĕл-чĕвĕл кайăкла.

## АЛЯ ЙĂМĂКĂМА

Турă хывнă çулпала
Çитрĕн эсĕ утмăла.
Астăватăн-и шкула
Чупнине юрла-кула?

Тĕрĕссипе каласан
Ăраскалĕ шухă сан.
Тем те курнă пурнăçра:
Лараймастăн канăçра.

Ĕç тени – мĕн ачаран:
Уй-хирте е пахчара,
Кӳлĕнсессĕн туртаран,
Тар юхтарнă хĕл таран.

Кĕлчечек пек хĕр чухне,
Вĕренсен суту ĕçне,
Такăрлатнă сукмакне
Тĕп универмаг патне.

Аппарат завочĕ те
Саншăн тивĕçлĕ кĕтес.
Халь пулсан та пенсире,
Эс унта та хисепре.

Ĕçӳнте çеç мар вăр-вар,
Пур çĕрте те васкавар.
Юрлама та ташлама
Маххă паман никама.

Çепĕç сан ыр кăмăлу,
Илĕртӳллĕ йăл куллу.
Шӳт мĕнне те ăнланан,
Малашлăха ăнтăлан.

Саламлатăп эп сана!
Тус-тăван паян хăна.
Сан патра кĕрекере,
Савăнатпăр пĕрлĕхре.



## Аркадий ИВАНОВ

Аркадий Иванович Иванов 1929 çулта Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕн Нĕрĕш ялĕнче çуралнă. Тупнер шкулĕнче, унтан Çĕрпӳ педагогика училищинче вĕреннĕ.

А. Иванов литература ĕçне шкулта ăс пухнă чухне тытăннă. Сăввисене хаçатра пичетленĕ. Салтакра виçĕ çул Германин Подстам хулинче пулнă. Çар хĕсметĕнче тăнă чухне те сăвăсем хайланă. Вĕсене Тăван çĕршыва яра-яра тăнă. Чăваш çыравçисемпе çыру çӳретнĕ. Салтакран таврăнсан 1956 çулта авланнă, Çĕрпӳре район хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçланă. Район хуçалăхĕсем тăрăх çӳренĕ. Хаçачĕ район пурнăçне кирлĕ шайра çутатма тăрăшнă. Аркадий Ивановичăн чун киленĕçĕ сăвă çырасси пулнă. Унăн лирикинче гражданлăх, пейзаж, юрату темисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Хайлавĕсенче туслăх, вăрçă, çĕнĕ çĕрте çерем уçма хутшăннă ентешсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те çырнисем чылай тĕл пулаççĕ.

1963 çулта Аркадий Иванович Иванов пурнăçĕ сарăмсăр татăлнă.

## САПКА ЮРРИ

Пур тавралăх лăпкă каçхине.
Тутлă ыйăх килчĕ ял çине.
Çывăрать ял-йышăм пачăрах,
Эс те çывăр, ывлăм, çывăрах.

Çывăр лăпкăн, ырă тĕлĕк кур.
Ĕмĕрте сан тĕрлĕ шанчăк пур.
Ĕненетĕп: эс ӳссе çитсен
Космоса çĕкленĕн Çĕр çинчен.

Сывпуллашăн: «Чипер юл, аннем,
Çул инçе пулсан та – эс кĕтсем».
Хăть сана тăватă çул кĕтем,
Шанчăка çухатмăп-ха, пепкем.

Эп шанатăп Марс çине çитсе
Каялла та сыввăн килессе.
Халĕ çывăр, канлĕн тĕлĕрсем,
Космонавт, тен, пулăн эс ӳссен.

## ПИРĔН ЛАГЕРЬ

Çавал шывĕ тулăх,
Икĕ енĕ – улăх, –
Сулхăна ачашшăн йыхăрать вăрман.
Кунта пирĕн лагерь,
Вăрмана шала кĕр,
Тен, кун пек илем эс нихăçан курман.

Çав тери таса-çке,
Речĕпе лараççĕ
Эпир карнă капăр шур палаткăсем.
Çакăнта канатпăр,
Çĕнĕ вăй пухатпăр
Хĕрлĕ галстук çыхнă паттăр ачасем.

Вырăс та, чăваш та,
Мăкшă та, тутар та, –
Пурте кунта туслă, пурте пĕр тăван.
Пурте пултаруллă,
Паттăр та хăюллă,
Пурте юрататпăр аслă çĕршыва.

Пурнăç çулĕ уçă,
Кремльтен çул пуçĕ
Паттăрсем пулмашкăн ăс парать пире.
Çавăнпа юрлатпăр,
Савăнса калатпăр:
– Эпир чи телейлĕ халăх тĕнчере!

## ТЕ СИСМЕРĔН, ТЕ ЭС ĂНЛАНМАРĂН...

Çăкасем тин çулçă кăларатчĕç,
Симĕс сăн кĕретчĕ капăр хулана,
Сăмсана ыр шăршă кăтăклатчĕ, –
Çавăн чух тĕл пултăм бульварта сана.

Адресна, ятна та каламарăн,
Пĕлтермерĕн хăв ăçта ĕçленине.
Те сисмерĕн, те эс ăнланмарăн
Ман чĕрем пĕр саншăн çеç хĕмленнине.

Уйрăлу саманчĕ çывхарсассăн
Парнелерĕн маншăн хаклă куллуна.
– Хулана тепре килес пулсассăн
Пырса кур эс, – терĕн, – пирĕн стройкăна.

...Нумай стройка тăрăх эп çӳрерĕм,
Сисĕнмерĕ irттерни яра куна...
Анчах пур çĕре те çитеймерĕм,
Тупаймарăм, чунăм, шыраса сана.

Сахал мар эп хĕрсене тĕл пултăм
Каçхине тухсассăн Атăл хĕррине.
Асăнмалăх вĕренсе эп юлтăм,
Шупашкар яш-кĕрĕм çепĕç юррине.

Çурхи Атăл каçĕпе килентĕм,
Лăплантарчĕ ун илемĕ ман чуна.
Шуçăмччен унта пĕччен çӳрерĕм,
Тупаймарăм пурпĕр шыраса сана.

Малтанах эс темшĕн каламарăн
Адресна, ятна, ăçта ĕçленине.
Те сисмерĕн, те эс ăнланмарăн
Ман чĕрем пĕр саншăн çеç хĕмленнине...

# МĂЙĂР

Сарă мăйăр, тутă мăйăр
Хĕр сутатчĕ вокзалта.
– Мĕн хака эсир сутатăр. –
Пырса ыйтрăм эп унтан.

Хĕр тинкерчĕ те: – Пĕр тенкĕ
Стаканне ыйтатăп, – тет.
Эх, хăйне те мăйăр тейĕн:
Пичĕ-куçĕ ун çиçет.

Пĕр стакан мăйăр эп илтĕм.
Уйрăлас килмен енне:
– Тултарсамччĕ, хĕрĕм, – терĕм, –
Эппин тепĕр стаканне.

Хĕр сăпайлăн шăнкăр-шăнкăр
Янăратрĕ куллине.
Кулă евĕр шăкăр-шăкăр
Мăйăр юхрĕ кĕсъене.

Часах пуйăс сасă пачĕ,
Кĕрсе лартăм вакуна.
Ак вокзал та хыçа юлчĕ.
Таврара уй-хир кăна.

Сарă мăйăр, тутă мăйăр
Халь те манăн кĕсъере...
Анчах хĕр ăçта-ши, калăр,
Хăш ялта, хăш кĕтесре.

## ЮЛТАШӐМ, АСТУ!

Ялан аннӳна эс вӑрҫан,
Ялан эс унпа хирӗҫле.
Ват ҫын кӑмӑлне эс хуҫан:
«Ҫуках пуль ман, – тетӗн – телей».

Телей!.. Чим, мӗскер вӑл телей,
Мӗнле ӑнланан эс ӑна.
Вӑл тен тӳпери ҫут хӗвел,
Тен саншӑн вӑл сывлӑш кӑна.

«Телей ҫук» тесе ларнипех
Телей вӑл хӑй тӗллӗн килмест.
Ҫӑвар ҫеҫ карса выртнипех
Ҫӳлтен татӑлса вӑл ӳкмест.

Телей вӑл – ӗҫпе вӗренӳ,
Телей вӑл – хӗнпе кӗрешӳ,
Телей вӑл – таса юрату, –
Юлташӑм ҫакна эс асту!

Вӗсемпе уйрӑлми туслашсан
Тин телей пурнӑҫра пулӗ сан!



## Микулай МĂСКАЛ

Николай Григорьевич Иванов 1957 çулхи утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Чечейкасси Туçа ялĕнче çуралнă. Çирĕккасси Туçа шкулне пĕтернĕ хыççăн Вăрнар совхоз-техникумĕнче вĕреннĕ. Хусан Н.Э. Бауман ячĕллĕ Ленин орденĕллĕ ветеринари институтĕнче хăй пĕлĕвне анлăлатнă. Чылай тĕпчев ĕçĕ çырнă. Ветеринари ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Чăваш патшалăх аграри университетĕнче вăй хурать, доцент.

Николай Григорьевич Иванов – поэт-лирик тата ученăй. Унăн малтанхи сăввисем Вăрнар районĕн «Çĕнтерӳ çулĕ», каярахпа Çĕрпӳ районĕн «Çĕрпӳ хыпарçи» хаçачĕсенче тата Шупашкарта тухса тăракан тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленнĕ.

Авторăн пĕрремĕш кĕнеки – «Халал сăввисем» (2008), иккĕмĕшĕ – «Ăнсăртран вăраннă туйăм» (2008), виççĕмĕшĕ – «Кĕрхи парне» (2010), тăваттăмĕшĕ – «Шап-шурă çеçкере Чечейкасси Туçа» (2012), пиллĕкмĕшĕ – «Тăвансене пуç тайса» юрă пуххи (2012), улттăмĕшĕ – «Çĕрпӳ ен

кĕввисем» (2015), çиччĕмĕшĕ – «Çурхи кĕвĕ» юрă пуххи (2018), саккăрмĕшĕ – «Мăскалиада» (2018) кун çути курнă.

Микулай Мăскалăн чылай сăввине чăваш композиторĕсем: Анатолий Никитин, Надежда Заводскова, Алексей Проскурин, Авраам Бурундуков юрра хывнă. Вĕсене пĕтĕм халăх юратакан юрăçсем: Валерий Семенов, Галина Смирнова, Надежда Заводскова, Ольга Осипова тата «Янташ», «Эмине» ушкăнсем концертсенче шăрантараççĕ.

Поэтăн паллăрах юррисем – «Аннене», «Тăвана кĕтсе», «Каçарсам», «Чечейкасси Туçа», «Савнă Кипекçемĕр», «Çĕнĕ çул юрри», «Юратнă техникум», «Çурхи кĕвĕ», «Чăваш Ен».

Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2020). Николай Григорьевич Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн (2008) тата Пĕтĕм тĕнчери писателĕсен Союзĕн членĕ (2009). Чăваш халăхĕн Алексей Талвир (2009) ячĕллĕ, республика тата Чăваш халăхĕн Альпăрт Канаш (2011) ячĕпе хисепленекен çамрăксен премисен лауреачĕ. Микулай Мăскал сăввисем чăваш литературин поэзи антологине (2013), «Раççей ученăйĕ» энциклопедийĕн X томне (2014), Çĕрпӳ районĕн энциклопедине (2019) кĕнĕ. Ĕç ветеранĕ.

## ЧЕЧЕЙКАССИ ТУÇАСЕН МУХТАВ ЮРРИ

Пире эс çуратнă, пире эс ӳстернĕ,
Чечей никĕсленĕ мухтавлă Туçа,
Пурне те эс çирĕп тытмашкăн вĕрентнĕ
Тӳпе парнеленĕ таса шанăçа.

Ĕмĕр асра эсĕ, пиллĕхлĕ ялăмăр,
Ырă яту пурăнать чĕрере,
Пирĕн çунатăмăр, пирĕн вăй-халăмăр
Чыслăн усратăр сана тĕнчере.

Пире пĕчĕкрен ĕç умне эс тăратнă
Ялан пуç таймашкăн аки-сухине,
Вутра та туптанă, шыврa та шăратнă
Ялан упрама несĕлсен ыр ятне.

Юратнă хапхамăр, хитре укăлчамăр,
Асран тухайми аттесем, аннесем...
Чечейкассипе пире çыхнă шăпамăр,
Çĕклер хамăр ялăн чысне, тăвансем.

## ЧЕЧЕЙКАССИ ТУÇА

Инçетрен куçăма илĕртсе
Сад пахчи киленет чечекре.
Тăван ялăм ларать ешерсе,
Тăван ялăм ялан чĕрере.

Чечейкасси Туçа, Чечейкасси Туçа,
Усратăп асăмра эп хамăн туссене.
Чечейкасси Туçа, Чечейкасси Туçа,
Кунта-тăванăмсем, кунта атте-анне.

Энĕш çийĕн çурхи таврана
Юрă-кĕвĕ каять ярăнса,
Çĕрпӳпе Шупашкар таранах
Вăл çунатлăн вĕçет савăнса.

Ыталаççĕ чунри туйăма
Симĕс улăх, вăрман та сăрт-ту...
Савнă ял, ăраскалăм эс ман,
Нихăçан сивĕнми юрату.

* * *

Чечейкасси Туçа... Мĕнле эс капăр,
Çӳлти атте чуп тунă ыр кĕтес.
Эпир вара – çак вырăнтан таратпăр,
Кама халь манăн ӳкĕте кĕртес?

Тăван ялтан ан кай тесе тархасшăн,
Ачалăхун йĕрри кунта тесе,
Ват йăмрасем сана темскер каласшăн,
Çаран ути пуçне таять тесе.

Аттемĕрсем çак масарта выртаççĕ,
Аннемĕрсен те чунĕсем кунта,
Чечейкасси чечекĕсем пăхаççĕ
Ют илеме иленнĕ куçунтан.

Çап-çутă куçкĕски пек Энĕш шывĕ
Савса лăпкатчĕ çăлтăрсен йышне,
Çак ырă сăн пек юрату та сывлăх
Сунатчĕ пур тавра хăй ачине.

Шăпамăр пӳрнĕ вырăнтан таратпăр,
Çĕн сукмаксем хыватпăр çĕн çĕре,
Çапла эпир тăван ене сутатпăр...
Чечейкасси Туçа... Каçар пире.

* * *

Çӳлти хĕвел çине пăхса
Калатăп эп, Мăскал, –
Ан çӳресемччĕ пăрăнса
Манран эс, ăраскал.

Этем пулма, чăваш пулма
Парсам мана вăй-хал,
Вара хам хĕресе йăтма
Пултарăп эп, Мăскал.

## ВЫРМАСĂР ЮЛНĂ ЫРАШ УМĔНЧЕ

Çулла, сар тинĕс евĕр хумханса,
Ылтăн ыраш ларатчĕ çак уйра.
Халь пушă хир выртать кунта канса,
Шăрт евĕр хăмăл пĕтĕм таврара.

Çанталăк уçă. Кайнă путене,
Курак та курăнмасть ана çинче.
Вĕсем халь, асилсе кунтисене
Çӳреççĕ-тĕр Нил шывĕ хĕрринче.

Чим! Çĕр ĕçне хисеплекен чăваш,
Тăруçăн тăван ен хутлăхĕнче,
Эп куртăм: ак каçалăк чиккинче
Ларать вырмасăр юлнă пĕр ыраш!

Ларать мăнаçлăн, вăрçă хирĕнче
Суранланмасăр юлнă паттăр пек,
Юри шутларăм: ун пучахĕнче
Ал икĕ пĕрчĕ! Мĕн тери тĕрек!

Иккен, çĕре ӳксессĕн, çав йышран,
Шăтса ӳсет ал ик маттур пучах,
Çапла ĕрчес, çапла хунас пулсан,
Уй-хир, татах эс курнăн чыслăрах.

Юратнă халăхăм, тăван чăваш!
Сана çак çут тĕнче ытамĕнче
Чипер хунанă евĕр çак ыраш
Сунап ик хут ӳсмешкĕн йыш енчен.

## ХУР КАЙĂКСЕНЕ ĂСАТНИ

Хур кайăксем калаççĕ сĕрме купăс,
Сĕреççĕ вăрăм çулăн хĕлĕхне.
Сĕтел çине лартатăп эпĕ глобус
Куллен виçмешкĕн кайăксен çулне.

Ыран вĕсем Жигулие çитеççĕ,
Атăл вĕçне çитеççĕ тепĕр кун,
Унтан кĕтсе илет Стамбул чĕкеçĕ,
Хăшне-пĕрне кĕтет, тен, Камерун?

Тăванăмсем, эп чăвашрах юлатăп,
Сырса тухатăп йĕлтĕр раштавра,
Мулкач вăй картине тăрса юрлатăп
Утса ем-ешĕл чăрăшсем тавра.

Мана вĕçтерĕ Энĕш тăвайккийĕ
Ик хăлхаран хавАслăн шăхăрса,
Ирпе саламлĕ мамăк юрăн сийĕ
Пире валли ахах-мерчен хурса.

Кайăкăмсем, çав илеме курмашкăн,
Питех те шел, пӳрмен сире, пӳрмен.
Эсир çуркуннепе çĕн сас парсассăн
Часрах чупса эп тухăп пӳртĕмрен.

## ЧУН<br>ХĔПĔРТЕТ ЕНТЕШЛĔХРЕ

Çĕрпӳ ентешлĕхĕ пире
Тытать пĕр çирĕп пĕрлĕхре:
Ĕçленĕ евĕр нимере
Чун хĕпĕртет ентешлĕхре.

– Эс хăш ялсем?
– Тепикасси!
– Эс ăçтисем?

– Вăрманкасси!
Кунта Туçа та Хурамал,
Эпир кашнийĕ хамăр ял!

Ыр кил-йышри вучах пекех
Тăванлăх туйăмĕ çунать,
Çӳле вĕçес килет текех,
Мала чĕнет хивре çунат.

Пире Чурачăк та тăван,
Кăнаш та çывăхра ялан,
Кипекçесем, Патăрьелсем –
Йăлт хăтасем те тăхлачсем.

Эпир пĕрле хастар ĕçре,
Хастар хаваслă уявра,
Шупашкарта та Çĕрпӳре
Ентешлĕх уççăн сас парать.

Тавах, ентешĕмсем, сире,
Мухтав Егоров Тимĕре,
Ертӳçĕ йыхăрсан пире
Кашни ĕçчен çак нимере.

# АТĂЛПА КАЛАÇНИ

Атте евĕр Атăлăм,
Анне евĕр Атăлăм,
Ĕмĕр-ĕмĕр эс манпа,
Чĕрери юратăвăм.

Сылтăм ен пуç тайнă чух,
Сулахай пуç тайнă чух
Сăрĕ, Сăкăчĕ, Чулманĕ –
Пурте сан ачу-пăчу.

Эп çуралнă вырăнта
Энĕш йăлтăрса выртать,
Эх, пĕлесчĕ, мĕн тери
Сан патна вăл туртăнать.

Пĕвине татса каять,
Кĕперне те аркатать,
Эсĕ илĕртнĕ чухне
Мĕнле вăй ăна чарать.

Атте евĕр Атăлăм,
Анне евĕр Атăлăм,
Ĕмĕр-ĕмĕр эс манпа,
Чĕрери юратăвăм.

Çавалсем те Сĕвесем,
Пăласем те Кĕтнесем
Евĕр эп те сан енне
Ăнтăлап, çавна пĕлсем.

## ЧЕЧЕЙ ПАТТĂР ÇИНЧЕН

Çырччăр-и сăвăсем
Чечей паттăр çинчен,
Хывччăр-и юрăсем
Чечей паттăр çинчен.

Панă пирĕн яла
Чечей паттăр ятне,
Хисепре тытмалла
Пирĕн ун хăватне.

«Пул чунпа эс таса,
Пул патвар та ĕçчен,
Чăваша чысласа
Кăйкăр евĕр çĕклен!»

Çакăн пек çын пулма
Чĕннĕ паттăр янташ,
Пĕлтĕр çав сунăма
Халь кашни хурăнташ!

* * *

Йăлăхтарса çитернĕччĕ нуша,
Ăна парас тесеччĕ юлташа.

Юлташ илмерĕ манăн инкеке,
Вара каласрăм хамăр инкепе.

Çук, илейместĕп, терĕ вăл мана, –
Шăллун май пур пуль пулăшма сана.

Çул тытрăм эпĕ шăллămсăм патне.
Аннеçĕм илтрĕ ман сăмахсене.

Ах, ан сĕнсемччĕ, терĕ, никама,
Эп йышăнатăп, терĕ, кӳр хама.

## АННЕ

Сăпкаçăма сиктерсе,
Ӳс, ачамçăм, ӳс тесе
Эс юрлаттăн юррине,
Çутă уйăх пек анне.

Паллаштартăн уй-хирпе,
Паллаштартăн Энĕшпе,
Сукмак хыврăн шкул енне,
Хĕвел сăнĕллĕ анне.

«Акă, ывăлăм, мăн çул,
Унпа утма тивĕç пул», –
Каласа пил сăмахне
Юлтăн эс манран, анне.

Тӳпене пăхап – анне,
Çил çӳçе уçать – анне,
Пахчана кĕреп – анне,
Аппана курап – анне.

Тав тăвап сана, анне,
Ху кăна эс çук, анне.

## ТĔЛĔК

Кил умĕнче кашларĕ хурăн
Ирпе анне чĕлхипеле,
Мана вăл чи сăваплă юррăн
Вăратрĕ хăй кĕввипеле.

Тăрсам, ачам, эп çитрĕм, терĕ,
Атя кăшт калаçса ларар,
Чун вучахне камах сӳнтерĕ,
Унта çиçет пулсан кăвар.

Аттен сулмаклă мăлатукĕ
Каç кӳлĕм пачĕ сассине,
Эппин, ыран ирех вăл тухĕ
Çава йăтса анкартине.

Аттем, аннеçĕм, каçарсамăр, –
Тен кӳрентернĕ эп сире,
Ахаль пулсан ма вăрататăр
Шур хулари хваттерĕмре?

## ÇУРЛА

Ялпа эп çыхăну татмарăм.
Кив кĕлетре иртнĕ çулла
Çекĕл çинче эп асăрхарăм
Сап-сарă авăрлă çурла.

Сасартăк умăмра çуталчĕ
Ачалăхри хирте вырма:
Пуçлатчĕ пур хăта-тăхлачă
Каçалăка пуçне тайма.

Кашни хисеплĕн пĕшкĕнетчĕ
Усăнакан ыраш умне,
Хресченĕн ĕмĕчĕ те ĕçĕ
Кĕретчĕ ылтăн кĕлтене.

Хĕвеллĕ çĕмелсем юлатчĕç
Хăватлă улăпсем пулса,
Тăнăçлăхра тытса тăратчĕç
Ниме йĕркиллĕ колхоза...

Анне парни пек эс, çурлаçăм,
Ас илтерен яш ĕмĕре,
Сана пуç тайăп ирĕн-каçăн
Эп хулари хваттерĕмре.

## ÇĔНĔ ÇУЛ КАÇ

Шупашкарта кĕрлет Çĕн çул,
Пĕрне-пĕри телей сунатпăр:
«Тăванăм, яш чĕреллĕ пул,
Чăваш тытăмĕнче пул паттăр!»

Шур хулара – хĕл мучисем,
Юр пикесем мерчен пек капăр,
Чунра çиçет таса хĕлхем,
Паян эпир хаваслă, сапăр.

Сасартăк эп Çĕрпӳ урлах
Тăван ял урамне тинкертĕм.
Çĕн çул,
Анчах унта шăпах,
Çил çеç çӳрет ав кĕртĕн – кĕртĕн...

Юр хывнă кил тĕпелĕнче
Лараççĕ тăлăххăн ик карчăк.
Эй, шур тӳпеллĕ çут тĕнче,
Ялăмăра кăшт çутă парччĕ!

## МĔН ТУМАЛЛА?

Виç чӳречеллĕ пӳрт умне
Чĕкеç килмерĕ ирхине,
Мĕн сăлтавпа килменнине
Пĕлтереймерĕ хуçине...

Мĕн тумалла?

Лаштра йăмра сулхăнĕнче
Выляççĕ пирĕн мăнуксем,
Анчах вĕсен пуплевĕнче
Çукрах чăваш сăмахĕсем...

Мĕн тумалла?

Ялпа-йышпа тыр-пул акни
Чунра хаваслăн пурăнать,
Халь çав уйри мăян ани
Хăрушлăх евĕр курăнать...

Мĕн тумалла?

«Эй, çамрăк йышăм, харăс ут!» –
Тесе юрлаттăмăр яш чух.
Халь ĕнтĕ çак ялсем – панкрут,
Унтан хăтараканĕ çук...

Мĕн тумалла?

## МАРЬЕСЕН ТИВЛЕЧĔ

*МАРЬЕ мăнукăма*
*халалласа*

Ман Марье мăнукăмçăм çуралчĕ
Çурла уйăхĕн тăваттăмĕшĕнче.
Магдалинăна вăл кун чыслатчĕ
Христиан тĕнĕпеле пурнан тĕнче.

Христоса чун панă таса хĕр те
Çуталса тăрать Мария ятпала,
Манăн туйăма çĕн сулăм кĕртĕ
Çакă хăйне евĕр ырă япала.

Кунран-кун уралансам, чипер мăнукăм,
Çирĕппĕн утмашкăн чăнлăх çулĕпе.
Марьесен пилĕпеле тусассăн утăм
Ман валли те алăк уçĕ çӳл тӳпе.

# КСЮША – КĔÇЕНИ

*Ман çуралнă кун паян –*
*Эп тултартăм икĕ çул!*
Кукаçи парни

Чăвашла эп Кĕçени,
Вырăсла эп Ксюша,
Кил-йышра эп кĕçĕнни,
Савăнатăп уншăн.

Ма тесен кĕçĕннине
Пурте юратаççĕ,
Чи хитре сăмахсене
Ксюшăна калаççĕ.

Чĕппĕм, тет мана анне,
Йăмăк, тет аппаçăм,
Пуканем, тет асанне,
Ытарми управçăм.

Эп вара асаттене
Хытă юрататăп,
Çывăрма та каçхине
Унпала выртатăп.

# ВЕТЕРИНАРИ ВРАЧĔ

*Николай ЕВДОКИМОВ*
*профессора*

Пур çакăн пек професси –
ветеринари врачĕ,
Е выльăх тухтăрĕ,
халăхри пек каласан.
Вĕсем те ĕç умне
шур халатпах тăраççĕ,
Чир-чĕрсене сиреççĕ
чыслăн та тасан.

Пĕр уйрăмлăх кăна:
ун пациенчĕ
Пĕлтерейместь чĕлхипеле
мĕн ыратни çинчен.
Çавна чунĕпеле те чĕрипе
туйса илет сиплевçĕ,
Пӳлсе хурать çулне,
шала пит кайиччен.

Ун пациенчĕсем
парне пама пĕлмеççĕ,
Йăл-йăл кулмаççĕ
тавтапуç сана тесе,
Самайлансан çавах
куçран пăхса илеççĕ,
Эс сывлăх управçийĕ
пулнине сиссе.

Ветеринар çинчен
  çырасчĕ манăн юрă
Мĕнпур лаша,
  мĕнпур ĕне ячĕпелен,
Ăна ăшра ĕнерĕ
  качака та сурăх
Çурхи çаран çинче
  хĕвел ăшшипелен.

## ЮРИЙ ЕФРЕМОВА

Сана, ентеш, Мускав хули пилленĕ,
Сана пилленĕ шурă Шупашкар.
Çав сăмаха Кабул та, тен, итленĕ,
Унтан – Джелалабад та Кандагар.

Эх, Кандагар... Эс аттесем тĕпленĕ
Мăшăр çунатлă кăвак кантăк мар,
Эс – çич енчен пире пăхса тĕлленĕ
Вĕре çĕлен пек вĕçекен кăвар.

Çав çулăмра çĕршер-пиншерĕн пĕтрĕç
Юман пулас йĕкел пек йĕкĕтсем,
Ача вĕçтернĕ хăмпă евĕр çĕтрĕç
Çурхи хĕвел пек çутă ĕмĕтсем.

Вĕсем паян сан умăнта тăраççĕ
Халь-халь сăмах чĕнес пек савăнса,
Кашнин çӳлти хĕм-çăлтăр евĕр ячĕ
Çĕршыв кăкри çинче кашни таса.

Наградусем йăл-йăл çиçеççĕ, Юра,
Тăван Чечейкасси урамĕнче.
Айта, ентеш, хуллен пуçлатпăр юрă,
Вут витĕр тухнă паттăрсем çинчен...

## АЧАЛĂХА АСА ИЛНИ

*Геннадий ИВАНОВ*
*юлташăма*

Чечейкасси Туçа ачи Геннадий,
Салам сана тăван Шупашкартан,
Сургут хули çав вырăнтах ларать-и
Тесе паян ыйтасшăн эп санран.

Çĕр çаврăнать. Таçти кив юмахри пек
Аса килеççĕ иртнĕ вăхăтсем:
Футбол хăвалани, хаваслă çимĕк,
Йĕтем çинчен çĕн тырă кĕртнисем.

Канмасăр юхнăн пирĕн Энĕш шывĕ
Васкавлăн ăсанать таçта кун-çул,
Ялта çĕнĕ ăру халь юрă хывĕ,
Çăлкуç патне вăл хурĕ çĕнĕ чул.

Сан ырă сассуна илтсессĕн, Гена,
Шкулти ачалăх çитрĕ çаврăнса,
Тен, вăл иксĕмĕре курмашкăн килнĕ,
Уяв тăвасшăн вăл пуçтарăнса.

Мухтав Турра! Хăйсен ятне ямарĕç
Чечейкасси Туçамăр ачисем,
Пĕтес яла, тен, çĕнĕрен сăн парĕç
Чунĕпеле çамрăкланса вĕсем.

## ТĔЛ ПУЛУ

Шăпчăксем çурхи каçа мухтаççĕ,
Шăратаççĕ чаплă юррине.
Çăлтăрсем те тӳпере çутаççĕ
Юрату асамĕн çуртине.

Çуркунне, çуркунне,
Çăлтăрсен ян-ян шăнкравĕ,
Çуркунне, çуркунне,
Юрату юррин йыхравĕ.

Хăвăртрах тухсамччĕ, сар чечекĕм,
Хумлă-хумлă кӳлĕ хĕррине,
Эп унта сана кĕтеп, чĕкеçĕм,
Çунтаратăп çамрăк чĕрене.

Акă эс вĕçен шур лĕпĕш евĕр,
Кил, кĕрсем ман çирĕп ытама, –
Эп сана-и. – хатĕрех мĕн ĕмĕр
Хальхи евĕр çĕклесе пыма.

# ИКĔ ХӰХĔМ САРПИКЕ

Икĕ хӳхĕм сарпике
Çума-çумăн ларaççĕ,
Пахчари чечек пекех
Хăйсем патне туртаççĕ.

Ылтăн евĕр çӳçĕсем
Хĕвел шевли тейĕн çав,
Йăлтăр-йăлтăр куçĕсем
Кăвак ĕнчĕ тейĕн çав.

Шăнкăр-шăнкăр сăмаххи
Сарă çу пек ирĕлет,
Ырă пурнăç юмаххи
Телей тĕрри тĕрĕлет.

Ик сарпике хушшине
Мĕнле ларса пăхам-ши.
Чĕрем мĕнле çуннине
Епле хăйса калам-ши.

## ХАЛАЛ

Ҫӑмӑл мар пурнӑҫ ҫулӗ:
Йывӑрри те тӗл пулӗ,
Ҫуркунни те ешерӗ,
Кӗркунни те хӳтерӗ,
Тухса ларӗ тумхах, –
Пурпӗр чӑт эс ҫавах.

Ҫӑмӑл мар пурнӑҫ ҫулӗ:
Юлташу алӑ сулӗ,
Суя тус йыхӑравӗ –
Арҫури ҫухӑравӗ.
Хӑп эс вӑл ҫынсенчен,
Чунупа ҫирӗплен.

Шан: иртет сивӗ ҫумӑр,
Уяртать ирхи ӑмӑр,
Сар хӗвел те тухасшӑн,
Сан ҫулна ҫутатасшӑн.
Пултӑр ҫул тӑвалла,–
Талпӑн эс малалла!



## Алена ИЛЬИНА

Алена Аркадьевна Ильина 1979 çулхи кăрлачăн 24-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Акташкасси ялĕнче çуралнă. 1986–1992 çулсенче Шуртавăш вăтам шкулĕнче вĕреннĕ, 1992–1996 çулсенче Шупашкар хулин Г.С. Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци интернат лицейĕн математикăпа физика уйрăмĕнче пĕлӳ пухнă. Чăваш чĕлхипе литературине ятарласа тарăн вĕренмен пулин те кĕркунне Мускав хулин Максим Горький ячĕллĕ Литература институтне вĕренме кĕнĕ.

Лицейра вĕреннĕ чухнех Аленăн «Тантăш» хаçатра сăввисем пичетленнĕ. Çамрăк поэтсен «Букварьтен – илемлĕ литературăна çити» республика конкурсне хутшăнса пĕрремĕш вырăн йышăннă. Тĕнчипе паллă Литература институтĕнче сăвă çырас ăсталăха алла илнĕ.

М. Горький ячĕллĕ Литература институтĕнчен 2001 çулта вĕренсе тухнă хыççăн Аленăна Мускаврах ĕçлеме хăварнă.

Сăвăсем чăвашла та, вырăсла та тăтăшах çырса тăрать.

## КАÇАР

Шăнкăрав чечекки пăшăлтатрĕ,
Уйрăлатăп санран, уйрăлатăп.
Аякри çул çине вăл тăратрĕ,
Хăваратăп сана, хăваратăп.
Танк шăвать, пулемет ятлаçать –
Эп илтместĕп, çук, пурпĕр илтместĕп.
Ак çумрах-çке тăшман сывлать –
Эп сисместĕп, кăна та сисместĕп.
Юлашки хут шевле ялкăшать –
Урăх пулмĕ хĕвел, урăх пулмĕ.
Тӳпере пĕчĕк пĕлĕт шăвать –
Куçăм курмĕ ăна, текех курмĕ.
Паян çеç эсĕ ман асăмра.
Юрататăп сана, юрататăп.
Каç анĕ те – çакă уйра
Çухалатăп, вуçех çухалатăп.
Укăлча. Эс тăратăн умра.
Сенкер тутăр, санра сенкер тутăр.
Çĕмĕрт пек хура тĕслĕ куçра
Тунсăх витĕр пăхать, куççуль витĕр.
Асăмрах эс мана ăсатни.
Çилпеле сенкер тутăр вĕçни.
Шанчăкпа эсĕ юлтăн манран.
Анчах та турри-çке паман!..
Юратăвăм, каçар таврăнайманшăн,
Каçар сана телейлĕ тăвайманшăн...

## ХĂÇАН-ШИ, ЫВĂЛĂМ, ЭС ТАВРĂНĂН КИЛЕ?

Хире тинкерсенех аса илетӗп
Утмăлтурат пек сан куçусене.
Пит тăрăх ман юхать куççуль. Сисетӗп,
Каласшăн эсӗ: «Ан йӗрсем, анне».

Анчах мӗнле-ха, ывăлăм, йӗмесӗр –
Миçемӗш çул килте те тăр пӗччен.
Пӗр кун иртмерӗ ман сана кӗтмесӗр,
Анчах хăçан, тӗпренчӗкӗм, килен?

Ылханчăк вăрçă, пурнăça аркатрăн,
Пушатрăн эсӗ манăн чунăма.
Тур парнеленӗ телее эс ватрăн.
Чун илмӗш, тавăр ман ывăлăма!

Вилни çинчен хута эп ӗненместӗп,
Куç хупиччен çухатмăп шанăçа.
«Кӗтетӗп кăлăхах» – тесен илтместӗп,
Нихçан та тухмăн эсӗ манăçа.

## ЧИ ХАКЛĂ ÇЫНСЕНЕ

* * *

Кикак-кикак! Тăрна карти çӳлте
Нумай хутчен сас пачӗ ир çинче.
Вăрантăм, чупса тухрăм алкумне,
Шăп тунсăх йăпшăнчӗ ман чӗрене.

Çӳлте вăраххăн хур карти шăвать,
Унпа пĕрле ман çамрăклăх каять.
Кикак-кикак! Сив çил çӳçе лăскать,
Чĕреçĕм çӳлеллех шав ыткăнать:
Хăваласа çитесчĕ картана,
Çамрăклăха упрасчĕ яланах...

* * *

– Юрататăп эп, – терĕм, суймарăм,
Анчах темшĕн-çке эс ĕненмерĕн.
Эс мана хăв çумна йышăнмарăн,
Çут куççуль юхса анчĕ – сисмерĕн.
Урам тăрăх хуллен утса антăм,
Çухату мĕнлине тин ăнлантăм.

* * *

Тăкать шап-шурă хурăн çулçине,
Вăл лĕпĕш пек анать ман ал çине.
Шур хурăнăн çулçи ман пулаясчĕ,
Аллу çинче тӳлеккĕн лăпланасчĕ.

* * *

Эс яланах юрлатăн:
«Уçланкăри палан...»
Тен, чăннипех туятăн,
Каятăп эп ыран.

Эс ман умра тăратăн,
Палан çырли – туту.
Тен, чăнласах чухлатăн,
Эп кӳрĕп ырату.

Ах, мĕншĕн-ха юрлатăн:
«Уçланкăри палан...»
Хăвах, тен, ăнланатăн,
Эп килмĕп нихăçан.

* * *

Эп вăрçăран килмен хаярланса,
Эс ан хăра манран, пикеçĕм.
Эп ют çĕртен килмен япăхланса,
Атя-ха калаçар паян, чĕкеçĕм.

Нумай çынна пĕтертĕм вĕлерсе,
Анчах ан ютшăн, ман чĕре хытмарĕ,
Ирĕк парсам, савни, кăшт сĕртĕнсе
Сана ман ачашласчĕ, чун кăварĕ.

Хăв çумăнтан ан сир мана, хĕвелĕм,
Сан ăшшупа кăшт çеç халь ăшăнасчĕ.
Кăвак куçусене ан тарт, телейĕм,
Вĕсен авăрĕнче ман пытанасчĕ.

Çума пăчăртасан эс ан имен,
Ман кăкăрăм çине пуçна çеç хур.
Эп вăрçăран тискерленсе килмен,
Хампа пĕрле илсе килмен хĕн-хур.

* * *

Вăрман кашлать,
Ман чун юрлать, –
Кĕçех тухать çил-тăвăл.
Çил тулхăрать,
Çĕре лăскать –
Ман чунăма кăшт çăмăл.
Тулла, çил-тăвăл, сирсе яр
Чунри тунсăхăма.
Хурта эс кăшлама ан пар
Çамрăклăхăма.

* * *

Каятăн эсĕ, юлăп эп пĕччен,
Каятăн эсĕ, сансăр пит кичем,
Каятăн эсĕ, мана хăваран,
Пĕрле пулма пире Турă çырман.

* * *

Юрламасть-ха тумла шăнкăрав юррине,
Çĕн сехет пек вăл сас кăлармасть.
Хӳхĕм шăнкăрч килмен-ха тăван вĕллине,
Симĕс курăк тăрри курăнмасть.

Кӳршĕ кас каччине, Ваçили Петтине,
Юрату пур пĕр канăç памасть.
Çитеймен-ха кунта ытарми çуркунне,
Чĕринчен Кĕтерук тухаймасть.

* * *

Йывăççем тăкаççĕ çулçине,
Чăрăш çеç ялан пĕр пек тумпа.
Юратсан манмаççĕ пĕр-пĕрне,
Çавăнпа та эп ялан санпа.

* * *

Пуçăма хура хуйхă пуссан,
Куçăмсем куççульпе шывлансан
Эп ялан ас илетĕп сана,
Сан сăну вăй парать шав мана.
Ас илетĕп ачаш сассуна,
Эп туятăп патвар аллуна –
Çийĕнчех çухалать хурлану,
Вĕри туйăм кӳрет сан сăну.

* * *

Чун кӳтсе çитсессĕн эп сада тухатăп, –
Пахчара ман хамăн шурă хурăн пур,
Çывăх тусăма ачашшăн ыталатăп,
Шăппăн хăварать мана асап, хĕн-хур.

Пĕчĕк чух сана эп хам алпа лартсаччĕ,
Шăрăхра шăварнă сахал мар сана.
Ăшă çил вĕрсен çулçу çатăлтататчĕ,
Пурăнма паратчĕ вăл хăват мана.

Çулсем иртрĕç, ӳсрĕм, эсĕ те хăпартăн,
Сан вуллу халь çирĕп, вăйлă та парка.
Пур пĕр чун кӳтсессĕн сан патна тухатăп,
Пур пĕрех, юлташăм, йыхăран сада.

* * *

Шывланчĕ ман куçăм,
Чĕтренчĕ тута.
Ман усăнчĕ пуçăм,
Утап çĕр хута.
Утатăп, йĕретĕп,
Çил-тăвăл улать.
Мана вăл йĕрленĕн
Киле ăсатать.

* * *

Юрату – çуркунне килен туйăм,
Мĕншĕн çитрĕ вăл хĕл варринче?
Ах, мĕн ма-ха сана эпĕ, тусăм,
Кĕçĕр куртăм Мĕтри çумĕнче?

Шурă хурăн папки çурăлман-ха,
Пăр та çирĕп – выляç ачасем.
Таврара юр чакма пуçламан-ха,
Чарăнман шартлама сивĕсем.

* * *

Ашкăнчăк алă мана ачашлать,
Тăртанчăк тута антăхса чуп тăвать.
Эп сан патна ăнтăлатăп,
Чĕрӳн ăшшине туятăп.
Юн пĕр шăнать те тепре вĕрет,
Санăн чĕлхӳ калаçма вĕренет,
Эпĕ ăна ăнланатăп,
Сана ытама йышăнатăп.

* * *

Автобус ыткăнать çул тăрăх,
Эп лараймастăп вырăнта.
Ман чунăма шалта пит шăрăх,
Тула вăл ыткăнать. Унта

Тăван уй-хир, тăван вăрман,
Укăлчара кĕтет тăван.
Палланă йывăççем çул хĕррипе чупаççĕ,
Автобуса турат сулса юлаççĕ.

Автобус чарăнчĕ. Тинех!
Эп пусрăм чуллă çул çине.
Çул урлă каçрăм эп. Хирех
Чун туртнă-мĕн иртенпелех.

* * *

Сивĕ чунра,
Шăннă чĕре.
Çук эс çумра,
Çук тĕнчере.

Шăпам ман – çĕлен,
Сăхать сисиччен.
Телей-çке пӳрмен,
Илеймĕн кивçен.



## Александр ИЛЬИН

Александр Моисеевич Ильин 1945 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Вăрманкас Кĕçтемĕр ялĕнче çуралнă. Çĕрпӳ ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ. 1964–1967 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă. Салтакран таврăнсан Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. 1979–1985 çулсенче Мускав хулин А.М. Горький ячĕллĕ Литература институтĕнче вĕреннĕ.

Литература ĕçне ача чухнех кӳлĕннĕ. Малтанхи сăввисем Çĕрпӳ районĕн «Октябрь çулĕ» хаçатĕнче пичетленнĕ, каярах хайлавĕсем республикăра тухса тăракан ытти хаçат-журналта çапăнса тухма пуçланă.

Хальччен А. Ильинăн 9 кĕнеке тухнă. Паллăраххисем – «Çумăр ташши» (1980), «Вăрманти тĕлпулу» (1982), «Çаран çинче» (1985), «Тупа» (1990), «Тумла» (1994), «Цивильск» (1999), «Судьба и быль земли Цивиль» (2005). Поэт ытларах çарпа патриотизм çинчен çырать, çавăн пекех сăввисенче ял, туслăх, юрату темисем пысăк вырăн

йышăнаççĕ. Композиторсем А. Ильинăн чылай сăввине юрра хывнă. Александр Ильин – пултаруллă публицист та. Вăл паянхи пурнăçăн ыйтăвĕсене çутатакан хайлавсемпе паллă ентешсем çинчен нумай очерк çырнă. 1986 çултанпа СССР писателĕсен союзĕн членĕ. Ĕç ветеранĕ. Çĕрпӳ районĕн Хисеплĕ гражданинĕ.

* * *

Эпĕ маннă, чăнахах та маннă
Лашапа хăçан çӳренине.
Халь пăхатăп нихăçан курманнăн
Тур лашаллă тăрантас çине.

Ăмсанатăп лавçине, мĕн калăн:
Вăл манран телейлĕрех паян,
Юлчĕç лашасем халь пит сахаллăн,
Хушăран çеç вĕсене куран.

Çавăнпах-ши тунсăхлă ялта та,
Лашасем кирлех пире, кирлех!
Эх, кӳлесчĕ пĕр хутчен пулсан та
Тур лаша. Кӳлейĕп-ши тинех?

* * *

Апай пĕçерчĕ çĕр улми,
Шур чашăкпа уйран кăларчĕ,
Халь çимелли сĕтел тулли, –
Кăнтăрлахи апат пуçланчĕ.

Апай çавах тем кускалать,
Татса кĕрет хăяр. Мăнтарăн,
Ялан çапла вăл тăрмашать –
Ыр йăлана ăçтан мантарăн?

Çиетĕп эпĕ савăнсах,
Çĕр улмирен тутли курманнăн,
Апай калать: «Çисем татах,
Çитĕнмелле, мăнукăм, санăн».

Тин пиçнĕ çĕр улми вĕри,
Пуçран лăпкать апай ачашшăн.
Пурах-и çакăнтан ырри
Хăй амăшне курман ачашăн?

* * *

Стена çинчен пăхать çап-çамрăк каччă,
Сăн-пичĕ ун кăшт кулнăн туйăнать.
Эп пĕчĕк чух анне час-час калатчĕ:
«Ачам, вăл вилнĕ, сан кукку пулать».

Эп, айванскер, тăраттăм ăнланмасăр,
Ăçтан пĕлетĕн пиллĕкре йăлтах?
Аннем вара макăрнине пĕр сассăр
Манмастăп халь те – курнă час-часах.

Калаттăм ăшшăн: «Ан йĕрсем, аннеçĕм».
Чунтан курас килетчĕ куккана,
Стена çинчен вăл йăл кулатчĕ вĕçĕм,
Кулли паян та çунтарать чуна.

* * *

Çуралнă ял – анне сассиллĕ,
Çуралнă ял – анне юрриллĕ,
Çуралнă ял – анне ташшиллĕ,
Анне вара пĕрре кăна.

Ун сассине чунра упрар-и?
Ун юррине пĕрле юрлар-и?
Ун ташшине паян ташлар-и
Тăрса хаваслă ушкăна?..

* * *

Тĕнче пуçламăшне пĕлме пулать-и?
Ун тупсăмĕ таçти ĕмĕрсенче,
Халь ман умра
Ялкăшакан кăвайт та
Миçе çула çитсе-ши çĕр çинче?

Кама кăна курман-ши унăн куçĕ?
Вуласчĕ манăн çулăм чĕлхине.
Кăвайтпала тăратăп куçа-куçăн,
Тăратăп тĕксĕм, сивĕ каçхине.

Кăвайт çунать.
Шухăшăма сиссе-ши
Хăй çулăмне ман еннелле ярать?
Анчах та çулăм чĕлхине пĕлменшĕн
Кăвайт сăмахĕ кăвайтрах юлать.

* * *

Анне мана ачашшăн ыталатчĕ,
Эп ун чухне пиллĕксенчи ачаччĕ.

Кашни кунах эп аннепе пĕрлеччĕ,
Çу кунĕсем паянхинчен хитреччĕ.
Кун-çул мĕнне пĕлмен те, ăнланман та.
Туссем нумайччĕ, çукчĕ пĕр тăшман та.

Унтанпала çулсем килми ăсанчĕç,
Туссем сахал, тăшман вара йышланчĕ.

* * *

Шап-шурă юр пек шуррăн
Тăнлав йăлт шуралсан,
Тахçан юрланă юррăн
Çу кунĕ янрасан

Каллех эп аса илĕп
Ăсаннă çулсене.
Ума хам яшлăх килĕ
Чĕнсе юлташсене...

Тен, макăрăп, тен, кулăп,
Пĕлеймĕп-ха халех.
Темле пулсан та юлăп
Чунпа хальхи пекех.

* * *

Эп юрланă юрă
Илтĕнмĕ текех:
Вăхăт та халь урăх,
Хам та пĕчченех.
Юлташсем ăсаннă,
Юлташсем таçта!
Сӳнчĕ ĕмĕт манăн,
Сивĕтет тулта.
Сивĕтет çанталăк,
Çак сивве чунра.
Çăлтăр та çухалĕ,

Мĕн юлать умра?
Мĕн юлать?
Ăçта эп
Çитĕп ĕмĕтре?
Халь ан тăвăр айăп,
Юрлăп-ха пĕрре...

* * *

Лаштра юман – уйра,
Курак – турат çинче,
Юрлам-и пĕр çавра?
Тĕлĕнмелле тĕнче.
Килет те шухă çил,
Мана парать пек пил.
Ах, мĕншĕн ăш вăркать?
Лаштра юман çинче
Тен, ман шăпам паян?
Тен, кайăк юрринче
Пуçланнă вăл тахçан?
Тен, урăхла йăлтах?
Тен, хам та эп хам мар?
Тĕлĕнмелле сăмах,
Тĕлĕнмелле сăнар!..

* * *

Çутăр çумăр, çутăр,
Курăкра вăл юлтăр,
Кăмăлĕ пулсассăн
Тепĕр хут та çутăр.

Çак çĕртен вăй пухтăр
Саншăн та, тăванăм,
Кăмăллă вăл пултăр.
Ачалла вылятăр,
Яш çынла ташлатăр,
Ташă чарăнсассăн
Юррăн янăратăр...



## Елена ИОВЛЕВА

Елена Васильевна Иовлева 1952 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районне кĕрекен Амачкасси ялĕнче çуралнă. Чăваш халăх артистки.

Ачалăхĕ Шупашкар хулинче иртнĕ. Мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхса ӳснĕ. Театр ĕçĕпе кăсăкланнă. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш çамрăкĕсен театрĕнче 1970–2004 çулсенче ĕçленĕ. К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çумĕнчи студие пĕтернĕ.

Калавсем çырать, сăвă-юрă хайлать, вĕсене кĕвĕлесе хăех юрлать.

Тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ.

## ЭХ, САДРИ ВИНОГРАЧĔ

Эх, садри виноврачĕ
Çулçă витĕр палăрать.
Ман аякри чун савни
Тĕлĕкре те курăнать.

Акăш мар, пулă мар
Шывра ишейрес çук,
Ватă мар, вĕтĕ мар
Чăтса ларайрас çук.

Такăнмасăр ӳкместпĕр,
Ватăлмасăр вилместпĕр,
Сакăр вунна çитмесĕр те
Алла туя тытмастпăр.

Савни килчĕ салтакран
Ун перчетки мамăкран,
Ыталаса чуп тăваттăм
Вăтанатăп халăхран.

Анне, мана ан вăрç-ха
Хăв хĕр пулса курман-и?
Çĕрле каччăпа çӳресе
Ирпе кĕрсе выртман-и?

Савни мана ыталать,
Хыттăн тытса чуп тăвать.
Юрату парни мана
Шурă тутăр çыхтарать.

Эп юратап савнине
Хам пек вăр-вар пулнипе,
Киле çитсен ăшă вырăн
Хатĕрлесе панипе.

Юрла савни юрруна,
Ташла савни ташшуна.
Хĕвел ансан каç пулсан
Вырттаратăп хам çума.

## МАНĂН САВНИ ВИÇÇĔ

Качакине те сумалла,
Шывне тухса ăсмалла,
Алкум вĕçне каччи килнĕ
Ун патне те тухмалла.

– Хĕр чух хĕрĕх, яш чух аллă, –
Тенĕ ĕлĕк аслисем,
Хальхи каччăсем ултавлă
Асăрханăр-ха хĕрсем.

Лява пиччен пĕр ывăлĕ
Бригадир пулса ĕçлет,
Кукамăшне систермесĕр
Вăрттăн ман пата çӳрет.

Ял вĕçĕнче пĕри тăрать,
Тепри киле ăсатать,
Мĕн тумалла Якурпала, –
Мана Макçăм юратать.

Манăн савни виççĕ,
Виççĕ мар – вун виççĕ,
Вун виççĕ вăл ним те мар,
Пултăр вăтăр виççĕ.

Каччисем те вĕçкĕн,
Юратма пĕлмеççĕ,
Хĕре улталанипе
Мухтанса çӳреççĕ.

Чӳречине уçса хунă
Амăш ывăлне ятлать,
Пĕр сăмахне илтсе юлтăм
Мана пăрахма хушать.

Юри кӳлтĕм хура лаша
Ялан çуран çӳрес çук,
Ырлăх çинчен хурлăх курма
Сан ывăлна тухас çук.

Пĕтерет Çитăр амăшĕ,
Петĕр амăш шăл хăйрать.
Çав вăхăтрах Сантăр амăш
Мана шутсăр кăмăллать.

– Хĕр чух хĕрĕх, яш чух аллă, –
Тенĕ ĕлĕк аслисем,
Хальхи хĕрсем пит хăюллă,
Асăрханăр, каччăсем.

Пиншаккине йӳле ярса
Савни лаша шăварать,
Пăрахап та каяп тесе
Ялан ăша çунтарать.

Сыв пул тенĕ сăмахĕпе
Мĕскĕннĕн куçран пăхать,
Кĕпи çанни вĕл-вĕл вĕçсе
Манăн ăша çунтарать.

Юратса эс ачашлаттăн
Манăн хуп-хура çӳçе
Ăшшăн хытă чуп тăваттăн
Çĕрле уйăх çутинче.

Чĕрем ман пĕрле пуласшăн,
Ĕненсем, савни, чăнах.
Çĕр-пин çăлтăра шутласшăн
Тусăм санпала анчах.

Хĕрсен савни виççĕ,
Виççĕ мар – вун виççĕ,
Вун виççĕ вăл ним те мар
Пултăр вăтăр виççĕ.

Анчах манăн пĕррĕ
Чунтан саваканни,
Кĕр мăнтăрĕпе пĕрле
Туйра лараканни.

## ЭП КАЙМАРĂМ МАКАРА

Эп каймарăм Макара,
Темшĕн кайрăм Сахара.
Сиктермерĕ сăпкара та
Сая ятăм тавара.

Ах тур, ах тур, тупата,
Ик урара çăпата.
Çăпата мар сантали,
Манăн савни Витали.

Вăрманти хурăн çырли
Хурăн çинче ӳсмест çав,
Çамрăк чух хитре пулни
Ĕмĕрлĕхех пулмасть çав.

Ах тур, ах тур, тупата,
Ик урара çăпата.
Çăпата мар калуш,
Манăн савни Çеруш.

Тарăн шывран шыв ăсма
Витре пысăк кирлĕ мар.
Хĕрлĕ сăна шуратма та
Хуйхă нумай кирлĕ мар.

Ах тур, ах тур, тупата,
Ик урара çăпата.
Çăпата мар ботинки,
Манăн савни Кĕçтенкки.

Сада каяймарăм эп,
Чечек татаймарăм эп,
Çынсен сарă хĕрĕсем пек
Телей тупаймарăм эп.

Ах тур, ах тур, тупата,
Ик урара çăпата.
Çăпата мар атă,
Манăн савни ватă.

Ăшă çил вĕрет паян,
Çĕр çинче ытла аван.
Пур пĕр чĕнтĕм тусăма
Уйăх çине уçăлма.

Ах тур, ах тур, тупата,
Ик урара çăпата.
Çăпата мар туфельки,
Манăн савни Андрюшки.

Шӳт-кулăша каласа
Ыр халăха пуçтартăм.
Тăпăр-тăпăр ташласа та
Хамăн çине пăхтартăм.

Ах тур, ах тур, тупата,
Ик урара çăпата.
Çăпата мар шпильки,
Манăн савни Ваçилкки.

## МĂШĂР ÇУНАТ

Сад пахчинчи çĕмĕрте
Лăпкă çилĕ хумхатать.
Чун савни, сана кĕтсе
Чĕре пăлханса тапать.

Хитре хӳхĕм çӳçĕпе
Çилпеле вĕлкĕштерсе
Сĕртĕнсессĕн тутипе
Чĕтретет-çке ӳтĕме.

Вăл мана ыталасан
Çепĕç туйăм вăйланать.
Пĕр-пĕрне савма пĕлсен
Мăшăр çунат хутшăнать.

Каçхи çăлтăрĕ пулса
Уйăхпала вылясчĕ.
Мăшăра телей сунса
Ĕмĕр пĕрле пуласчĕ.

Сывлăмпа пите çуса
Чечек евĕр пуласчĕ.
Савни çумне тайăнса
Ырă шăршă сарасчĕ.

Уй-хирти чечеккине
Сим пылпа сапăннине,
Кăкăр тулли телейне
Парнелетĕп савнине.

Ытарайми сăн-сăпат,
Асамлакан вăй-хăват.
Савнă мăшăрăм, сана
Халаллатăп çак юрра.

## Руф ИШУТОВ

Руф Васильевич Ишутов 1930 çулта Çĕрпӳ районĕн Старак ялĕнче çуралнă.

Ялта çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн Çĕрпӳри медицина техникумне вĕренме кĕнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче фельдшерта ĕçленĕ. Ун хыççăн тăршшĕпех çарта тухтăр-терапевт пулнă. Ку енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ. Çурçĕрти çар ушкăнĕнче, Атăлçи çар округĕнче хĕсметре тăнă, подполковника çити ӳснĕ.

Мĕн çамрăкранпах литература ĕçĕпе интереслennĕ. Сăвă çырнă, каярахпа литература тĕпчевĕнче паллă ĕçсем çырнă, пирĕн аслă ăрури Д.В. Исаев-Мĕтри тата А.Т. Петтоки пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен кĕнекесем кăларнă.

# ТРАКТОРИСТ

Çурхи шыв шавларĕ, юхса кайрĕ.
Сарă хĕвел типĕтрĕ çĕре.
Ĕнерхи салтак паян руль тытрĕ,
Илсе тухрĕ трактора хире.

Хурçă танк çинче вăл хăвалană
Çĕрĕн-кунĕн ирсĕр тăшмана.
Хĕрлĕ пурçăн ялава вăл чыслăн
Мускавран çитернĕ Берлина.

Акă халь танкист каллех çĕкленчĕ,
Ертсе тухрĕ хурçă трактора.
Ун сасси кĕрлерĕ, çĕр чĕтренчĕ,
Кассăн-кассăн чĕлĕнет тăпра.

Медальсем çинче шевле вылярĕ.
Фронтовик сухаçă савăнать:
Хурçă ут – эс пурнăç пархатарĕ,
Тухăç парĕ ытларах ана!



## Сантăр КАНКА

Александр Васильевич Кангин 1894 çулта Хусан кĕпернин Шупашкар уесĕнчи (халĕ Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ) Аслă Кăршкара çуралнă.

Çамрăк поэтăн ĕмĕрĕ кĕске пулнă. Шĕнерпуç икĕ класлă шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вăл 1910 çулта Чĕмпĕр чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Ăна пĕтермесĕрех вăл 1914 çулта хăй ирĕкĕпе Пĕрремĕш тĕнче вăрçине кайнă. Тепĕр çулталăкран фронтра хыпарсăр çухалнă. Хальлĕхе эпир унăн «Ялти каç» сăввипе кăна паллашма пултаратпăр, ыттисем тупăнман-ха (сăмахран, «Выртмара» сăвă).

## ЯЛТИ КАÇ

Кĕтÿ килсен, каç пулсан
Пурте чипер тумланса
Тухса тăчĕç выляма
Пирĕ ялăн хĕрĕсем.

Унтан-кунтан каччисем
Сике-сике тухаççĕ;
Хĕрсем патне çывхарса
Пăшăлтатма тытнаççĕ.

Темскер вĕсене каласа,
Вĕсен кăмăлне çавăрса
Тытăнаççĕ çавăнтах
Хĕрсемпеле выляма. [...]

Пурте харăс ал çупса
Сăвă калама тăрсан
Темле хытă чĕре те
Сиксе тăрĕ ташлама.

Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Хĕр кăмăлне каясшăн
Сикет пирĕн Кĕçтенÿк
Сарă хĕрсем умĕнче. [...]

Пурте пырса çитсессĕн
Сарă хĕрсем, каччăсем
Кула-кула пĕр-пĕрне
Ярса тытрĕç алсенчен.

Пĕри-пĕри хыçĕнчен
Хур кайăк пек тытăнса
Тапратрĕçĕ çаврăнма
Пирĕн Кăршка çамрăксем. [...]

Тĕттĕм пулчĕ пĕтĕмпех.
Уйăх тухрĕ, çутатрĕ
Пĕтĕм яла, вăрмана.
Ниçта сасă илтĕнмест:

Анчах Кăршка хĕрĕсем
Шухăшламан çывăрма.
Вĕсен юрри сăмахĕсем:
«Ай, мăнтарăн куккукĕ

Питрав кунĕ чарăнать;
Ай, мăнтарăн уявĕ
Кĕçĕрхи çĕр чарăнать!..» –
Ял варринче илнеççĕ.

Автан ячĕ авăтса
Ял вĕçĕнчен пуçласа.
Пирĕн хĕрсем:
«Ай турă:

Киле кайма астуман!..» –
Тесе ячĕç шарт! сиксе. [...]
Йăлтах ырса çитсессĕн
Пирĕн ырнă халăх та

Кĕрсе выртрĕ çывăрма.
Вара вĕсен хыçĕнчен
Шăпах тăрса юлчĕ ял.
Вăхăтпала йыт сасси

Илтĕнет çав аякран.
Тата хăш чух хуралăç
Шаккать хăйĕн патакне,
Тĕттĕм тăрать çĕр çинче.



## Гурий ВАНТЕР

Гурий Иванович Комиссаров 1883 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе 15-мĕшĕнче) Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Патăрьелте (халĕ Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ) çуралнă. 1893–1896 çулсенче вăл ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ. 1897 çулта Элĕк икĕ сыпăклă шкулне кайса кĕрет, икĕ çултан Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренме тытăннă. 1903 çулта Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă.

1903–1906 çулсенче Етĕрне уесĕнчи Пĕрçырлан пуçламăш шкулĕнче учительте ĕçленĕ. 1906 çулта Ĕпхӳри тĕн семинарине вĕренме кĕнĕ. 1908–1913 çулсенче Хусан тĕн академийĕнче вĕреннĕ, çав вăхăтрах университетра лекцисене те итленĕ. 1913 çулта вăл Ĕпхӳри гимназире литература вĕрентме тытăннă.

Г. Комиссаров литература ĕçне Г. Кореньковпа пĕрле Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пуçăннă. «Çамрăк сăвăçсен ушкăнĕ» йĕркеленсен «Ĕçченсем» ятлă ал çыру журналне кăларас ĕçе хутшăннă. Хăйĕн хăш-

пĕр сăввисене «Хыпар» хаçатра пичетленĕ. Поэт вырăсла та çырнă, икĕ сăвви 1913 çулта «Казань» журналта тухнă.

Поэт пултарулăхĕнче граждан, пейзаж, юрату сăввисем, сăвăланă юмахсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Г. Комиссаров чăваш халăх историне, йăли-йĕркине, литературине нумай тĕпченĕ, вырăсларан чылай куçарнă.

Гурий Вантер чăваш историне тата культурине тĕпчесе кĕнекесем кăларнă, халăх сăмахлăхне пухнă, хăй те сăвăсем, пьесăсем, юмахсем çырнă. 1911 çулта вăл «Чуваши Казанского Заволжья» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ пичетленĕ. Г. Комиссаров литература историне те тĕпченĕ. Кунта тĕпчевçĕн «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши.» (1917) очеркĕ паллă вырăн йышăнать. Çыравçăн «Чăваш халăхĕн историйĕ» кĕнеки (1921) уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл чăваш фольклористикине никĕслекенĕ пулнă.

1969 çулхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче Киров облаçĕнчи Санчурск поселокĕнче вилнĕ.

## ЯЛ ВĔÇĔНЧЕ ШКОЛ ЛАРАТЬ

Ял вĕçĕнче школ ларать...
Йĕри-тавра казак тăрать...
Учителе тытса тухрĕç,
Мĕн айăпне каламарĕç.
Вĕренекен ачисем
Кăшкăрса ячĕç мĕскĕнсем,
Ĕсĕклесе макăраççĕ,
Вĕрентекен патне туртнаççĕ.

Ак пĕр ачийĕ тăрать
Çапла макăрса калать:
«Эй, савнă вĕрентекен,
Пире ăса кӳртекен,
Эсĕ пире юратрăн,
Атте вырăнне пултăн,
Пире ырра вĕрентрĕн,
Пиртен эсĕ йĕрĕнмерĕн,
Пур халăхшăн тăрăшрăн,
Хушăн эс кулянмарăн.
Халь пирĕнтен уйăрлан,
Пире хуйăха хăваран.
Сана урăх курас çук,
Сан сăмахна итлес çук,
Шыраса та тупас çук,
Макăрса та çăлас çук.
Эпир сана манмăпăр,
Сан пек пулма тăрăшăпăр,
Санăн ятна сарăпăр...»
Ача çакна каласан
Вĕрентекенĕ куççульпе,
Çӳлелле пăхса, ерипе
Акă çапла каларĕ:
«Эй, юратнă ачамсем,
Ан макăрăр, ман чунăмсем!
Мана тытса хупсан та
Ĕç тăвасси хăвăрта:
Эп тахçанах каланă,
Эсир ăна тăнланă».

---

Ăçта, тăвансем, школ хуçи?
Ма алăкне питĕрнĕ?
Ма чӳречисем хупах?
Ăçта ача сĕрлени?

## ÇУРКУННЕ

Эпĕ анчах вăраннă;
Куçа уçса пăхрăм та –
Ман чун савăнсах кайрĕ:
Епле лайăх-çке тулта!
Çӳлтен, кăвак пĕлĕт çинчен,
Çап-çутă хĕвел пăхать;
Ăшă парса савăнса,
Йăл-йăл кулса пĕр тăрать.
Унăн çути ман пӳртре
Кăмака умĕнче вылять;
Ман пата та çитесшĕн,
Вырăн çинелле хăпарать.
Тулта чĕр чун савăнать:
Чăххи-чĕппи какаклать,
Автанĕ те авăтать;
Курак-чани ахăрать.
Шăнкăрч пӳрт çинче юрлать,
Салакайăкĕ ятлаçать, –
Кăвакарчăнĕ вурклатать,
Ĕни пăрушĕшĕн макăрать.
Пурте хăй ĕçне тăвать,
Эпĕ анчах выртатăп!
Капла намăс, тăрас пулĕ.
Тăратăп та каятăп.
Таса, уçă сывлăшпа
Тулта эпĕ уçăлтăм,
Тăри юррине илтсе,
Пĕлте пăхса савăнтăм...
Хĕвел ăшшипе çути
Пурне те савăнтарать;
Ырă çуркунне килсессĕн

Пурте чĕрĕлсе тăрать. [...]
Килĕ тата çуркунне,
Сĕм урăхла çуркунне,
Вăл, ырлăхне тиесе,
Килĕ пирĕн тĕнчене.
Вăл пур чуна та ăшăтĕ,
Çутипе савăнтарĕ,
Ырлăхĕпе тутă тăвĕ,
Пурне те лăплантарĕ.
Часрах, часрах килтĕрччĕ,
Халăха ирĕк кӳтĕрччĕ,
Юн тăкасса чартăрччĕ,
Тĕрĕслĕхе сартăрччĕ!
Çапла калать ман чĕлхе,
Çаплах калать чĕрем те:
Хĕвел ăштарах парсан
Кĕтеп эпĕ пурне те.

## ЁМĔТ

Курăк çеçки пулăттăм:
Тутлă шерпет ĕçĕттĕм,
Капăрланса ларăттăм –
Çуккă-мĕне пĕлмĕттĕм.
Партас пулă пулăттăм:
Çут кӳлĕре ишĕттĕм,
Йăр-йăр чăмса выльăттăм –
Хуйха-суйха пĕлмĕттĕм.
Ăмăрт кайăк пулăттăм:
Ирĕклĕхре çӳрĕттĕм,
Пĕлĕтрен çӳлте явнăттăм –
Чуралăха пĕлмĕттĕм.

* * *

Тăрăр ыйхран, чăвашсем,
Атьăр ĕçе, тăвансем!
Çĕн самана çитрĕ-çке,
Час пĕр вырна пуçтарнар,
Час пĕрлешме тытăнар!
Пирĕн пĕр чун пулар-и?
Телей кӳрсе таптăр-и?
Тытăнăпăр ĕçлеме,
Ăса-тăна вĕренме:
Чăваш ятне çĕртер мар,
Тăшман кулли пулар мар.
Çĕн пурнăçа шырăпăр,
Хамăр вăйпа тăвăпăр.
Рай пек пурнăç пултăр-и,
Телей кӳрсе патăр-и!



## Зиновий КРЫЛОВ

Зиновий Андреевич Крылов 1893 çулхи чӳк уйӑхӗн 6-мӗшӗнче Çӗрпӳ районӗн Тавӑшкасси ялӗнче çуралнӑ. 1898 çулта ашшӗ-амӑшӗпе Тӗнсӗр ялне пурӑнма куçнӑ. 1905 çулта Çӗрпӳ хулин чиркӳ прихут шкулӗн курсне вӗренсе пӗтернӗ. 1914–1917 çулсенче Балти флочӗн «Гайдамак», «Автроил» карапӗсем çинче сигнальщик, аслӑ сигнальщик пулса пӗрремӗш тӗнче вӑрçине хутшӑннӑ.

1918–1922 çулсенче Каспи флотилинче сигнальщик пулнӑ. Тӑван киле 1922 çулта Баку хулинчен таврӑннӑ, çав çулах мӑшӑрланнӑ. Хӑйӗн кил хуçалӑхӗнче, кайран колхозра ӗçленӗ.

Тӑван çӗршывӑн Аслӑ вӑрçи вӑхӑтӗнче Ӗç Çарӗнче пулнӑ. Вӑрçӑ хыççӑн колхозра, платниксен ушкӑнне ертсе пынӑ.

Мӑшӑрӗпе, Евдокия Ивановнӑпа, тӑхӑр ача çитӗнтернӗ, вӗсен йышӗнче – Социализмла Ӗç Геройӗ Мария Зиновьева. 1953 çулта вӑрман каснӑ чухне сарӑмсӑр вилнӗ. Зиновий Крылов сӑввисем вулакан умне пӗрремӗш хут тухаççӗ.

# «СТЕРЕГУЩИЙ» МИНОНОСЕЦ ВИЛĔМĔ

Эй, Çӳлти Аттемĕр,
Илтсем матроссен кĕллине,
Сана пĕлтерес тетпĕр
«Стерегущий» мĕнле пĕтнине.

Экипаж арăслан пек тăчĕ
Мĕн пур вăй-халĕпе,
Пĕр шухăшлă вăл пулчĕ
Андреев ялавĕпе.

Анчах тăшман хăвачĕ
Кăшт пулчĕ ытларах,
Туппи аркатса хăварчĕ
Миноносецăмăра.

Ура çинче тăратпăр
Тӳпенелле пăхса,
Юлашки кĕлле калатпăр,
Туррăмăр, сана шанса:

Ан пăрахсамччĕ, Турă,
Ан пăрахсам пире,
Çăлсам, çăлсамччĕ, Турă
Пирĕн чунсемĕре.

## МАТРОС ШУХĂШĔ

Çĕрпӳ енче Çавал шывĕ пур,
Шупашкарта Атăл шывĕ пур.
Эп унччен килтен инçех кайман,
Атăл аттерен мăн шыв курман.

Халĕ илтĕм ак салтак ятне,
Лекрĕм эпĕ Балтика флотне,
«Гайдамак» текен эсминецпа
Тинĕсре çӳретпĕр ушкăнпа.

Ушкăнра пур вырăс та тутар,
Килсе лекнĕ Кавказран балкар,
Пурте калаçатпăр вырăсла,
Лайăх пурăнатпăр матросла.

Ăçта тинĕс хĕрри – курăнмасть,
Ăçта тинĕс таппи – палăрмасть.
Кăнтăрла çут хĕвел тӳпере,
Каçхине çăлтăрсем тинĕсре.

Раççей тенĕ мухтавлă çĕре
Паттăр флот хӳтĕлет тинĕсрен,
Чыслăн усрăп эп çак шухăша,
Çапла хушнă хăй Петĕр патша.

## ТĔНЧЕ

Тинĕс,
Хăш чух эс симĕс,
Хăш чух хура,
Юрру
Хăш чух сан çепĕç,
Хăш чух кăра.

Килте
Эп пĕлнĕ
Антрак ялне те
Старак ялне,
Хăш чух кайса çӳренĕ
Туçие те
Тăрвашсене.
Çулла
Кĕр-кĕр кĕрлетчĕ
Çĕрпӳ пуххи,
Пăр кайнă чух
Хитреччĕ
Çавал юххи.

Ӳссен,
Мана илсессĕн
Патша çарне
Куртăм Раççейĕн урлăшне те,
Ай тăршшĕне.

Хаш-хаш
Хашкарĕ пуйăс
Хĕм кăларса,
Вара, ачам, асту эс,
Тăван çĕре-шыва
Ан кай манса.

Ăçта
Ларать Мускавĕ,
Тверĕ ăçта,
Питĕр –
Раççей мухтавĕ,
Кунта – Кронштадт!

Тавах
Сана, аттеçĕм,
Тавах, анне.
Эп куртăм,
Çут тĕнчеçĕм,
Çĕршыв сăнне.

## ПИРĔН ПУРНĂÇ

Эп çуралнă Çĕрпӳ çĕрĕнче,
Вун тăххăрмĕш ĕмĕр вĕçĕнче.

Атте-анне хресчен ĕçĕнче,
Эпир ялан вĕсен çумĕнче.

Лаша кӳлме аван пĕлетпĕр,
Суха ани тавра çӳретпĕр.

Пирĕн хăрах ури сăпкара,
Тепĕр ури хирте, акара.



## Çунат МИШШИ

Михаил Зиновьевич Крылов 1946 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Тĕнсĕр ялĕнче çуралнă.

Канаш финанс техникумĕнчен, партин Чулхулан аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

1965 çултан пуçласа 1974 çулччен Çĕрпӳ районĕн финанс органĕсенче, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнче вăй хунă. 1974–2001 çулсенче тăван ялĕн «Коммунар» хуçалăхĕнче тĕп бухгалтер, колхоз председателĕн çумĕ, парторганизаци секретарĕ, тĕп экономист пулнă. Вун икĕ çул хушши Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикинче ĕçленĕ. «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ.

Пĕрремĕш хайлавĕ «Анне çапла каларĕ» ярăмпа 2006 çулта «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕ.

2008 çулта «Тавăшсем», 2012 çулта «Пурнăç сыппи вăрăм» кĕнекесем кăларнă.

Мăшăрĕпе виçĕ ача çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă.

2019 çулта пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

## САМАНА ӲКЕРЧĔКĔ

Хытă чунлă пултăмăр ку чух,
Хамăршăн кăна-çке тăрăшатпăр.
Пĕр-пĕриншĕн ыр сăмах та çук,
Кирлĕ-кирлĕ маршăн харкашатпăр.
Инкеке лекет-и тăвану,
Ĕмĕрне пĕччен вĕçлет аннӳ...
Вăхăт çук çитме вĕсем патне,
Кăштах йăпатмашкăн кăмăлне.
Тепĕр чух куратпăр: юнашар
Пач пĕлмен этем курать тип шар.
Пулăшмастпăр ыр канаш парса,
Хăвăртрах утатпăр пăрăнса.
Шутламастпăр хамăр ватласса,
Юлас тетпĕр хамăр пурăнса.
Çут çанталăк пуриншĕн те тан.
Ватлăх никамран та пăрăнман.
Кам çине таянăпăр ун чух:
Тухса кайĕ килӳнтен ачу,
Каçса лармĕ каççерен кӳршӳ.
Пĕччченех вĕçленĕ ĕмĕрӳ...

## КĂЛКАН СĂРЧĔ

Кĕрхи салхуллă вăхăт.
Канать хура вăрман:
Унта ытла та шăпăрт –
Пĕр кайăк та юлман.
Сукмак илсе çитерчĕ
Кăлкан сăрчĕ тăрне,
Тухать асам ӳкерчĕк
Илемлĕн куç умне.

Çавалăн тăрă шывĕ
Хăвалăх хушшинче
Йăлтăртатать шевлеллĕ
Хĕвел вылявĕнче.
Çĕрпӳ текен хуламăр
Вырнаçнă айлăмра,
Чиркĕвĕсем пит капăр,
Янраççĕ таврара.
Вĕçĕ-хĕррисĕр улăх
Сăрт айĕнче выртать.
Çулла унта пит ырлăх –
Пин кайăк юр юрлать.

## ШĂПА ЙЫВĂÇÇИ

Эх, пилешĕм-пилеш, астăвап ачаран,
Тем каласшăнччĕ эс кантăкран.
Çуркунне – чечекпе, кĕркунне çырлапа
Тек пăхаттăн хĕрӳ салампа.
Эх, пилешĕм-пилеш. Хĕллехи каçсенче
Улаха çамрăксем пухăнсан.
Шăнса хытнă çырлу çамрăксен аллинче
Сивĕпе пылакрахчĕ-çке сан.

Эх, пилешĕм-пилеш... Сан çумна каçсерен
Хĕрпе каччă пыратчĕç утса.
Калаçатчĕç вĕсем килĕшӳллĕн ирччен,
Уйрăлатчĕç кайран чуп туса.
Эх, пилешĕм-пилеш... Халь вĕсем – ватăсем,
Халь вĕсем – асатте, асанне.
Каçсерен халь лараççĕ чипер мăнуксем
Çăлтăр евĕр çырлу ытамне.

## ПУРНĂÇ ИЛЕМĔ

Вăрман илемĕ – яштак йывăççем.
Çаран илемĕ – хитре чечексем.
Çырма илемĕ – шарлак çăлкуççем.
Уй-хир илемĕ – тулли пучахсем.
Кил-çурт илемĕ – паха эрешсем.
Çĕршыв илемĕ – хисеплĕ çынсем.
Пурнăç илемĕ – черчен туйăмсем,
Шăпчăк юрланă хаваслă каççем,
Хĕвел сăнне илнĕ маттур ачасем,
Пиртен юлакан пархатарлă ĕççем,
Эпир кайнă хыççăн кашлан йывăççем.

## ТУСĂМА

Ан пăлханччĕ, савнă тусăм,
Вăйă картине тухсан.
Каççерен эп юрă юрлăп
Юнашар санпа тăрса.

Ан пăлханччĕ, савнă тусăм,
Куççульне çĕре тăкса,
Юратса куçран эп пăхрăм,
Куçăхтартăм-ши сана?

Ан шикленччĕ, савнă тусăм,
Ху мана шанас пулсан,
Салтак пек тупа эп тăвăп,
Ĕмĕр пулăп санпалан.



## Çаваç ВАÇÇА

Василий Леонтьевич Леонтьев 1907 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Кивĕ Тутайкасси ялĕнче çуралнă. Пĕчĕклех тăлăха юлнăскерĕн Мускаври ача çуртĕнче ӳсме тивнĕ. Шупашкар рабфакĕнче, Чĕмпĕр педтехникумĕнче вĕреннĕ. Аслă пĕлӳ Мускав университетĕнче илнĕ. Вăл Сĕнтĕрвăрри вăрман техникумĕнче, Çĕрпӳпе Патăрьел педучилищисенче, Канаш районĕн Шаккăл шкулĕнче учительте ĕçленĕ, Йĕпреç районĕн Пучинке вăтам шкулĕнче вĕренӳ пайĕн заведующийĕнче вăй хунă, ачасене вырăс тата чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ.

Василий Леонтьев ячĕ Чăваш пичетĕнче 1926 çулта чи малтан «Çамрăк хресчен» хаçатра ялкăшса илнĕ. Вăл сăвăсем, калавсем, фельетонсем, поэмăсем, сăвăлла очерксем çырнă. Вĕсем хаçат-журналта, авторсен пĕрлешӳллĕ сăвă пуххисенче час-часах кун çути курнă.

Сăвăç 1976 çулхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче вилнĕ.

# УЛАХХĂН КАЛАÇНИ

Эп хама ялан та
Çамрăкăн туятăп,
Савнăçлă туятăп
Эп хама ялан.
Яланах юрасшăн
Хулана, уя та.
Ĕмĕрех юрасшăн
Çĕршыва, яла.
Чирлĕ эп пулап-и,
Е çӳрĕп-и сывă –
Кăнтăрла-и, ир-и,
Каç-и е çĕрле –
Ĕмĕрех эп пулăп,
Илт, Тăван çĕршывăм,
Ĕмĕрех эп пулăп
Санпала пĕрле.
Юлнă пуль нумай-и,
Юлнă пуль сахал-и, –
Кутамкка çакмашкăн
Тиветех тепре.
Пулĕ алра пирĕн
Çĕнтерӳ пăшалĕ.
Санпала, çĕршывăм,
Çĕнтеретпĕрех!

## КĔРХИ КĔВĔСЕМ

Эс ыран ирех тăран та
Кантăкна уçса яран.
Пăрахут сасси çыранпа
Уççăн илтĕн аякран.

Килĕ сасă ирпе уççăн,
Тусăм, саншăн, ăраснах.
Эп кайсассăн, эс хĕр пуçăн
Юлăн хăвăн колхознах.

Çав уç саслă пăрахутпа
Юхăм майăн юхăнса
Эпĕ кайăп, Атăл юлĕ,
Атăл юлĕ хумханса.

Эсĕ çĕр ĕçне саватăн,
Эпĕ Çар ĕçне савап.
Парса яр мана саван-тăк
Колхозран пĕр тул йăва.

Эп паратăп кун-çула та,
Эп паратăп суйса мар –
Кирлĕ чух чĕре-чуна та
Хам тăван Союзăма.

Мана ярĕç, кам пĕлет, тен
Инçетри Китай хĕрнех,
Пур пĕрех эп, – эс пĕлетĕн, –
Манас çук колхоз хĕрнех.

Мана ярĕç, кам пĕлет, тен
Пĕр-пĕччен разведкăна,
Пур-пĕрех эп ун чухне те
Ас илсех тăрăп ăна.

Эс ыран ирех тăран та
Аллуна тăпач тытан.
Сарăм варрине тăран та
Пуринпе те ăмăртан.

Таматаллă яш пĕвӳпе
Хумăш хум пек ухласа,
Çапса пырăн пур вăюпа
Эс кĕлте çыххи татса.

Эс юратнă çамрăк каччă
Çӳрĕ çут тĕнче курса.
Эй, ытла та пит аванччĕ
Эс çыру ярса тăрсан.

Çарăн тарĕ-тăрĕ типĕ
Сыхлама çĕршывăма,
Эсĕ хăвăн тул кĕлтипе,
Эпĕ хам винтовкăпа.

Иртĕ уйăх. Иртĕ çул та,
Эпĕ таврăнăп каллех.
Аван пулĕччĕ тем чул та!
Тухмасан качча хĕлле.

# САВНИНЕ АСĂНСА

Асаттен ват çăки хăрса ӳкрĕ,
Шăтса тухрĕ телейлĕ хунав,
Çĕн хунав васкаса хытă ӳсрĕ,
Тăрринчен вĕлкĕштерчĕ ялав.

Васкасах ăш кусçпе савни пăхрĕ
Пахчари çамрăк йывăç çине...
Чысласах ун кусçне йывăç сăхрĕ,
Ĕрчесе-ӳссе... çитрĕ пине.

Савнă хĕр, эс кала-ха мана!..
Мĕнле çав тери эс телейлĕ?
Мĕн пур çын ăмсанать сана,
Анчах эс такама пит сивлевлĕ.

Сан сăну ман çине хытă ӳкрĕ,
Килĕштерчĕ сана вĕри юн,
Çĕн чĕре малалла тапса сикрĕ,
Çитсе килчĕ тинех çутă кун.

Анчах, ват çăкан тĕп кучанĕ
Халь çапах мăкланма васкамасть.
Халь тăхтар, ак хăех лучăрканĕ,
Пур пĕрех унтан вут пулаймасть.

Савнă хĕр, эп сана хыт шанатăп,
Санăн ыр сăмахна ĕненеп,
Саншăн эп тем тума та хăятăп,
Эс ăçта, эп çанта чĕвенеп.

Малалла пирĕн пурнăç утаслĕ,
Шăрпăксăр çутăлĕç хăйăсем...
Ун çути тĕнчипех вара тăслĕ,
Тĕнчипе ыталĕç алăсем.

Асаттен ват çăки хăрса ӳкрĕ,
Шăтса тухрĕ телейлĕ хунав,
Çĕн хунав васкаса хытă ӳсрĕ,
Тăрринчен вĕлкĕштерчĕ ялав.



## Петр ЛЬВОВ

Петр Константинович Львов 1932 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Лĕпсер ялĕнче çуралнă. Шупашкар районĕн Шемшер вăтам шкулĕнче, Шупашкар учительсен институтĕнче пĕлӳ илнĕ. ВЛКСМ Ишлей райкомĕнче, ВЛКСМ Чăваш обкомĕнче, «Молодой коммунист» хаçатра, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче, Чăваш телевиденийĕнче, Чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕнче ĕçленĕ. 1963 çултанпа СССР писателĕсен союзĕнче тăнă. Пĕрремĕш сăввисем 1950 çулсен пуçламăшĕнче пичетленме пуçланă. Çыравçă пултарулăхĕ ытларах проза жанрĕнче палăрнă. Ăна «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Чылай калав-повесть çырнă, сăвă та хайланă. Литература ĕçĕнче 10 ытла кĕнеке кăларнă. Паллăрах кĕнекисем: «Шăпчăк юрри» (1958), «Чĕререн» (1959), «Хăю ăстисем» (1962), «Чĕлĕхсĕр купăс» (1964), «Сарă кун» (1977), «Тăватă тус» (1986). Вырăсларан чăвашла та куçарнă. Библин «Кивĕ халал» кĕнекине чăвашла куçарассине хутшăннă.

П.К. Львов 2008 çулта çĕре кĕнĕ.

## ЯНКĂР ÇУТĂ МАН ÇĂТМАХĂМ

Пĕчĕк чух эп пит пуянччĕ,
Чакăр кантăк пурччĕ ман:
Кантăк витĕр курăнатчĕ
Кăн-кăвак хирпе вăрман.

Пĕлĕте пăхса выртаттăм
Чакăр ăшшăн эп ирпе –
Тӳпене чăмса тухаттăм,
Чăмăртаттăм хĕвеле!

Йăм кăвак пӳске, вăл манччĕ,
Кăлт кĕретчĕ ывăça –
Сар шевле вăйӗи йăматчĕ,
Варăнса таçта хыçа.

Мĕн калам çав! Чăн юмахчĕ
Çут тĕнчемĕн ĕнтĕ ман:
Шĕл кăвар инçет çăтмахĕ
Ăрăмлатчĕ куçăма.

Тĕпсĕр аваăрта пахматсăр
Çăвăр пулă ишнĕ пек,
Ăмăртса вĕçеттĕм латсăр
Ĕнĕл мамăк пĕлĕтпе.

Ярăнса кайран анаттăм
Сĕм сенкер ларан яла,
Хыпăнса сиксе тăраттăм, –
Те хĕл халĕ, те çулла?..

Те хĕл халĕ, те çу кунĕ,
Те халап ку, те такмак:
Тамаша тенин çук унăн
Сăх картма яка патак.

Йывăç-курăк, чал пасарнăн,
Кĕмĕленнĕ те – кăвак.
Çул çинчи тусан юр мар-тăр,
Ирĕлет пек çуттăн çак?

Сарă пулнă ват автанăн
Хĕрлĕ мар тек киккирик.
Хураçка манран вăтаннă,
Кăн-кăвак-мĕн ун хӳри.

– Апатран юлан, анравăм,
Вăйă тармĕ – кун нумай! –
Йыхăрать киле юнавлăн
Сарă сăрлă кукамай.

Мĕн анравĕ! Мĕн апачĕ!
Чакăр куçлă пин салтак
Юрăпа иртсе чыс пачĕ –
Эп çар пуçĕ, эп малта!

... Пĕчĕк чух çапла пуянччĕ
Пĕчĕк çеç тĕпренчĕкпех,
Асамли унта нумайччĕ.
Çĕр туллиллĕн. Тĕнчипех!

Янкăр çутă ман кăвакăм
Витĕр илĕннĕ юмах...
Халь ăçта-ши çав сăвапăм,
Халь ăçта эс, ман çăтмах?..

## ХĂШ ИР, ХĂШ КАÇ...

Автан сассиллĕ çурхи ян-ян ирсем...
Автан яшкиллĕ кĕрхи кĕр-кĕр каçсем...
Хăш ир халь маншăн шар-шар автан сассиллĕ,
Хăш каç, пĕлесчĕ, вĕри автан яшкиллĕ?

Автан сассисĕр пуш çиллĕ янкăр çӳллĕ
Пуш-пушă ир сĕтевпе кӳрет пуш кун.
Автан яшкисĕр лӳппер ерçӳллĕ
Каç лăстăр-лăстăрĕнчен хăрать ват чун...

Автан сассийĕ пин ирлĕн кайнă ман,
Автан яшкийĕ пин каçлăн пиçнĕ ман.
Ман тунсăхпа халь мĕн тĕс автан сассийĕ!
Ман юншăхпа-и пиçет автан яшкийĕ!..

## КАЛАНĂ СĂМАХ

Каланă сăмахăн ан пултăр усалĕ,
Ан пултăр сăмахăн хура чун хавалĕ.
Калас пур сăмах вăл хĕвел витĕр килтĕр,
Ирхи таса çĕрĕн таса пилне илтĕр.

Çӳретĕр çав аслă пилпе вăл, ĕç тутăр.
Пура пуралатпăр, шутлатăр-и хутăр,
Суха сухалатăр, ӳстертĕр хĕр-ывăл –
Йăл-йăл кулă пултăр, çынна тыттăр сывă.

Ырра пĕлсе çывăх çынпа пултăр тĕрĕс.
Хаяр та вăл пултăр ырра сырсан йĕрĕх.
Вăл тӳррĕн кăтарттăр ырра-усала
Юлмасăр усал хăй хуçса кăмăла.

Каланă сăмахăн ан пултăр ултавĕ,
Ан пултăр сăмахăн суя шавĕ-тавĕ.
Калас чăн сăмах вăл чĕре витĕр килтĕр,
Чунра пур сăвапăн имне-симне илтĕр.

Çак имлĕ ĕçпе вăл çул уттăр ырмасăр –
Акан тырри ӳстĕр, ан юлтăр вырмасăр.
Вырмасăр, çапмасăр, ман çăкăр памасăр,
Ан ӳктер сăмахăн хавасĕ камалсăр!

Сăмах ан çуралтăр нихçан та çур хакăн,
Ан вĕçтĕр, ан çиçтĕр çилпе тип çурхахăн.
Калас пур хавас вăл суйлатăр сăмах,
Калас пур хавас вăл пур пултăр чăнах.

Каланă сăмахĕ тимлетĕр çавнах,
Каланă сăмахĕ çĕклетĕр чуна!
Каланă сăмахăн ан пултăр ахалĕ,
Каланă сăмахăн янратăр кавалĕ.

## ХĔВЕЛЛĔ КУН

Таçтан таçта çити сап-сарă, симĕс
Тăрать хĕвеллĕ янкăр тăрă кун.
Кам чунĕ-ăсĕнчен çапла пĕр тикĕс
Ĕнерӳпе килет илемĕ ун!

Хĕвеллĕ янкăр тăрă кун чалкарĕ,
Тытать тӳпе тулли сенкер-сенкер...
Кам ăсĕ нĕрсĕрле хăйса чакарĕ
Çак хӳхĕме кӳрсе хура сенкер!

Çĕршывлă, çуртлă, çынлă, ĕçлĕ пурнăç
Сап-сар хĕвеллĕ кун ытамĕнче.
Кам чĕринче çапах та йĕтĕм курнăç?
Камран инкек кĕтме тăвать тĕнче?!

## ÇАВРĂНАТЬ ÇĔР

Çĕр çинчи йывăççем:
        баобаб,
        шурă хурăн...
Пурăнать Шĕнерпуç, вата Рим çĕр çинче.
Шĕл кăвар пек хирсем
        е выртать хĕл шап-шурă, –
        çаврăнать Çĕр
Тĕнченĕн Хĕвел питтинче.

Çĕр çинче ачасем:
        манăн ывăл,
        негр хĕрĕ...
Миссисипи юхать, пур Çавал çĕр çинче.
Ĕмĕрсен юррисем
        е пĕлмен çĕнĕ тĕрĕ, –
        çаврăнать Çĕр
Çынсенĕн хавал пилĕнче.

Çĕр çинче юмахсем:
        шур путек, сăрă кашкăр...
Юмах мар – аçтаха, улăпсем çĕр çинче!
Вăй тапан тарлă хул
        е хăр шăмă пĕр ашсăр, –
Çаврăнать Çĕр
Кунсенĕн хаяр çилĕнче...



## Илья МИХАЙЛОВ

Илья Михайлович Михайлов 1920 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Çĕньял ялĕнче çуралнă. Ял шкулне, Çĕрпӳ педагогики училищине, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренсе пĕтернĕ. Хĕрлĕ Çарта пулнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пĕрремĕш кунтанах хастар çапăçнă. Вăрçă хыççăн 30 çул шкул директорĕнче ĕçленĕ.

Илья Михайлович республикăра сумлă таврапĕлӳçĕ пулнипе паллă. Вăл Мускаври Рекордсменсен клубĕн лауреачĕ, Чăваш Республикин хисеплĕ таврапĕлӳçи. Вăлах Чăваш писателĕсен союзĕн членĕ, халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ. Вăрçăпа ĕç ветеранĕ, «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Таврапĕлӳçĕ ĕçне çамрăклах пуçланă. 1998 çултанпа алпа çырнă 120 журнал кăларса аллă ытла выставка йĕркеленĕ.

Пурĕ 800 яхăн сăвă çырнă, вĕсене вăл 9 сăвă пуххинче пичетленĕ. Сăвăç Çĕрпӳ район хаçачĕ

çумĕнче «Сăвăсем», «Старак çыннисем» ятлă кĕнекесем кăларнă. Вĕсенче вăрçăра тата ĕçре чапа тухнă çынсен кун-çулне сăнланă.

Хăй 83 çул тултарнă тĕле Илья Михайлович ентешсене тепĕр кĕнеке парнеленĕ. Илья Михайлов çĕнĕ кĕнекене краеведени темипе çырнă районти ĕçченсене халалланă сăвăсене кĕртнĕ. 450 яхăн паллă çын çинчен çырнă пирки ку кĕнекене хăйне май рифмăланă справочник теме пулать. Кун евĕр жанр литературăра хальччен пулман.

И.М. Михайлов пирĕнтен 2010 çулта яланлăхах уйрăлса кайиччен Çĕрпӳ районĕн таврапĕлӳçĕсен пĕрлешĕвĕн ертӳçинче вăй хунă.

## ХУРАМАЛ ХУНАВĔСЕМ

Вăрçăн хурлă ăраскалĕ
Мĕн пире пилленине
Ас илсен такам та калĕ
Кăтартса геройсене.
Палăк евĕр паллă юлнă
Хурамал хунавĕсем.
Иван Викторов, ав, пулнă
Тĕш герой, чăн-чăн этем.
Фашист вĕçĕм хĕн кӳрсессĕн,
Патриот çавах вилмен.
Ун калав-юрри хĕвеллĕн
Тухмасть халăх асĕнчен.
Çуннă чух тĕнче пушарĕ
Генерал пулса пĕри.
Ун чух мĕн туса Липатов –
Кăтартать герой кăкри.

Салют кунĕ çиттĕр тенĕ
Ял ĕçченĕсем тылра.
Кузьмина ырми тĕрмешнĕ
Ĕмрипех пĕр фермăра.
Паянхи артист Ефремов
Чĕмĕ-хĕмĕ çакăнтан.
Тĕп радио режиссерĕ
Егоров та çак ялтан.
Чаплă, сумлă Хурамалĕ,
Чыслă халĕ уйрăмах.
Кам ăна паян мухтамĕ –
Паттăр пулнăшăн, паллах.

## АНТРАК ЯЛĔ

Антрак ялĕ тĕвĕленнĕ
Шамшар шывĕ хĕррипе.
Ик енчен вырман ешернĕ –
Çавал юхнă çумĕпе.
Ялĕ – пĕчĕк купаланчăк,
Çирĕм кил те ларайман.
Çулĕпе манран та çамрăк –
Çитмĕл пиллĕк çеç аран.
Çĕн çĕре каятпăр тенĕн
Мăн Старакран уйрăлса
Ефремовпала Сергеев
Ăна янă пуçарса.
Илемпе çиçен тавралăх
Илĕртейнĕ çынсене.
Çынна çитлĕн пурăнмалăх
Ирĕк çитнĕ вĕсене.
Мăйăр пĕчĕккĕ пулсан та

Тĕшши тутлă тенĕ пек,
Ятлинчен ял пулнă янтă,
Кашнин ăсĕ – чăн илпек.
Ак Ехрем Ольошĕ пулнă
Чăвашран врач ку ялтан.
Алексей Сергеев тунă
Районта сад чи малтан.
Ун хĕрне район суйланă
Аслă пуçлăхăн çумне.
Юляна ăс Турă панă
Шеп туртмашкăн шкул лавне.
Леонид Сергеев пĕлнĕ
Ашшĕ пек уй-сад ĕçне.
Çирĕм çул таран ĕçленĕ
Вăл министр çумĕнче.
Вăрçă хирĕнче тĕл пенĕ
Тăшмана комбат туппи
Тăват орден вăл илейнĕ,
Агроном та чи палли.
Зининпа пĕрле Степанов
Килчĕ орденпа фронтран.
Сакăр çын çĕр-шывшăн панă
Пурнăçне пĕр çак ялтан.
Ял суранĕ ярт сурсан та,
Ӳт илейĕ çав-çавах.
Кашни тунă пурнăç садăн
Улми тутлă уйрăмах.
Неонила, ав, вăрманçă
Вăл ларттарнă йывăççем
Шав ӳсеççĕ, шав щавлаççĕ
Сиплĕ сывлăш кӳнĕçем.
Ялтăрарĕ ял поэчĕ,
Тиняков вăл – Ипполит.
Ун сăввин кашни куплечĕ

Пурнăçа хистенĕ пит.
Çук çав ялăн каç пулттийĕ,
Хĕвел вĕçĕм тӳпере.
Çăлтăрла çынсен ĕççийĕ
Тĕлĕнтерĕ тек пире.

## ÇЕÇПĔЛ

Пиртен уйрăлса вăл кайнийĕ
Çитет ак пĕр ĕмĕр те час.
Вăл пулнă хĕвел юрăçийĕ,
Çĕн куншăн çунан хăюçах.
Тăван чăваша сума сунă.
Вĕрентнĕ телей йĕрлеме.
Вут-çулăм пек ялкăшнă, çуннă
Ыр пурнăç кӳме этеме.
Пил панă сана Канаш енĕ,
Ялан çирĕп тытнă хăвна,
Крымпа Украина сипленĕ,
Куç уçнă курни Ленина.
Вăл вилнĕ тесе кам калайĕ,
Ĕненмĕç халь çук тенине.
Синкерлĕ кунсен сăвăçийĕ
Паян та кашнин чĕринче.

## ВАТТИ ХУШНĂ ÇАВĂН ПЕК

Арлă-арăмлă çынсен
Çамки çине çырмалла:
Çемье ӳсĕнтĕр çуллен
Çĕнĕ çамрăк чунпала.

Арлă-арăмлă пулни
Пурнăçа кӳрет тирпей.
Пĕр-пĕриншĕн тек çунни
Çемьене пиллет телей.

Пиллесен çеç пĕр-пĕрне
Савăш самантне пĕрле,
Купала туспа пĕрле
Çĕнĕ пурнăç пуррине.

Кăна эпĕ каламан,
Ватти хушнă çавăн пек.
Ĕçре çеç ан пул айван,
Пурнăн тур хĕвĕнчи пек.

## ĔМĔТ

Пуласчĕ ман сăвă – вут кайăк,
Кăвар сăмахпа çутатса
Хĕн-пурнăç тĕпне анса кайăп,
Çунтарăп мĕнпур хĕн-хура.

Туррийĕ пурах тăк, эп – кайăк,
Чунсен тĕнчине те çитем.
Çар пуç сассипе-çке калайăп:
– Ну, Турă, хĕнре ма этем?

Çитет икĕ тамăк тытмашкăн!
Юрать, хăв патри юлтăрах.
Çынна çутă кун – савăнмалăх,
Ăна ан хуплатăр хурах.

Ман ĕмĕт пулсан вут кайăк
Ирем çĕр çинчи юрлăха.
Вара вилĕме çĕнме кайăп,
Пĕр тăвăп ĕçпе юмаха.

## ПАТТĂР САЛТАК

Ашшĕ-амăш ятне ӳкермерĕ Олег,
Çамрăклах кӳлĕнет сиплĕ спорт ытамне.
Ачаран пур ĕçре вăл пулмарĕ имшек,
Ăс пуçтарчĕ шкулта, хĕрхенмесĕр вăйне.

Астăватăп: çак Олег вунă çул каярах
Хăй вĕреннĕ шкулта пулчĕ чыслă хăна.
Афган вăрçинчен çитнĕ пулнă шăпах,
Амансан сывалма киле янă ăна.

Çапăçу хирĕнче çӳлтисем хушнине
Пурнăçа кĕртнĕ чух хăй çинчен шутламан.
Командир приказне пурнăçланă чухне
Сусăрлатнă ăна хĕрхенӳсĕр душман.

Çав-çавах та танкист пĕр утăм та чакман,
Тавçăрулăх, хăюлăх унта кăтартса.
Шикленмесĕр сержант илсе тухнă вутран
Хăй тусне вилĕмрен паттăрла хăтарса.

Ахаль мар сан çинче чыслă орден çиçет.
Ах, çавах манăçмасть пĕр осколок ӳтре.
Сан яту хăв шкулпа хăв ялна чыс кӳрет.
Эс хисеплĕ ĕçтеш кулленхи ĕççире.

## МУХТАНЧĂК

Ĕç урокĕнче шкулта
Ачасем тытаç карта.
Акă пĕр иртен-çӳрен
Кунта кĕчĕ нехекрен.
Ĕç хĕрсе пынă тĕле
Вăл калать учителе:
Пар-ха пирус, тивретер,
Çаврăнать ăш-чик çав тер.
– Çук, нихçан та эп туртман,
Тăма вăхăт та çук ман.
Калаçмарĕ кунпала,
Лартма тытăнчĕ юпа.
Ĕçкĕç пичĕ пурпĕрех
Хĕрелмерĕ те вуçех.
Çавах ĕçленçи пулса
Ятне çапрĕ пĕр пăта.
Вăлах çынсемпе кайран
Иртсе пырать çакăнтан.
Сĕлтсе чĕтрен аллине
Эп, тет, турăм алăкне.

## ИКĔ ТУС

Шеп çав туслăхăн ытамĕ
Çынна Тур хĕвĕнчи пек.
Чуна чĕм парсан катрамăн
Хĕвелрен çитен илпек.
Илĕм-тилĕм пĕр ир мар-и
Çĕрпе уйăх хушшинче

Юрату манра чунларĕ
Шурă çĕмĕрт çутинче.
Пулмаллийĕ пулчĕ мар-и,
Икĕ кил халь пĕр йăва.
Эпĕ тунă сукмак мар-и
Пĕр туса ик хунава.
Мĕн çухалчĕ, кам çуралчĕ
Шăп çĕрле те кăнтăрла.
Пиршĕн çут хĕвел çуталчĕ,
Çемьем ӳсрĕ кăмпалла.
Ырри çӳç пек йышлă мар-и
Пĕлĕтпе çĕр хушшинче.
Тус мана ӳкме памарĕ
Кĕтмен мур ытамĕнче.
Шав вăй илчĕ, хăпартланчĕ
Туслăх ик çын чĕринче.
Савăк пурнăç аталанчĕ
Икĕ тус кун-çулĕнче.

## ЧУН ХИСТЕТ

Ыpă чун ырăпа киленет,
Пур чуна çут телей вăл сĕнет.
Çын вилсен манăн чун чан çапать,
Çĕнĕ çын çуралсан савăнать.
Анчах та тĕнчере тĕрлĕ чун:
Пĕр-пĕрне ма пиллеç хура кун?

# ИГНАТИЙ ГОЛУБКИНА ХАЛАЛЛАСА

Ав поэзи уйне савнăç витрĕ:
Голубкин – пирĕн паллă поэт –
Сакăр вун пиллĕке чупса çитрĕ,
Мире кӳрсе вĕçĕм пехет.
Мур фашистăн пули сана сăхрĕ
Мăн вăрçăн синкер уйĕнче.
Çич юта çапса юрă сан юхрĕ
Хытартăн хăвна: ан йĕнче.
Гитлер чĕртнĕ мур вăрçă кăварĕ
Эсреллĕн хĕнерĕ чунна.
Герой пек тыткăнран çавах тартăн –
Татах çунтарса тăшмана.
Ах, анчах çӳлти власть ăнланмарĕ
Пустуй йывăр айăп хурса.
Çут куна куççуллерĕ тип шарĕ
Пулсан та чунпа хăв таса.
Ангел пек шеп яту тӳрре тухрĕ,
Çакаç орденсем кăкăрна.
Юрру-çке тĕнче тăрăх юхрĕ
Хĕвеллĕн çĕклеç шав чуна.
Улăп чунĕ санра вăй вылятĕ,
Вăй хушрăн анне чĕлхине.
Вăрçă ĕç паттăрне чыс хушатĕ
Мухтать вĕтĕ йыш ыр ĕçне.
Ыр сунать сăвăça халь тавралăх,
Тăван Такана кăна мар.
Çапла халăх ялан савăнмалăх
Сывлăх çиттĕр кӳме пархатар.



## Геронтий ХУРАМАЛ

Геронтий Лукиянович Никифоров 1953 çулхи авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Хурамал Туçа ялĕнче çуралнă. Тăван ял, Çирĕккасси Туçа шкулĕсенче, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультечĕн чăваш уйрăмĕнче вĕреннĕ. 1973–1975 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă.

Геронтий Никифоров Герман Степанович Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци интернат лицейĕнче учительте вăтăр çул ĕçленĕ, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ. Вĕрентекен ĕçне чунтан юратни, лицейра вĕренекенсене юлташ вырăнне хурса хисеплени ăна педагогика ĕçĕн çӳллĕ пусăмне çĕкленĕ. Геронтий Лукияновича 2004 çулта Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ ятне парса чысланă. «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 2006 çулта иртнĕ пултаруллă учительсен конкурсĕнче вăл Раççей Президенчĕн грантне тивĕçнĕ, çĕнтерӳçĕ пулнă. 2012 çулта вĕрентӳ тата воспитани ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн «Чă-

ваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. 2020 çулта «Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул» асăну медалĕпе чысланă тата Раççей Федерацийĕн журналистсен Союзне илнĕ.

Геронтий Хурамал студент чухнех сăвăсем çырма пуçланă. Вĕсем Чăваш Республикин ача-пăча тата çамрăксен хаçат-журналĕнче пичетленнĕ. Сăввисем хĕрӳ чĕрен туйăмлăхĕпе, çепĕçлĕхĕпе тыткăнлаççĕ. Хайлавсенче хускатнă таса туйăм вулакана чун ăшшине упрама чĕнет, юрату чĕрĕлĕх вăйĕ парасса шанать. Çыравçăн сăввисем вулакана тăван тавралăх илемĕпе савăнтараççĕ, мал ĕмĕтлĕ пулма çунатлантараççĕ. Лирика геройĕ вĕрентекенĕн чыслă ĕçне курса савăнать, пурнăç телейлĕрех те илемлĕрех пуласса шанса ĕмĕтленет.

Автор меслетлĕхĕнче хăйĕн ентешĕсен – Çĕрпӳ тăрăхĕнчен тухнă Аркадий Ĕçхĕл, Иван Малкай, Иван Викторов, Александр Ильин, Николай Ишентей, Георгий Хавал, Микулай Мăскал поэтсен витĕмĕсем сисĕнеççĕ.

## АВАН-И, ТĂВАН ЯЛĂМ, ХУРАМАЛ?

Аван-и, тăван ялăм, Хурамалăм?
Салам яратăп çĕнĕ хуларан.
Таçта та пултăм, эп сана манмарăм,
Тухмарăн эсĕ манăн асăмран.

Чылай хушă тĕнче касса çӳрерĕм,
Пулмарăм ялăмра вун икĕ çул.
Паян çула тухрăм, çуран ак çитрĕм,
Яла илсе кĕчĕ асфальт сарнă çул.

Чуна çывăх тăван ял сăн-сăпачĕ,
Кил-çурт, хуралтă, мунчи таранах.
Тутлă шăршă сарнă чие сачĕ,
Çĕмĕрт çеçке çурнă йĕри-тавраллах.

## ЭС МАНА ЮРАТСАН

Эс мана юратсан,
Ăш сăмах каласан
Ман чĕрем савăнать
Çĕн çунат хушăнать,
Сан вĕри ытамна
Лекнĕ пек туйăнать.

Эс мана юратсан,
Ăш сăмах каласан
Сар хĕвел йăл кулать,
Кайăк юрă юрлать,
Икĕ чун юнашар
Вĕçнĕ пек туйăнать.

Эс мана юратсан,
Ăш сăмах каласан
Çулăмпа пĕр танах
Вут хыпать çавăнтах,
Тĕксĕм кун çуталать,
Кĕлчечек çурăлать.

## КĔРХИ ИЛЕМ

Хĕвел татах саралчĕ пулмалла –
Саратрĕ хурăн хăйĕн çи-пуçне.
Кĕр мăнтăрĕ парнелекен мула
Эпир паян илетпĕр чĕрене.

Лараççĕ сарă ылтăн айĕнче
Уй-хир, пахча, çаран, вăрман, сăрт-ту...
Епле аван: çак сăн никĕсĕнче –
Кирек ăçта пăхсан та – юрату.

## ХĔВЕЛ ПИКЕНЕ

Юратăва шухăшласа кăлартăм,
Шухăшласа кăлартăм халь сана:
Кĕлеткӳне эп скульптор пек шăратрăм,
Вĕрсе чĕм кĕртрĕм ытарми чунна.

Сăну сан – çĕр çырли пекех илемлĕ,
Çил варкăшĕ пек çăмăл сан утту,
Эс маншăн – çӳллĕ тӳпери хĕлхемлĕх,
Эс маншăн – Турă панă юрату!

## САНА ШЫРАТĂП

Эс шывра пулă евĕр ишетĕн
Шурă кăпăк хумсем хушшинче.
Килĕшетĕн мана, килĕшетĕн,
Санпала çутăрах пек тĕнче.

Шăнкăр-шăнкăр сассун шăнкăравӗ
Кунӗн-çӗрӗн тăрать хăлхара,
Юррусен илӗртӳллӗ янравӗ
Ăшă çил пек вӗçет таврара.

Тӗрлӗ çын хушшинче эп шыратăп
Кӗлчечек пек хитре куллуна,
Тупман чух хамран хам пит хăратăп,
Çухататăп пуль тетӗп сана.

Ӗлӗкхи тӗлӗксем ман çухалчӗç,
Эс кăна ман умра, эс кăна,
Чӗрере пурпӗрех çук-çке шанăç, –
Ăнланан-ши, чӗкеçӗм, мана.

Ик чуна тӗл пултартăрччӗ çиçӗм,
Пире çыхтăрччӗ вут хӗлӗхпе,
Ахаль мар, чунăмри пирӗштиçӗм,
Сан енне эп вӗçеп ӗмӗтпе.

## КӖÇТУКСЕМ

Кӗçтуксен шăпи мухтавлă пулӗ, –
Вӗсен ячӗ халăхра ялан.
Иванов Кӗçтукăн чаплă çулӗ
«Нарспирен» уйрăлас çук нихçан.

Кольцова та халăхра манмаççӗ,
Ун та ячӗ – ытарми Кӗçтук.
Вăрçăра пуç хунă сăвăç ячӗ
Антологирен уйрăлас çук.

Виççĕмĕш Кĕçтук та питĕ çывăх
Хурамал Туçамăрти çынна,
Ку вăл пирĕн Константин Ефремов,
Юрăпа вăл тыткăнлать чуна.

Опера – ун сарлака çуначĕ,
Атăл пек каять вăл аякка.
Кĕçтуксем! Хурамалсем сунаççĕ
Чыс, хисеп сире яланлăха.

## УРĂХХИНЕ АН ШЫРА

Миçе хутчен сана аса илмен-ши,
Миçе хутчен тĕлĕкĕмре курман.
Çӳлти сенкерлĕх евĕрлĕ илемшĕн
Çуннипеле ман канăçлăх юлман.

Тавах! Эп çав тасалăхпа тасалтăм,
Шуралтăм çав сенкерлĕх чысĕпе,
Çĕн вĕçевре тĕрекленет çунатăм
Пуян чунун ян-ян йыхравĕпе.

Эп малашне те туптанма ӳркенмĕп,
Шăранăп çулăмра та сив шывра,
Эс çеç, ман умăмри хĕвел пек ĕмĕт,
Урăххине тархасшăн ан шыра.

## ЧУП ТУМАСĂР ИРТЕМ МАР...

Вăштăр çил ачийĕ пулса
Сана çемçен сĕртĕнем-и?
Хама хам самантра манса
Сана улаха чĕнем-и?

Çут хура çуткам куçунтан
Пĕр чĕптĕм хĕлхем вăрлам-и?
Йăпăл пылаклă тутунтан
Чуп тума хăват тупам-и?

Çук, çутă хура куçунтан
Пĕр чĕптĕм хĕлхем вăрлам мар.
Йăпăл пылаклă тутунтан
Чуп тумасăр иртем мар...

## ШĂПЛĂХА МУХТАР

Килсе кĕтĕн ăнсăртран,
Пирĕшти пек туйăнтăн.
Çырла сĕнтĕн кунтăкран,
Ху та çырлан курăнтăн.

Тĕнчен хитре илемне
Санра анчах асăрхарăм.
Хам мĕн курни-туйнине
Хăват тупса калаймарăм.

Пикем, кӳрсемччĕ аллуна
Унта эп хам алла хурам.
Çӳхе писевлĕ тутуна
Сăмахсăр ăшшăн чуп тăвам.

Сисмешкĕн кĕтнĕ туйăма
Сăмах пачах та кирлĕ мар,
Çапла чун хыпарçи пулма
Май тупнă шăплăха мухтар.

## ПИКЕÇĔМ

Анаталла анать урам,
Шыв хумĕ çăлтăр пек çуткам.
Те урамне пуç таймалла,
Те киммипе ярăнмалла.

Кăмăл турамĕ – пĕр турам,
Пикеçĕм, акă ман ытам.
Кĕрсем унта самантлăха,
Самант пулать яланлăха.

Куçу шĕл кăвар –
Çунтарать чуна.
Çĕр каçхи кавар
Тыткăнлать мана.

Йăп-йăрăс пӳ, яштак хăва,
Кĕввӳ сан – ырату.
Илтсемччĕ эп хыван сăвва,
Вăл пултăр юрату.

## САВНĂÇПИ

Ах, яту хитре-çке санăн
Тупса панă-мĕн пĕри.
Тӳррĕнех калас пулсассăн
Килĕшӳллĕ çав тери.

Сан ятна шав каласассăн
Чĕрем çиччĕллĕ тапать.
Çăлтăр куçу пит хавассăн
Çуталса хĕлхем сапать.

Ах, яту хитре-çке санăн
Тупса хунă-мĕн такам,
Ятупа ялан эс савăн,
Ма тесессĕн – эс çуткам.

## ПУÇА ПАЧАХ ТА ЭП УСМАСТĂП

Пĕчченлĕхре пулма кăмăллатăп,
Шăплăхра ларма мана кичем мар.
Шухăша вĕçĕн-вĕçĕн сыпатăп,
Çӳретĕп мал ĕмĕтпе – суя мар.

Чӳречерен урама пăхатăп,
Сăнатăп çут тĕнчен чăн илемне,
Кăтра çӳçлĕ хурăна куçлатăп,
Кăмăллатăп кĕлетки-çурăмне.

Йĕрес килсен чуна хытаратăп,
Палăртмастăп ăшри чăн туйăма.
Йывăрлăхра пуçа пач усмастăп,
Хытаратăп эп çемçе кăмăла.

Пурнăç тупсăмне ялан шыратăп,
Тăвансене манмастăп нихăçан,
Туссемпе çыхăнăва татмастăп,
Сирĕп пĕрле чăрмавсем тĕл пулсан.

## КĔТМЕН ПИКЕ – ЯЛАН ИЛЕМЛĔ

Килсе кĕтĕн кĕтменскер,
Çурхи вăштăр çилĕ пек.
Хитре чипер куçлăскер,
Алтăр çăлтăр çути пек.

Вут-хĕм тухатланипе
Ăс-пуç кайрĕ çаврăнсах.
Чун тыткăнне лекнипе
Эп вăрантăм, чăнласах.

Çемçе уçă кăмăлу
Хытнă чуна çавăрать.
Шăнкăр-шăнкăр йăл куллу
Илĕртӳллĕ янăрать.

Йĕрĕлче пек туту пур,
Чуп тумасăр иртем мар.
Çырла шыв пек сăну пур,
Эх, пуласчĕ юнашар.

Ик куç тулли илем пур,
Чипер сăнлă пикем пур.
Илсем ытам чечек çеçке
Манран парне пултăр-çке.

## САН ПАХЧУНТА ШĂТСА ТУХАМ-И?..

Сан пахчунта шăтса тухам-и,
Ларам-и сана илĕртсе?
Чи çепĕç туйăмсен саламĕ
Ан сивĕнтĕр кăра çил вĕрнипе.

Çук, çын сăмаххи хăратаймĕ
Пулсассăн эсĕ юнашар.
Туслăха тăшман аркатаймĕ,
Çунтараймĕ ăна вут-кăвар.

Ялан пĕр хум çинчех пуласчĕ,
Кимĕпе ишесчĕ ун çинчех.
Чи ăшă сăмахсем каласчĕ,
Туйăма упрасчĕ çирĕпрех.

## АСĂМРИ ТУСĂМА

Шавламасть яштака шурă хурăн
Кил-çуртпа юнашар çырмара.
Авăтать куккук питĕ хурлăн
Тин шăпланнă каçхи пахчара.

Ыйха татса халь тĕмсĕлетĕп
Чунра тапраннă ачаш туйăма.
Шанчăка упранине пĕлтеретĕп
Асăмри пирĕшти тусăма.

Çуркунне ăнсăртран тупнă ырлăх
Манăçмасть, юлатех асăмрах.
Уйрăлма савнинчен ытла хурлă,
Таврăнма каялла – асапрах.

## ХУРАМАЛ ТАКМАКĔСЕМ

Тепĕр-тепĕр-тепĕр-тепĕр,
Тепĕр-тепĕр-тепĕр так.
Калаçса ларар-и тетпĕр,
Çумăр айĕнче пăртак.

Ăшă çумăр тĕтре витĕр
Шăппăн калаçса çăвать.
Тен вăл хăй те çĕнĕ кĕвĕ
Çак улах каçра хывать.

Ĕнерсемччĕ, ĕнерсемччĕ
Ăраскаллă юрруна,
Кĕçĕрхи телей сехечĕ
Кĕтĕр ĕмĕрхи чуна.

Пулаять-и, пулаймасть-и
Ĕмĕр туслă çӳресси?
Уйăх пек тухса халь ларчĕ
Савăш пылĕн чĕресси.



## Санек РАЙККИ

Раиса Николаевна Николаева (Санек Райкки) 1951 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Туçи ялĕнче çуралнă.

1966 çулта Туçи сакăр çул вĕренмелли шкулĕнчен, 1968 çулта Çĕрпӳ 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. 1971–1973 çулсенче Шупашкар кооператив техникумĕнче вĕреннĕ. Çĕнĕ Шупашкар «Химпром» пĕрлешĕвĕнче чылай ĕçленĕ. Раиса Николаева 1977 çултанпа Шупашкар районĕн Тутаркасси поселокĕнче пурăнать.

Раиса Николаевна сăвăсем çырать. Унăн хайлавĕсем Çĕрпӳ тата Шупашкар районĕсен хаçачĕсенче тăтăшах пичетленеççĕ. Любовь Николаева (аппăшĕ, республикăри хăй тĕллĕн вĕреннĕ композиторсен фестивалĕн дипломанчĕ) йăмăкĕн чылай сăввине юрра хывнă.

Р. Николаева шашка-шахматла та выляма юрататьть. Тĕрлĕ турнирта малти вырăнсене йышăннă, хаклă парнесем илме тивĕçнĕ. Хальхи вăхăтра Çĕнĕ Шупашкар «Инфра» уçă акционерсен пĕрлешĕвĕнче вăй хурать.

## ЭЙ, ТУРĂÇĂМ!

Эй, Турăçăм! Мухтав Сана,
Мухтав санăн çĕрна-шывна.
Мухтаса тăратăп эпĕ Сана,
Мухтатăп Санăн хăватлă ятна.

Эй, Турăçăм! Эпĕ мĕскĕн çын,
Эс куратăн пурне те çӳлтен.
Ан илсемччĕ куçна эс манран,
Ырлăх-сывлăх ыйтатăп Санран.

Эй, Турăçăм! Мухтавлă Хуçа,
Кăмăлу Сан çитет нумай хăлаçа.
Ачасенчен куçна ан тартсам,
Вăрăм, ыр кун-çул вĕсене Эс парсам.

Эй, Турăçăм! Эсĕ пурне те пултаран,
Курнаканнине те, курăнманнине те,
Çĕр çинче çуралаççĕ Мăнуксем,
Ырă, вăрăм кун-çул вĕсене пиллесем.

Эй, Турăçăм! Мухтав Сана,
Мухтав Санăн çĕрна-шывна,
Мухтаса тăратăп эпĕ Сана,
Мухтатăп Санăн хăватлă ятна.

## ТĂВАН ЯЛĂМ, ТУÇИ ЯЛĔ

Юрататăп сана, савнă ялăм,
Ту çинче сарăлса ларнăран,
Мăн Çавал юнашар юхнăран,
Уй-хирсем, вăрмансем пулнăран.

Савнă ялăм, Туçи ялĕ,
Кунран-кун эс ешерен.
Тăван ялăм, Туçи ялĕ,
Иксĕлми вăй-хал кӳрен.

Тав тăватăп сана, тăван ялăм,
Çак ялта çуралса ӳснĕрен,
Шкулалла вĕренме чупнăран,
Пурнăç çулĕ çине тухнăран.

Мухтанатăп санпа, савнă ялăм,
Çулсерен çĕнелсе пынăран,
Иксĕлми вăй-хăват пулнăран,
Кунран-кун малаллах утнăран.

## ÇУТĂ ĔМĔТ

Ирхине шăпчăк юрă юрлать,
Вăл мана ыйхăран вăратать.
Шăпчăк сасси уççăн янăрать –
Ун кĕмĕл сасси ман хăлхара.

Пӳрт умĕнче шур хурăн ӳсет,
Ун турачĕ лăштăр силленет.
Хурăн тăррине, сив çил, ан хуç,
Пăхтăр илемне ман мăшăр куç.

Вăрманта чăпар куккук автать,
Ун сасси инçе-инçе каять.
Вăштăр çилĕ, вĕр, сасă, инçе кай!
Куккук, эс шутла çулсем нумай.

Шăнкăр-шăнкăр çăл шывĕ юхать,
Шăнкăр-шăнкăр валака тулать.
Уйăх çутатать, çăлтăрсем выляççĕ, –
Çутă ĕмĕт чунра çуратаççĕ.

## ТУТАРКАССИ ВАЛЬСĔ

Тутаркасси – Чăваш Енĕн пĕр пайĕ,
Ма тесен мухтанмашкăн пур майĕ.
Чăваш каччисем, чăваш пикисем
Пур çĕрте те вĕсем малтисем.

Тутаркасси – нумай нациллĕ халăх,
Пуринче те вĕрет пархатарлăх,
Е çармăс, е вырăс, е чăваш –
Вĕсен питĕнче ялан кулă йăваш.

Тутаркасси – ĕçлес кăмăл пурах,
Ĕççи те вĕресе тăрать яланах.
Кам-кам тăрăшса ĕçлет уй-хирте,
Кам-камăн ĕç кунĕ иртет тĕпелте.

Тутаркасси – эсĕ пирĕн ачалăх,
Тутаркасси – эсĕ пирĕн малашлăх,
Ешерсе чечеклен çулсерен,
Такăр çулпа утăмла кунсерен.

## ШЕМШЕР, ШЕМШЕР – ЧИРКӲЛЛĔ ЯЛ

Шемшер, Шемшер, эс мĕнешкел
Лаштра йăмраллă савнă ял.
Таса хĕр пек шурă хурăнсем,
Çивĕт евĕр усăнаç турачĕсем.

Шемшер, Шемшер – чиркӳллĕ ял.
Ялваррипе иртет мăн çул,
Шăнкăртатса юхать асамлă çăл,
Пире парать вăл ăшă кăмăл.

Шемшер, Шемшер, ешерсе чечеклен,
Малалла утăмла кунсерен,
Аслă Туррăма эп мухтатăп,
Хамăн юррăмра аслăлатăп.

Шемшер, Шемшер, эс мĕнешкел
Лаштра йăмраллă савнă ял!
Кунта таса хĕр пек шурă хурăнсен
Çивĕчĕпе вылять ăш çил.

Шемшер, Шемшер, чиркӳллĕ ял.
Ял варрипе иртет мăн çул.
Шăнкăртатса юхать тăр шыв,
Пире парать вăй-хал, кун-çул.

Шемшер, Шемшер, юратнă ял.
Асран кайми сукмакусем...
Сан ятупа эп парăп ал
Мĕн пур чăваш ялĕсене.

## АТТЕ-АННЕ СĂНАРĔ

Утатпăр утмăла, çитетпĕр çитмĕле,
Пурнăç урапи кусать малалла.
Тунсăха путсан, шухăша кайсан,
Атте-анне килет аса.

Атте-анне пире çуратнă,
Атте-анне пире юратнă,
Атте-аннерен хакли çук,
Вĕсене нихăçан манас çук.

Атте-анне çут тĕнче парнеленĕ,
Атте-анне лăпкаса ӳстернĕ,
Атте-анне ăс-хакăл панă,
Вĕсем пире телей пилленĕ.

Атте-аннене тав тăватăп,
Атте-аннене пуç таятăп,
Атте-аннен çутă сăнарĕ
Кун-çул уттинче вăй-хал парĕ.

## ÇУЛТАЛĂК ТАПХĂРĔСЕМ

Уçăлма тухсан утнă май
Тĕрлĕ шухăш килет пĕрмай.

Хĕлле!
Шап-шур пĕркенчĕк таврара,
Йывăççем лараççĕ çап-çара,
Сарă çутă уйăх çутатать,
Ура айĕнче юр кăчăртатать.
Кăнтăрла вара хĕвел пăхать,
Çан-çурăма самай ăшăтать.

Çуркунне!
Савăк кăмăл пирĕн чунра,
Сар хĕвел ялкăшать умра,
Шăнкăртатса шыв-шур юхать,
Мăн Çавала çитме васкать.
Улмуççи, чие шур шупăр айĕнче,
Куçа илĕртеççĕ кашни сад пахчинче.
Уçă çил юххийĕ ачашлать пире,
Тăр-тăри юррийĕ чĕнет уй-хире.

Çулла!
Ешĕл кавирпе Çĕр анне витĕнет,
Шăпчăк юрри каçсерен илтĕнет,
Урама тухма вăл пире илĕртет,
Кашни çамрăк чĕри хĕпĕртет.
Аслатиллĕ çумăр, ав, çуса иртет,
Хыççăн сар хĕвелĕ хыттăнах хĕртет.
Асамат кĕперĕ – тӳпери хăна,
Курăнать чиперрĕн çумăр хыççăнах.

Саркайӑк сассиллӗ вӑрман илӗртет,
Ҫырлана пымашкӑн вӑл пире чӗнет.
Кам пулла ҫӳрет кӳлӗ хӗррине,
Кам шывра ишет ҫыран леш енне.

Кӗркунне!
Ытармалла мар сана, кӗркунне,
Сарӑ тумлӑ ылтӑн кӗркунне,
Йывӑҫсен тӗрлӗ тӗслӗ ҫулҫипе
Витӗнет Ҫӗршыв анне.
Хурҫӑ карап уйра-хирте
Сарӑ тырра вырать, ҫапать.
Ҫумӑр пӗлӗтсем пухӑнсан,
Вичкӗн ҫилӗ питрен вӗрсен,
Сивӗ ҫумӑр ҫапса ҫусан,
Кӗрхи тӗттӗм каҫсенче
Анне пӗҫернӗ кукӑле
Тутлӑ-ҫке, пӗрле ҫиме!

Хӗлле! Ҫуркунне! Ҫулла! Кӗркунне!
Пурте илемлӗ хӑй вӑхӑтӗнче.

## ХӖРАРӐМ УТМӐЛТА...

Хӗрарӑм утмӑлта...
Нумай-и ҫак тапхӑр, е сахал-и?
Нумай та мар, сахал та мар.
Куҫ умӗнче иртсе кайнӑ ҫулсем...
Савӑнӑҫлӑ ачалӑх,
Хаваслӑ ҫамрӑк яшлӑх,
Ачасем ӳснӗ вӑхӑт,

Ӗҫлеме те каймалла,
Юнашар арҫын – ăна юрамалла.
Хӗрарăм утмăлта...
Пурнăҫ тути-масине ăнланса илет,
Ҫӗнӗрен пурăнма тытăнать.
Кам пур Турăран хăватли,
Ҫут тӗнчене тытса тăракан?!
Кам пур Турă Амăшӗнчен мухтавли,
Пирӗн Иисус Христоса ҫуратакан?
Кам пур атте-аннерен хакли,
Ҫуратса юратса ӳстернӗ пулсан?!
Кам пур тăванран ҫывăххи,
Пӗр варта выртса ӳснӗ пулсан?!
Кам пур ачасенчен тăванни,
Чӗре айӗнче йăтса ҫӳренӗ пулсан?!
Кам пур мăнуксенчен черченки,
Пире ырă шанчăк паракан?!
Мӗн пур хӗвелтен хӗрӳлли,
Пайăркисене ҫӗре сапаласан?!
Мӗн пур уйăхран ҫутти,
Тӗттӗм каҫсенче янкăр ҫутатсан?!
Мӗн пур Ҫӗр аннерен мăнтăрри,
Ҫут тӗнчене ҫимӗҫ паракан?!
Мӗн пур вăштăр ҫилтен ырри,
Шăрăх кунсенче кассăн-кассăн вӗрсен?!
Мӗн пур ыйхăран тутли,
Ҫывăрма выртсан, куҫа хупсан?!
Мӗн пур пурнăҫран пахи,
Ырă Турă сывлăх парсан?!

## ÇĔРПӲ ХУЛИ

Мăнаçлăн ларатăн эсĕ, Çĕрпӳ,
Çул-йĕр юппинче парса кăтарту.
Чăваш Енĕн пĕр кĕтесĕнче,
Телейлĕ çул сунса çӳренсене.
Эсĕ яланах кĕтсе илетĕн
Тăван пек, хăвăн ентешсене.
Саламлатăн, ал паратăн,
Вăй-хал сунатăн вĕсене.
Мăнастир хĕресĕ çуталса ларать,
Пăхмасăр ун çине иртеймĕн.
Ак, чан сасси ирхи кĕлле чĕнет –
Янăрать хăватлăн, уççăн.
Çак сăвва савса эпĕ çыратăп,
Юратнă хуламăр, савнă Çĕрпӳ ен.
Санпа эпĕ чунтан мухтанатăп
Татах та сана сăвăсем халаллатăп.

## НАЦИ РАДИОВĔ

*Чăваш наци радиовĕ*
*5 çул тултарнă май*

Хĕвел тухса çĕнĕ кун пуçланать,
Наци радиовĕ уççăн янăрать.
Халăха сӳнми телей пиллет,
Пархатарлăх чунра ешерет.

Наци радиовĕ – эсĕ пиллĕкре,
Наци радиовĕ пирĕн чĕрере.
Наци радиовĕ каять инçене,
Наци радиовĕ чĕнет хăй патне.

Наци радиовĕ – чĕлхе тĕрекĕ,
Наци радиовĕ – халăх илпекĕ,
Ырӑ кӑларăм эфира тухать,
Тăван халăх итлесе савăнать.

Савнă радио – пирĕн чун уççи,
Пире ăс паракан хыпар çӳпçи:
«Ирхи кăмăл», «Çивĕч ыйтусем»,
«Ялтан яла», «Ăшă сăмахсем».

## ÇĔНТЕРӲ КУНĔ

*Çĕнтерӳ кунĕ*
*70 çул тултарнă май*

Хăрушă хыпар – вăрçă пуçланнă,
Çĕршыв çине тăшман тапăннă.
Пур çĕрте те çуйхашу, кăшкăрашу.
Куççуль витĕр уйрăлу, сывпуллашу.
Акă тăван ялăн укăлчинче,
Тусанлă утма çулăн хĕрринче
Пуçтарăннă вăй питти арçынсем,
Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем.
Амăшĕ хăй ывăлне ăсатать,
Тутăр вĕçĕпе куççульне шăлать,
Хĕрарăм мăшăрпа сывпуллашать,
Аллинчи кăкăр ачине тытать.
Каччăсем – ĕнерхи шкул ачисем
Хĕрсемпе сывпуллашаççĕ вĕсем.
Вĕçеççĕ виç кĕтеслĕ çырусем
Тăхлан çумăр та вут-çулăм витĕр,

Ĕненсе шанса çырнă сăмахсем,
«Пире кĕтĕр, эпир çĕнтеретпĕр!»
Тăшман танкĕ хăрушла çывхарать,
Çамрăк салтак хирĕç шуса пырать,
Куçĕ умĕнче савнă хĕр сăнарĕ,
Гранатă тăшман танкне аркатрĕ
Кăшт йĕри-тавра лăплансассăн,
Салтаксем çĕр пӳртре пуçтарăнсан,
Хут купăс сасси хуллен макăрать,
Пур салтак шухăшпа киле васкать.
Хăйĕн ывăлне амăшĕ пиллет.
Мăшăрлă çынна арăмĕ кĕтет,
Ачисем тунсăхласа кĕтеççĕ,
Ашшĕ çинчен калама ыйтаççĕ.
Хĕр упраççем çыру çӳретеççĕ,
Çĕнтерӳ!
Фашистла тăшмансем парăннă!
Рейхстаг çине хĕрлĕ ялав çакнă!
Çĕршыв хаваслă куççульпе тулнă.
Кашни этемшĕн кĕтнĕ кун çитнĕ.
Хăрушă, йывăр вăрçă кунĕсем.
Вăрçăпа сусăрланнă арçынсем,
Çĕршывшăн патăррăн пуç хунисем
Манăçа тухмаççĕ нихçан вĕсем!



## Владимир ЯНТУШ

Владимир Витальевич Павлов Çĕрпӳ районĕн Янтуш ялĕнче 1970 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. 1977–1985 çулсенче шкулта вĕреннĕ. 1985–1988 çулсенче Шупашкар энергетика техникумĕнче вĕреннĕ. 1988–1990 çулсенче Венгри çĕршывĕнче Папа ятлă хулара салтакра пулнă. 1990–1992 çулсенче Альметьевскри физкультура техникумне вĕренсе пĕтернĕ. 1992–1997 çулсенче Çĕрпӳ районне кĕрекен Опытнăй поселокĕнче вăтам пĕлӳ паракан шкулта физкультура вĕрентекенĕнче ĕçленĕ. Халĕ – хăй тĕллĕн ĕçлекен предприниматель.

* * *

Пĕр сăлтав та çук  
Сăвă çырма...  
Пĕр туйăм пĕрчи те.  
Йывăр шăплăха

Чăтаймасăр
Сирпĕнчĕ Сывлăш.
Пĕр пăлхавлă сăлтав та
Çук санран уйрăлмашкăн
Пĕр юрăхлă юрă та
Çук санпа юрламашкăн.

Аранах, именсе-хăраса
Пур япала та хăй вырăнне вырнаçрĕç.
Çумăр тумламĕ каллех вĕçевре
Эпĕ кĕтетĕп вăл ман çине ӳкессе.

Тепĕр хутчен сана чуп тăвас та
Санăн ятна пăшăлтатса калас,
Тепĕр хутчен вĕçсе хăпарас та
Виçĕ хутчен ӳксе саланас...

Санăн ятупа çывăрса каятăп,
Санăн ятупа куçа уçап,
Эсĕ онлайн ларнине курап та
Санăн чĕрӳ тапнине туяп...

Тепĕр хутчен
Ĕçсе лартас та
Çурçĕр иртсен сан патна шăнкăравлас
Тепĕр хутчен
Чуна уçас та
Çунса каяймасăр шăранса выртас...
Манăн тӳпере çăлтăрсем те çуккă,
Анра Уйăх çеç ыйăхпа анаслать.
Манăн пӳлĕмри чӳрече куçĕ
Вăхăт шакканă сасăпа ванать.

Аранах, именсе-хăраса
Пур япала та хăй вырăнне вырнаçрĕç.
Çумăр тумламĕ каллех вĕçевре.
Эпĕ кĕтетĕп вăл ман çине ӳкессе...

* * *

Хĕрĕм, эп пĕлместĕп
Мĕн пулассине:
Пĕлместĕп, мĕн кăтартĕ пире
Çут тĕнче.
Туятăп, эсĕ кирлĕ мана
Савăнма, юратма,
Саншăн пурăнма.
Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.
Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.
Кĕрхи чечексем
Шăнса хăрса ларчĕç.
Эсĕ ӳсетĕн кăна-ха паян.
Вăхăт пурне те кăтартĕ
Мĕн тумаллине,
Анчах та ку кĕрхи каç
Ним тума та пĕлмес.

Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.
Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.

Арçынсем ытларах савăнаç
Арçын ача çуралсан,
Эпĕ телейлĕ, эсĕ кулсан
Эсĕ пур, санра манăн шанчăк
Эп юнашар, эп ялан санпа юнашар

Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.
Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.

Тем пулсан та ан çухат
Эс шанчăкна,
Эсĕ çеç кулма пĕлетĕн
Хĕвелтен чаплăрах.
Йывăр пурнăçпа вилĕме ăнланма.
Ăнланса çитсен те йывăр уйрăлма.

Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.
Ман хĕрача пур,
Пĕчĕк хĕрача.

* * *

Эсĕ пур тата эпĕ
Тата ыйăхсăр кĕрхи каç.
Пăшăлтатса антăхса каякан сассупа
Каласа пар сана еплерех ыталать
Тĕттĕм, тĕттĕм, тĕттĕм каç.
Тунсăх тени пĕр хутаç,
Ыратăвĕ пĕр купа

Юратăвĕ çуккă та.
Тĕттĕм, тĕттĕм, тĕттĕм каç,
Шăнкăрав яр та манпа калаç.
Йăлт хуравлăп ыйт кăна
Чуна усăп – чакалан.

Анчах та эс ытла аякра
Çитмĕл те çичĕ çырма урлă каççан та
Ĕмĕрхи тунсăха Турăран уйăрас çук,
Сан пата çитес çук.
Тĕттĕм, тĕттĕм, тĕттĕм каç
Тунсăх тени пĕр хутаç.
Ыратăвĕ – пĕр купа,
Юратăвĕ – çуккă та.
Тĕттĕм, тĕттĕм, тĕттĕм каç
Шăнкăрав яр та манпа калаç.
Йăлт хуравлăп ыйт кăна
Чуна усăп – чакалан.

* * *

Эпир нихçан та пулмăпăр пĕрле
– Эс маншăн чи хакли,
чи çывăххи, чи аякри.
Çепĕç чечексенчен
– чи юлашки çак çĕр çинче.
Санăн сассу тĕрлет чăваш çĕрне ирпе,
Куллу хумхантарать хавхалану кӳрсе.
Эпир...
– Çук сăмахпа чи çывăх тăвансем...
Эпир...
– Хăвах пĕлетĕн вĕçĕ мĕнлине...

* * *

Ан кĕтĕр пире текех, ан кĕтĕр
Килеймĕпĕр эпĕр тăван килсене.
Нумайăн эпир пинĕ-пинĕпех
Çирĕм çултах пире çĕр айне.

Салтак хĕрĕсем куççуль юхтарма кирлĕ мар
Çамрăк каччăсем юратĕç сире хытăрах.
Пырăпăр эпир тĕлĕкре хăнана
Ан айăплăр пире килейменшĕн килсене.

Вилĕм вăл хăрушă та анчах мĕнех тăвайăн
Хушрĕç пире вилме çирĕм çултах.
Ĕметленнĕ эпир пурăнма, юратма та анчах
Тутасем пăшăлтатрĕç савниçĕм-савниçĕм, каçар.

Ан кĕтĕр пире текех, ан кĕтĕр
Савнă хĕрсемпе юратнă аннесем.
Икĕ çуллăха тесе илсе кайрĕç
Тимĕр тупăксемпе ăсатрĕç килсене.

Ан кĕтĕр пире текех, ан кĕтĕр
Килеймĕпĕр эпĕр тăван килсене.
Нумайăн эпир пинĕ-пинĕпех
Çирĕм çултах пире çĕр айне.

Салтак хĕрĕсем куççуль юхтарма кирлĕ мар
Çамрăк каччăсем юратĕç сире хытăрах.
Пырăпăр эпир тĕлĕкре хăнана
Ан айăплăр пире килейменшĕн килсене.

Вилĕм вăл хăрушă та анчах мĕнех тăвайăн
Хушрĕç пире вилме çирĕм çултах.
Ĕметленнĕ эпир пурăнма, юратма та анчах
Тутасем пăшăлтатрĕç савниçĕм-савниçĕм, каçар.

Ан кĕтĕр пире текех, ан кĕтĕр
Савнă хĕрсемпе юратнă аннесем.
Икĕ çуллăха тесе илсе кайрĕç
Тимĕр тупăксемпе ăсатрĕç килсене.

* * *

Пурнăçран эп
Вилĕм çеç кĕтетĕп
Ытти пурте
вăхăтлăх кăна.
Юрату – юмах,
Уйрăлу – çăхан,
Вилĕмĕн кăна
Çивĕч шăл ялан...

* * *

Выртап утиял ыталатăп
Утиял вырăнне сан ăшшуна туятăп.
Выртап,
Çывăрса кайма хăтланатăп.

Эсĕ çак вăхăтра
Мĕн тăватăн-ши, – тесе пуç вататăп.
Выртап, телевизор пăхатăп
Вăрăм туна манăн юнпа хăналанать.

* * *

Кил ман пата,
Айхи сăввисене
антăхса кайса вулама.
Кил ман пата,
Чӳрече каррине
сирсе вăрттăн
Тĕнчене юратма.
Кил ман пата,
Манăн чунри
тутăхнă шăрпăка
Туртса кăларма.
Кил ман – санра,
Чун – çырмара,
Вăй илет шăнкăр-шăнкăр
Юхан шывран...

* * *

Пурăн,
– Хурăн айĕнче
пурин валли те пур
Вырăн.
Тупрăм,

– Юман хӳттинче
        атте халалне ăнсăртран
Эпĕ туйрăм.
Çырма тăршшĕнчи тĕмеске
Тĕмеске мар
– Улăп тăпри.
Эпĕ – Янтуш ялĕнчен
– Эсĕ вара хăш ял хĕрачи.

* * *

Каçхи хулари хунар çутипе çуралнă мĕлке,
Кам – эс. Ăçта сан хуçу. Ăçта вăл çӳрет.
Эс мĕншĕн каллех унпа пĕрле мар.
Каçхи хунар çутинче ун-кун утакан мĕлке...
Каçхи чĕтрекен хунар çутипе аманнă мĕлке
Камран вăтанса пытанатăн йывăçсем хушшинче.
Ĕревĕç хуçу... юрату – ăмăрту, çырткаланнă туту...
Каçхи хунар çутипе аран сывалнă мĕлке...

* * *

Ман пăрланнă чунра пĕр ăшă кĕтес
Сан валли ахаль мар упранса юлнă.
Кĕрсе вырнаçрăн-и эс?
Ăçта сан, – манăн килес.
– Çук, нимĕн те ан хуравла
Ахаль те савăнăç куççульне
Шăлса ĕлкĕрейместĕп...

* * *

Вăхăт
Сӳнтерме телевизор.
Вăхăт киле
Кĕме.
Пăхăр
– Нӳхрепсем пирĕн пушă
Хамăр чунсем пекех.
Сурăх
Пулма васкатпăр,
Хăнăхнă
Кĕтӳпе çӳреме.
Кĕтӳçĕ вырăнне
Кашкăра суйлатпăр
– Нумайăшне килĕшет...



## Федор ПАВЛОВ

Федор Павлович Павлов 1892 çулхи авăн уйăхĕн 13(25) Хусан кĕпернин Етĕрне уесĕн Патăрьелĕнче (халĕ Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ) çуралнă. 1901–1904 çулсенче ялти шкулта, ун хыççăн Иккассин икĕ класлă шкулĕнче вĕреннĕ.

1907–1911 çулсенче Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пĕлӳ илнĕ. Унта вăл К. Ивановпа, Н. Шупуççыннипе çывăх туслашнă. Вĕренсе тухсан ăна çав шкултах музыка вĕрентме хăварнă. Икĕ çултан вăл Чĕмпĕр тĕн семинарине вĕренме кĕнĕ.

Тĕн семинаринчен вĕренсе тухнă хыççăн шкулта, суд ĕçĕнче, çут ĕç учрежденийĕсенче ĕçленĕ, уйрăмах тăван музыкăпа драматургие аталантарас тĕлĕшпе нумай вăй хунă. Чăваш хорне йĕркелесе янă, музыка шкулне уçас ĕçе хутшăннă. Вăл чăваш патшалăх хорĕн дирижерĕ, музыка шкулĕн преподавателĕ пулнă. Хорпа пĕрле Чăваш çĕршывĕ тăрăх тата Мускава кайса çӳренĕ.

Ф. Павлов литература ĕçне 1910 çул тĕлнелле тытăннă. Малтанхи тапхăрта вăл ытларах чăвашла

тата вырăсла лирика сăввисем çырнă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтранпах чăваш халăх юррисене çыра-çыра илсе илемлетнĕ, хăй те юрăсем кĕвĕлеме пуçланă.

Ф.П. Павлов музыкăпа, илемлĕ литературăпа кăсăкланнă. Вăл чаплă композитор кăна мар талантлă драматург та. «Судра» (1918) комедипе «Ялта» (1922) драма чăваш литературин ылтăн çӳпçинче çирĕп вырăн йышăнчĕç. Вĕсен авторĕ чăваш драматургине никĕслекенĕ шутланать.

Ф. Павловăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Ача-пăча сасси» (1921), «Ялта» (1922), «Сăрнай» (1924), «Чувашские песни» (1931), «Ялта. Сутра» (1934), «Çырнисен пуххи» (1962, 1971, 1992).

1930 çулта вăл Ленинградри (халĕ Санкт-Петербург) Н.А. Римский-Корсаков ячĕллĕ патшалăх консерваторине вĕренме кĕнĕ. Ăна кунта нумай вĕренме тӳр килмен. Чирленĕ. Сывалма Хура тинĕс хĕррине кайнă. Паллă çыравçă 1931 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче Сочире вилнĕ.

## ВĔЛЛЕ ХУРЧĔ

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
Мĕншĕн эсĕ нăрлатăн?
Сарă чечек тăрринче
Çавăрăнса çӳретĕн?

Сарă чечек тăррине
Пыллă карас терĕн-им?
Шанса каяс илемне
Çутă сывлăм терĕн-им?

Ах, шухăшăм, шухăшăм!
Мĕншĕн эсĕ пăтранан?
Сарă хитре хĕрĕшĕн
Çамрăк ăша çунтаран?

Сарă хĕрĕн илемне
Хĕвел çути терĕн-им?
Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
Шав нăрлатать, çаврăнать –

Ман ăшра та çавăн пек
Тĕрлĕ шухăш пăтранать,
Хитре сарă хĕрĕшĕн
Çамрăк ăша çунтарать...

## ЙĂСĂРККА

Кутсăр-пуçсăр çил-тăман
Çавра çил пек çаврăнса
Тĕнче тăрăх кустарать.
Арçури пек ахăрса,
Пин шăпăрпа шăлнă пек,
Шурă юра вĕçтерсе
Çил улать те шăхăрать.
Çĕрпе уйăх хушшинче
Вĕри çĕлен пек ярăнса,
Çуркуннехи авăрти
Пăрлă шыв пек пăтранса
Хулăн тискер пĕлĕт чупать.
Курăнми уйăх çутипе,
Вут та кăвар хĕмĕ пек,

Юр сирпĕнни палăрать.
Çăвар уçма, сывлама
Нимле май çук: юр кĕрет,
Вĕрсе, сурса лартнă пек,
Куç лапашки питĕрнет.
Шăнса кайнă ал-ура
Вупăр карчăк тытнă пек,
Хытса каять, тапранмасть.
Темĕн ывăтса ярас пек:
Çилĕ вĕрет уласа.
Вăй чавăхса çитнипе
Пĕлми пулса çуран çын
Кайса ӳкет кĕрт çине.
Çав вăхăтрах йăсăркка
Шыв хĕрринчи патака
Хăйăр хывса кайнă пек,
Çынна пытарса каять...
Уй варринче пĕр çуна
Пырать путса, чӳхенсе.
Лаши тăрăх тар юхать.
Тарпа хутăш шыв юхать.
Лаши ывăнни паллах –
Хулăн çемçе кĕрт çинче
Аран пырать хашлатса.
Тăлăп çухи тăратнă,
Ларса пырать хуçийĕ.
Юрă юрлать, кăшкăрать,
Çил-тăманпа ятлаçать.
Чăпăрккапа лашине
Тиверткелет хушăран.
«– Ой-ой урлă каçрăмăр та
Сарă тулă пуссипе,
Вăрман витĕр тухрăмăр та

Вĕрене çулçи çутипе,
Хăта килне кĕтĕмĕр те
Хăта пуç кукши çутипе...» –
Тесе юрлать кăшкăрса.
«– Манăн мĕншĕн кулянас
Маттур лаша пур çинчен.
Çил йăсăркка пулсан та
Çавах киле çитĕпĕр...
Эй, халĕ, атте лаши!..
Аяр-аяр аяра!..»
Кам чĕмери хушнă-ши
Тăман витĕр çӳреме
Уй варринче ку çынна?
Çитменнине çур çĕр халь...
Ырра сисмен пулĕ вăл –
Усал сывлăш астарса
Хăваласа кăларнă пуль,
Уйра çул-йĕр çук çĕрте
Аташтарса çӳретме,
Унтан шăнтса вĕлерме...
Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Тĕнче тăрăх кустарать,
Пин шăпăрпа шăлнă пек
Шурă юра вĕçтерсе
Çил улать те шăхăрать.
Пĕр-пĕринпе хутшăнса
Хулăн пĕлĕт çаврăнать.
Курăнми уйăх çутипе,
Вут та кăвар хĕмĕ пек,
Юр сирпĕнни палăрать...

# ШЕТ ХИТРЕ ХĔР

1

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр –
Куç-пуç çуталать.
Çӳхе тути йăл кулать,
Яштак пилĕк авăнать,
Чăмăр кăкри хумханать...

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр –
Маншăн куçĕ çуталмасть,
Çӳхе тути йăл кулмасть,
Яштак пилĕк авăнмасть,
Чăмăр кăкри хумханмасть...

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр –
Ман еннелле çаврăнмасть,
Ылттăн пуçне каçăртать,
Мăн кăмăлне палăртать –
Ман чĕрене çунтарать...

2

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Юрататăн пулсассăн,
Итле – купăс мĕн калать...

«Санăн çут илемĕшĕн
Манăн шухăш пăтранать,
Эпĕ сана курсассăн,
Хĕвел тухнăн туйăнать...»

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Юрататăн пулсассăн,
Итле – купăс мĕн калать...

«Эсĕ куçран пăхсассăн,
Манăн чĕре çĕкленет,
Эсĕ сăмах хушсассăн,
Манăн чунăм çĕкленет...»

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Юрататăн пулсассăн,
Итле – купăс мĕн калать...

«Сана чунтан юратса
Ыталаса макрăттăм.
Сана пăхса савăнса
Ĕмĕр санпа пурнăттăм...»

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Юрататăн пулсассăн,
Итле – купăс мĕн калать...

«Ытарайман пиркипе
Ыталаса йĕрĕттĕм,
Сана пăхса, савăнса
Санпа кăна пурнăттăм...»

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Эсĕ мана те саван,
Ăна купăс каламасть...



## Мальвина ПЕТРОВА

Мальвина Владимировна Петрова 1989 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Вăрманкас Кĕçтемĕр ялĕнче çуралнă. Первомайски вăтам шкулĕнче, Шупашкарти Г.С. Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци интернат лицейĕнче пĕлӳ пухнă. Шкул вĕренĕвĕнче уйрăмах чăваш литератури предметне юратнă. Уçă уроксенче чи хастаррисенчен пĕри пулнă. Аслă пĕлӳ И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕн журналистика факультетĕнче илнĕ. Университет вĕренсе пĕтернĕренпех Чăваш наци радиовĕнче вăй хунă. Хальхи вăхăтра Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче реклама пай пуçлăхĕнче тăрăшать.

Мальвина сăвăсем кĕçĕн классенче вĕреннĕ вăхăтра çырма тытăннă. Чăваш Республикин çамрăк çыравçăсен «Букварьтен – илемлĕ литературăна çити» конкурс çĕнтерӳçи темиçе хут та пулнă. Сăввисем «Çĕрпӳ хыпарçи» тата «Тантăш» хаçатсенче пичетленнĕ. Республикăра иртекен «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» литература ăмăртăвне хастар хутшăннă,

«поэзи» номинацире палăрнă, хавхалану премине илнĕ. П. Хусанкай ячĕллĕ керменти Н.Т. Панина ертсе пыракан театрта вылянă. Пурнăç çине шухăшлăн пăхать, тарăн шухăшне хайлавĕсенче палăртать.

* * *

Антăхса сăмахсем шыракан шухăша
Пӳлсе хучĕ сăпайлă састашăм.
Пур-пĕрех именмесĕр кĕресшĕн ăша:
Пăшăлтатрĕ ытарлăн, ачашшăн...

Тумламшар сăрхăнса тулакан савнăçа
Йĕркесем хушшине хĕстерес пек
Пăчăрта-пăчăрта ирттерсеччĕ каça,
Хирĕçле калама халăм çук тек...

Сăввăмпа савăшса сапаланнă ăса
Лӳчĕркенчĕк шур хутăм пуçтарĕ,
Асаппа артака пĕтĕçтернĕ сасса
Ӳкĕнмесĕр, ӳпкевсĕр йăмтарĕ.

* * *

Шăппăн çеç утса кĕретĕн...
Тĕлĕк виткĕчне сиретĕн...
Сĕрĕм тивнĕн пуç анрать,
Аллăм çăлăнăç шырать.

Ку çĕрле сана кĕтменччĕ –
Йывăр кунăм сӳслентерчĕ.
Пур-пĕр килтĕн. Хуçалла
Авăрларăн аллăма:

Шурă хут çинче каллех
Ташлаттартăн çĕрĕпех,
Аврăн-яврăн тĕрлĕрен
Мĕскĕн чунăн калемне...

Каçăх, сăввăм! Ӳлĕмрен
Манăн хăтлă пӳлĕмре
Ан шыра функай кĕтес –
Урăх хам пата кĕртмес!

## КĔВĔÇ ПĔЛĔТ

*Юптару*

Çумăр хыççăн кĕпине
Карса çакнă типĕтме
Кăн-кăвак таса тӳпе...
Çухави çинче тӳме:
Сарă-сарă, вĕтĕскер
Лартнă, тен, илем кӳме.
Вăл вара хĕрӳллĕскер
Сапалать шевлисене...

Кăчкă çурнă туратран
Выльăх кĕтĕвĕ таран
Ăшшине, ав, туйнăран
Тĕлĕнеççĕ çавраран:

Пӗчӗк ҫеҫ-ха, ҫав тери
Тараватъ. Пурин валли
Ҫитерет вӗри-вӗри,
Ҫук унран тата халли!

Кӗвӗҫ пӗлӗт кӗвӗлсе
Арлама пуҫлать ҫипне:
Тавралла вӗҫет кӗпсе...
Пытарать ҫут тӳмене:
– Ҫиҫрӗ-ҫиҫрӗ ытлашши!
Антӑхсах пӑхать кашни!
Ҫуккӑ тек! Ӑшши-пӑшши!
Усӑ памӗ тавлашни!

Ӑмӑр тӑчӗ ир те кун,
Таврара ӗлккенлӗх ҫук.
Юнтара пуҫлать чӗр чун,
Ӳснӗ курӑк: «пӗрре хуть
Ӑш хӗлхем ӗмсе илес...»
Пӗлӗт илтмӗше перет...
Тӑвӑл хӑпартать ҫиллес:
Пӗтӗрет те сӗтӗрет...
Пӗтӗрет те сӗтӗрет...
Пӗлӗт пӑнчӑн сирӗлет
Сар тӳме йӑл-ял ҫиҫет.

* * *

Асамлӑ савӑшу саманчӗ –
Асаплӑн хӗсӗнсе кӗрет
Астӑвӑм арчине... Ун карчӗ
Астармӑш ҫӑрапа пуплет.

Пуплет: поэт састаш шыранăн,
Пуласлăха ачан шанса...
Путмалăх пур – кĕрес-тĕк тарăн
Пухмач каять-ха уçăлса!..

Салтакăн, сас палли сутмасăр
Сыхланнă кулленех çапла...
Сасартăк тиврĕ уçă харсăр
Сайра çыруллă çăрана:

Ахлатрĕ халиччен упраннă,
Ахаллĕн уçăлман арча –
Ахрат салхулăхран кăларăр
Ахах пек хаклă савнăçа!..

* * *

Куçу пăтратнă авăра
Тимлетĕп шăп, хăра-хăра:
Сенкер кăвак, çăра-çăра...
Туртса кĕрсессĕн вăчăран
Çыхса хурассăн туйăнать.

Аллу картланă чăтлăхра
Çухалчĕ пĕвĕн тăтăрха,
Арканчĕ кăмăлăн тăрха...
Пин-пин сехет самантлăхра
Вилсе çуралнăн туйăнать.

Туту шыранă сăрт-тура
Çурхи шыв-шур тапса тăрать:
Тумлам-тумламăн пуçтара
Кантарăн антăхнă ăшна...
Çук, халех мар, тарас пулать...

* * *

Пĕрисем тăрăшсах шуратаççĕ
Çийĕмри çулсене именми,
Çемçерех тĕшшĕме сăхланаççĕ –
Кутарать шăлĕсем витменни...
Ухмахсем!
Витерми хупăпа чĕркĕмлеттĕн
Ирсерен хулăнрах кун уртса.
Çумăнта вăтануллăн чĕтреттĕм
Çитме çук ăс-тăнна ăмсанса –
Айвансем...
Тавтапуç, кăн-кăвак куçлăскерĕм,
Тăхăнтарнă çунат хунтăлать:
Тӳпӳне тĕмсĕлсех йӳпсемерĕм
Ыттисен сĕнĕвне – хăстарать.
Теприсем...
Çаплипех çулсене шуратасшăн
Теприсем тиркевпе тирĕнсе...
Тумлантар малашне те, тархасшăн –
Пытанас ятупа витĕнсе.

* * *

Юртса пыратчĕ шухăш шуххăн
Уççи-хупписĕр ыйтăва
Татса паратчĕ шиксĕр, туххăм
Чĕн йĕвенленнĕ хуравпа.

Ăна утланнă тӳрĕ кăмăл
Тытса пыратчĕ чĕлпĕрне:
Юлташ пулсассăн çул та çăмăл
Тĕрев парсассăн пĕр-пĕрне.

Вĕсен çулне уçатчĕ ĕмĕт
Çӳлтен вĕçсе – инçе курса:
Ан хăрăр çеç! Ĕненĕр, пĕлĕр
Ку – сирĕн çул, сирĕн шăпа.

Кам такăнмасть хыт васкасассăн?
Кам макăрмасть ыраттарсан?
Анчах пĕлетĕп çул уçсассăн
Витмест! Витмест ăна тусан!

* * *

Çилкĕçне çĕкленĕ пĕлĕт
Шикленме пĕлмен пекех
Ахлатмалăх тытнă ĕмĕт,
Çитмелле талай хĕрнех!..
...Шăратса хĕвел шăтарнă
Парăсне унтан-кунтан –
Путарас вырне ытарлăх
Кӳнине те ăнланман...
Хăвалать кимме хавассăн
Ирĕкре çуралнă çил...
Пăшăлтатрĕ кассăн-кассăн:
Паллашсам – ку манăн кил!
Çураçма васкатăн кăлăх...
Çурмаран çула ан тат,
Инçетре кĕтет хăр тăлăх –
Халиччен сӳнмен хăват...
Ĕмĕтна тĕрле тирпейлĕн
Уçăлсан кăвак хуппи.
Киличчен упратăп, – терĕ...
Инçех мар. Куратăн-и?

Вĕçертсем! Сăмах паратăп,
Çитмелли çĕре çитсен
Ятупа ялав çакатăп
Вуланмалăх çĕр çинчен.

* * *

Çавăтса пырать шăпа
Вĕçертмесĕр тăвалла,
Ывăнсан çупа-çупа
Вăратать те малалла
Сĕтĕрсе пырать мана...
Такăнсассăн ӳкермест,
Ачалла çĕклет кăна.
Ыратсассăн йӳпсемест,
Аннелле ятла-ятла
Пехиллет хывса хĕреç...
Хăтланса пăхса тарма,
Суйласа пĕлмен çула...
Ун чухне темле вара
Чарма мар, кула-кула
Сулчĕ аллипе мана?..
...Тунсăхрах иккен утма
Такăрлатнă çулпала!
Йăлăхтарчĕ те – хамах
Шăпама тупма сăмах
Патăм хам-хама.
Вăрах
Кĕттермерĕ вăл мана,
Пĕр-пĕринсĕр, хăрахшар
Юрамасть иккен пулма.
Пире лайăх юнашар
Йывăр çулпала утма...

* * *

Вулатчĕ ватă уйăх кĕлĕ,
Кĕтсе ĕшеннĕн тĕлĕкне
Ларатчĕ пуçĕпе сĕнксе...
Сăпрай çине каратчĕ хĕлĕх
Кĕслеçĕ, селĕм кĕввине
Ĕнерлеме çак каçхине...

Йĕркен-йĕркен эреш тĕрленĕн
Сăмах тиретчĕ сăввине
Çыравçă асăнма пире...
Вĕсен... Кашнин харкам тĕллевĕ
Кивçен илеймĕн ĕмĕте...
Ман – хамăн, эп сана кĕтеп.

* * *

Çыран хĕрне тĕрте-тĕрте
Илсе çитертĕн те – мĕскер
Кĕтсе тăратăн? Яр тĕксе!
Тăрать... каллех... иккĕленсе,
Ытла та мĕскĕн! Мĕскĕн-çке!
Мĕнле чăтать сана тĕнче!?
Курман та мар-ха суййуна...
Хăвна хĕрхеннĕрен кăна
Сунмарăм, пĕл, турткалашма,

Пĕлеттĕн хаклăпа сутма
Ниме тăман пуш сăмахна
Ытти çынна та – мана мар!

Пӗлмен пулсан шӑла ҫыртма
Курман та пулӑттӑм сӑнна –
Кӗҫҫе хупланине ӑна...

Юрать. Ҫитет! Хура ӗҫна
Туса пӗтер те лӑш кӑна
Ларса кансам.
Кавар ҫуна
Манран салам тата кала...

* * *

Япшар ятна уртса яратӑп
Салхулӑх сулхӑнӗ тивсен,
Куҫ витерми ачаш ҫунатӑн
Хуплать мана сив синкертен.

Япшар ятна савсах тӗрлетӗп
Астӑвӑм ҫиппипе куллен.
Ют вӑрласран сана – кӗретӗн
Чӗнместӗп ҫеҫ. Хӑвах пӗлен.

Япшар яту – хӑватлӑ хунтӑ,
Упрать амак ҫакланасран.
Инҫе чухне те ҫирӗп пултӑм,
Тухмарӑн, савнӑҫӑм, асран.

Ҫакна пӗлсе асӑрханулла
Пулсамччӗ эсӗ те ялан.
Япшар яту сан тухатуллӑ
Ӳксен ҫӗклет. Ҫакна ан ман.



## Николай ИШЕНТЕЙ

Николай Петрович Петров 1953 çулхи нарăсăн 14-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Тури Шурçырма ялĕнче çуралнă. Шкулта, ял хуçалăх институтĕнче пĕлӳ пухнă, çарта пулнă. Салтакран таврăнсан ял хуçалăхĕнче вăй хунă. Ĕçленĕ вăхăтрах И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче куçăмсăр вĕреннĕ.

Пурнăçăн тĕрлĕ авăкĕнче хăйне тĕрлĕ ĕçре тĕрĕсленĕ: производствăра, вĕрентӳ тытăмĕнче, журналистикăра. «Хыпар» хаçатра – корреспондентра, «Капкăн» журналта тĕп редакторта ĕçленĕ. Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕн членĕ, ачасен те, çитĕннисен те юратнă çыравçи. Пултарулăхра пысăк çитĕнӳсем тунă, вулакана çирĕм ытла кĕнеке парнеленĕ. Унăн хайлавĕсем республикăра ирттерекен «Литературăллă Чăваш Ен – чи лайăх вуланакан кĕнеке» конкурсра нумай хутчен çĕнтернĕ. Литература пултарулăхĕ анлă, жанрĕсем тĕрлĕрен: поэмăсем, сăвăсем çырать, юмахсем хайлать. Унăн пултарулăх арчинче кăсăк сюжетлă повеçсем, кĕске

те тарăн шухăшлă калавсем, тĕрленчĕксемпе юптарусем темĕн чухлех. Республикăри хаçат-журналта унăн публицистикăлла материалĕсем тăтăшах пичетленеççĕ.

Н. Ишентейĕн пултарулăхĕ пирки сăмах тапратсан «Çуралман ача сасси» поэмăна асăнмасăр иртме çук. Вăтам шкулăн вĕренӳ программине кĕртнĕшĕн çеç те мар – унта автор этемлĕхшĕн калама çук пысăк ыйтусене хускатса çын чунне тыткăнлама пултарнишĕн. Пурнăçа хӳтĕлеме чĕнекен çак хайлав халĕ нумай-нумай чĕлхепе янăрать ĕнтĕ. Тĕнче пĕлтерĕшлĕ пысăк ыйтусене ача чĕлхипе, сăнарлă сăмахсемпе пурне те ăнланмалла каласа пама пĕлнĕрен пĕчĕккисем те унăн кĕнекисене аларан ямасăр вулаççĕ.

Н. Ишентей – халăхсем хушшинчи Çеçпĕл Мишши, Нестер Янкас ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Паллăрах кĕнекисем: «Чĕвĕлпи», «Çĕр пин чечек çĕршывĕнче», «Çавра кӳлĕ хĕрринче», «Хӳреллĕ дневник», «Тĕрĕллĕ çыру тĕлĕнтермĕшĕсем», «Ташлакан купăс», «Чарусăр мечĕк», «Хаваслă кăлтăрмач», «Планетăпа чĕре», «Ырă ĕçсен команди», «Шăнкăрав хыççăнхи уроксем», «Ачаш кулăш вăрттăнлăхĕ» тата ыт. те.

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ЯЛАВĔ

Патшалăх Ялавĕ – тăванлăх саламĕ,
Вĕл-вĕлкĕш мăнаçлăн сенкер тӳпере.
Санра – хĕвел тĕсĕ те пурнăç хавалĕ,
Санра – çĕр ăшши, сиплĕх вăйĕ, тĕрек.

Мухтавлă Ялав – çутă ĕмĕт хĕлхемĕ,
Çĕклен çӳлерех «Виç хĕвел» айĕнче.
Чăваш хĕрĕ-арĕ хыпса хĕрӳленĕ
Эс вĕркĕшнĕçемĕн тӳпе анинче.

Патшалăх Ялавĕ – тăванлăх хунавĕ,
Упра несĕлсен ĕмĕрхи йывăçне.
Ялпа хулана пил сăмахĕ салантăр,
Ыр сунăмĕ çиттĕр тĕнче анлăшне.

Ялав вĕлкĕшсен çĕкленет чăваш ячĕ.
Ялан çӳлте пултăр ыр сунăм тĕрри.
Санра – Тӳпепе Çĕр аннемĕр хăвачĕ,
Санра – халăх ăсĕ, тивлечĕ, юрри.

## ЭПĔ ПĔЧĔКÇĔ ЧĂВАШ

Эпĕ шăпчăк чĕппи мар,
Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш.
Кам хăюллă та хастар,
Çавă пулĕ ман юлташ.

Атăл вăйĕ – тумлампра,
Чăваш пурнăçĕ – манра.
Чул ватса кам çул хывасшăн
Çавă тĕслĕх пулĕ маншăн.

Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш.
Пур ман çулăмлă малаш:
Каялла пĕр шит чакмасăр
Ăслă чăваша тухасшăн.

## ЧУЧЧУ ЯРĂННИ

– Чу-чу! Чу-чу!
Чуччу кашти хурама,
Пурте тухăр урама.
Чуччу кашти авăнсан
Ярăнма тата аван.

– Чу-чу! Чу-чу!
Анне – ачаш тăвакан,
Атте – чуччу тăвакан.
Ан шикленĕр ярăнма –
Хуçăлас çук хурама.

## ВĂРМАНТИ ЕЛКА

Çĕн çул каçĕ ĕшнере
Пĕчĕкçеç мулкач йĕрет:
Елка тупрăм, – тет, – анчах
Теттесем çук-иç пачах.

Ушкăн уйăп пычĕ ларчĕ –
Йăрăс чăрăш капăрланчĕ.
Савăнать мулкач çури,
Янрататъ уяв юрри.

## МУЛКАЧ

– Эй, мулкач!
Манпа калаç.
Мĕншĕн санран тăрăхлаççĕ,
Чалăшкуç тесе калаççĕ;
– Пултăрин. Эп чалăш мар,
Никамран та кая мар.
Куçăм та аван курать,
Асăрхать инçетрине,
Кайрине те малтине.
– Каçарсам мана, мулкач
Тăрăхлама сăлтав çук,
Эс хăюллă Вичкĕн Куç!

## АУ

Çӳретĕп вăрманта пĕччен,
Кăмпа шыратăп нумайччен.
Чĕнетĕп эп:
– Кăмпа, ау!
Ян кайрĕ сас:
– Кунта!.. Ау!..
– Ау! Кам эс. Мĕнле яту.
– Ку эпĕ – Вăрманти Ау!..
– Ау! Кăмпа пур-и. – тĕпчетĕп.
– Кунта пĕри, – хурав илтетĕп.

Çапла Ау пулăшнипе
Тулли тултартăм пĕрнене.
– Киле каятпăр-и, Ау.
– Аюк! Вăрман – чи хăтлă çурт.

# САЛТАК ПУЛАТĂП ЭПĔ ÇИТĔНСЕН

Салтак пичче çыру çырать çартан:
– Çĕршыв çине пăхатпăр уçлăхран.
Тĕнче чĕрĕлĕхне куллен сыхлатпăр,
Халь спутник урлă çыхăну тытатпăр.

Салтак пулатăп эп те çитĕнсен.
Тĕллевĕм çирĕпленчĕ кунсерен.
Салтак чĕри планетăпа пĕр тан!
Тăнăçлăха упрать вăл уçлăхран.

Юлас килмест ман аслă пиччерен –
Çĕршывăма сыхлатăп çитĕнсен.

# ВИÇĔ ÇАВРА – ЧĂВАШ АЧИ ТАВРА

1

Ман атте – ăста платник.
Пуртăпа чăштик-чăштик
Каскалать, турпас вĕçет,
Çĕнĕ çурт пури ӳсет.

Тытрăм мăлатук алла,
Шак шаккатăп унпала.
Аври – çирĕп вĕрене,
Шеп туптанă тимĕрне.

Шак! Шак! Урăх сăмах çук
Мăлатук алăра чух.
Мĕн ахаль сас тумалла –
Хӳмене юсамалла.

Пĕрре çапрăм, иккĕ çапрăм...
Тайлăк юпана тăратрăм.
Калинкке те кăмăллă,
Усăлать çăп-çăмăллăн.

Тăрăшса ĕçленĕ май
Пӳрнене лектертĕм – ай!
Макăрмашкăн шутламарăм,
Татăклăн хама каларăм:

Çирĕп пул, чăваш ачи,
Эпĕ – аптрман йышши.

2

Ман анне – уй-хир ăсти,
Агроном, çĕр асамçи.
Çĕр чĕлхине ăнкарать,
Пахча çимĕç ăнтарать,

Эп те ĕç патне пыратăп.
Кĕреçепе çĕр пусатăп,
Кĕреплепе якататăп,
Кăпăшка йăран тăватăп.

Çĕнĕ сортлă вăрлăха
Пĕрчĕшерĕн акрăм та,
Шăварма каç пулттипе
Шыв çĕклерĕм витрепе.

Çĕр чĕлхи вĕреннĕрен
Тĕслĕх илтĕм аннерен:
Кăшăллă витре тулли
Шыв тултартăм хам валли.

Ыр çын ĕçрен хăрас çук
Усăллă ĕç тунă чух.
Тайăлмасăр шыв йăтатăп,
Татăклăн хама калатăп:
Чăт, юлташ, ан турткалаш,
Çĕр ырри санра, чăваш.

3

Ĕç вĕçленчĕ те канма
Тухрăм эпĕ урама.
Пур-ха ман велосипед,
Катаччи чупас килет.

Мĕн пулать-килет – ларатăп,
Педале çавăрттаратăп.
Хăлхара çил шăхăрать,
Çухрăм хыçала юлать.

Лупашка пӳлет çула.
Чарăнтăм – мĕн тумалла:
Çавăрттаркăч кустăрмин
Çĕмĕрĕлнĕ шăлтăрми.

Уçă тытрăм, пăркалатăп,
Педале вырнаçтаратăп.
Лакăма йăлт тикĕслерĕм,
Велодром пек пултăр терĕм.

Ĕç çĕклет – çула чĕнет.
Ыткăнать велосипед.
Хăрамасăр ярăнатăп,
Татăклăн хама калатăп:
Пул малта, çилпе тавлаш –
Чăваша кĕтет малаш.

## ЧĔП ХУРАЛĔНЧЕ

Хур кĕтĕвĕ кĕтеттĕм çырмара.
Хам пулнă пулĕ пиллĕк-улттăра.

Сасартăк куртăм кӳршĕ йыттине.
Вăл, пысăкскер, çывхарчĕ ман енне.

Вĕлтлетрĕ шухăш: хăвăртрах тарас.
Тĕллевĕ йыттăн – хăравçа çыртас.

Шар çурчĕ çивĕч шăлĕпе йĕмме.
Эп хатĕрччĕ ĕсĕклесе йĕме...

Анчах ертӳçĕ хур măйне тăсса,
Хăюллăн пычĕ хыттăн чашкăрса.

Çунат сулмаклăхне туйса илсен
Тăшманăм тарчĕ хӳрине хĕссе.

Чуна хытартăм эп – «чĕп хуралçи».
Мăнаçлăн такăлтатрĕ хур аçи.

Ăнкартăм – ăс парать хăй чĕлхипе:
Чыса упра пуçа сыхланă пек.

# ÇИТМĔЛ ÇИЧĔ ПĔРКЕЛЕНЧĔК

Çитмĕл çичĕ пĕркеленчĕк
Кукамай сăн-питĕнче.
Пурнăç çулĕ йĕркеленчĕ
Кукăр-макăр йĕрсенче.

Ах, кун-çул тĕрленчĕкĕ
Тарăн пĕркеленчĕклĕ.
Мĕнпе чĕрмеленĕ-ши?
Мĕн каласа çырнă-ши
Çак тĕрленчĕкре?

Çырăвĕ ӳкерчĕклĕ,
Тарăн пĕркеленчĕклĕ.
Савăнмалли пулнă-ши,
Кулянмалли çырнă-ши
Çак ӳкерчĕкре?

Çитмĕл тĕрĕллĕ ӳкерчĕк
Кукамай кĕпи çинче.
Чĕмсĕр хĕлĕхлĕ пĕркенчĕк –
Чĕнтĕрленĕ тĕрринче.

Тĕрĕсен тĕрленчĕкĕ –
Вăрттăнлăх ӳкерчĕкĕ.
Камăн ятне çырнă-ши?
Мĕн каласа çырнă-ши
Çак тĕрленчĕкре?

Тĕрĕ мерешкеллĕ-çке,
Пурнăç çулĕ евĕр-çке...
Кукамай кун-çулĕ-ши,
Несĕлсемĕр ячĕ-ши
Çак ӳкерчĕкре?

# КУКАМАЙ КĔПИ

Кукамай çийĕнче шур чечен катан пир.
Çакăн евĕр кĕпе тек тупаймăр эсир.
Уявра çеç ăна кукамай тăхăнать,
Урăх чух çак тупра арчара упранать.
Мĕн пирки хаклă мул пек упрать-ши ăна?
Ватă çын кăмăл-туййăмĕ пит ăрасна.
Ăс-тăна пăлхатсан та пĕлсе çитме çук.
Тĕсĕ кайнă пирре ывăтса ярас чух

Аллипе ачашлать, хăй çумне пăчăртать,
Тутăх тивнĕскерне юратса чуп тăвать.
Мĕн пирки кукамай кĕпене пăрахмасть?
Вăл çапла хăтланни пусăма вырнаçмасть.

Кукамай, шухăша путнăскер, шăпланать.
Унăн кивĕ кĕпи çырăва çаврăнать.
Аркинчи эрешне аллипе сĕртĕнет,
Çаннинчи тĕррине куççульпе йĕпетет.
Кукамай пĕр кана хускалмасăр ларать,
Ерипен-ерипен хăйпе хăй сăмахлать:
«Çак кĕпе тĕрринчи несĕлсемĕр ятне
Сăмахпа асăнаймăпăр ĕнтĕ тинех.
Сарă Кун тĕнчинчи Ырăсен çумĕнче».
... Ай, тинех ăша илтĕм ват çын кăмăлне.
Ак мĕн-ма кукамай пăрахмасть кĕпине.

Пахаларăм эп хам та хайхи кĕпене,
Вăхăт тутăхĕ çинĕ чечекĕн тĕсне.
Сарăхайнă арки, тĕксĕмленнĕ пирри,
Çипписем тĕссĕрленнĕ эрешлĕ тĕррин.
Йăм хура тĕслĕ йĕр кĕл пекех шуранка.

Шупкаланнă хĕрли, тĕмпĕл-тĕмпĕл хушка.
Симĕс тĕс кĕрхи çулçă пулса ӳкнĕ пуль.
Кăвак тĕсĕн кусне шур илтернĕ пулас:
Çăлтăр пек чакăрскер халь ытла та чапрас.
Сар тĕсе илнĕ пуль çӳл тӳпе хăй патне –
Тĕлсĕр хумлă йĕр çеç палăртать пиррине.

Тишкерӳллĕ куçпа тинкеретĕп тĕрре:
Пиктограмма сăнне хупăрланă тĕтре.
Тĕрĕри кӳлепе тем каласшăн мана.
Аслă тăхăм чĕнмест-и пире хăнана?
Тăванне пиллесе, тен, тата тем калать?..
Ĕмĕрсен ытамне йышăнса çупăрлать.
Мĕн калать-ши мана çак тăмхаллă çыру?
Ах анчах, чĕлхине ăнланмасть çĕн ăру.
Эп хăлхасăр иккен – илтес çук йыхравне.
Эп чĕлхесĕр иккен – тупас çук хуравне.
Эпĕ куççăр иккен çак хитре тĕнчере –
Хак пама пĕлейместĕп асамлă тĕрре.

Авалхи тĕрĕсен, эрешсен тупсăмне
Кукамай та йăлтах пĕлеймест ахăртнех.
Ун сăмахĕ-халапĕ çапла систерет:
Тĕрĕ – ĕмĕр сасси тата çутă кĕтрет.
Тĕлĕнтермĕш хăват эрешре упранать,
Çав хăват пурнăçа сыпăнма пулăшать.
Тĕлĕнтермĕш çыру паллине вулама
Ăсчахсен азбуки халиччен упранман.
Пурпĕрех эп тăратăп ăна пуç тайса,
Тишкеретĕп ăна хак пама хăтланса:
Тав Турра, çухалман çын кун-çулĕн тĕрри,
Пурăнать-ха тĕс кайнă истори тĕрки.

Кукамай çиййĕнчи кив кĕпе тĕрринче
Куртăм кун паллине, тыткăчи – çут тĕнче.
Хĕресленнĕ йĕрсем – пĕрлешӳлĕх палли.
Вырăн пур киремет ыр-хаярĕ валли.
Хумлă йĕр – шыв унки, вичкĕнни – вут уки.
Ака пуç, кайăк-кĕшĕк, хăмла пултранки...
Хурăнташ-тăвансен йывăççи сарлака.
Йышлă ун туратти, çулçисем те парка.
Пурнăç сăнлăхĕ пур кив кĕпе тĕрринче.
Сарă тĕс йышлăрах тĕрлĕ тĕс хушшинче.
Ку ахаль тĕрĕ мар, ку вăл – пурнăç йĕрри,
Этемпе çут тĕнчен çураçулăх пурри.

Çак çыру пăхăнать тĕрĕсен саккунне:
Шайлашуллă ӳкерчĕк тытать илемне.
Тӳпепе Çĕр ама – мăшăра пĕлтерет,
Тĕрлĕ тĕс хушăмне вырнаçулăх кӳрет.
Кукамай питĕнче те пур пурнăç тĕрри –
Ăшăххи, тарăнни, хĕресле хутламли...
Ах анчах, кукамай питĕнчи паллăсем
(Куртăм эп ун çине сăнаса пăхнăçем)
Пăхăнмаççĕ иккен тĕрĕсен саккунне,
Пĕркелеççĕ кăна хаклă çын сăн-питне.
Капăр сăн-сăпата пăснă пурнăç йӳççи –
Ереше куçаймасть терт-нуша пĕрмечи.

Уйрăм тĕрĕ вырнаçнă кĕпе çаннине,
Чалтăркка эрешпе тирĕнет куç тĕлне.
Çав çыру паллинче анлă çул юпленет –
Сăртлăхри сукмакпа сенкерленнĕ инçет.
Çанăри çырура тăвансен ячĕ пур,
Кукăр-макăр сукмак – тăхăмсен çулĕ пур.

Кунпа çĕр пăхăнать уйăхпа хĕвеле –
Каç пулсассăн кайсан та ирпе килмелле.
Çанă вĕçĕн шупкалнă эрешĕсенче
Чакăр çăлтăр палли курăнать ик енче.
Йӳç куççуль сăрхăнса ӳкнĕрен ун çине
Илĕртӳллĕ инçет куçнă пуль тĕтрене.

Пир кĕпе аркинче урăхла тĕрĕ пур.
Шур кĕпе аркинче çут мерчен кайăк пур.
Ай кашни çын патнех вăл çитме ĕлкĕрет,
Çамкаран шаккасах тем çинчен систерет.
Çунатне саркалать – Сарă Кун таврăнать,
Çунатне хутлатать – тĕттĕм каç пуçланать.
Çак çыру кăтартать çĕн ăру ĕрчевне,
Çак çыру калăплать кăк ама сăнарне.
Аркăпа йышăнать вăл Çĕн Кун кайăкне
Тăснă май тепĕр ăстрăм кун-çул çиппине.
Ку пурне те тивет, шăпаран иртме çук –
Аркăпа хупланса çăлăнса юлма çук.



## Виталий ПЛЕМЯННИКОВ

Виталий Павлович Племянников 1938 çулхи утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Ĕмпĕрт Туçа ялĕнче çуралнă.

1956 çулта Шĕнерпуç вăтам шкулне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти 11-мĕш ПТУра ăс пухнă.

1957–1960 çулсенче Германире Совет Çарĕнче пулнă. Çартан таврăнсан 1960–1962 çулсенче Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçленĕ.

1962–2000 çулсенче Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикинче мастерта вăй хунă.

Пушă вăхăтра Виталий Павлович йывăç тымарĕсенчен тĕрлĕ япала касса кăларнă, куравсем йĕркеленĕ. Унăн ал ĕçĕсем Америка, Англи, Финлянди, Инди çĕршывĕсен музейĕсенче упранаççĕ.

В.П. Племянников сăввисем 1958–1960 çулсенче район тата «Коммунизм ялавĕ» хаçачĕсенче, Улька Шенерпин «Род Зориных из села Бичурино» кĕнекинче кун çути курнă.

Племянников В.П. 2000 çулта пирĕнтен уйрăлса кайнă.

# ИЛЕМЛĔ ВĂХĂТ

Пĕлĕт çинчи вичкĕн çăлтăрсем
Хунарсем пек йăлтăртатаççĕ.
Çывăрмаççĕ халь те шăпчăксем,
Юрă-кĕввине шăрантараççĕ.

Шап-шур хĕл пек çĕмĕрт айĕнче
Çумăн лартăмăр çутăличчен.
Куçа илеймерĕм сан çинчен,
Юрататăп терĕм чĕререн.

Хатĕрленчĕ шăпчăк çывăрма
Пирĕншĕнех тăсрĕ юррине,
Сар çурла васкарĕ пытанма,
Эп чуптурăм чунăм савнине.

* * *

Ас илсемччĕ, тусăм,
Салтак юлташна.
Инçетре пулин те
Манмĕ вăл сана.

* * *

Ик çулталăк шуса иртрĕ
Ютри çĕршывра.
Сан сăну куçран çĕтмерĕ,
Тăчĕ ман умра.

Çеçпĕл пек илемлĕ Мира,
Çурататăн тăтăш лира,
Кĕтсе ил-ха эс мана,
Инçетри юлташшуна.

* * *

Шухăшсем каллех канма памаççĕ,
Çывăрма чараççĕ сĕм çĕрле,
Сан чӳречерен епле пăхаççĕ,
Вĕсене тыт, Мира, йĕнерле.

Каласам, пикеçĕм, пытармасăр:
Эс манман-и уйрăлу каçне?
Хуравларăн: «Пурнаймастăп сансăр.
Кĕтĕп, Витя, виçĕ çул вĕçне».

* * *

Те тĕлĕкре сăпайлă пикене юратрăм,
Мир сăмахран ун ячĕччĕ, вăл – Мира.
Ирпе куçа уçсан çумри хĕре вăратрăм,
Ир сăмахран-ши ячĕ, пулчĕ – Ира.



## Юрий ПЛОТНИКОВ

Юрий Деомидович Плотников 1934 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Çитчарак ялĕнче çуралнă. Çĕрпӳ педагогика училищинче, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ.

Юрий Плотников ачаранпах спортпа туслă пулнă, чăваш литературипе, журналистикăпа кăсăкланнă. Спортра пысăк çитĕнӳсем тунă. Барьер урлă тата кĕске дистанцисене чупассипе темиçе хут та рекордсмен тата республика чемпионĕ пулнă.

«Молодой коммунист», «Советская Чувашия», «Чăваш Ен» хаçатсенче литсотрудникра ĕçленĕ, телевидени тата радио журналистĕнче вăй хунă. Радиора 20 çул ытла спорт кăларăмне ертсе пынă. А. Орлов-Шуçăм, Ф. Лукин, А. Сергеев тата ытти композиторсемпе пĕрле юрăсем çырнă. Аслă Çĕнтерӳ 40 çул тултарнă ятпа ирттернĕ патриотла юрăсен конкурсĕн лауреачĕ, спорт темипе çыракан журналистсен республика конкурсĕн çĕнтерӳçи пулнă.

Ю. Плотников – паллă чăваш журналисчĕ тата спорт комментаторĕ. Спорт темипе çырнă 7 кĕнеке тата 1000 ытла чăвашла, вырăсла сăввисемпе çырнă юрăсен авторĕ.

Хаçат-журнал ĕçне тăтăшах хутшăннă.

Юрий Деомидович Плотников 2021 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

## САЛТАК ÇЫРНĂ ВИÇ КĔТЕСЛĔ ÇЫРУСЕМ

Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем...
Вăрăм пулчĕç, йывăр пулчĕç çулĕсем.
Киле çитнĕ инçетрен,
Юнлă вăрçă хирĕнчен
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.

Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем –
Иртнĕ вăрçăн ĕмĕрхи хыпарçисем,
Савăнтарнă та пире,
Хурлантарнă та пире
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.

– Хаклă мăшăр, ман юратнă ачасем, –
Çырăвне çапла пуçлатчĕç аттесем –
Аркатсассăн тăшмана
Кĕтсе илĕр ак мана,
Хаклă мăшăр, ман юратнă ачасем.

Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем...
Паян кун та упранаççĕ-ха вĕсем.

Çулăм витĕр тухнисем,
Куççульпе йĕпеннисем,
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.

## ЛАР, АННЕÇĔМ, ЮНАШАР

Лар, аннеçĕм, юнашар,
Çумăн ларса калаçар.
Эс ӳстернĕ ывăл-хĕрĕн
Килме çулĕ çывăх мар.
Эс кĕтетĕн кунĕн-çĕрĕн
Лар, аннеçĕм, юнашар.

Лар, аннеçĕм, юнашар,
Ăш сăмахпа ăшăнар.
Атте килĕ – тăван килĕм –
Сансăр чăн та ăшă мар.
Çут хĕвел пуль эсĕ пирĕн?
Лар, аннеçĕм, юнашар.

Лар, аннеçĕм, юнашар,
Чӳречене яр уçар.
Сад пахчинчи сар кайăк та
Хăй йăвинче пĕччен мар,
Сар кайăк пуль эсĕ пирĕн?
Лар, аннеçĕм, юнашар.

Лар, аннеçĕм, юнашар,
Çепĕç юрă янратар.
Кĕрекемĕр тулли мар-и, –
Тав куркине тытса пар.
Ай, юрлар-и, ай, савнар-и,
Лар, аннеçĕм, юнашар.

## ХУРĂНСЕМ

Шур хурăнсем Шупашкара утаççĕ
Мăн çулăн икĕ енĕпе.
Çул çӳрене курсассăн пуç таяççĕ
Паллакана тĕл пулнă пек.

Шупашкара салам илсе килеççĕ
Канашсемпе çĕрпӳсенчен.
Тин çеç тĕрленĕ тĕрĕ парнелеççĕ
Пире Алькеш пикисенчен.

Хăнасене кĕтсе илмешкĕн хапăл,
Ав хирĕç тухнă керменсем.
Тăван хуламăр, эс татах та капăр
Çут сăн кӳрсен шур хурăнсем.

## ЧĂВАШ ЮРЛАТЬ...

Килне хăна-вĕрле пухать-и
Ĕçме-çимешкĕн вăхăтлă чухне,
Кĕр мăнтăрĕпе сар тул хывать-и
Шăлса тасатнă, хăтлă кĕлетне,
Çĕн пӳрт хуçи пулса сăйлать-и
Пыл сăрипе ниме çыннисене,
Салтак тумпе çула тухать-и,
Чĕрипеле туйса хăй тивĕçне –
Чăваш юрлать...

Юман айне тăрса итленĕн
Каш кашлакан вăрманăн сассине,
Ыраш пусси пăхса çӳренĕн

Хыт чуптармасăр кӳлнĕ лашине,
Чун тарăхсан хаяр сивленĕн
Тăшманпала çĕлен-калта йăхне,
Ачашласа телей пилленĕн
Тин çеç çуралнă пĕчĕк пепкине –
Чăваш юрлать...

Сад пахчине çеçке сармашкăн
Ăш çумăрпа хĕвел çути сунса,
Мăн Атăла таса юхмашкăн,
Тулли пулма çĕн вăй-хăват парса,
Туя кайма, хăна тумашкăн
Пĕлĕш-тăван пурришĕн савăнса,
Малашлăха хастар утмашкăн
Çĕршывăмăр пултарасса шанса
Чăваш юрлать!..

* * *

...Пулăç савăнать, çиçет кулли,
Пытармасть ăна вăл пирĕнтен.
Çитĕ ик яшкалăх пĕр пулли
Тата юлĕ, пĕçерме пĕлсен.
– Ку вăл темех мар, – çăрттан хуçи
Мухтанать, – тытсаччĕ ирхине,
Кимĕ тăршшĕ пулă – ак виçи –
Халĕччен курман ун пеккине!..
Шӳтлĕ калаçу, сăмах-юмах
Килĕшмест-им кăмăллă çынна?
Атăл шывĕ чӳхенни умрах
Вăй-хăват хушмасть-им сан чунна?
Хум чупать, чупать анаталла

Пристане çитме васканă пек.
Эпĕ те ишеп ăмăртмалла,
Тăрăшса кĕсменлĕ кимĕпе.
Анлă, Атăл чăн та сарлака
Шупашкар хуламăр тĕлĕнче.
Сывлăш сиплĕ, эмелрен паха
Йăлăмри хырсен сулхăнĕнче.
Вăркăш çил чĕнет те астарать,
Каçса кур, тет, Атăл леш енне,
Çывăх тус пек ăс мана парать:
Çирĕп тыт, тет, пурнăç кĕсменне!

## ПАЛĂК

Чаръннă пек вăхăтлăх кăна
Шупашкарăн капăр скверĕнче.
Калăн, кĕç вĕçет атакăна –
Çутă хĕç вылять ун аллинче.
Çулăм витĕр пырĕ çул уçса
Юланутлă хĕрлĕ командир...
Ним чĕнмесĕр, салтакла тăрса
Пуç таятпăр сан умра эпир.
Янăранăн туйăнать «ура»,
Вăй хушса, чĕнсе эскадрона.
Юхнăн туйăнать кунтах Урал,
Хум çапса юнланнă çырана.
...Çӳллĕ постамент. Ӳкет шур юр.
Тап-таса скверта та, урамра.
Пулнă эс, Чапаев – халь те пур:
Улăп паттăрла тăран умра!



## Петр РОМАНОВ

Петр Михайлович Романов 1960 çулхи çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Ункăçум ялĕнче çуралнă. 8 класс пĕтернĕ хыççăн Шупашкар 12-мĕш номерлă профтехучилищĕре вĕренсе каменщик профессине алла илнĕ.

1978–1980 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă. 1983–1987 çулсенче Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче вĕреннĕ. Н.Н. Казаков вĕрентсе пынипе композитор ĕçне туптанă.

Петр Романов Чăваш Республикипе тата унăн тулашĕнче иртекен тĕрлĕ мероприятие хастар хутшăнать. Чăваш эстрадине йĕркелекенсенчен пĕри. «Ритмы Чувашии» конкурс çĕнтерӳçи.

Эстрада юрăçисен тĕрлĕ ăмăртăвĕнче жюри ертӳçинче вăй хурать. Чăваш халăх юррисене анлă сарас ĕçшĕн Хисеп хучĕсем темиçе те илме тивĕç пулнă.

П. Романов – кĕвĕ çыракан тата сăвăç юрăç. Вăл 50 яхăн юрă хайланă, тата 100 ытла сăвва кĕвĕленĕ.

## ÇЫРУСЕМ

Çунтарсам çырусене,
Терӗн уйрӑлу çитсен,
Кӗл пулса вӑйлӑ çилпе
Кайччӑр халь вӗçсе инçе.

Манса кай яланлӑхах
Иксӗмӗр хушӑрине,
Пулнӑ-иртнӗ мӗнех халь
Аса илме кирлех-ши?
Сан сӑнарна эп ялан
Упрӑп чунӑм варринче,
Нумай çулсем хушшинче
Сиплӗх парӗ вӑл мана.

Юлашкинчен халь сана
Телей сунӑп пурнӑçра,
Çыру вӗçӗнче вара
Яланхи пекех «эп сан».

Эсӗ, эс çырнӑ çырусем,
    хаклӑран та хаклисем,
Эсӗ, эс çырнӑ çырусем,
    вӗри кун-çул йӗркисем.

## АСТĂВАТĂП

Астăватăп, çурхи каçчĕ,
Лăпкă çилĕ вĕретчĕ,
Ас тăватăп йăлтăр куçна,
Çырла пек çеç тутуна.

Иртсе кайрĕç пулĕ çав каçсем,
Ас илетĕп халь кунсерен,
Савнă тус, сан çинчен, сан çинчен.

Сан патна ялан васкаттăм
Çил-тăвăл пек утпала,
Эс мана кĕтсе тăраттăн
Салхуллăн пăхса ялан.

Манас çук сан юрру-куллуна,
Савас çук эп урăх никама,
Сана çеç юратăп, юратăп.

Тек мана аса илместĕн,
Ас тумастăн пуль мана,
Сан патна эп васкамастăп
Иртрĕ ĕнтĕ çав вăхăт.

Иртсе кайрĕç пулĕ çав каçсем,
Ас илетĕп халь кунсерен,
Савнă тус, сан çинчен, сан çинчен.

# ВĂРХАНÇĂ

Чарăнми юрăпа тухăн эс çула,
Çилпе те çумăрта ялан эс çулта,
Ялан эс çулта, эс çулта,
Каçпа та ирпе те канăç çуккă сан,
Кил ăшши тупатăн кашни кĕтесре
Пĕлĕт айĕнче, айĕнче.

Вăрханçă, вăрханçă,
Каласа парсам,
Мĕншĕн пит тунсăх
Санăн куçусем.
Вăрханçă, вăрханçă
Çепĕç кĕвĕпе
Савăнтарсам эсĕ
Манăн чунăма.

Ан васка каймашкăн кăвайт умĕнчен,
Чĕреме хускатрăн тĕрлĕ юрăпа,
Таса чунупа, чунупа.
Юлашки çăкăра санпа пайлама
Хатĕр эпĕ, тусăм, камăл туйăмпа,
Ырă сăмахпа, сăмахпа.

Вĕçленми çул, каллех кĕске тĕлпулу,
Ирĕкпе телейшĕн утăн малалла,
Çут тĕнче тăрăх малалла.
Тусăм, эсĕ, тусăм, пĕччен мар эс тек,
Яланах хавас эп санпа тĕл пулма,
Санпа тĕл пулма, тĕл пулма.

# МАНĂН ШУПАШКАР

Шупашкар хули пек
Хитре хула çук,
Ялан эсĕ пулан
Манăн асăмра,
Савнă Шупашкарăм,
Манăн тăван ен.

Аслă та илемлĕ
Манăн Шупашкар,
Çӳллĕ те мăнаçлăн
Курăнаç çурчĕсем.

Ир-ирех эп тăрап
Хĕвелпе пĕрле,
Васкамасăр утап
Хулаваррипе
Телей эпĕ сунап
Иртен-çӳрене.

Пурăнма пит хавас,
Чунăм савăнать,
Ӳсет, хитреленет
Шупашкар хули,
Çавăнпа та эпĕ
Сан çинчен юрлап.

## ЧĂВАШ ÇĂЛТĂРĚ

Ирхи сывлăм ӳксен çĕр çине
Кайăксем пуçласан юррине.

Çиçтĕр тӳпере чăваш çăлтăрĕ
Çиçтĕр тӳпере чăваш çăлтăрĕ.

Чăваш тĕнчи пуян юрăпа,
Атте-анне панă пехилпе.

Тăванпала тăван пĕр пулсан
Кăмăл-туйăм ӳсĕ чĕрере.

Алла-аллăн эпир тытăнсан
Пурнăç çулĕ пулĕ анлăрах.

## УКÇА

Укçашăн сана сутма
Хатĕр çывăх тусу,
Эсир куратăр-и?
Ухмаха ерет айван,

Укçашăн сана сутма
Хатĕр савнă тусу,
Ылтăн-кĕмĕл укçапа
Сутăнать халь юрату.

Юмахри пек халь çапла
Çитрĕ тыллăм пурнăçа,
Укçа тĕшмĕш карчăк пек
Илнĕ пире тыткăна.

Ăна халĕ çав-çавах
Хура юн е таса юн,
Ахăрать вăл кунсерен
Арăш-пирĕш вăхăтра.

Тĕлĕнмелли ним те çук,
Пурнăçĕ халь çавăн пек,
Мул умĕнче пурте çав
Çӳретпĕр халь тарçăра.

Суккăр куçĕ тимĕр куç
Хуплать пирĕн куçсене,
Юлашки çын ăс-тăнне
Илет вăл халь юнĕпе.

Укçа çиет пирĕн пуçа,
Укçа канăç памасть чуна,
Пур çĕрте те вăл виçе –
Укçа, укçа, укçа.

## ПАРНЕЛЕ ЭС МАНА ЮРАТУ

Парнеле эс мана юрату,
Юмахри пек çак телее,
Пулăн эс чи çывăх манăн çын
Пурнăçра та юратура.

Çăл куç пек тап-таса юрату
Тулли пултăр пирĕн чунăмра,
Ан тăкăнтăр куççуль пулса,
Ах, упрасчĕ ăна ĕмĕрех.

Кĕвĕлес терĕм эп çак юрра
Ир килекен шуçăм çутипе.
Телей патăр пире çитес кун
Çак илемлĕ пысăк çĕр çинче.

## АХАЛЬТЕН МАР...

Ахальтен мар эпĕ
Тĕл пултăм сана,
Эс пит килĕшетĕн
Чăтăмсăр мана.

Мĕн тери аван-çке
Санпа пĕрле чух,
Канăçсăр тапать-çке
Ман хĕрӳ чĕре.

Пĕрле пулма пирĕн,
Тусăм, юрамасть,
Терĕн эс салхуллăн
Ман çине пăхса.

Ăнланап-ха эпĕ
Эс каланине,
Анчах темшĕн, тусăм,
Уйрăлас килмест.

Шанăça çухатмăп
Эпĕ нихăçан,
Сана юратмашкăн
Чараймĕ никам.

Сывă пултăр ялан
Пирĕн юрату,
Чунăма çутаттăр
Кашни тĕлпулу.

Эс хитре, илемлĕ
Чипер хĕрача
Мĕншĕн халь кăна-ши
Тĕл пултăм сана?

# ХАМ ЧĂВАШ ПУЛНĂРАН

Савăнатăп эп
Чун-чĕререн
Хам чăваш пулнăран,
Чăвашла сăмахлар,
Чăвашла юр юрлар.

Пĕр çемьери пек
Пурăнмалла,
Пурнăç илемĕпе
Савăнма пĕлмелле,
Упрама пĕлмелле.

Ĕненетĕп эп
Хам халăха,
Хĕрӳ чăваш чĕрине,
Тăванла туйăмпа
Ыталăп эп сире.



## Руслан САЙФУТДИНОВ

Руслан Магомедович Сайфутдинов 1988 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Янтуш ялĕнче çуралнă. Мĕн пĕчĕкрен çак ялта кукашшĕпе кукамăш патĕнче пурăннă. 1–7-мĕш классенче Янтуш шкулĕнче, унтан Сăнав поселокĕн вăтам шкулĕнче вĕреннĕ. Шкул пĕтерсен И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче журналистика факультетĕн чăваш уйрăмĕнче ăс пухнă. Халĕ куçаруçăра, журналистра ĕçлет.

Руслан пĕрремĕш хайлавĕсене шкулта вĕреннĕ чухнех çырма пуçланă. Çав вăхăтран вăл район тата республика хаçат-журналĕсенче пичетленет. Çамрăк çыравçă хăйĕн хайлавĕсенче пурне те паянхи пурнăç кăткăслăхĕ пирки пĕр самантлăха та пулин чарăнса тăрса шухăша кайма сĕнет тата çумри çынсен хуйхи-суйхине ăнланса илме чĕнсе калать.

## КĔТЕÇÇĔ

Сан куçусем ытла салхуллă, теççĕ.
Суяççĕ пуль. Вĕсем салхуллă мар.
Вĕсем, тен, такама ялан кĕтеççĕ?
Вĕсем такамсăр савăнасшăн мар.

Калаçнă чух эс савăнăçлă, теççĕ.
Суяççĕ пуль. Эп савăнăçлă мар.
Манран, тен, пурте савăнăç кĕтеççĕ?
Чун йĕнине вĕсем курасшăн мар.

Сан аллусем ытла та ăшă, теççĕ.
Суяççĕ пуль. Ман аллăм ăшă мар.
Манран, тен, вут-кăвар вĕсем кĕтеççĕ?
Чунăм шăнни вĕсемшĕн ним те мар.

* * *

Шап-шурă юр таврара выртать.
Тĕлĕкри пекех хăвна туятăн.
Утăм хыççăн утăм эс тăватăн,
Шап-шурă юр çинче йĕррў юлать.

Эс пĕр-пĕччен çак тĕнчере утатăн,
Эс пĕр-пĕччен çак юр çине пусатăн.
Сан йĕр кăна çак шурă юр çинче.
Чĕрў таппийĕпе пурнать тĕнче.

Сан ӳпкӳпе сывлать çак шур тавралăх.
Сан куçупа йĕрет çак çут тĕнче.
Эс йăл кулсан, йăл-йăл кулать çанталăк.
Эс шăп пулсан, шăп! Шăпланать тĕнче.

## ПУРНĂÇĔ КУЛĂШЛА

Кĕçĕр эп кĕле хумарăм.
Тен, сана кĕтетĕп пуль.
Калас терĕм, каламарăм,
Пурпĕр илтмĕн терĕм пуль.

Эс хапха умне те пытăн,
Тăтăн ним чĕнмесĕр.
Кантăкран эп пăхрăм. Куртăн,
Эпĕ те чĕнмерĕм.

Кĕрес терĕн те – кĕмерĕн,
Кĕле хунă терĕн пуль.
Калас терĕн, каламарăн,
Пурпĕр илтмĕ терĕн пуль.

## ИРХИ ТĔНЧЕ

Ирхине эп тухрăм пахчана,
Пĕр сас-чӳ те çук, пĕр çил кăна.
Мамăк евĕрех шап-шур тĕтре
Ачашланăн хупăрланă чиене.
Çĕмĕртсем ларaççĕ илĕртсе,
Улмуççийĕ сапаланă туратне,
Шăрçа пек илемлĕ хурлăхан,
Сип-симĕс те ешĕл халь палан,
Куççене туртать хăмла çырли...
Ирхи тĕнче вăл, чăн та, чун уççи!

## ÇĂКА

Сар хĕвел хĕртнĕ чухне
Ват çăка çумне ларaттăм,
Унăн сулхăнĕнче
Шăрăхран эп пытанаттăм.

Çеçке çурсан çăка патне
Чечекне пухма чупаттăм,
Вĕрететтĕмччĕ чейне,
Хаваспалах тутанаттăм!

Пĕчĕк шăпчăк юррине
Каçа май унта тăнлаттăм.
Хам пуласлăхăм çинчен
Йывăç айĕнче шутлаттăм.

Халь те килтĕм эп кунта,
Çăкана курмарăм.
Ларас терĕм сулхăнта –
Шел те, лараймарăм.

Ешĕл курăк хушшинче
Тунката çеç юлнă.
Мĕн тăвас тен – çĕр çинче
Ним те ĕмĕр пулмĕ.

* * *

Куçа хупсассăн çут тĕнче пĕтмест,
Ăна курма кăна эс пăрахатăн.
Куçне хупсассăн йыт та çӳреймест –
Куçна хупсассăн эсĕ такăнатăн.
Çынна куçне хупса ларма паман –
Çут тĕнчере курмасăр пурăнаймăн.
Чун-чĕрене чул пек хытма паман –
Чĕре чул пек хытсассăн юратаймăн.

## ШУХĂШ АВĂРĔ

Тĕлĕксенче пĕр ывăнмасăр таçта
инçе çитсе килетпĕр.
Тĕлĕксенче пĕр ывăнмасăр çӳлтен çӳле,
çӳлтен çӳле вĕçетпĕр..
Ĕмĕчĕсем.. Шухăшĕсем.. Ытла çунатлă!..

Тен, тăвăр пире çак çутă тĕнче?
Тен, çавăнпа ялан таçта утатпăр?
Тен, çавăнпа ялан таçта вĕçетпĕр?

Ялан.. Ялан! Ялан çак тăвăр пурнăçран
тарса çăлтăрсем патне çитме ĕмĕтленетпĕр.
Уйăхпа тан, хĕвелпе тан пулас теетпĕр.

Ывăнатпăр пулĕ çак пурнăçра йĕрсе...
Ывăнапăр пулĕ вĕри куççуль тăкса...
Канăçлăх шыратпăр тӳпере...

Паян эп куртăм çăлтăр ӳкнине....
Вăл кăн-кăвак тӳпене çурса çĕр ытамне ыткăнчĕ...
Тен, çутă çăлтăр уйăхпа та, хĕвелпе те мар,
Тен, çутă çăлтăр этемпе тан пуласшăн?

Тен, пирĕштин таса çуначĕсем уншăн
йăтайми йывăр çĕклем пек пулчĕç?
Тен, эпир пурнăçран тарас тенĕ евĕр
çăлтăр пурнăç авăрне кĕресшĕн?

Çăлтăр юратса курасшăн..
Çăлтăр куççуль тăкса йĕрсе курасшăн..
Çăлтăр кăкăрта чĕре тапнине туясшăн..

Тен, çăлтăрсем те лăпкăн çывăраççĕ..
Тен, çăлтăрсем те тĕлĕксем кураççĕ..
Тен, çăлтăр хăй тĕлĕкĕнче этем пулса
çак тĕнчене килет?
Тен, çăлтăр та этем пулма ĕмĕтленет?

Ĕмĕте парăннă çăлтăр кĕçĕр çĕр çине анчĕ..

* * *

Пахчари улмуççи шурă юр айĕнче
асамлă тĕлĕк курать пуль:
Хăйне çурхи хĕвел ытамĕнче
шап-шур çеçке айĕнче пулнăн туять пуль,
Çил-тăман алхасса уласа йĕнине
Вăл: «пыл хурчĕ сĕрлени ку», – теет пуль.

* * *

Чĕререн тухман сăмах
пуçран тухать пуль...
Ăс çивĕч пулнăран
вăл чĕрене касать пуль...

* * *

Калайман сăмах
кĕмĕл тенкĕ евĕр
чун çӳпçийĕнче
упрантăр.
Вăл хăй хакне çухатсан та
пулни-иртнин
палăкĕ пулса юлтăр.

* * *

Калаçса çитет пуль?
Чĕре
тапнине
итлер мар-и?

* * *

Шартлама сивĕре
сар хĕвел çутинче
çут тĕнче ылтăн евĕр
илемлĕ.

* * *

Сар хĕвелĕн ылтăн шевлийĕ
хĕл сиввине касса
шурă юр çине
ачашшăн
выртрĕ.

* * *

Эп сана ман телейӗм тесеччӗ,
Эсӗ те юрататтӑн мана.
Саншӑн ҫеҫ эп пурӑнаттӑм, пикеҫӗм,
Эсӗ те пултӑн маншӑн анчах.

Эп сана кӗлчечек парнелерӗм,
Эс ӳкертӗн ӑна ҫӗр ҫине.
Эп сана чӗреме парнелерӗм,
Эсӗ култӑн ман туйӑмсенчен.

Ирхине пӗр-пӗччен вӑранатӑп,
Каҫсене ирттеретӗп пӗччен.
Урӑххин ытамне ыткӑнатӑн,
Ман ҫинчен эсӗ мантӑн кӗҫех.

Юрататӑп тесе каламастӑп,
Пӑхмастӑп санӑн куҫунтан.
Ҫухатсан та сана шырамастӑп,
Эсӗ хӑв та ҫухатрӑн мана.

## МАРШ

Эпир ҫут тӗнчене пӗтме килмен,
Турӑ ахальтен пурнӑҫ паман пире.
Эпир асаттесен ятне ҫӗртмен,
Эпир вӗсен сӑмахӗнчен иртмен,
Эпир пурнатпӑр вӗсен халалӗпе.

Çил çунатла эпир малтан мала
Малашлăха чунпа шанса утатпăр.
Çил çунатла эпир малтан мала
Аваллăха чун-чĕрере тытса
Телейлĕ пурнăç никĕсне хыватпăр.

Такăнасси те пулнă, пулман мар,
Анчах та пур-пĕр хуçăлман, пурнатпăр.
Çил-тăвăл та пире аркатайман,
Вут-çулăм та пире тĕп тăвайман,
Эпир паян та малаллах утатпăр.

## КӐ̆ЛĔ ХĔРРИНЧЕ

Лăпкă кӳ̆лĕ хĕвел çутинче
Ылтăн тĕслĕ хĕлхем сапалать.
Чун савниçĕм, илтсем чĕннине
Ман чĕрем пĕр саншăн çеç çунать.

Кăвар пек кĕлчечек çыххине
Сан валли эпĕ пухрăм паян.
Чĕрери юрату туйăмне
Шыв сапса сӳ̆нтерме ан васка.

Тĕл пулу ăнсăртран пулас çук,
Турă пӳ̆рнĕ пире тĕл пулма.
Манăн сансăр пĕр канăç та çук –
Эп пĕлетĕп: эс – манăн шăпам.

Лăпкă кӳлĕ хĕвел çутинче
Ылтăн тĕслĕ хĕлхем сапалать.
Пĕр-пĕрне тупнă ик чĕрене
Пĕр пулма пил парса саламлать.

## САВĂНĂÇ ЮРРИ

Авăтать куккук,
Вăрман каш-кашлать,
Сар хĕвел шевли
Манпала вылять.

Авăтсам, куккук,
Вăрман, янрасам,
Ман телейĕм пур
Сар хĕвел савсан.

Çăлкуç шывĕпе
Питĕме çăвап,
Тăрă шывĕпе
Ăша кантарап.

Авăтсам, куккук,
Вăрман, янрасам,
Ман телейĕм пур
Çăл куç пулнăран.

Тӳлек çил лăпкать
Тăван ялăма,
Чунăм савăнать
Тус-тăван пуртан.

Авăтсам, куккук,
Вăрман, янрасам,
Ман телейӗм пур
Тăван ял пуртан.

Авăтсам, куккук,
Вăрман, янрасам,
Ман телейӗм пур
Тус-тăван пуртан.



# Нина ПĂРЧĂКАН

Нина Алексеевна Семенова 1955 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Мăнçут ялĕнче çуралнă. Чăваш Республикин тата Раççейри писательсен Союзĕн членĕ (2009). Вăтам шкул хыççăн Тутарстан Зеленодольск хулинче медицина техникумне пĕтернĕ. Шупашкар «Электроприбор» заводĕнче фельдшерта, В.И. Чапаев ячĕллĕ заводăн ача-пăча поликлиникинче медсестрара ĕçленĕ. Халĕ тивĕçрĕ канура.

Нина Пăрчăканăн çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: «Пил ывăлсене» (2001), «Хĕвел пайăрки» (2001), «Çула тухрăн пулсан утмаллах» (2003), «Тăван енĕм, тăван ен» (2005), «Хĕллехи çумăр» (2009), «Сарă тĕпел» (2010), «Мĕншĕн анне йăл кулать» (2011), «Тата мĕншĕн пурăнас-ха çĕр çинче» (2015). Кĕвĕ ăстисем унăн сăввисемпе юрăсем хывнă.

## АЧАЛĂХРИ АСАМЛĂХĂМ, КАÇАР

Çук, шăнкăрав кĕтместĕп эп санран,
Ачалăха та пурпĕр таврăнаймăп.
Сан тăвану ятна асăннăран
Хамра чăнах, туятăп, пур пек айăп.

Хура кĕрсем çухатнă çулсене
Çурхи шывсен кĕрлевĕ илсе кайнă.
Сивĕ хĕлсем хупланă чунсене
Кăвайт чĕртсе те ăшăтаймăн.

Ачалăхри, асамлăхăм, каçар,
Пулни – иртни нихçан та таврăнаймĕ
Халь урăх вăхăт пирĕншĕн хуçа,
Сан умăнта пуçа кăна халь тайăп.

## ÇĔНĔ КУН КĔПЕРĔ

Шурăм пуç кĕрен тĕсĕпеле
Илем кĕртрĕ пирĕн тĕпеле.
Сар хĕвел çич тинĕс леш енчен
Парнелет çĕн кун çут тĕнчене.

Кайăксем юрлаççĕ ирхине
Çĕнĕ кунăн савăк юррине.
Эй, тăванăм, çĕн куна кĕтер,
Çут тĕспе хывайтăр вăл кĕпер.

Çĕнĕ кун кĕперĕ туймаллах
Савнăçпа уттартăр малаллах.
Шурăм пуç кĕрен тĕсĕпеле
Шанчăкпа çутаттăр тĕпеле.

## ЭСИР ПУРТЕ МАНĂН ХУРĂНТАШ

Савнă кил, атте-анне пил пачĕ
Çирĕппĕн те çăмăллăн утма.
Тус – тăванлăх, йăх – тымар хăвачĕ
Вĕрентет сăпайлă çын пулма.

Савăнса çӳрем çĕршывăм тăрăх,
Илемпе туллин халь киленем.
Юрату юрри, чун витĕр сăрăх,
Çĕн вăйпа ĕçе те кӳлĕнем.

Тем курсан та çынлăха упрасчĕ,
Тараватлăх пултăрччĕ юлташ.
Чунлăх алăкне яри уçасчĕ,
Кăмăла хуçа пекех тытас.

Мухтанмалăх пур, пуçа таятăп,
Ман атте-анне те чăн чăваш.
Юратса паян сире калатăп:
– Эсир пурте манăн хурăнташ.

# ТӐВАН ÇĔРШЫВ ПЕК ВЫРӐН УРӐХ ÇУК

Тӑван çĕре юратнӑ пĕчĕкрен эп,
Нихçан та шухӑша улӑштарман.
Асаттесен çĕрне пуянлӑх тетĕп,
Пĕлесчĕ пурлӑха ман упрама.

Чун-чĕререн сана эпĕ саватӑп,
Илемӳпе киленĕп яланах.
Тивĕçлипех, çĕршывӑм, мухтанатӑп,
Çĕршыв – анне, чӑнах, чи ӑш сӑмах.

Ак ешерет умра сип-симĕс улӑх,
Ав юхан шыв юхать йӑлтӑртатса.
Салтак тӳмиллĕ вырӑн çук пуль урӑх,
Выртать шыв патнелле çул кӑтартса.

Кунта вырнаçнӑ пурте килĕшӳллĕн:
Çырми, уй-хир, куратӑп вӑрманне.
Çулла ахах-мерчен пекех ир кӳлĕм
Сапать çут сывлӑм хӑйĕн шӑрçине.

Кунта асамлӑх шӑплӑхпа калаçнӑн
Пӑшӑлтататать тавралӑх тепĕр чух.
Ачаш илем ман чĕрере вырнаçнӑ,
Тӑван çĕршыв пек вырӑн урӑх çук.

## ЭП ТЕЛЕЙСĔР ТЕСЕ КАЛАС МАР

Шалкăм çумăр паян çунă чух
Урăх тухмĕ хĕвел теес çук.
Çĕнĕ кун пуçлансан, куççене яр уçса,
Ĕмĕтпе пурăнма тăрăшар.

Тăвану тăванла ал парсан,
Яланах пĕр-пĕрне пулăшсан,
Çуккипе çырлахса, пуррине пайласан
Эп пĕччен-çке тесе калас мар.

Уçă кăмăллă, туслă пулар,
Кĕвĕçсе, вĕчĕхсе ларас мар.
Хурланма та пĕрле, савăнма та пĕлсен
Эп телейсĕр тесе калас мар.

## АЛĂПА УРА

*Юптару*

Тавлашаç пĕррехинче
Алпа ура çул çинче.
– Ывăнтăм хутаç йăтса,
Эс пыратăн çеç утса.
Ак йăтмастăп, пăрахатăп.
Мансăр мĕн тăвăн? Пăхатăп –
Йĕплесе илет те алă,
Усăнать вăл пит кахаллăн.
– Эй, тăхта-ха тет ура,
Сӳпĕлтетме эс пăрах.

Эп сана йăтса пыратăп,
Алă, шăпланма ыйтатăп.
Килĕшсе вара киле
Кайрĕç лăпланса пĕрле.
Пурте туслă пурăнасчĕ,
Пĕрлĕхре телей тупасчĕ.

## ПĔР ХУÇА

*Юптару*

Пĕр кĕлетре пурнаççĕ чĕр чунсем:
Йĕке хӳре çемйи те шăшисем.
Ертӳçĕ çак йышра кирлех пире,
Пуху пухар, тет, пĕр йĕке хӳре.
Мана лартсамăрччĕ халь пуçлăха,
Эп самантрах çĕнтерĕп выçлăха.
Лартаççĕ пуçлăха часах ăна,
Йĕке хӳре кĕтет çакна кăна,
Май çук йăпăлтискер пакăлтатать,
Хăйне çӳлти патша пекех тытать.
Пурна киле кĕлет те пушанать.
Пурлăхпала вăл çеç хуçаланать.
Валеçнĕ вăл тырра кам çывăхрах,
Шăшийĕсем юлаççĕ, тет, выçах.
Кам çывăхрах тулли хуран патне
Ыттисене хумасть вăл çын шутне.

# САН СĂНУ УМРАХ, ЧĔРЕХ

Хĕвел анăç шĕл кăварĕ
Вăрман хыçне пытанать,
Чечекпе шевле вылярĕ,
Ак, шыва чăмса анать.

Çаруран шыва кĕретĕп,
Тусăмсем – яка чулсем,
Пуçтарам, хурам-ха ретĕн,
Ĕлĕкхи пекех вĕсем.

Сирĕнпех пуль ман ачалăх,
Тен пăхать те пуль шывран.
Юхан шывăм, мĕнех калăн?
Эсĕ калăн: «Ан шыра.

Инçете вăл юхса кайнă,
Тек килеймĕ каялла.
Тепĕр чух, ас илнĕ майăн,
Кил, çӳре тăван яла».

Çĕрĕм – шывăм, савнă вырăн,
Эсĕ манăн чĕререх.
Тăван енĕм, лайăх пурăн,
Сан сăну умрах, чĕрех.

## КУПĂСА ИТЛЕРĔМ ШĂПЛĂХРА

Хут купăса итлерĕм шăплăхра,
Вăл яшлăха çитерчĕ самантрах.
Аса илтерчĕ вăйă картине,
Нихçан манми ачалăх сассине.

Вĕçейрĕм улăх тăрăх лĕпĕш пек,
Калаçрăм ăшшăн савнă аннепе.
Ачалăхра эп чупрăм çаруран,
Аса илӳ çеç юлĕ çырура.

Яш купăссă кайнă-мĕн, халĕ çук.
Хут купăсĕ йĕрет-çке тепĕр чух.
Ун сассипе вĕçес самантлăха
Таса та çутă, савăк яшлăха.

## ПУРĂНАТĂП САНПА МУХТАНСА

Сансăр эпĕ питĕ тунсăхлатăп,
Тăван ен, илемлĕ савнă ял.
Чунăмра чĕр палăках лартатăп,
Чĕрере санпа çеç пур вăй-хал.

Санпала ялан вун çиччĕри пек,
Çак асамлăх чунăма лăпкать.
Савăнса тапать туллин чĕре те
Мĕн пурри телей пек курăнать.

Чунпала кунта чăнах канатăп.
Ытаму сан ырă та таса.
Çĕрĕм-шывăм, тав туса калатăп:
– Пурăнăп санпа эп мухтанса.

## ПĔЛЕТĔП ЭП ÇĔРШЫВ ИЛЕМЛИНЕ

Çут тĕнчерен хакли чăнах та çук.
Вăл ешерет ем-ешĕл тĕспеле.
Шыв-шур типсессĕн çитрĕ савăк çу,
Ун ăшшине ватти-вĕтти пĕлет.

Сиренĕм халь шап-шурă кĕпепе,
Инçетренех пурне те илĕртет.
Улăштармастăп ылтăн-кĕмĕлпе,
Чăн-чăн пуянлăх, акă вăл кĕтрет.

Эс шăпчăкăм, юрлатăн ир-ирех,
Ас илтерет юрру сан иртнине.
Хавхаланса çĕкленчĕ чун-чĕре,
Пĕлетĕп эп çĕршыв илемлине.

## УПРАСАМ ЭС МАНА

Итлесем мана, савниçĕм,
Эс управçă, çывăхскер.
Юнтармастăп, кăмăл уçă,
Юрату ĕмри кĕске.

Юрату чечек, ачаш вăл,
Хĕлĕхрен те çинçерех.
Вăрçă, выçлăх та аташмĕ
Вăл пулсассăн тĕнчере.

Ăш сăмах тупаймасассăн,
Сиввĕн çеç пăхсан пĕрре.
Кӳренӳ кăна алхасĕ,
Ним те юлмĕ чĕрере.

Юрату вăл пит черченкĕ,
Ванса кайĕ кантăк пек.
Юрату çурхи чечекĕн
Çурăлаймĕ урăх тек.

## ТУСĂМСЕМ, СИРЕ ÇАКНАХ СĔНЕМ

Савăнмашкăн пирĕн манас марччĕ,
Юр çăвать-и е хĕвел пăхать.
Шур сиренĕм чечеке те ларчĕ,
Çуркунне çитни – телей, паха.

Ыррине курма пăрахас марччĕ,
Чунăма пăвсан та хура мур.
Йăл кулам та, кӳренӳ те тарчĕ,
Сивĕнмен-ха чун, ăш туйăм пур.

Кĕркунне пулать-и, хĕл çитет-и.
Ан çухалтăр куçăмран илем,
Хурлансан та савăнма пĕлетĕп,
Тусăмсем, сире çакнах сĕнем.



## Иван СЕМЕНОВ-ШАХТЕР

Иван Трофимович Семенов-Шахтер 1926 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Чечейкасси Туçа ялĕнче çуралнă. Малтан пуçламăш шкул, унтан вăтам шкул вĕренсе пĕтернĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, çапăçури хастарлăхшăн медальсем илме тивĕç пулнă.

И.Т. Семенов-Шахтерăн 1948 çулта «Ялав» журналта «Походра» поэми пичетленнĕ. Унта салтак пурнăçĕпе пĕрлех вăл тапхăрти самана паллисене çутатса пама тăрăшнă.

Донбасра шахтăра 15 çул ĕçленĕ хыççăн, пенсие тухсан, Шупашкар хулине пурăнма куçнă. Тĕрлĕ темăпа чылай сăвă çырнă. Вĕсем публицистикăллărах янăраççĕ. Нумайăшĕ хаçат-журналта, авторсен пĕрлешӳллĕ кĕнекисенче пичетленнĕ.

Иван Шахтер сăввисене вырăсла та куçарнă. Вĕсем «Правда Украины», «Социалистический Донбасс», «Дружба народов» журналсенче пичетленсе тухнă.

И.Т. Семенов-Шахтер 1993 çулта çĕре кĕнĕ.

# ЮРЛАКАН АЛĂ

Тĕрлет вăл тĕрĕ е тĕртет вăл пурçăн,
Е вĕçмелле ун çăлтăрсем патне.
Касать, чутлать вăл, шăрататать вăл хурçă, –
Вăл çĕнетет çĕршыв сăн-сăпатне.

Пĕрмай ĕçре! Юрлаканни вăл алă,
Епле юрлать! Сăмаххисем епле!
«Чул çурт, пул улăп, – тет, – çын, пул çунатлă!
Кĕпер эс çыхăн, – тет, – хĕвелпеле!»

Сасăпалах юрлать вăл кунĕн-çĕрĕн,
Анчах пурне те илтĕнмест юрри.
Итлес килсен ун ĕçĕнчен ан йĕрĕн,
Манпа пĕрле пулса ĕçле юри.

Пĕлĕтпеле çĕр хушшинчи тем анлăш уçлăха
Пĕтертĕмĕр тимĕрпеле çыхса-каркаласа.
Çӳретпĕр сывлăшра телейлĕн умлăн-хыçлăн халь
Е юрă юрласа, е сăвă-кĕвĕ каласа.

Анчах пăхатпăр та аялалла хутран-ситрен,
Шалт тĕлĕнетпĕр хамăр çакăнта хăпарнинчен.
Пĕрмай çĕрте çӳренинчен тата кĕтмен çĕртен,
Çурт тунă май, хĕвел патне çитме пултарнинчен.

Пĕлместпĕр те шута илместпĕр халĕ çак йăлтах
Чунри паттăрлăхпа хастарлăх ĕçĕ иккенне, –
Эпир куратпăр пĕр вĕççĕрлĕхе кăна тата
Çӳле каймашкăн нимĕнле чăрмав та çуккине.

## ПУРНĂÇ ЙЫВĂÇĔ

Шавлать, кашлать...
Кашлать хăватлă пурнăçăн
Хунавсемпе хупланнă ешĕл йывăçĕ...
Шавлать, кашлать! Хăех, тăр пĕчченех
Çак вилĕмсĕр илемлĕ ешĕл йывăç –
Этемшĕн çуркунне. Ун шавĕнче
Илтĕнет пурнăç умĕнчи малашлăхăн
Юррисемпе сассисене. Чĕнет.
Пулма хăй пек хаваслă, çĕкленӳллĕ,
Чĕнет телейлĕ, вилĕмсĕр пулма
Çынна вĕл хăйĕн пурнăçне сĕнет!

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Кун-çул тени пĕрмай чипер пымасть,
Хăш чух пулаççĕ тĕксĕм вăхăтсем.
Умра телей пулассăн туйăнмасть,
Вара кăшт усăнаççĕ алăсем.

Анчах ĕçре пулать пĕр ыр самант, –
Ун чух пите пĕрсе тухсаан тар,
Ун чух чуна нимскер те ан амант, –
Ун чух ăш-чикĕм манăн шĕл кăвар.

Ун чух пĕлместĕп ывăнма-ырма,
Пĕлместĕп эпĕ лăпланса ларма,
Пĕлместĕп ăсăмпа йăвашланма,
Пĕлместĕп чунăмпа тăвăрланма.

Тăван çĕршыв! Манми Тăван çĕршыв!
Çынна телей çеç сĕнекен çĕршыв,
Чун-чĕрене ăшăтакан çĕршыв,
Çын кун-çулне çутатакан çĕршыв.

Çĕршыв анне! Сан йăлтăр çăлтăрун,
Сан хĕвелӳн çутийĕ ун чухне
Лекет сан ывăлун, сан паттăрун,
Сан ĕçченӳн, сан этемӳн чунне!

## Николай СЕРГЕЕВ

Николай Васильевич Сергеев (Перинов) 1937 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Кĕсерпуç ялĕнче çуралнă.

Йĕкĕрвар вăтам шкулĕнче вĕреннĕ. Училище пĕтерсен тракторист ĕçне алла илнĕ. Статьясем, очерксем, сăвăсем çырать. Район хаçачĕнче 34 çул ĕçленĕ, халĕ тивĕçлĕ канура. Раççей Федерацийĕнчи журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ.

### ĂÇТА ЭС ХАЛĔ, МАН АЧАЛĂХ?

Ăçта эс халĕ, шухăшсăр ачалăх,
Канлĕх парнеленĕ хуп сăпка?
Çухалтăр мар-и курăнса наччаслăх
Çурăмран хуллен лăпка-лăпка.
Мĕн-ха вăл пурнăç алăри ачашăн?
Эп ăна ун чух пач тĕшмĕртмен.
Анне чĕрçи çинче сиксе ачашшăн

Терт-асап мĕнне те пĕлеймен.
Çĕршывра кĕрленĕ вут-хĕмлĕ тăвăл,
Шеллемен шăпа сана, мана.
Мĕнпур çынсемшĕн ирсĕр вăрçă
Чăн та пулнă ахăр самана.
Каярахпа çакна ăнланнă хамăр
Выçă ларса та, сивве тӳссе.
Йывăрлăхра пачах пуçа усмасăр
Çын шутне кĕрсеччĕ тек ӳссе.
Çав халсăр вăхăта епле-ха манăн:
Ас илсен чĕре сиксе сурать!
Сăрăлтатса тăрать паян та манăн
Хăмăлпа чĕртернĕ ал-ура.
Ачалăха кӳренмĕп эпĕ пурпĕр.
Пурнăçшăн эс пултăн кăсăкли.
Унсăрăн илĕртсе тăмасчĕ пулĕ
Хамăр ăсталанă тăм шăхлич.
Халь те ачалăха эп таврăнатăп,
Шухăшпа вĕçсе унта çитеп.
Анчах... кун-çулăн вĕçĕнче тăратăп,
Тен, ăна вăл талăкпа виçет.
Пăртак вылянчăк, шухăшсăр ачалăх,
Санра ăмсанмалли те сахал мар.
Çавăн çинчен, пĕр вĕçĕм асăнмалăх,
Çырсамччĕ маншăн, ВĂХĂТ, мемуар.

## УМРА ÇĔНĔ ÇУЛ

Каллех тăрать Çĕн çул умра.
Çиçет паян вăл çĕн тумра.
Илĕртекен шукăль сăна
Курмастпăр пуль ăçта кăна.
Раштав ал пачĕ кăрлача.
Уншăн савнать ача-пăча.
Çĕн çул елки – пин-пин тĕсре.
Çуталчĕ халь пур кĕтесре.
Шап-шурă тумĕ юр пикен
Ахах-мерчен пекех иккен.
Мăн сухаллă Хĕл мучин
Кутамккинче парне тулли.
Кашни ача илет ăна
Пырса çитсессĕн елкăна.
– Парнешĕн тав! – тесе сăмах
Хушса хурать вăл туххăмрах.
Савнăç шевли – сăн-питĕнче.
Ахаль-им савăк ку тĕнче!

## ЛĂПКĂН ВАРКĂШ

О, çил! Санра çут çанталăк вăйĕ.
Хăш чух йăваш эс, хăш чух кăра.
Хирĕçлес çакна теме кам хăйĕ:
Вăйна кăтартатăн туххăмра.
Çу каçĕсенче эс лăпкă саслă,
Тем калаçатăн ăвăс çулçипе.
Ӳсет те чунра ман ытараслăх
Тĕл пулас килет ун хуçипе.

Кун пек чухне ӳт-пӗве-ҫке ҫӑмӑл.
Мӗн ҫиттӗр ҫав уҫӑ варкӑша!
Чун-чӗрери ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл
Кӗрсе вырнаҫать самант ӑша.
Пӗр чӑрмавсӑр мар-и уртӑнатӑн
Утнӑ май эс плащӑн аркинчен.
Кӑтӑша кайса кӑшт туртӑнатӑн,
Лӑпкаса илен хул айккинчен.
Тем тесен те, ку – ытарлӑ пулӑм.
Яланах вӑл пултӑрччӗ ҫапла.
Ҫуралтӑр ялан чунра ыр туйӑм –
Сӑвап туса пире эс сӑвапла.
Анчах... хӑш чух тем тулхӑратӑн,
Эс сӑлтавсӑрах ҫӗклетӗн шав.
Мӗн пуррине ишес пек тустаратӑн,
Таврипех каран хура чаршав.
Эс пачах та апла марччӗ ӗлӗк,
Халӑхшӑн ӗҫлеттӗн арманта.
Вӑхӑту сан, лӑш курмасӑр тӗлӗк,
Тӑрмашса иртетчӗ ҫавӑнта.
Тавралӑх юлчӗ халӗ ҫил армансӑр,
Музей валли те ҫуккӑ ӗнтӗ тек.
Ҫухалчӗ яланлӑхах хыпарсӑр
Сан вӑйна кӳлмешкӗн пӗр тӗрек.
Ҫавӑнпалах, тен, тулхӑратӑн вӗҫсӗр.
Шӑртламас пулатӑн хӑвӑртах.
Эсӗ те халь юлтӑн мар-и ӗҫсӗр.
Айӑпӗ пур пулӗ хамӑртах.
Каҫар. Хӑв вӑйна шӑнараймасӑр
Ан куҫсам нихҫан та тӑвӑла.
Лӑпкӑн варкӑш. Вӗр эс тулхӑрмасӑр,
Ан хуҫ ӑшри пур савӑк кӑмӑла.

## ÇАМРĂК СĂВĂÇА

Поэзире çук такăр çул.
Вăл тикĕс мар, тумхахлă.
Çакна курса ална ан сул,
Сан утăму сулмаклă.
Çăмăл пулмасть
Çула тухсан:
Сив çумăр
Пĕрĕхесшĕн.
Аптратĕ шăрăх та тусан...
Пегасĕ ĕрĕхесшĕн.
Тытса чарма ăна пултар.
Эс çамрăк-ха, вăй-халлă.
Пĕр хĕрхенӳсĕр
Юхтăр тар –
Ку хăвшăн пархатарлă.
Ан пăрăнах тĕрĕс çултан
Таçта вĕçсен те канăç.
Шеп пултарулăху пуртан
Çурататăн мар-и шанăç:
Парнас патне çитсе пыран,
Çулта ан пултăр пăрнăç,
Эс пулнине курать ыран
Данко чĕриллĕ сăвăç.

* * *

Поэт хăй çепĕç чĕлхипе
Анне пирки пĕрре çеç мар
Сăмах ваклавă. Йĕркипе
Сăвă хайланă пуль вуншар.

Атте çинчен темме сахал,
Сайра çыраççĕ ку чухне.
Пире пилленĕ вĕт вăй-хал
Парса вăл пурнăç çеçкине.

## ĂШ ХЫПТАРМĂШ

Пурăнать ялта
Чипер хĕр Укаç.
Каччине, чăн та,
Тыткăнлать ир-каç.

Чăп тути – кулма.
Ай, ытла хитре!
Кĕп-кĕрен улма
Тейĕн сăн-питрен.

Пилĕкĕ çинçе –
Яштака хăва.
Мăшăр куç инçе
Тинкерсе пăхать.

Йĕпкĕн куç харши
Çĕнĕ сăн кĕртет.
Çавă та мар-ши
Юрату пиллет.

Аллисем ĕçчен,
Кĕлетки вăр-вар.
Утти пит ĕлккен –
Епле савас мар?

Савнине кĕтет
Лăпкă урамра.
Чĕтăм йăлт пĕтет
Кун пек чух вара.

Ах, епле тӳсет
Çамрăк хĕр чĕри.
Ăшри хĕм ӳсет –
Кăвартан вĕри.

Канăç çук каччин,
Канăç çук ун та.
Тĕл пулсассăн тин
Лăш пулать чунта.

## КĂМĂЛ

Ку тĕнчешĕн Турă пур пулсан
Çакна çеç уççăн пĕлтерем:
Ун умĕнче çук пĕр айăп ман,
Апла тăк çылăхсăр этем.

Çамрăклăх ăсанчĕ хыçала,
Пыратпăр ĕнтĕ ватăлса.
Ăна тек тавăраймăн каялла
Йĕрсе тăрсан та татăлса.

Эп пулса ялан хаçат çынни.
Çыратăп халь те теплерен.
Çак таранччен хам мĕн çырни,
Тен, хулăнрах та Библирен.

Пурнăçра курман пуль мĕн кăна.
Шăпа тени ачашламан.
Пур пулăма та сăна-сăна
Чуна пĕр вĕçсĕр амантман.

Пĕр пуçлăха та пуç тайман
Йăпăлтатса ун умĕнче.
Темле пулсан та çухалман
Пăтравлă пурнăç хумĕнче.

Хам ĕмĕрте çăхав çырман,
Элек сарман никам çинчен.
Вăрлас шутпа нимскер тытман,
Çапла пурнасчĕ виличчен.

Чунри ăш пиллĕ юратăва,
Чыса ялан упрас килет.
Кăмăл-туйăма куллен сăвва
Кĕртсе пыма вăй-хал çитет.



## Светлана АСАМАТ

Светлана Васильевна Смирнова-Асамат 1952 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче Канаш районĕн Кайри Ăнтавăш ялĕнче çуралнă. Ял шкулне, Канашри педагогика, Шупашкарти Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищисене тата И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ.

Ашшĕпе амăшĕ, Василий Степановичпа Александра Андреевна Степановсем, иккĕшĕ те Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçнĕ. Александра Андреевна, Çĕрпӳ районĕн виççĕмĕш Вăрманкас Ямашра çуралнăскер, Кайри Ăнтавăшра акушерпа фельдшер пункчĕн заведующийĕнче ĕçленĕ.

С. Асамат Çĕрпӳ районĕн Кĕлейкассинче çуралса ӳснĕ упăшкипе Ю.Т. Смирновпа, вăл çĕре кĕриччен, 36 çул пĕрле пурăннă, икĕ хĕр çитĕнтерсе аслă пĕлӳ панă. Çавăнпа та эпир ăна хамăр çын – Çĕрпӳ ен кинĕ тесе йышăнатпăр.

Раççей Федерацийĕн писательсен тата журналистчĕсен союзĕсенче тăракан С. Асамат 23 кĕнеке авторĕ, вĕсен шутĕнче вырăсла çырса 8 кĕнеке

пичетлесе кăларнă. Унăн сăвă, юрă, очерк, калав ярăмĕсем ушкăнпа пичетленсе тухнă 20 ытла кĕнекене кĕнĕ.

С. Асамат – Чăваш халăх поэчĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ тата Ульяновск облаçĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Халăхсем хушшинчи Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ (Чĕмпĕр), Фатых Карим ячĕллĕ (Пушкăрт) тата чăваш хĕрарăмĕсен Эмине ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Чăваш Республикин композиторĕсен Ассоциацийĕн членĕ. 200 ытла юрă кĕвĕленĕ тата 70 яхăн чăваш халăх юррине илемлетнĕ.

С. Асамат сăвăланă тата кĕвĕленĕ 4 юрăпа ташă сюитине: «Асамат юррисем», «Шурă çĕмĕрт çурăлчĕ», «Ĕмĕрлетпĕр ĕмĕре», «Пурăнас килни» – Чăваш патшалăх юрăпа ташă академи ансамблĕ лартнă. Вĕсене тĕрлĕ çĕршывра кăтартнă. Венгрире, Эстонире, Казахстанра иртнĕ пĕтĕм тĕнчери халăхсен музыка, пултарулăх, туслăх тата К.М. Бельман ячĕллĕ «Скандинави – Атăлçи» тĕнчери поэзи фестивалĕсене хутшăннă. Пушкăрт Республикин Пелепей хулинче иртекен тăванла халăхсен «Хавхалану çăлкуçĕсем» поэзи уявĕсен хăни пулнă. Чăваш культурине аталантарас тата сарас ĕçпе республика тулашĕнче ентешсем пурăнакан 30 яхăн регионти ялсемпе хуласене çитсе курнă.

Светлана Асамат хальхи вăхăтра тивĕçлĕ канура пулсан та чăваш наци радиовĕнче вăй хурать, «Сас», «Пĕррехинче» тата «Сăвă кĕлти тĕшшисем» кăларăмсем йĕркелесе ертсе пырать. Сăвă-юрă тата илемлĕ хайлавсем калăплать, кĕнеке кăларассипе тăрмашать.

# МĂШĂР КАЙĂК

Мăшăр кайăк йăвара
Чăвăлтатса лараççĕ,
Чĕп кăларнă вăхăтра
Тем те сӳтсе яваççĕ.

Шуçăмпала черетпе
Юр юрлама пуçлаççĕ.
Ăшă паракан куна
Ырлаççĕ те ырлаççĕ.

Ĕçлемелле – çимелле,
Сывлăм шывне ĕçмелле,
Чĕпсене мĕн кирлине
Йăвана çитермелле.

Çăвар карнă чĕписен
Хырăм выçнă пулмалла,
Вĕсене тăрантарма
Тутлă апат тупмалла.

Çара пакка чĕписем
Мамăклана пуçлаççĕ,
Тяппи çине тăраççĕ те
Çунаттине сараççĕ.

Кайăк йышĕ – пĕр карта
Пуçтарăннă хăнана.
Йăви юлать пушанса,
Пушаннишĕн хурланса.

Йывăçĕ те ал сулать,
Карăнса пăхса юлать.
Таврăнаççех тепĕр çул,
Пултăринччĕ ырă çул.

## ЧУН ÇӐ̆РЕВĔМСЕМ

1

Кĕнекере вуланисем те,
Киносенче курнисем те
Питĕ кăткăслă та хаклă.
Анчах çынна тĕнче
Пуянлăхне куçпа курса
Алпа тытса пăхас килни
Канăç памасть.

Пăралакан ĕмĕтĕме лăплантарма
Пĕррехинче шут тытрăм та,
Тухса вĕçтертĕм.
Самолетпа Египета çитсе
Синай тăвĕ çинчен Шупашкара,
Вăтаçĕр тинĕсрен мăн Атăла
Чуллă тусен çӳллĕшĕнчен
Юрла-юрла салам ăсатнăччĕ
Чунтан саван Чăвашстана.

Египетран Израиле каçса,
Иерусалима таса ӳтпе кĕме
Шыва кĕрсеччĕ Вилĕ Тинĕсре,
Тӳпенелле пăхса кĕлĕ кала-кала
Шывра путмасăр, месерле выртса.

Христос вилсе, чĕрĕлсе тăнă вырăнсем –
Çут тĕнчери чи сумлă та сăваплă вырăнсем.
Унта çӳренĕ эпĕ макăрса,
Христос çĕрне, чулне ытамласа
Тав тунă – Çăлăнăç панишĕн çынсене,
Синай тăвĕ çинче, Моисея
Тыттарнăшăн ун икĕ аллине,
Икĕ чул лапташки çине
Ик алăри вунă пӳрни пекех
Çырнă шăп! вунă саккунне.

Иерусалимран эп каçнă
Асаплă Палестинăна,
Вифлеемри пĕр витери пĕр кĕтесре
Тур Амăшĕ Мария, Христоса
Çуратнă вырăна чĕркуçленсе ларса
Чĕркуççипе те, çамкапа та, тутапа та
Асамлă хӳтлĕх ăшшине
Чун-чĕрempe туйса тав каласа,
Вĕри куççулĕме шăлмасăр юхтарма…

Эп авалхи Иерихон хулин вырăнĕнчи
Виç çăлкуçран тапса тухса
Пĕр кӳлĕри чӳлмек, чечек пек фонтансен
Сăваплă шывĕпе чӳхеннĕ.
Христос, Иорданран шыва кĕрсе тухсан,
Пушă хирте, тусем çинче
Ăна Шуйттан илĕртнине,
Астарнине сирсе ярса,
Хĕрĕх куна пытаннă чăнкă ту çинчи
Пещера çинелле
Куçа чарса тинкернĕ эпĕ аякран.

2

Турцире каннă вăхăтра
Автобуспа кайса килсеччĕ
Пĕтĕм тĕнче пырса çӳрен
Мира-Демре хулинчи
Ту айĕнче вырнаçнă
Çĕр чĕтреннипе арканнă
Чулран каснă чиркĕве.

Çветуй Николай Угодник,
Тепĕр майлă – Чудотворец
Çавăнта ĕçленĕ, вилнĕ.
Чул тупăкра пытарсан,
Мирра кăларса тултарнă
Сим ăшĕнчи шăм-шакне
Италири чиркӳсенче
Ĕçлекенсем караппа
Ишсе килсе çаратнă та,
Бали хули чиркĕвĕнчи
Хăйсен тупри туса хунă.
Венецири купцасем те
Пынă Демре хулине,
Чудотворец шăмĕсене,
Вăрăсенчен юлнине
Пухса кайнă, вырнаçтарнă
Венецири Лидо ятлă
Утравĕнчи чиркӳре.
Хальхи Мира-Демрере
Туристсене кăтартма
Микул Турра çĕре панă
Чул тупăк вырăнĕ çеç.

Хиерополис – авалхи римлянсен
Ишĕлнĕ хули, амфитеатрĕ
Çывăхĕнче – çĕр айĕнчен
Кислород хăпарнипе
Вĕренĕ пек курăнакан
«Клеопатра бассейнĕнче»
Шампăртатса курнăççĕ,
Памуккале тăвĕ çинче
Ӳте, кăвак пылчăкпа,
Сиплĕ кӳлленчĕксенче
Сĕрсе аппаланнăççĕ,
Чула катнă валак тăрăх
Ăшă çăлкуç шывне выртса
Шăм-шака кантарнăççĕ.

Çĕр чĕтреннĕ самантра
Чăлтăр тăрă Эгей тинĕс
Айне пулнă тватă хулан
Ишĕлнĕ керменĕсене
Шыва чăмса куçа уçса
Курса кăсăкланнăççĕ.
Тинĕс хĕрри тăршшĕйĕпе
Чуллă çуртсен пӳлĕмĕнчи
Сĕтелĕпе пуканĕсен
Ванчăкĕсем чылайççĕ.

Авалхи грексен поэчĕ
Гомер çырса хăварнă
Троя хулин вырăнне,
Аваллăхпа çыхăннă
Евфрат, Тигр юхан шывлĕ,
Ванпа Туз – пĕтĕм Çĕр çинчи
Чи тăварлă кӳлĕсемлĕ,

Тватă тинĕс шăваракан
Чуллă-çĕрлĕ, çӳл тусемлĕ
Тĕлĕнтермĕш Турцие
Каясахчех тепре.

3

Тунис çĕрĕнче çĕкленнĕ
Шутсăр пуян Карфагенра –
Пĕр хула патшалăх тăрăх
Утни хăй мĕне тăрать!
Керменсен мăн стенисем,
Колоннăсем, палăксем,
Финикийла çырнă тĕрлĕ
Япала ванчăкĕсем
Куç шăрçинче упранать.

Абу-Саид хулинче –
Турачĕ, вуллисем тулли
Шăрçаллă, тутăрлă парнеллĕ,
Çулçăсăр, армак-чармак
Киремет йывăççи тăрать.
Халь ун вулли çинче хĕрлĕ тĕспе
«Ку Киремет» тесе
Эп çырнине тупма пулать.
Парне туса çакса хăварнă хăйăва
Çил вылятма пуçланине курса
Сăнаса тăтăм пĕр кана –
Дербентри «Нарин-Кала» цитадельти,
Тутарстанри Пӳлер хулин тăвĕ çинчи,
Хамăрăн Атăл хĕрринчи
«Чувашия» сиплев çурчĕн картишĕнчи
Эрешлĕ «Киреметсене» танлаштарса…

Аваллăхра – пĕр чĕлхепе сăмахласа,
Пĕр хуранти пĕр апата
Пĕрле çисе ӳссе аталанса,
Сапаланса кайсан та упраса
Хăварнă йăлапа та йĕркепе
Халь те усă курса пуръннине шута хурса,
Тинĕселле пăхса тăрса шухăшласа…
Тинĕс – тунис, финикийла…

4

Çурçĕрти Пăрлă океанăн
Кольский çурма утравне,
Казахстана, Тюмене,
Кавказа та Кузбасса,
Украинăна, Крыма,
Германие, Венгрие,
Белоруссие, Эстоние
Ĕçпе кайса çӳренисем,
Раççейри ял-хуласене
Нумай республикăсене,
Облаçсене кайса килни
Тавракурăма ӳстерчĕ
Тесен тĕрĕсех пулать.
Кайса курма палăртнă
Çĕршыв нумай, каясчĕ,
Çутă тĕнче пуянлăхне,
Мăнаçлăхне курасчĕ.

Чун çӳреве чун чĕнет,
Тахçан-авал ĕмĕрленĕ,
Ачалăхпа яшлăхра
Пурăннă вырăнсене

Туртсах илсе каясшăн,
Хăйĕн хальхи куçĕпе
Аваллăха чăмса анса –
Ширанине тупасшăн.
Аваллăхри вăрттăнлăхсен
Пĕлтерĕшне, асамне
Хальхи хăйне, хальхи мана
Кăтартасшăн, курасшăн…

Чун вăл таçтан вĕçсе аннă
Кĕтрет кайăк, вут кайăк.

## ЫЙТУ

Мĕн. Ăçта. Хăçан. –
Ыйту паран та
Шухăша каян, путан, чăмса тухан…
Мĕн – пулнă.
Мĕн – кĕтет пире малта.…
Ăçта. Кунта-и,
Е кунтан лере кайсан.…
Хăçан. – Ăçтан пĕлен.... Тахçан…

Эпир мĕн ĕмĕр тăршшĕпе
Ыйту çине ыйту купаласа,
Тишкернĕçем сапаласа-салтса,
Сӳтсе-явса ăшталанса
Тĕрĕс хурав шыратпăр.
Таçта çити чакаланса кĕрсе кайса
Шыранине тупатпăр,
Тимсĕрленсен, айванăн йăнăшатпăр.

Иккĕленӳллĕ тĕрĕслĕх, ултав,
Хирĕçтăруллă чыслăх, тасамарлăх
Çынна нумай пăтраштарать:
Лайăхлатать – пур енĕпе пуянлатать,
Япăхлатать – пур енĕпе чухăнлатать.
Çын умĕнче ялан
Ыйту хыççăн ыйту черетленсе тăрать.
Çынна шухăшламасăр пурăнма,
Чунсăрланма чарать.

## ТĂВАН ЛАЙĂХ

Çăл куç тăрă, шывĕ тарăн,
Çăла сурма юрамасть,
Тăван лайăх, тăван лайăх,
Тăвана сутма юрамасть.
Алла тытнă алтăра та
Çапса ватма юрамасть,
Тăван лайăх, тăван лайăх,
Тăвана прахма юрамасть.

Кĕрекене ларсассăн та
Кăмăл шукăль пултăр-и,
Пĕрне-пĕри кăмăл туса
Шăкăлтатса ларар-и.
Утсем чупса иртеççĕ те,
Тусанĕсем вĕçеççĕ,
Юрла-юрла калаçнисем
Калча пулса ӳсеççĕ.

Йывăр кунсем килсессĕн те
Кампа пĕрле чăтмалла,
Твансем пире пăрахсан та
Кам кусĕнчен пăхмалла.
Автан автать, шăпчăк юрлать
Тул çутăлнă вăхăтра,
Йăпăртатса куççуль юхать
Пĕччен ларнă вăхăтра.

Тăван лайăх, тăван лайăх,
Тăвана сутма юрамасть.
Тăван лайăх, тăван лайăх,
Тăвана прахма юрамасть.

## ÇИВĔТ

Çулла çитнĕ, шкул ачисен
Канмаллисем пуçланать.
Тĕкĕр умне ларнă Санюк
Амăшĕпе сăмахлать:
– Çӳçе кăштах касас пулать,
Çулла çивĕтлес килмест.
Çӳç ман хăвăртах ӳсет,
Тепĕр виçĕ уйăхран
Шкула çивĕт çыхса кайма
Вăрăмланма ĕлкĕрет.

Ах, аннеçĕм, те калас.
Ăнланма пултараймас…
Леш касри, Степанов Вася,
Темшĕн çивĕтрен туртать,

Кӳршĕ Толи те туртасшăн,
Вăл ăна тĕртсех ярать,
Мана такам тĕкĕнесрен
Ялан сыхăра тăрать,
Чышкине сулсах юнать.

Ах, аннеçĕм, эс шутла-ха,
Манăн çивĕтпе, кала-ха,
Çав ача, Степанов Вася
Мĕн тесе хуçаланать.
Пĕлетĕн-и, шухăшласа
Чăнах, пуç та çаврăнать.

Амăш çапла хуравлать:
– Эс çивĕтне мала яр,
Çулăхсассăн тĕртсе яр.
Хĕрĕ хăйĕннех перет:
– Эп ахаль те тĕртсе ярап,
Питĕнчен те çупкăлап.
Тĕртсе ярсан та кулать,
Çапса илсен те кулать.
Пĕрмаях çумра çӳрет,
Шоколад та çитерет…
Амăшĕ чарсах калать:
– Тĕртнине те çапнине
Кӳренменни лайăх у.
Сана шкулта, урамра
Хӳтĕлекен арçын ача
Пур пулсан, савăнмалла,
Сирĕн туслă пулмалла.

Тĕкĕр умĕнчи Санюк
Ик çивĕтне хыçалалла

Персе ячĕ, амăшне
Чăп! чуптурĕ те чуптарчĕ
Юлташсемпе тĕл пулма,
Урамалла, выляма.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

1

Тăван çĕршыв, эс манăн куçăмра
Хĕвел шевлин йăлтăртатса çиçетĕн.
Тăван çĕршыв, эс манăн чунăмра
Хевтеллĕ ăнăçу пулса ӳсетĕн.

Тăван çĕршыв, эс çутă хумлă Атăл,
Савса лăпкатăн шухăш-кăмăла.
Тăван çĕршыв, эс аталан, ан ватăл,
Хавхалантар, утмашкăн малалла.

Çăл куçсенчен ăса-ăса ĕçетпĕр
Çĕр айĕнчен хăпаракан шыва.
Кун-çул йĕррисемпе патвар çӳретпĕр,
Тӳррĕн тытса пуçа, çан-çурăма.

Тăван çĕршыв тĕрекĕпе сĕрепĕ,
Ун несĕлĕ, пуласлăхĕ – эпир.
Тăван çĕршыв мухтавĕ, чысĕ, чапĕ –
Чăваш чĕлхиллĕ халăхĕ – эпир.

Эпир мĕн авалтан чăн паттăр халăх,
Паттăр темелĕх паттăрлăх çук мар.
Хастар пулма пиллет пире патваррăн
Тăван хуламăр Улăп Шупашкар.

2

Эс шан мана, Тăван çĕршывăм,
Эп ĕмĕрне те сутас çук сана.
Эс пулмасассăн, кам-ши эп пулайăм,
Пире хӳтĕлекен хăват – çĕршыв кăна.

Ĕнен мана, Тăван çĕршывăм,
Ятна-сумна эп ӳкерессĕм çук.
Шан та ĕнен мана, Тăван çĕршывăм,
Чысна-шывна эп варалассӑм çук.

Эс çупăрла мана, Тăван çĕршывăм,
Вăй кӳрекен таса сывлăшупа.
Эс шăнăрла мана, Тăван çĕршывăм
Тĕрек паран хастар вăй-халупа.

Тăван çĕрпе шыва таса упрасчĕ,
Тавралăх илемне пуянлатасчĕ.
Çĕршыв тĕреклĕ пултăрччĕ тесе
Чăваш ятне çӳлте тытса пурнасчĕ.

## ШУÇ ЧУМАН

Хăвăрт çывăрса каясчĕ,
Тĕлĕк курасчĕ.
Тĕлĕкре санпа пуласчĕ,
Сана савасчĕ.
Шуç чуманăн шуç урапи
Кăлтăр-кăлтăрти.
Шуç чуманăн йĕс таканĕ
Тăпăр-тăпăрти.

Шуç чуман çине ларасчĕ
Сан пата çитме.
Кĕмĕл шăнкăрав çакасчĕ
Сана илĕртме.
Шăнкăрав çумне çакасчĕ
Пăхăр тăнкăрав.
Шăнкăравпа тăнкăравăн
Илĕртӳллĕ шав.

Пăлханса тухса тăрасчĕ
Сан мана кĕтме.
Илĕртӳллĕн чуптăвасчĕ
Вĕри питĕме.
Ярăнса вĕçсе çӳресчĕ
Пĕлĕт хушшинче,
Уйрăлми çывăхланасчĕ
Тĕлĕк килĕнче.

Шуç чумана чĕнтĕм, чĕнтĕм,
Сас памарĕ шăхăрса.
Шуç чуман вăл урапа-ши,
Урхамах-ши, апăрша?

## ПИРĔН УРАМ ЛЕШ ЕНЧЕ

Пирĕн урам леш енче
Ма йыт вĕрет-ши?
Тăкăрлăкпа, урампа
Такам çӳрет-ши?
Такам мар пуль,
Такам мар пуль,
Хĕрпе каччă пуль,
Уйрăлас килменнипе
Утаслаççĕ пуль.

Кĕтрĕм-кĕтрĕм тусăма,
Ăçта çӳрет-ши?
Урам урлă çӳреме
Йывăр терĕ-ши?
Сас памарĕ,
Сас памарĕ,
Мĕскер пулчĕ-ши?
Çырма урлă каçса килме
Мĕскер чарчĕ-ши?

Хăйĕн урам вăййинче
Савни тупрĕ-ши?
Хăйĕн кӳршĕ хĕрĕпе
Çумăн утрĕ-ши?
Ял варринчи
Кĕпер çине
Анса тăрас-и?
Çăлтăр шыва ӳкнĕ тĕле
Куççуль тăкас-и?

Хĕр тантăшсем улахалла
Кайрĕç паçăрах.
Каччă тусăм, каччă тусăм,
Килччĕ хăвăртрах.
Эпĕ кĕçĕр кулянни
Юлтăр кĕçĕре,
Килĕшнипе туслашни
Пултăр ĕмĕре.

## ВĂХĂТ ЙĔППИ

Кун вăрăмланнă вăхăтра
Тавралăх тумĕсем кăтра.
Кунсем кĕскелнĕ вăхăтра
Тавралăх сăнĕ тунсăхра.

Кун кĕскелет сана кĕтсе,
Каç кĕскелет сана кĕтсе,
Вăрăма кайнă кĕтнисем –
Вăрăма кайнă çумăрсем.

Мĕн тĕрлĕ çимĕç пахчара,
Мĕн тĕрлĕ тĕслĕ пан улми.
Сансăр пуçне çак таврара
Урăххи çук-шим ман валли?

Вăрăм кунсем, кĕске каçсем,
Кун хыççăн кун васканисем –
Вăхăта сансăр иртterme
Питĕ кичем, сĕре кичем.

Ирпеле те, кăнтăрла,
Ĕнтрĕкпе те, каçпала,
Вăхăт йĕппи шаклаттарса
Яра парать малалла.
Вăхăт йĕппи шаклаттарни
Ма пусахлать кăмăла.

## АСА ИЛЕТĔН-ШИ?

Аса илетĕн-ши, аса илетĕн-ши?
Шухăшунта манпа пĕрле
Укăлчана тухатăн-ши,
Аслă уйпа утатăн-ши?

Аса илетĕн-ши, аса илетĕн-ши?
Шухăшунта манпа пĕрле
Йăмра патне çитетĕн-ши,
Çăлкуç шывне ĕçетĕн-ши?

Аса илетĕн-ши, аса илетĕн-ши?
Шухăшупа савни тесе
Мана ятран чĕнетĕн-ши,
Çупăрласа илетĕн-ши?

Шухăш килет, шухăш каять,
Савăнтарать, хурлантарать,
Шухăш вĕçет, чупать, ӳкет,
Чĕркуçленет, упаленет.
Кăшкăра-кăшкăра макăрать,
Ĕсĕкле-ĕсĕкле лăпланать,
Пуçтарăнать, сапаланать,
Выля-выля ачашланать…
Аса илӳ… Аса илӳ…

# ЫТ АХАЛЬТЕН-ИМ?

Ыт ахальтен
Нимскер те çырăнмасть,
Ыт ахальтен
Нимле сăмах та вакланмасть.
Сăмах валли сăмах тума
Хатĕр ялан – сăлтав, ăнлав,
Шĕвĕр ыйту, мăка хурав,
Хирĕçтăрусллă тавлашу,
Йĕпе туталлă мирлешӳ.

Ыт ахальтен кăна-им çуркунне
Çуллен улăштарать тĕнче тумне.
Ыт ахальтен кăна-им кĕркунне
Яваплăн кăтартать ĕçне-сумне.

Ман сăввăм-юррăмсем те пĕр çавра
Карталанса тăраççĕ ман тавра.
Ыт ахальтен пĕрне те хайламан,
Пехиллĕ вăхăта сая яман.

Тупта мана, чун панă ăрăскал,
Шухăшпа ĕмĕт йĕпĕ – ан мăкал!
Тĕрле, йĕрле мана, хавхалантар,
Ыт ахальтен килмест вăл – пархатар.

Шăтма, ӳсме, тӳсме, аталанма
Ыт ахальтен нимскер пултараймасть.
Ыт ахальтен тĕнче те çаврăнмасть,
Çавра тумасăр сывлăш çаврăнмасть.

# КАВИР

Савни чуптунă ал тупанĕпе
Пит-куçăма сĕртĕннисем...
Савнишĕн тунсăхланă вăхăтра
Ас илўпе чуна йăпатнисем...

Телей кĕтмен çĕртен килет тесе
Вăл килессе пурнатăп ĕненсе.
Хăçан, ăçтан таврăнасса кĕтсе
Тват еннелле пăхатăп чĕвĕнсе…

Вăл парнеленĕ тутăра çыхса,
Вăл парнеленĕ шăрçана çакса
Тухатăп час-часах укăлчана,
Чупса пырса ытамлама пĕр хурăна.

Мĕнпур енчен янранă сас-чĕвре
Унăн ури сассийĕ илтĕнсен,
Çав еннелле эп сарăттăм кавир,
Хăть сĕм çĕрле, хăть тăвăл тухнă ир.

# ЁМӖР ТӐРШШӖ

Такӑнмӑттӑм, такӑнмӑттӑм,
Тумхах такӑнтарчӗ пуль.
Хурланмӑттӑм, хурланмӑттӑм,
Хурлӑх чыхӑнтарчӗ пуль

Чупса кайрӑм, чупса кайрӑм,
Утса каймаллачӗ пуль.
Ура айне пӑхса утсан
Чиперех пулатчӗ пуль.

Утасси те, чупасси те –
Пирӗн пурнӑҫ ҫулӗсем,
Савӑнса та, тӑвӑнса та
Хура-шур курассисем.

Йӗресси те, куласси те
Пирӗн куҫа йӗпетет.
Тӗл пулса уйрӑласси те
Пирӗн чуна чӗпӗтет.

Вӗҫен кайӑк, вӗҫен кайӑк
Пӗр килет те пӗр каять.
Пирӗн ӗмӗр алӑкӗсем
Уҫӑлать те хупӑнать.

Килнӗ пулсан, килнӗ пулсан
Пирӗн пурпӗр каймалла.
Ҫӳлти киле таврӑниччен
Ҫӗр ҫинче пурӑнмалла.

Пирĕн ĕмĕр – ĕмĕр тăршшĕ
Куçа уçса хупиччен,
Пирĕн ĕмĕр – ĕмĕр тăршшĕ
Сывлăш пĕтсе çитиччен.

Пĕртен – пĕрех пĕр пурнăçа
Ма хурланса ирттерес.
Шур çӳçеллĕ кăмăлсене
Çиле майлă вĕçтерес.

Ай, эпир те вĕçен кайăк,
Килетпĕр те каятпăр.
Йăва туса, чĕп кăларса
Ĕмĕрсене тăсатпăр.

Турă панă пурнăç çулĕ
Аялалла, çӳлелле.
Турă панă пĕр пурнăçа
Чиперлетме пĕлмелле.

Тăван килĕм, атте-анне
Тавах сире ĕмĕре.
Тăван çĕрĕм, тăван халăх
Ешереççĕ чĕрере.

Пирĕн пурнăç телейĕсем
Çитĕнеççĕ çемьере.
Пирĕн пурнăç илемĕсем
Çӳл тӳпеллĕ тĕнчере.

Ай, пурнăçăм, иртсе кайма
Ытла хытă ан васка.
Тӳсме панă хурлăхсемпе
Ытла хытă ан лăска.

Куç çутине хĕмлентерсе
Хĕпĕртӳллĕн савнар-и?
Пурнас килсе тăнипеле
Хавхаланса пурнар-и?

## ИКĔ САРĂ КАЙĂК

Икĕ сарă кайăк
Тухнă уçăлма,
Шăрçаланнă сывлăм шывне
Тутанса пăхма.

Иккĕн çумăн ларнă
Пĕр турат çине,
Иккĕн çумăн вĕçсе аннă
Курăксем айне.

Икĕ кайăк сыпнă
Сывлăм шăрçине,
Ик çунатне хурса янă
Пĕр-пĕрин çине.

Икĕ сарă кайăк
Янă юрласа,
Ик йăвари чĕппийĕсем
Ларнă тăнласа.

Икĕ кайăк вĕçнĕ
Икĕ еннелле,
Икĕ кайăк вĕçсе кайнă
Хăйсен килнелле.

Чĕлтĕр-чĕлтĕр çиçнĕ
Сывлăмăн шăрçи,
Чĕлтĕр-чĕлтĕр сывлăм шăрçи,
Тен, куççуль шăрçи…

Икĕ сарă кайăкăн
Килĕ – пĕр вăрман.
Икĕ йăва хушшинче
Çаврака çаран.

## ПУРНĂÇ ШАВĔ

Тухас терĕм, тухас терĕм
Атăл хĕррине,
Итлес терĕм, итлес терĕм
Шыв шавланине.

Атăл шывĕ, Атăл шывĕ
Çиле пăхăнать,
Атăл шывĕ, Атăл шывĕ
Çилпе хумханать.
Атăл шывĕ васкаса юхать,
Атăл шывне тинĕс йышăнать.

Ĕмĕр тăршшĕ, ĕмĕр тăршшĕ
Çĕр çул тееççĕ,
Ĕмĕр тăршшĕн вăрăмăшне
Çулпа виçеççĕ.

Çулĕ вăрăм, çулĕ вăрăм,
Е сĕре кĕске,
Çул вĕçĕнче, çул вĕçĕнче
Пĕчĕк тĕмеске.
Ĕмĕр тăршшĕ шăпа аллинче,
Ĕмĕр çути шăпа куçĕнче.

Килсе каяс, килсе каяс
Терĕм хăнана,
Ырă сунса ырă тума
Хаклă тăвана.

Ырă кăмăл, ырă туйăм
Чуна ăшăтать,
Чун ăшшийĕ, чун ăшшийĕ
Ăша çутатать.
Атăл шывĕ шавласа юхать,
Пурнăç шавĕ уçлăхра юлать.



## Галина НĔРĔШПИ

Галина Леонидовна Степанова 1955 çулхи çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Нĕрĕш ялĕнче çуралнă. Ял шкулĕнчен, Çĕрпӳри культурăпа çутĕç тата Шупашкар педагогика училищисенчен, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Хурамал Туçан культура керменĕн илемлĕх ертӳçинче, Çĕрпӳ хулин 4-мĕш ача садĕнче малтан воспитательте, кайран пуçлăхра ĕçленĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура.

Галина Нĕрĕшпи профессипе музыкант, чăвашла тата вырăсла сăвăсем çырать, хăех вĕсене кĕвĕлет. Ача-пăча валли «Çĕрпӳ ен», «Сывлăмпи», «Шăхлич», «Сурпан», «Вăййа чĕнни», «Чăваш тĕрри», «Тухья» тата ытти юрăсем хывнă. Кĕвĕ-çемĕ чунлă Нĕрĕшпи ача-пăча юррисен пуххине магнитоальбомра кăларнă.

Галина Леонидовна çырнă хайлавсене хальхи вăхăтри паллă эстрада юрăçисем В. Клементьев «Сарă хĕр», В. Семенов «Савнă ялăм», К. Ефремов «Çеçпĕлĕм-чечекĕм», «Тăван ялăм», Л. Афанасье-

ва «Савнă ялăм» юрăсене шăрантараççĕ. Нĕрĕшпи сăввисем «Халăх шкулĕ» журналта пичетленнĕ.

Вĕрентӳ тата воспитани ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Галина Нĕрĕшпи Çĕрпӳ район администрацийĕн, Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин, Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ тата ăслăлăх министерствин Хисеп хучĕсене илме тивĕçлĕ пулнă.

Г.Л. Степанова – Чăваш Республикин «Шетмĕпе Çавал кĕввисем» 8-мĕшпе 9-мĕш фестивалĕсен лауреачĕ. Унăн «Тăрăр вăйă картине», «Развитие ребенка-дошкольника средствами чувашского народного искусства» кĕнекесем тухнă.

## ТĂВАН ЯЛĂМ

Тăван ялăм, эсĕ куç умĕнче,
Яланах ман чĕрем варринче,
Эсĕ маншăн хаклăран та хакли,
Юрататăп сана ĕмĕр манми.

Тăван ялăм, ман ачалăх сăпки,
Эсĕ маншăн хаклăран та хакли,
Тăван ялăм, юрататăп сана,
Тăван ялăм, пуç таятăп сана.

Юрататăп çуркунне çитнине,
Çĕмĕртсем çеçкене ларнине,
Улмуççисем ырă шăрш сарнине,
Юрататăп сана ун чухне.

Манаймастăп çав çурхи каçсене,
Çăлтăрсем тӳпере çуннине,
Çамрăксен вăйăри юррине,
Савнипе юнашар утнине.

## САРĂ ХĔР

Сар хĕре тĕл пултăм
Валак патĕнче.
Нарспипе Сетнер пек
Тăтăмăр пĕрле.
Чĕрем хытăн тапрĕ
Сиксе тухасла.
Сарă хĕрĕн куçĕ
Çăл куç пек таса.

Тен, эсĕ асамçă,
Сарă хĕр ача, –
Чуна тыткăнларăн
Хăвăн куçупа.

Кайăксем юрлаççĕ
Çӳлте тӳпере.
Вĕсем саламлаççĕ
Çакă ирхине.
Шывĕ шăнкăр-шăнкăр
Çăл куçран тапать.
Сарă хĕрĕн куçĕ
Мана ачашлать.

Хĕрĕн витри тулчĕ
Çăл куç шывĕпе.
Çамрăксем сисмерĕç
Вăхăт иртнине.
Çĕмĕрчĕ шап-шурă,
Шурă çеçкере.
Хĕрĕн куç хĕлхемĕ
Юлчĕ чĕрере.

## КĂВАК ЧЕЧЕКСЕМ

Чечек çыххи парнелерĕ
Мана паян чун савни.
Шурă, сарă, кăвак, хĕрлĕ –
Маншăн вĕсем чи хитри.

Кăвак, кăвак чечексем
Улăхра нумай вĕсем,
Кăвак, кăвак чечексем
Савни куçĕ пеккисем.

Ирхи сывлăмпа çиçеççĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ чечексем,
Асамат кĕперĕ евĕр
Туйăнаç мана вĕсем.

Чечекпе танлаштаратăп
Хам юратнă савнине,
Чĕрере ялан упратăп
Шăнкăрав пек куллине.

Пыл шăрши сарса лараççĕ
Улăхри пур чечексем,
Шурă, сарă, кăвак, хĕрлĕ
Сан валли, савни, вĕсем.

## САВНĂ ЯЛĂМ

Иртрĕ вăхăт çавра çил пек
Кайни эп ялтан.
Атте килĕ, тăван килĕм
Тухмĕ асăмран.

Савнă ялăм, тăван ялăм
Чунăмра ялан.
Санра çеç мĕнпур вăй-халăм,
Эс – асра ялан.

Чупса тухрăм, чупса антăм
Энĕш хĕррине.
Çакăнта эпĕ ăнлантăм
Пурнăç илемне.

Сарăлса выртать уй-хирĕ
Сарă тулăпа.
Тулăх пурнăç пулĕ пирĕн
Савнă мăшăрпа.

Сан кăкру çинче эп ӳснĕ,
Тăван Çĕрпӳ ен.
Вăй-хăват вара эп илнĕ
Савнă Нĕрĕшрен.

# АЛТĂР ÇĂЛТĂР

Çăлтăрсем вăййа тухсассăн
Каçхи тӳпере.
Алтăр çăлтăра курсассăн
Çĕкленет чĕре.

Алтăр çăлтăр, алтăр çăлтăр,
Эсĕ тӳпере.
Савни эсĕ, савни эсĕ
Манăн чĕрере.

Куç хĕсеççĕ, вăй выляççĕ
Çутă çăлтăрсем.
Юмахри пекех асамлăн
Курăнаç вĕсем.

Лăпкăн-лăпкăн тĕлĕреççĕ
Уйсем, çарансем.
Вăйăра юрă юрлаççĕ
Чăваш пикисем.

Савнипе утатăп çумăн
Ешĕл çаранпа.
Алтăр çăлтăр, алтăр çăлтăр,
Кăтартсам çула.

## УЙĂХ ТУЛНĂ КАÇЧĔ

Уйăх тулнă каçчĕ
Хура кĕркунне.
Йывăçсем тăкатчĕç
Сарă çулçине.

Тăкăнатчĕ çулçă
Нӳрĕ çĕр çине.
Уйрăлтăмăр, тусăм,
Санпа кĕркунне.

Çăлтăрсем çунатчĕç
Каçхи тӳпере.
Аллуна эс патăн
– Уйрăлар, – тесе.

Мĕншĕн сивлерĕ-ши
Мана чун савни.
Мĕншĕн пулмарĕ-ши
Турăçăм пӳрни.

Кусçуль шăпăртатрĕ
Хура кĕркунне.
Чие пуçне тайрĕ
Мана шеллесе.

## ÇЕÇПĔЛĔМ, ЧЕЧЕКĔМ

Юрату чечекĕ
Теççĕ çеçпĕле.
Чăнахах хитре-çке
Çеçпĕл çеçкере.

Çеçпĕлĕм, чечекĕм,
Çуркунне парни.
Чăннипех чечен эс,
Чун савни.

Çур çитсен малтан эс
Çеçкене ларан.
Илĕртсе вăлтан та
Ху патна туртан.

Чи хитре чечекĕм,
Çеçпĕл, эс кăна.
Чун савни пекех эс
Çупăрлан мана.

## НУМАЙ ПУЛАТЬ ЯЛТА ПУЛМАННИ

Нумай пулать ялта пулманни,
Атте-анне патне кайманни,
Тăвансемпе тĕл пулманни,
Кĕрекере пĕрле ларманни.

Нумай пулать ялта пулманни,
Ял-йышпа курса калаçманни,
Улăх-çаран тăрăх утманни,
Энĕш хĕрне анса курманни.

Нумай пулать ялта пулманни,
Сад пахчине тухса курманни,
Çамрăксемпе вăййа тухманни,
Савнипеле пĕрле утманни.

Тăван яла ялан каймалла,
Тус-тăванпа çывăх пулмалла.
Ху çуралнă тăван вырăна
Мĕн виличчен асра тытмалла.

## ТĂВАН ЮРРИ

Чĕнчĕ тăван хăнана,
Кайрăм, эп, арăмпала.
Çитрĕмĕр тăван патне
Уçса хунă хапхине.

Ах, тăванĕ вашават,
Кăрчамипе хăналать,
Кăрчамипе хăналать,
Ăшшăн, ăшшăн ыталать.

Ах, тăванăм, эс, тăван,
Ытла хытă хăналан,
Черкке çине, черкке ĕçсе
Пуçа пычĕ вĕт ĕнте.

Тăван пирĕн кăмăллă
Унăн сăри кăпăклă.
Савăнса ташлас килет,
Юррине юрлас килет.

Хăналантăм, саркалантăм
Эпĕ тăван патĕнче.
Тавах, сана, тус-тăванăм,
Туслăх пирĕн ĕмĕре.

## УЙРĂЛУ

Çуркунне килсе çитсессĕн
Ларчĕ çĕмĕрт çеçкене.
Шур сурпан пек илĕртӳллĕн
Пуçне çыхрĕ хăйĕнне.

Çĕмĕрт айĕнче тăраççĕ
Яш ачапа сарă хĕр,
Уйрăлмашкăн васкамаççĕ
Кĕтсе илчĕç çĕнĕ кун.

Савнă тусăм, кăвак куçăм
Юратап чунтан сана.
Кĕтсе ил мана эс, чунăм,
Каяп эпĕ салтака.

Сисĕнмесĕр иртрĕ вăхăт
Тусĕ килчĕ салтакран.
Çĕмĕрт айĕнчех тĕл пулчĕç
Каччăпа сар хĕр паян.

## ТАВАХ, СИРЕ АТТЕ, АННЕ

Паян аттен, аннен уяв:
Ылтăн туйне тăваç паян.
Кĕрлет, сĕрлет-çке кĕреке
Саламлаççĕ пурте вĕсене.

Аякран килнĕ ачисем
Хĕрĕсемпе, ывăлĕсем
Кинĕсемпе кĕрӳшĕсем
Тăванĕсем, тăхлачисем.

Çăмăл пулман сана, анне,
Пилĕк ачана ÿстерме.
Хăвăр çиес-çке çăкăра
Тен, панă эсир ачăра.

Тавах, сире, атте-анне,
Эсир вĕт пирĕншĕн пĕрре.
Чĕре ăшши эсĕ, анне,
Чĕре таппи эсĕ, атте.

## ШУРĂ АКĂШ

Çутă кÿлĕ çийĕн
Вĕçет шурă акăш.
Анса ларчĕ акăш
Кÿлĕ варрине.

Шурă, шурă акăш
Эсĕ манăн шанăç.
Ма пĕччен вĕçетĕн
Кÿлĕ çийĕпе.

Ман пекех пĕччен эс,
Ман пекех кичем эс.
Мĕншĕн пуçна хунă
Çунату çине.

Тен, сана, амантнă
Темшĕн кÿрентернĕ.
Хурлăхлăн пăхатăн
Эсĕ тÿпене.

Мăнаçлăн çĕкленчĕ
Пĕлĕте шур акăш.
Вăл тупать, шанатăп
Хăйĕн мăшăрне.

## ÇЫРЛАРА

Савнипеле вăрмана
Кайрăм эпĕ çырлана.
Çырли ларать илемлĕн,
Хĕр тути пек чиперрĕн.

Ай, татар-и, çырлине, пиçнине
Çупкăм-çупкăм пĕрлĕхен пеккине.

Илĕртеççĕ çырлисем аякран
Вăй выляççĕ пек вĕсем катаран.
Те ман çырла пуçтарас,
Те савнине ыталас.

Савни тути пыл тути, тупата,
Хĕрлĕ çырли ирĕлет тутара.
Сисмерĕмĕр пĕрне тулчĕ пулмалла,
Каяр, савни, килелле васкаса.

# ТĂВАН ЯЛĂМ, ХУРАМАЛ

Тăван ял-йышăм,
Хурамалăм!
Кĕрнеклĕ, паттăр
Ĕç-хĕлпе эс паллă.
Ят-сумлă çынсемпе пуян:
Мухтавлă Викторов сăвви каять ян-ян,
Липатов – генерал,
«Ехрем хуçа» – оперăра паян.

Ытти çынсем тата –
Тăван ялта вăй хунисем:
Çемен Толи, Литюк Петрова,
Ванцетий – çĕр ĕç ăстисем,
Тата ытти уй-хир паттăрĕсем.
Миçе пин кăшăл
Тырă ăсатман-ши
Тăван çĕршывăн пӳлмине вĕсем?

Тымарусем
Епле сан тарăн, Хурамалăм,
Кашни хунавĕ – ĕмĕр асăнмалăх,
Вĕсен ĕç-хĕлĕ
Хамăр Энĕш хумĕпе
Каять те пĕрлешет
Мăн Атăл вăйĕпе.

Ах, Энĕш, Энĕш!
Шутласан мĕн чухлĕ
Пире паратăн эсĕ акшар чулĕ
Çĕнĕ çурт-йĕр никĕсĕсем валли:

Сан кăмăлна туять этем алли,
Çапла хитре ĕмĕтпеле ĕçрен
Кервенленет çĕн ăрусем пурнас кермен.

Каш-каш кашлать те
Асамат вăрманĕ,
Юрлать унпа пĕрле
Уй-хирĕ те çаранĕ,
Тырри-пулли, çырли, кăмпи, ытти пуянлăх,
Татса пуçтар, ыр кур, тивлетлĕ халăх,
Çăтмах тума пулать кунта
Мĕн ĕмĕр асăнмалăх.

Тавах сана,
Хĕвеллĕ Хурамалăмăр,
Çак сăмаха
Сана савса пуçларăмăр,
Нихçан та сӳнмĕ
Чунсенче çак юрату,
Пирĕн асра – кашни ую-хирӳ, кашни çырму,
Кашни касу та ураму, сăрту...
Эс – пирĕн паянхи телейĕмĕр,
Эс – пирĕн ĕмĕтри таса тĕллевĕмĕр.

# ЭХ, ТĂВАНĂМ, ТĂВАН

Аппа патне кайрăм
Эп яла.
Куртăм эпĕ çывăх
Тăвана.

Эх, тăванăм, тăван,
Ыр тăван.
Пултăм кĕтнĕ хăна
Эп паян.

Ăсса кĕчĕ аппа
Сăрине,
Лартрĕ сĕтел çине
Хуплуне.

Хăналарĕ йысна
Хĕр пултăрне,
Чыслă пăхрĕ аппа
Йăмăкне.

Юхрĕ, юхрĕ пирĕн
Калаçу,
Тытса тăтăр пире
Юрату.



## Ипполит ТИНЯКОВ

Ипполит Иванович Тиняков Çĕрпӳ районĕн Старак ялĕнче 1912 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче çуралнă.

1926 çулта вĕсен çемйи Антрак ялне пурăнма куçнă.

И. Тиняков «Коммунар» колхоз членĕ пулнă.

Мĕн çамрăкранпах сăвăсем çырнă. Унăн хайлавĕсем район хаçатĕнче, республикăри илемлĕ литература журналĕсенче пичетленнĕ.

Сăвăç 1997-мĕш çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче çĕре кĕнĕ.

## ШАНЧĂКЛĂ ÇУЛ ПУÇ

Пĕр ĕмĕтпе утса пыраççĕ
Мăн çулпала пур халăхсем.
Малта пире кĕтсе тăраççĕ
Телей сунан хитре кунсем.

Çук, чараймасть нимле тăшман та,
Çитес çĕре çитетпĕрех.
Çанталăк тăвăллă пулсан та,
Çул паллă пирĕн пурпĕрех.

Пур парти – шанчăклă çул пуçĕ,
Ун ячĕ яланах асра.
Вăл – тулăх пурнăçăн çăл куçĕ,
Ăна мухтатпăр юрăра.



## Георгий ФАДЕЕВ-ХАВАЛ

Георгий Андреевич Фадеев-Хавал 1941 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Тепикасси ялĕнче çуралнă. Тăван ялĕн пуçламăш, Анатри Кипекçе вăтам шкулĕсене пĕтернĕ хыççăн комбайнерта, ялти клуб ертӳçинче ĕçленĕ. Пултарулăхне кура ăна Жданов ячĕллĕ колхозри комсомол комитечĕн секретарĕ, «Урожай» спорт тата ДОСААФ обществисен председателĕ пулма суйланă. Спортпа туслă пулнă. Колхоз командипе велосипедпа Раççейре мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура кубок çĕнсе илнĕ тата 50 çухрăма чупса пĕрремĕш вырăн йышăннă.

1962 çулта Ленинградри пушарпа техника училищине вĕренме кĕнĕ. 1965 çулта училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн республикăри Шалти ĕççен министерствин пушара хирĕç кĕрешекен уйрăмĕнче çирĕм çул ĕçленĕ. Шупашкарти милици шкулĕнче вун пĕр çул ĕçленĕ хыççăн 1995 çулта тивĕçлĕ канăва тухнă. Вăл «Ăшри туйăм», «Чун-чĕре хĕлхемĕ», «Хавхалану», «Юрăсем» кĕнекесен авторĕ.

Г.А. Фадеев – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ, Чăваш Республикин писательсен правленин членĕ, Чăваш халăхĕн Алексей Талвир, Кĕçтӳк Кольцов, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ республикăри литература тата И.Я. Яковлев ячĕллĕ наци премийĕсен лауреачĕ, Чăваш Республикин наука, культура тата литература Академин членĕ, Чăваш Республикин композиторсен Ассоциацийĕн членĕ, Раççейри Шалти ĕçсен тата Чрезвычайлă лару-тăру министерствисен пултарулăх смотрĕсен лауреачĕ, нумай юрă авторĕ, Раççей шайĕнчи паллă спортсмен, отставкăри подполковник, Çĕрпӳ районĕн тата Тепикасси ялĕн хисеплĕ гражданинĕ.

Фадеев Г.А. – 1997 çултанпа Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин республикăри тĕп управленийĕн гарнизон клубĕн тата «Çулăм» ансамбль ертӳçи. Гарнизон клубĕ министерствăра чи лайăх клуб шутĕнче шутланать, ансамбль юрăçисем лауреат ятне тивĕçнĕ, ветерансен пĕрлешĕвĕ малтисен ретĕнче, ĕçри паттăрлăхпа çитĕнӳсемшĕн Хисеп хучĕсем, хаклă парнесем тата медальсем илме тивĕç пулнă.

## АН ХĂВАР ПĔЧЧЕН

Ан кайсамччĕ, тусăм,
Ан хăвар пĕччен,
Пул эс çутă шуçăм
Пурнăç умĕнче.

Эп санпах утасшăн,
Тусăм, алран ал,
Эсĕ халĕ маншăн
Ырă ăраскал.

Ырă сан ĕçӳ те,
Шеп юрру-ташшу...
Маншăн хаклă питĕ
Хамăр паллашу.

Пĕр пулсан ик тантăш
Килĕ пархатар,
Шур чечекĕм, лантăш,
Чунăма хăтар.

## ĂНЛАНСАМ

Ăшăм çулăмпа çуннине пĕлсе
Сӳнтереп тесе ан вĕр ун çине.
Чĕрĕ сурана тӳрлетес тесе
Ан сапсам унта йӳçĕ тăварне.

Хăçан пĕр-пĕрне тĕрĕс ăнланса
Аллăмăрсенчен шанчăклă тытар,
Урасем çине çирĕппĕн тăрса
Пурнăç çулĕпе юнашар утар;

Сивĕ кĕркунне ăшă çумăрне
Тем пек кĕтсен те кĕтсе илес çук.
Упрама пĕлмен таса туйăмне
Халь тин укçалла илме майĕ çук.

## ВЕЛОСИПЕД

Çуралнă ялăма кайсан
Эп тĕл пулатăп тусăма.
– Тăванăм, мĕнлерех пурнан –
Тесе таятăп пуçăма.

Ман çывăх тус – велосипед,
Вăл халĕ кĕлетре канать,
Яш чухнехи телей – тивлет
Паян та ăнăçу сунать.

Велосипедăм! Çил çунат,
Епле вĕçтернĕ эс мана,
Санпа пĕрле тупса хăват
Эп виçнĕ пĕтĕм таврана.

Ирех вун çухрăмри шкула
Васканă Кипекçе ялне,
Çапла эп уçнă хам çула
Шупашкарти спорт тĕнчине.

Унтан – Мускав та Ленинград,
Воронежсем те Тулăсем...
«Чăваш ачи, вăйна кăтарт», –
Çапла пиллетчĕç ватăсем.

Ял хĕрĕ, ял каччи, ан тив,
Пит шухă пулмасассăн та
Чăваш çĕршывĕн команди
Шутланнă паллă ырăнта.

Чăваш чысне миçе хутчен
Çĕкленĕ иксĕмĕр пĕрле.
Мала тухса парнепеле
Мухтавлăн таврăннă киле.

Велосипедăм! Тав сана,
Эс пулнă шанчăклă юлташ.
Ăмăртăва каякана
Вĕçтернĕ çил пек вăш та ваш.

Ăмăртура кăна та мар,
Хута эс кĕнĕ пурнăçра,
Ялан эс пулнă юнашар
Ĕçре-хĕлре те вăйăра.

Тата... халь астăватăн-и
Шур çĕмĕртсен айне, çĕрле
Эп, эсĕ, ытарми савни
Кайса лараттăмăр пĕрле.

Эх, аса ил-ха, çул çинчех
Сив çумăр ячĕ каткаран,
Фронтра аманнă тус пекех
Сана эп сĕтĕртĕм вăйран.

Ывăлсене те, ман пекех
Эс ярăнтарнă каярах,
Тăванăм, мĕн паянчченех
Пурнатăн эсĕ чунăмрах.

Халь эс те, эп те ветеран.
Çапах та çамрăклăх асра.
Айта, тухар та хапхаран,
Тăвар виç çаврăм ял тавра.

## КУÇ СУЙМАСТЬ

Таса çăл куç шывне ĕçсен,
Чун уçăлать шăрăх кунра.
Эс ман çине савса пăхсан
Телейлĕ эпĕ сан çумра.

Сăмахпала пулать суйма,
Мана кала куçран пăхса,
Эпĕ вара хамах курап –
Çăл куç пек сан чуну таса.

Санăн куçу суймасть нихçан,
Тăрать тӳпе пек çуталса.
Мăшăрланса ыр курманран
Илетĕн куççульне шăлса.

Пĕччен чухне санпа пулма
Турри çырмарĕ, мĕн тăвас?
Сана курма, санпа утма
Эп, тусăм, яланах хавас.

## МАНАС МАРЧЧĔ

Чĕвĕлти чĕкеçĕм, куç тулли пикеçĕм,
Камшăнах туту сан йăл кулать;
Мĕн тăвас-ши, чунăм, пулăшсамччĕ, тусăм,
Саншăн çеç чĕре хыпса çунать.

Тап-таса çăл куçăм, сӳнми шурăмпуçăм,
Ан çунтарччĕ манăн чунăма.
Савăнса пурнасчĕ, юнашар утасчĕ,
Саншăн çеç юрласчĕ юррăма.

Тӳпери хĕвелĕм, улăхри чечекĕм,
Пирĕншĕн ан пултăр çухату...
Пĕр-пĕрне шеллесчĕ, юратма пĕлесчĕ
Çирĕп пултăр пирĕн юрату.

Юратма пĕлесчĕ, пĕр-пĕрне шеллесчĕ,
Ĕмĕрех ан сӳнтĕр юрату.

## ПУЛАЙМАРĂМ САН

Ĕмĕтре эпир санпала ялан.
Тĕлĕкре пĕрмай эсĕ ман умра.
Ăнсăртран сана урамра курсан
Сывлăм пек куççуль шăранать чунра.

Пулаймарăм çав, пулаймарăм сан.
Вутлă туйăм çеç сӳнеймест нихçан.
Ĕмĕрӳн сакки сарлака пулсан
Айăпна кайран эс хăвах куран.

Кĕркунне çитет, кайăк хур каять,
Сарă кайăк пек çулçă тăкăнать.
Юрату çулне çухатса ярсан
Кĕрхи çулçă пек тăлăха юлан.

## ПУРĂНМА ПĔЛЕСЧĔ

Пурăнасчĕ ялан юрласа, кулса,
Хире-хирĕç пăхса, юнашар утса,
Туяясчĕ камшăн чĕрӳ тапнине,
Кураясчĕ хитре туту кулнине.

Çулла та, хĕлле те, ирпе те каçпа
Кашни самантрах пуласчĕ санпа.
Иккĕн калаçасчĕ çепĕç чĕкеç пек,
Чуп туса илесчĕ кăвакарчăн пек.

Пĕчĕк çеç инкекшĕн куçăм шывланмасть,
Ассăн сывламасăр сывлăш та тухмасть.
Санпа тĕл пулмасан хĕвел те пăхмасть,
Курса калаçмасан чунăм çырлахмасть.

Тепĕр чух туятăп: чуну хурланать,
Хулпуççисем çине пуçу усăнать.
Ик куçран куратăп куççуль юхнине,
Пит çăмарти çинче йĕрсем юлнине.

Пĕлетпĕр-ши эпир пурнăç уттине,
Куратпăр-ши куçсем ăшшăн пăхнине,
Сисетпĕр-ши камшăн чĕре тапнине,
Туятпăр-ши куççуль мĕншĕн юхнине.

Ан манăр: телей вăл ик çын хушшинче,
Юратупа туслăх пĕрле пулнинче,
Пĕр-пĕрне юратса хисепленинче,
Пурнăç хура-шурне пĕрле чăтнинче.

Эй, пурнăçăм, пурнăç, пире шеллесем,
Ик аманнă чуна телей пиллесем.
Пирĕншĕн ан пултăр нихçан уйрăлу,
Ĕмĕр савăнтартăр мана сан куллу.

## САВНИ

Эс вăййа тухсассăн
Çăлтăр пуç таять,
Шăпчăк та хавассăн
Юрă шăрататать.

Сассуна илтсессĕн
Купăс вăтанать,
Эс умран иртсессĕн
Чунăм савăнать.

Мăкăнĕм, хушпуçăм,
Мĕншĕн-ши ялан
Çаврăнать ман пуçăм
Иккĕн тĕл пулсан?

Сад пахчийĕ лартăр
Ялан çеçкере,
Юрату упрантăр
Пирĕн чĕрере.

# САНПАЛА ПĔРЛЕ ПУЛАСЧĔ

Сан сассу янравлă, уçă,
Шăпчăк сасси пек хитре.
Юррупа чуна уçатăн
Кăмăлу курнать питре.

Пĕвĕпе чипер, илемлĕ
Кам пăхман пуль савăнса.
Каччăсем пĕрле пулмашкăн
Тупăшатчĕç ăмсанса.

Юнашар ларса курасчĕ
Санпала кăштах пĕрле.
Çепĕç сассуна илтесчĕ
Кăмăла çĕклемелле.

Ăшунта сӳнми хăватлăх,
Куçунта çиçет шевле.
Юратса çеç пурăнмашкăн,
Турăçăм, пире пилле.

# САНСĂР ПУРНĂÇ ÇУК

Санпала тĕл пулсан савăнаттăм
Урамра, вăйăра, ташăра,
Именсе калама вăтанаттăм
Вут хыпса çуннине ăшăмра.

Сансăр чух мĕн пулать-ши, пĕлместĕп,
Ăш варкать те çунать çулăмпах,
Тĕл пулсан, ăнланса та пĕтместĕп,
Кӳренӳ сăмахне калапах.

Кунсерен пĕр-пĕрне курмасассăн
Кăкăрта сывлама сывлăш çук.
Сан чĕрӳ тапнине туймасассăн
Тӳпере сар хĕвел маншăн çук.

Çăмăл мар, эп туятăп, сана та
Сан чуну та йĕрет куççульпех.
Хăш чухне куçусем шывлансан та
Кăмăлу сан çемçе пурпĕрех.

Хушăран ытлашши те калатăп,
Чĕлхен унăн, чăнах, шăмми çук.
Йывăр чух тарăхса ылханатăп,
Анчах сансăр, савни, пурнăç çук.

# ÇĔМĔРТПЕ ЮНАШАР ШУРĂ ХУРĂН

Çĕмĕртпе юнашар шурă хурăн,
Юмахлаççĕ пĕрле пуç тайса.
Лăпкă çил вĕрнипе ал çупаççĕ
Çăлтăрсем курасран вăтанса.

Шур пĕркенчĕк айне çĕмĕрт путрĕ
Эрешлерĕ çурхи пахчана.
Хăй илемĕпеле тыткăнларĕ.
Юнашар ларакан хурăна.

Кайăксем хитре юрă юрлаççĕ
Çурхи кун çитнипе савăнса.
Кăтра çӳçлĕ яштак шурă хурăн
Ачашлать çĕмĕрте тав туса.

Пурнăçра çĕмĕрт пек ман пуласчĕ
Калаçасчĕ куçран çеç пăхса.
Ĕмĕрех юратса пурăнасчĕ
Тĕлĕкре те сана çеç курса.

# СĔНӲ

Нумай-çке каччă тĕнчере,
Епле маттур сăнран пăхма.
Хитрелĕхе саван чĕре
Ăна, тен, хатĕр юратма.

Çӳренĕ вăл тĕнче касса,
Чĕлхи те унăн яп-яка,
Часах илеймĕн ăнланса
Эс тем те курнă кайăка.

Тепри сана кун хыççăн кун
Çӳрет асаплăн юратса.
Именчĕк çын – ултавсăр чун,
Вăл ĕмĕр пулĕ тап-таса.

Пит çăмăл йăнăш тăвасси,
Пикем, çакна сан туймалла:
Ултавлă пурнăç тараси,
Çавна чунпа ăнланмалла.

## ÇУРКУННЕ

Çурхи кун çитсен тĕнче вăранать,
Хурт-кăпшанкă та чĕрĕлсе тăрать,
Кашни чĕрĕ чун мăшăрне шырать,
Çĕнĕ пурнăçпа пурăнма пуçлать.

Лăпкă çурхи çил пите ачашлать,
Чечексен шăрши кăмăла çĕклет,
Тусăм, сан патна чунăм туртăнать,
Юнашар ларса калаçас килет.

Ăш çумăр хыççăн сар хĕвел пăхсан
Пур ӳсен-тăран ăна пуç таять,
Сан сенкер куçу кăмăлпа тулсан,
Мана пурăнма вăй-хăват парать.

Ҫеҫке ҫурнӑ чух сивӗ пулмасан,
Ҫимӗҫ тытӑнать кашни чечекрен.
Йывӑр вӑхӑтра юнашар пулсан,
Тусӑм, эс мана ҫӑмӑллӑх кӳрен.

Пултӑр пурнӑҫра ҫурхи кун кӑна,
Лартӑр сад пахчи ҫеҫке айӗнче.
Пурӑнасчӗ ман юратса кӑна,
Йӑтса ал ҫинче ҫӳреттӗм сана.

Анчах пурнӑҫра ҫурхи ӑш куна
Кӗтсе ҫеҫ ларсан, улталан хӑвна.
Ан манса кайсам, кӗрхи кун та пур,
Сивӗ вӑхӑтра тӑм илни те пур.

## ӐШӐМ ҪУНАТЬ

Манӑн ӑшӑм ҫунни
Никама курӑнмасть,
Ыратнӑ чӗрене
Сан чуну туяймасть.
Кам шутланӑ ҫапла
Пурнӑҫра пуласса,
Ытарми кунсене
Эс манса каясса.
Ҫеҫке ҫурнӑ чечек
Тӑм тивсессӗн пӗтет.
Чӗрери туйӑм та
Шанчӑк ҫук тӑк сӳнет.
Пурнӑҫри телее
Укҫапа илме ҫук.

Иртсе кайнă куна
Çавăрса килме çук.
Хурланса пурăнма
Турриех çырнă-ши?
Савăнса ыр курма
Ăраскал çуккă-ши?
Туйăма упрама
Таса чун пултарать.
Пурнăçра тӳр утма
Юрату вăй парать.
Камăн айăп кунта
Ытларах пулчĕ-ши?
Е мана питĕ час
Эс манса кайрăн-ши?
Ан итле эс çынна,
Ун сăмахĕ – çĕлен.
Яланах шан хăвна,
Чĕрӳне çеç ĕнен.

## ÇУРХИ КĂМĂЛ

Çурхи хĕвел савса пăхсассăн
Тăван тавралăх вăранать,
Савнипеле пĕрле утсассăн
Чунра çĕн юрă шăранать.

Сад пахчисем çеçке çураççĕ
Пĕр-пĕринпе ăмăртмалла.
Сар кайăксем юрра яраççĕ
Урам хушши янрамалла.

Хĕвел ялан çапла пăхинччĕ
Ăшша юратакан çĕре,
Пĕр тытăмра ялан тытинччĕ
Телей шевли иксĕмĕре.

## ТУПА СĂМАХĔ

Хăрушшăн чан сасси янрарĕ:
Васкамалла! Пулăшмалла!
Инкек çулне пӳлме тухатпăр,
Патвар туссемĕр, малалла.

Эпир Чернобыль витĕр тухнă,
Манман Хуракасси ялне.
Беслан енче юлташ пуç хунă
Хăтарнă чух ачасене.

Вута чупса кĕрсе каятпăр,
Эпир туптаннă çулăмра.
Чыса ялан çӳлте тытатпăр
Çынсемшĕн йывăр вăхăтра.

Хăрушшăн чан сасси янрарĕ –
Вĕçетпĕр кăйкăр йышĕ пек.
Вăйне çĕклет йĕркелĕх çарĕ
Чунри тупа сăмахĕпе.

# ТУПАЙМАРĂМ ТЕЛЕЕ

Улăхра чечек шырарăм
Кĕрен тĕслине.
Тĕл пулмарăм, тупаймарăм
Шăтса тухнине.

Тӳпере çăлтăр шырарăм
Хăшĕ ман тесе.
Çĕрĕпе куçа хупмарăм
Тупасса кĕтсе.

Тăрă шыв ĕçмеваскарăм
Çитрĕм çăл патне.
Ĕçрĕм... Ĕçрĕм – сиреймерĕм
Чун вăрканине.

Пурнăçра чылай шырарăм
Телее кĕтсех.
Тур çырман та, тупаймарăм
Тупас çук тинех.

## ХĔРПЕ КАЧЧĂ

Ытарми хĕрпе каччă лараççĕ
Çеçке çурнă садри сак çине.
Хире-хирĕç пăхма вăтанаççĕ,
Ăшă çил, пулăшсам вĕсене.

Таврара юрăсем янăраççĕ,
Саланаççĕ вăрман хĕррине.
Пахчара хĕрпе каччă лараççĕ,
Шăпчăк, ырă сунсам вĕсене.

Çăлкуççем шăнкăр-шăнкăр юхаççĕ,
Ыткăнаççĕ мăн шыв ытамне.
Пахчара хĕрпе каччă лараççĕ,
Шурăм пуç, саламла вĕсене.

## ЧЕЧЕК ÇЫХХИ

Чечек çыххи сана паратăп,
Ăна ӳстертĕм ăшăмра.
Хăш чух куççулĕпе шăвартăм,
Тымарĕсем ун – чунăмра.

Сĕтел тулли чечек куратăп,
Халь ху та ешерен кăна,
Çуралнă кун тесе паратăп
Чечекпеле пĕрле чуна.

Çак парнене упра эс, тусăм,
Вăл улăхри чечек çеç мар,
Ăшра хĕмленнĕ юратушăн
Вăл пулĕ сиплĕх, пархатар.

Çурхи кунсем иртсе кайсан та,
Чечек çеçкийĕ тăкăнсан,
Сив шартлама çитсе тăрсан та
Вăл çурăлма пултарĕ сан.

Сив шартлама çитсе тăрсан та
Вăл çурăлать каллех, куран.

## ЧУН ЫРАТНИ КУРĂНМАСТЬ

Çырнă сăмаха вулама пулать.
Ăшри сăмаха калама пулать.
Чун ыратнине никам та курмасть,
Манăн ăш çунни çынна курăнмасть.

Çӳлти уйăхăн хăй çути кăна,
Анчах вăл памасть хĕвел ăшшине.
Пушă сăмахсем хитре çеç кăна,
Сиплес çук вĕсем суранлă чуна.

Вут çунса пĕтсен, кĕл тăрса юлать,
Юрату сӳнсен чунăм пушанать,
Савнăç вырăнне тунсăх çеç юлать,
Ик куçăмран куççуль тăкăнать.

# ЫРАТНИ ИРТМЕСТ

Тусăм, эс юнашар пулмасан,
Тӳпере çут хĕвел маншăн çук.
Сан сăнна кунсерен курмасан,
Сурана сыватма эмел çук.

Пĕр-пĕрне юратса шаннă чух,
Пирĕнтен телейли чăнах çук.
Куçа-куçăн пăхса кулнă чух,
Хушăра урăх çын пулас çук.

Чи юратнă чечек – кĕлчечек,
Вăл ан шантăрччĕ кăшт сивĕпех.
Чечекрен те хитре сан куллу,
Ан кӳренччĕ сăмах илтнипех.

Мĕн тери вăй-хăват юратун, –
Юратса курман чун пĕлеймест.
Мĕн тери тарăн йĕр çухатун, –
Сурана нихăçан ӳт илмест.

Манас марччĕ таса туйăма,
Ун илемĕ çурхи чечекле.
Ан кала курайман сăмаха,
Ун сăннийĕ хура çĕленле.

Çеçке çурнă чечек тăкăнсан, –
Çурхи кун иртнине пĕлтермест.
Эс мана, савнă тусăм, мансан, –
Эп сана маннине пĕлтермест.

Юрату ялкăшсан та, сăна:
Ун хĕлхемĕ пурне те хĕртмест.
Мĕскер пулчĕ чунри сурана –
Ыратни паян кун та иртмест.

## ЮРАТУ ХĔЛХЕМ

Эй, Туррăм, çепĕç юрату,
Мĕн чул хăват мана парать-ши?
Таса чунри сӳнми хĕлхем
Саншăн кăна çунса тăрать-ши?

Хĕрӳ хĕлхем вăйне сисеп,
Вăл ман ăша кĕрсе çунтарчĕ.
Ик çулăмпа пĕрле пулса,
Çиçĕм пекех ӳссе вăйланчĕ.

Çиçĕм вăйне кам-ха пĕлмест?
Ун умĕнче кашни пуç тайнă.
Ăш çуннине никам сисмест,
Пĕр эс кăна чуна йăпатнă.

Çав çулăма сӳнми хăват
Парса тăратăн эсĕ, тусăм.
Эс хĕмлентернĕ çил çунат
Чунра çуратрĕ ăшă туйăм.

Ан хăй никам таса чуна
Хура алпа вараламашкăн.
Мĕн чул сăмах – ун чул суя,
Вăл пулăшать çеç вăй пухмашкăн.

Сан чĕрӳнти вĕри кăвар
Ан сӳнтĕр ĕмĕрех пĕр маншăн.
Хавхаланса, чунран савса,
Пурнасчĕ çĕр çинче пĕр саншăн.

## КАÇАРСАМ

Каçарсам, савнă тусăм, мана,
Пурнăçра кӳрентертĕм пулсан.
Тӳрленме пулăшсам сурана,
Мана эс хĕрхенетĕн пулсан.

Сансăр куç шывланни кăна мар,
Пĕтĕм ăш хĕстерсе ыратать.
Юратса пурăнма хăват пар,
Юрату вилĕмрен те çăлать.

Кунсерен юнашар пулманран
Каяс марччĕ пирĕн уйрăлса.
Хире-хирĕç пăхар-ха куçран
Пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшса.



## Çуйăн ХĔВЕТĔРĔ

Симон Федорович Федоров 1913 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Актай ялĕнче çуралнă. Çĕрпӳри икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Ку шкулта учительте ĕçлекен «Тăхăрьял» кĕнеке авторĕ Г.Т. Тимофеев ăна халăх сăмахлăхĕ майлă çавăрнă, вĕсене пухма вĕрентнĕ.

Çуйăн Хĕветĕрĕ çар училищи пĕтернĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, офицер пулнă. Отставкăна тухсан ял шкулĕсенче учительте ĕçленĕ, Оренбург облаçĕнче тата Чăваш Республикинче финанс органĕсенче вăй хунă.

60 çул ытла Улăп халапĕсене пухнă, вĕсене çĕнетсе, сăвăласа эпос шайне çитернĕ. Чăваш эпосне 1947 тата 1970 çулсенче кăларнă. 1980 çулта ачасем валли «Улăп халапĕсем» «Улăп» эпос туллин (40 юрăран тăрать) 1996 çулта тухнă. 2009 çулта «Улăпа» вырăсла пичетлесе кăларнă (А.И. Дмитриев вырăсла куçарнă). Çуйăн Хĕветĕрĕ 1989 çултанпа СССР писателĕсен союзĕнче тăнă.

2002 çулта çĕре кĕнĕ.

## ЮРĂ ПУÇЛАМĂШĔ

Пирĕн вăрман юманлăх.
Юманлăхра – çăкалăх,
Çăкалăхра – уçланкă.
Уçланкăра мĕн çуккă?

Уçланкăра тем те пур,
Ӳркенмесен кай та кур.
Унта пырать акатуй,
Хаклас пулсан – çич çĕр туй.

Акатуя хутшăнма
Кĕмĕл кĕсле турăмăр,
Ян янратса юрлама
Шăпчăк кайăк пултăмăр.

Çич хулана çитрĕмĕр,
Çич çĕр кĕвĕ илтрĕмĕр,
Кĕсле вăйне пĕлтĕмĕр.
Çĕр-çĕр ялта пултăмăр,

Çĕр пин юрă илтрĕмĕр,
Халăх чапне пĕлтĕмĕр.
Çӳл ту çинче пултăмăр,
Шап-шурă юр куртăмăр.

Юрĕ – çичĕ çулхискер,
Ирĕлмешкĕн маннăскер.
Унта виç каç выртрăмăр,
Кайăк йĕрне куртăмăр,

Ун йĕррипе утрăмăр,
Сукмак тытса пытăмăр.
Сукмакĕ те вĕçленчĕ,
Аслă Çавал курăнчĕ,

Атăл пекех туйăнчĕ.
Акăш карти çывхарчĕ,
Кайран таçта çухалчĕ.
Аслă Çавал илемре,

Улăхсем чечекре.
Хурăнсем те ӳсеççĕ,
Яла илем кӳреççĕ.
Шур хурăнсем хушшинче

Шур чул выртать çĕр çинче.
Хурăн айне лартăмăр,
Курман кайăк куртăмăр.
Кайăк çинчи мерченсем

Пин-пин тĕспе çунаççĕ,
Çавра ахах куçĕсем
Вĕри куççуль тăкаççĕ.
– Кайăк, мĕншĕн йĕретĕн,

Вĕри куççуль тăкатăн?
Çунаттуна хуçрĕç-и
Е юлташна тытрĕç-и?
Кайăк ларчĕ чул çине,

Улăштарчĕ сăн-питне.
Пирĕн умра сар пике
Тĕлĕнтерчĕ сăнĕпе.
Сарă хĕвел – питĕнче,

Çепĕç сасси – чĕлхинче.
Утать акăш ишшипе,
Юрлать çĕтмах кĕввипе.
– Сăлтавĕ пур йĕмешкĕн,

Вĕри куççуль тăкмашкăн.
Эпĕ Мерчен пулатăп,
Сăрт айĕнче пурнатăп.
Ман алăра сăрт мулĕ,

Ылтăн-кĕмĕл тем чухдĕ.
Эп пулатăп çакăнта
Çĕр çулта пĕр каç кăна.
Çĕр каçиччен çӳретĕп,

Эп Улăпа кĕтетĕп.
Анчах Улăп курăнмасть,
Çавал хĕрне вăл анмасть.
Улăп каллех ĕмĕтре,

Ĕнтĕ пушă мар чĕре.
Паттăр, чунăм, ăçта эс,
Ма ман пата килместĕн?
Саншăн вăййа тухиччен,

Çынсем мана куриччен
Вĕлкĕштерсе çӳçĕме
Çивĕтлерĕм çиçĕмпе.
Ун чух мана куракан,

Çӳç пĕрчине тупакан
Асамçăна тухатчĕ,
Ялан телей куратчĕ.
Çавăншăнах çӳç пĕрчине

Ӳкермерĕм çĕр çине,
Сана анчах юратрăм,
Саншăн чуна парăттăм.
Чĕре туртса ыратать,

Çавал хĕрне уттарать.
Эх, çав Улăп сывах-ши,
Ман çинчен вăл шутлать-ши?
– Улăп çинчен пĕлместпĕр,

Суйса сăмах пеместпĕр, –
Хурав пулчĕ пирĕнтен
Ним калама пĕлменрен.
Пике тутăр вĕçтерсен,

Куçне шăлса типĕтсен
Эх, пуçларĕ юрлама
Юхан шыва хумхатса.
Иртнĕ пурнăç витĕмне

Уçса хучĕ юррипе,
Улăп кун-çул утăмне
Вăл пĕлтерчĕ йĕркипе.
Эй, тантăшсем, ял-йышсем,

Акатуя килнисем,
Мерчен кайăк юррине,
Улăп çинчен хунине
Кунта пĕрле юрлар-и,
Улăп пекех пулар-и?

## УЛĂП

Атăл шывĕ çăлкуç пек,
Йăлтăртататать кĕмĕл пек.
Кĕмĕл хĕлĕх тăсар-и,
Кĕсле çине карар-и?
Пирĕн енче вăрмансем,
Вăрманĕнче шăпчăксем.
Шăпчăк кайăк пулар-и,
Ял янратса юрлар-и?
Ывлăм кĕсле каласам,
Кĕмĕл хĕлĕхлĕ вăл халь.
Аннӳ пуçлĕ юррине,
Ача чухне илтнине.
Улăп çинчен юрлама
Мана пĕччен çăмăл мар,
Кĕсле калас пулсан та,
Ывлăм, юрла манпа тан.
Юррăмăрсем халăхран,
Ăна хывнă сĕм авал.
Юрра юрлар чĕререн,
Халăх чунне кĕмелле.



## Анатолий ТАКАН

Анатолий Николаевич Филиппов 1952 çулхи авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Такана ялĕнче çуралнă. Ял пуçламăш тата Чурачăк вăтам шкулĕсенче вĕреннĕ. 1974 çулта И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн филологи уйрăмĕнчен, 1979 çулта ВЛКСМ Тĕп комитечĕн аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çар ретĕнче В.И. Чапаев ячĕллĕ 25-мĕш дивизире тăнă.

«Коммунизм ялавĕ», «Пионер сасси», «Молодой коммунист» хаçатсенче, Шупашкарти телекурав студийĕнче ĕçленĕ.

Раççей Федерацийĕнчи журналистсен Союзĕн членĕ.

Тивĕçлĕ канура пулин те хаçатсемпе çыхăну тытать, пьесăсем, сăвăсемпе калавсем çырать.

## ТИВĔÇ

Çурт-йĕр туса лартнă, ывăл та авланнă,
Сад пахчийĕ анлă – йăтăнать улма,
Тивĕçе çапла эп, тусăм, пурнăçланă,
Вăхăт мар-и, ĕнтĕ, лăпланса ларма?

Ир-ирех тăратпăр, алла ĕç тытатпăр,
Укçа-тенкĕ килтĕр, тетпĕр, ăнтăлса.
Çĕнĕ пӳрт, мунча-и е кĕлет лартатпăр,
Малаллах пыратпăр пурте талпăнса.

Ак кун-çул хĕвелĕ сăрт хыçне анасшăн,
Хатĕрлен, тăванăм, тет куçне хĕссе.
Эп чĕркуçленетĕп:
– Тăхтасам, тархасшăн,
Ĕç юлать виç кунлăх...
Тăр кăштах кĕтсе...

## КĔНЧЕЛЕ

«Тĕнчере – тĕрлĕрен кĕнчеле»,
Юптаратчĕ çапла асанне:
– Мăн аку çĕлет шур çиппеле,
Хреснаннӳ ав арлать хурине...

Салтака кайрăм эп çитĕнсен,
Пĕр ачи каласать ирçелле,
Хăй чĕлхийĕ иккен грузинсен...
Эй, тĕнче, тĕрлĕрен кĕнчеле!

Канура пултăм эп кăнтăрта,
Нимĕç хĕрĕ юрлать нимĕçле,
Акăлчан урăхла шăрататать...
Эй, тĕнче, тĕрлĕрен кĕнчеле!

Хăнара пултăм эп Туçара,
Икĕ çын тупăшать ĕçкĕлле,
Пĕри ӳсĕр, тепри тăр – урах...
Эй, тĕнче, тĕрлĕрен кĕнчеле!

## МУНЧА ÇЕММИ

Аки-сухи тăвар-и,
Унтан мунча хутар-и?
Апат пултăр – пултăран,
Милĕк пултăр хурăнран.

Милĕк ташлать ӳт-пӳ тăрăх,
Тарĕ юхать лапка тăрăх,
Ĕçкĕ-çикĕ тарĕ мар,
Ĕçре пулнă хура тар.
Хытăрах эс çатлаттар,
Мунча парать пархатар.
Тӳс, тăванăм, чăтса вырт,
Ыран вара – тырă выр!

Шăлна çыртса выртиччен
Такмакла мунча çинчен,
Чăтма тивет авăнччен,
Тырă вырса кĕриччен.
Ăна çапса, пуçтарса,

Сар кĕлете хуриччен!
Савăн, тусăм, мунчара,
Çăмăл пулĕ вырмара.
Каннă хыççăн – ыйхăран,
Тăрăн иртерех ыран!
Тулă каймĕ тымара,
Урпи юлĕ пучахра.

Вырса илнĕ тырăран,
Пулĕ сиплĕхлĕ сăра.
Ĕç виçиййĕ – мунчаран,
Мунчи вара – турăран.
Пăхма – хурăн туратти,
Хамăр халăх ăратти,
Хытăрах эс çатлаттар,
Мунча парать пархатар.

## ТĂРИ ЮРРИ

Сухана паян та
Тухаймастăр-и?
Хытă кулянатăп
Эпĕ, тăр-тăри.

Шăпчăксем юрлаççĕ,
Упа катинче.
Чĕпĕ кăлараççĕ,
Вăрман хӳттинче.

Эпĕ çеç вĕçетĕп,
Тӳпере пĕччен.
Хурланса çӳретĕп,
Йăва çуккипе.

Эп йăва тăваймăп
Курăк хушшинче.
Чĕпĕ кăлараймăп,
Пиçен ăшĕнче.

Тăван хир ку манăн,
Ав Кури пусси.
Сухалама маннă,
Пулĕ-и усси?

Несĕлсем ĕçленĕ
Ĕмĕр-ĕмĕртен.
Тыр-пул çитĕнтернĕ,
Савăннă пĕрле.

Ман йăва тăвасчĕ
Акнă çĕр çинче,
Чĕпĕ кăларасчĕ
Тырă хушшинче.

# МУХТАВ ĂСТА АЛĂСЕНЕ

*Пирĕн пурнăç – пĕрлешӳ,*
*Ун йыхравĕ – кĕрешӳ.*
*Ю. Сементер*

Эс – манăн тус, эп – санăн тус,
Икĕ тусран пулать виç тус,
Унтан тăваттăмĕш пырать,
Çав туссенчен пĕр йыш пулать.
Çапла пĕр шухăшлă çынсем,
Капмар çурт-йĕр лартакансем
Тăваççĕ çĕнĕ фирма – ТУС,
Эй, тус, кунта пуçна ан ус!

Тухать те çĕн заводĕнчен
Килет çĕн кирпĕч Трак енчен,
Хĕвел çӳле чĕннипелен
Куллен ав хăпартать кермен.
Çĕклен те сарăл, Шупашкар.
Эс – пирĕн çутă пархатар,
Маттур туссен хăвачĕпе
Яту кĕрлет çĕршывĕпе.

Çурт-йĕр тĕплен Угаслова
Паян кашни сунать сăвап:
Çĕнĕ килти çĕн кантăкран
Курнать уçланкăри палан.
Ян-ян каять чăваш юрри,
Мĕн пултăр çакăнтан ырри?
Мухтав ăста алăсене,
«ТУС» фирмăри чăн туссене!

# Тимĕркке КУÇМИ

Кузьма Филиппович Филиппов хăйĕн хайлавĕсем айне Тимĕркке Куçми тесе алă пуснă. Вăл 1912 çулта Çĕрпӳ районĕн Çĕнĕ Акчура ялĕнче çуралнă. Поэт тата прозаик.

Ялти шкул хыççăн Патăрьелĕнчи педтехникумра, Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче, Шупашкарта советсен парти шкулĕнче пĕлӳ илнĕ. Вăрçа кайиччен республикăри хаçатсен редакцийĕсенче ĕçленĕ. Ун сăввисем калавĕсем, очеркĕсем вăрçăччченхи тĕрлĕ хаçат-журналта тăтăшах пичетленнĕ.

Вăрçă унăн литературăри çулне пӳлнĕ. К.Ф. Филиппов, Тимĕркке Куçми, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен аманса таврăннăскер, 1946 çултах çĕре кĕнĕ.

## КОЛХОЗ ЛАШИ

Витере колхоз лаши,
Ай, кĕçенет.
Икĕ урипе çĕре
Вăл тĕпретет.
Колхоз лаши – маттур ут –
Пăхать инçе,
Тăпăртатать Çар ретне
Каяс тесе.

Колхоз ачи пит хастар,
Ут йĕнерлет.
Хура учĕ – урхамах –
Кĕç вĕçтерет.
Колхоз ачи пултарать,
Каять инçе,
«Чаплă кавалерист эп
Пулап» тесе.

## ХĔРӲЛЛĔ ВĂХĂТ

Пирĕн çамрăк алăсем
Тимĕре шаккаççĕ.
Çапнăçемĕн хĕмĕсем
Тăлт та тăлт ташлаççĕ.
Мăлатук ман алăра
Кĕвĕлет çĕн юрă:
«Пиллĕке – тăваттăра
Тултаратпăр, курăр».
Çак хĕрӳллĕ вăхăтра
Ăмăртушăн эпĕр.

Уй-хирте те заводра
Ӳсĕмлĕ ĕçлетпĕр.
Кулленхи ĕçре ялан
Çĕкленӳ бригадăн.
Çĕнелсе пыран яла
Савăнса пăхатăн.

Сахал мар ĕçсем, нумай:
Коллективизаци...
Пур çĕрте те çакна май
Политехнизаци.
Хĕрсе çитнĕ тимĕре
Çапăр вирлĕ, çапăр.
Пирĕн çамрăк кĕвĕре
Ĕç юрри янратăр!

## ЧĂВАШ ЮБИЛЕЙĔ

Вун пилĕк çул –
Илемлĕ çул,
Телейлĕ ӳсĕм тапхăрĕ.
Вун пилĕк çул...
Илем мĕн чул
Кашни хастарлă паттăрăн.
Эпир
Ĕçре, кĕрешӳре
Çӳлтен çӳле
Хăпартăмăр.
Малти ретре
Пулни хитре –
Тек çĕкленет
Хăватăмăр.

# ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ĔÇ

Колхозра
Пĕрлешӳллĕ ĕçлетпĕр.
Савăнсах
Ман ĕçлессĕм килет.
Ĕçлени
Хамăрах лайăх тетпĕр.
Пĕр ĕç çеç
Пурнăçа çĕнетет.

Çĕнĕ пӳрт.
Шала кĕр – çĕн культура.
Кĕнеке, патефон –
Мĕн-мĕн çук.
Картара туллиех
Ĕне-сурăх.
Чухăнсен вăл пулман
Патша чух.

Ак кăçал
Тăрăшса вăй хунийĕ
Вун лавпа
Ман киле ăсанать.
Ку каллех
Савăк пурнăç парнийĕ.
Ик çĕр пăт
Кĕлете пушанать.

## ЭП САЛТАК

Çулла, хĕлле-и,
Ир-и, тĕттĕм каç-и,
Çеçен хирте-и
Е сĕм вăрманта, –
Ман куçăмсем
Пит çивĕччĕн пăхаççĕ.
Тăван çĕре
Сыхлатăп тăшмантан.

Алра винтовка.
Эп совет салтакĕ.
Яш чĕрери
Ырми хăюлăхпа
Пĕр шикленӳсĕрех
Çӳретĕп акă
Çак чикĕри
Хăрушă чăтлăхпа.

Е сарăмсăр
Çитсе тивсен пĕр пуля
Тăшман-бандитпала
Çапăçнă чух,
Ман юлашки
Хĕрӳ сăмахăм пулĕ:
– Ĕç халăхне
Çĕнтерекен вăй çук!

## ЮРАТУ

Юрату, савни,
Тĕрлĕрен пулать.
Ăнсăртран ăшра
Вăл чĕртет кăвайт.
– Ах, чĕре çунать!
Мĕн тăвас? – тесе
Эс çӳрен вара
Вут-хĕм сирпĕтсе.
Е пăрлантарать
Вăл яш кăмăла.
Юратуран кĕç
Ырату пулать.
Ма-ха сивĕтес,
Тусăм, чунсене?
Юрату ăшра
Çунтăр кулленех!

## ХАКЛИ – ПУРНĂÇ

Сана мăшăр теесшĕн
Çĕр яла çӳремен.
Сана вăрттăн вăрласшăн
Эпĕ ут та кӳлмен.
Çӳретмен эпĕ евчĕ
Нихăçан сан килне.
Эпĕ хулăм укçи те
Ывăтман ратнӳне.
– Хулăмран хакли – пурнăç.
Эс илсемччĕ çавна, –
Терĕм ял çумĕнче эп
Ал паруçăн сана.



## Роза ШЕВЛЕПИ-ЮХМА

Роза Ивановна Шевлепи-Юхма 1935 çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Çатра ялĕнче çуралнă.

Йĕкĕрвар вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика институчĕн историпе филологи факультетĕнче вĕреннĕ, вырăс чĕлхипе литератури тата истори вĕрентекенĕн дипломне алла илнĕ. Роза Ивановна шкулта 40 çул ытла ĕçленĕ.

Роза Шевлепи – 17 кĕнеке авторĕ. Унăн калавĕпе повеçĕсем нимĕçле, туркăлла, удмуртла, марилле пичетленнĕ.

Çыравçăн пичетленсе тухнă паллă кĕнекисем: «Ачалăх пахчи», «Йытă куççулĕ», «Пурнăç сукмакĕ», «Азбука – ăслăлăх кĕнеки», «Пурнăç çăлтăрĕ», «Ылттăн качака путекки» тата ыттисем те.

Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, А. Талвир ячĕллĕ тата хĕрарăмсен Эмине ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Р.И. Шевлепи Çĕрпӳ районĕн Хисеплĕ гражданинĕ.

Роза Ивановна Раççей Литфончĕн Чăваш уйрăмĕн председателĕ, Чăваш Республикин писательсен Союзĕн председателĕн çумĕ пулса тăрăшнă.

Р. Шевлепи çамрăксем çыравçăсемпе юратса ĕçленĕ, вĕсене пулăшнă. Вăл тăрăшнипе «Голос души» кĕнеке кун çути курнă. Унта 88 ачан сăвви-калавĕсем кĕнĕ. Нумай çул хушши Роза Ивановна шкулсемпе, библиотекăсемпе тачă çыхăнса ĕçленĕ.

Роза Ивановна 2021 çулта пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

## СĂВĂСЕМ, ЮРĂСЕМ

### ТĂВАН ЯЛ-ЙЫШ

Тăванран та тăван ялăм-йышăм,
Парнелерĕн çунат эс мана.
Тăван кил, тăван ял, хаклă кӳршĕ –
Тав тăватăп сире пуç тайса.

Çатра ялĕ – тăван ял,
Пĕр-пĕрне ыр сунса юр юрлар.
Çатра ялĕ, хаклă ял,
Аталан, илемлен, çунат сар.

Тăванран та тăван ялăм-йышăм,
Ыр сунса эс ăсатрăн мана.
Тăван кил, тăван ял, хаклă кӳршĕ –
Ырă çул-çке пиллерĕр савса.

Тăванран та тăван ялăм-йышăм,
Сан умра эп ялан парăмра.
Тăван кил, тăван ял, хаклă кӳршĕ –
Нихăçан манас çук эп сире.

* * *

*«Юратупа шанчăкшăн» орденпа*
*наградăланă чухне вуланă сăвă*

Çемье вăл хăй пĕр пĕчĕкçĕ патшалăх,
Асамлă вăй упрать маттур çемьесене.
Пуласлăха тупать ун пек çемьеллĕ халăх,
Чăн юрату, телей пиллет вăл тĕнчене.

Чăваш çемйи мĕн авалтан вăл пиллĕ,
Чăваш тасан упранă хăйĕн çемйине.
Çак пиллĕхпе пуян вăл чăваш килĕ,
Чăн юрату упрать пире, чăвашсене.

Пин-пин çулсем пире çемье упранă.
Татах та упрĕ вăл пуласлăхра.
Чăн юрату, телей пире вăл панă,
Çемье сăмах сăваплă халăхра.

Паян уяв, чунтан эп тав тăватăп
Пире çапла чыс тунăшăн кунта.
Пуçа тайса ыр сăмахсем калатăп,
Сунатпăп ырлăх, сывлăх, чăн телей тата.

# ТĂВАНСЕМПЕ УЙРĂЛНĂ ЧУХ

*Чăвашсен обществăпа культура центрĕн*
*Мурманскри активисчĕсенчен уйрăлнă чух*

Вăштăр-вăштăр çилĕ вĕрет,
Чăрăш тăрри хумханать.
Тăван кĕтес аса килсен
Манăн чунăм хурланать.

Хур кайăк та чĕвĕл чĕкеç,
Кăнтăралла çул тытать.
Тăван халăх ывăл-хĕрĕ
Тĕнче тăрăх саланать.

Хур кайăкĕ, чĕкеçĕ те
Калла килме çул тупĕç.
Тăван халăх ывăл-хĕрĕ
Чăваш çĕрне манаймĕç.

Вăштăр-вăштăр çилĕ вĕрет,
Чăрăш тăрри хумханать.
Тăвансемпе уйрăлнă чух
Чунăм питĕ хурланать.

# СЫВЛĂМПА ХĔВЕЛ

Ирхи сывлăм йăлтăртатрĕ
Ешĕл тумлă сăрт çинче,
Хĕвеле кĕтсе вылярĕ
Чечексен ытамĕнче.

Çуркунне, çуркунне,
Ешĕл тумлă çуркунне.
Çуркунне, çуркунне,
Хăват патăн тĕнчене.

Ирхи çилĕ ачашларĕ
Хурăнăн кăтра пуçне,
Шăппăн хăлхаран каларĕ
Хăй ăна юратнине.

Тутлă ыйхăран вăранчĕ
Сар хĕвелĕ ирхине,
Сывлăм шăрçине пуçтарчĕ
Хăй кĕпи арки çине.

# ИЖКАР – ШУПАШКАР

*(Удмурт чăвашĕсем патне кайнă чух)*

Атăл урлă каçрăмăр –
Тусăмсене сума суса,
Юрăсем юрларăмăр.
Юррăмсенче – туслăх кĕвви
Янрарĕ ян та ян:
– Ижкар – Шупашкар!
– Ижкар – Шупашкар!
Удмурт тусăм, ална пар!

Нухрат урлă каçрăмăр –
Тăвансене чунтан савса.
Сăвă сăвăларăмăр.
Сăвăсенче – тăван сасси
Янрарĕ ян та ян:
– Ижкар – Шупашкар!
– Ижкар – Шупашкар!
Пĕрле юрă янратар!

Туссем патне çитрĕмĕр,
Тус-юлташпа тăванлашса,
Çĕн юрă юрларăмăр.
Юррăмсенче – ыра сунни
Янрарĕ ян та ян:
– Ижкар – Шупашкар!
– Ижкар – Шупашкар!
Ĕмĕр туслă пурăнар!

* * *

Пурнăç йывăр тени тĕрĕс мар.
Пурнăç вăл каска йывăçĕ мар.
Пурнăç вăл арман чулĕ те мар,
Пурнăç вăл çăмăл лĕпĕш те мар,
Пурнăçа юратма пĕлмелле.
Пурнăçа упрама пĕлмелле.
Пурнăçпа савăнма пĕлмелле.
Пурнăçа тав тума пĕлмелле.

## ТЕЛЕЙ ХАЛАЛĔ

***В.Д. Димитриева***

Мăн Атăлăн мăнаçлă шавĕ –
Юхан шывсен черчен сассин пуххи.
Асаттесен ĕмĕтĕнчи чи аслă çул та,
Васлей пиччем, эс тупнă çул мар-и?

***Кави Латыпова***

Туслăх юрри юрла-юрла,
Эс утрăн Çĕр чăмăрĕпе.
Тутарстанран Чăвашстана
Эс хыврăн çут кĕпер.
Кави тете, татах юрла.

Сан юррусен янравĕпе
Чăваш, тутар чĕрисенче
Таса çăл куç тапса тăрать,
Пире телей парса тăрать.

### ***Анатолий Розова***

Асамлăх тĕнчин чаршавне
Яр уçрăн эс çĕн ламсен умĕнче.
Асамат кĕперĕ урлă каçарса,
Чĕнетĕн эс хăв тĕнчӳн керменне.
Кашни ӳкерчĕкӳ – пин-пин юрă кĕвви.
Кашни ӳкерчĕкӳ – пин-пин юмах-халап.
Кашни ӳкерчĕкӳ – пире пиллет хăват.



## Николай УЛАНТАЙ

Николай Яковлевич Яковлев 1919 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕн Çӳлти Хыркасси ялĕнче çуралнă. Аялти Кипекçере вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Мускаври М. Горький ячĕллĕ Литература институтĕнче вĕреннĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан диплом илеймесĕрех фронта кайнă. Çарта авиаци техникĕ пулнă, самолетсене вĕçеве хатĕрленĕ. Вăрçă хирĕнче тĕрлĕ фронтра çапăçнă, Польшăна ирĕке кăларас çĕре хутшăннă.

Вăрçăри хăюлăхпа паттăрлăхшăн авиаци техникне Н. Яковлева «Хăюлăхшăн» тата ытти çичĕ медальпе чысланă.

Вăрçăран яла таврăннă хыççăн «Родина» колхозра ĕçленĕ, пĕр вăхăт ял клуб ĕçне йĕркелесе пынă.

Ĕмĕр тăршшĕпех сăвă-калав çырнă, республикăри хаçат-журналта пичетленнĕ. Район хаçачĕ çумĕнче литература пĕрлешĕвĕн ĕçне хастар хутшăннă.

Н.Я. Улантай 1978 çулта Хыркасси ялĕнче вилнĕ.

## ФРОНТРА

Тăшман енне эп ăсататăп
Полкри кашни самолета.
Чĕрем пилне парса яратăп
Çапса хуçмашкăн çич юта.

Фашистсене кунта кам чĕннĕ,
Мĕн кирлĕ Гитлер эшкерне?
Эпир – ăна тăн кĕртекенĕ,
Эпир пӳлетпĕр ун çулне.

Акăлчана та парăнмарĕ,
Вăл пăхăнтарчĕ француза,
Полякĕ, чехĕ – йăлт таптарĕ
Ылханлă танк айне туса.

Эпир пулатпăр хуçаканĕ
Фашизмăн çурăм шăммине,
Раççей çынни – тĕнче хулканĕ –
Парнелĕ çĕнтерӳ кунне.

Çак тĕллевпе пăшал тытатпăр,
Пурнатпăр çак ĕненӳпе,
Çапăçура кашни халь паттăр
Тăван çĕршыв пехилĕпе.

* * *

Кипекçе те Тивĕш,
Хамăр Хыркасси...
Халĕ манăн тивĕç –
Лăпкăн пурнасси.

Вăрçăран эп килтĕм
Йывăр суранпа,
Çаврăнать сехетĕм
Ырă туртăмпа.

Пушарсем ан тухчăр
Тĕнчере текех,
Лăпкăн-лăпкăн юхтăр
Ункă ĕмĕрех.

Лăпкă пурăнмашкăн
Çуралать этем,
Пиллесем, тархасшăн,
Çăлтăрлă тӳпем.

## МУЛ

Пуян çынсем çунаççĕ мулшăн,
Ĕмрипелех пухаççĕ мул.
Каларăм эп хама: «Эс улшăн,
Эс çав пуянсем пек ан пул».

Эп ылтӑн-кӗмӗл шырамастӑп,
Лартмастӑп кӗленче кермен,
Туссем, эп кӗнеке пухатӑп
Пур ҫӗршыври авторсенчен.

Ленинградран та, Мускавран та
Килеҫҫӗ ҫӗн кӗнекесем,
Хусанпала Шупашкартан та
Час-час ҫитеҫҫӗ парнесем.

Ӗнер кӑна илсе эп уҫрӑм
Ҫемен Элкер бандерольне,
Ҫунатланса кайса вуларӑм
Халӑх поэчӗн ҫырӑвне:

«Аван-и, Хыркасси чӑвашӗ,
Ҫӗршыв салтакӗ Улантай,
Хисеплесе эп пуҫ таясшӑн
Кӗнекеме ӑсатнӑ май...».

Ҫапла пин том ытла пуҫтартӑм
Килти вулавӑшӑм валли,
Кӳршӗсене те вулаттартӑм,
Кашни хӑварчӗ ал палли.

Епле аван: Маршак саламӗн,
Твардовский чун-чӗрин ӑшшин
Ҫурхи хӗвел пек ыр капламӗн
Вӑйне туять ялта кашни!

## УНКĂ ШЫВĔ УМĔНЧЕ

Мĕн ĕлĕкрен юхса выртатăн,
Çиçетĕн тăрă шывупа,
Тĕнче сăнне эс кăтартатăн
Пире сенкер экранупа.

Шур пĕлĕтсем шуса иртеççĕ
Кăвак тӳпе ытамĕнче,
Каç-каç çут çăлтăрсем ишеççĕ
Сан лăпкă хумусем çинче.

Эп халăх шăпине вулатăп
Сан çырăвăн йĕркисенче,
Несĕлĕмсен сăнне куратăп
Асамлă авăр çутинче.

Пĕлеп, ман ывăл килсе тăрĕ
Çак çырана эп çук пулсан,
Тен, ашшĕн сăнарне вăл шырĕ,
Тен, ыйтĕ ман çинчен санран?

Пурнăç тени вăл – вĕççĕр ункă,
Вăл – вĕçленми орбитăра,
Кала ывăлăма эс, Ункă, –
Вăл – эп.
Ман вырăнта тăрать.

# ТУПМАЛЛИ


Аркадий ЁÇХЁЛ........................................5
Роза БЕЛЯЕВА........................................17
Анатолий ВАСАН........................................29
Ираида ВДОВИНА........................................37
Иван ВИКТОРОВ........................................45
Клавдия ВИШНЕВСКАЯ........................................53
Игнатий ГОЛУБКИН........................................63
Любовь ГОРДЕЕВА........................................75
Иван ГРИГОРЬЕВ........................................79
Иван МАЛКАЙ........................................83
Рита ГУРЬЕВА........................................91
Аристарх ДМИТРИЕВ........................................103
Иосиф ДМИТРИЕВ-ТĔРЕР........................................113
Владимир ЕГОРОВ........................................119
Григорий САВКАЙ........................................125
Никита ЕФИМОВ........................................129
Кĕçтук ТĂХТАМАН........................................131
Василий ЗАХАРОВ........................................139
Владимир ЗАХАРОВ........................................167
Юрий ЗАХАРОВ........................................175
Аркадий ИВАНОВ........................................183
Микулай МĂСКАЛ........................................189
Алена ИЛЬИНА........................................211
Александр ИЛЬИН........................................221
Елена ИОВЛЕВА........................................229
Руф ИШУТОВ........................................237
Сантăр КАНКА........................................239
Гурий ВАНТЕР........................................243
Зиновий КРЫЛОВ........................................249
Çунат МИШШИ........................................255

Çаваç ВАÇÇА .................................................. 259
Петр ЛЬВОВ .................................................. 265
Илья МИХАЙЛОВ .................................................. 271
Геронтий ХУРАМАЛ .................................................. 281
Санек РАЙККИ .................................................. 293
Владимир ЯНТУШ .................................................. 305
Федор ПАВЛОВ .................................................. 315
Мальвина ПЕТРОВА .................................................. 323
Николай ИШЕНТЕЙ .................................................. 333
Виталий ПЛЕМЯННИКОВ .................................................. 347
Юрий ПЛОТНИКОВ .................................................. 351
Петр РОМАНОВ .................................................. 357
Руслан САЙФУТДИНОВ .................................................. 367
Нина ПӐРЧӐКАН .................................................. 379
Иван СЕМЕНОВ-ШАХТЕР .................................................. 389
Николай СЕРГЕЕВ .................................................. 393
Светлана АСАМАТ .................................................. 401
Галина НĔРĔШПИ .................................................. 427
Ипполит ТИНЯКОВ .................................................. 443
Георгий ФАДЕЕВ-ХАВАЛ .................................................. 445
Çуйӑн ХĔВЕТĔРĔ .................................................. 467
Анатолий ТАКАН .................................................. 473
Тимĕркке КУÇМИ .................................................. 479
Роза ШЕВЛЕПИ-ЮХМА .................................................. 485
Николай УЛАНТАЙ .................................................. 493

# НА НАКОВАЛЬНЕ СЕРДЦА

**на чувашском языке**

*От составителя*
*Выражаю сердечную благодарность*
*ИВАНОВУ ГЕННАДИЮ НИКОЛАЕВИЧУ*
*за оказание спонсорской помощи в издании данной книги.*


Составитель-редактор *Мигулай Мъскал*
*(Николай Григорьевич Иванов)*
Оформление *Н.Г. Иванова*
Компьютерная верстка *Н.В. Ушаковой*
Дизайн обложки *Н.Л. Лукиной*

Подписано в печать 22.02.2022.
Формат 60×84/16. Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 31,25. Тираж 500 экз. Заказ К-312.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1
Тел.: (8352) 323-353, 41-27-98, E-mail: newtime1@mail.ru